# АГИТАТОР СЛОВАРĔ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ

# АГИТАТОР СЛОВАРĔ

**ХАҪАТСЕМПЕ ЖУРНАЛСЕНЧЕ ТĔЛ ПУЛАКАН ХĂШ-ПĔР СĂМАХСЕМПЕ СĂМАХ ҪАВРĂНĂШĔСЕНЕ КĔСКЕН ĂНЛАНТАРСА ПАНИ**

ПĔТĔМĔШПЕ
*М. А. АНДРЕЕВ*
РЕДАКЦИЛЕНĔ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1949

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОР...
Чувашское ... -нате
„16“ февраля 1953 г.
№ 280

## ИЗДАТЕЛЬСТВĂРАН

Çак пĕчĕк словарь хăйĕн умне хаçат-журнал е кĕнеке вулакансене пулăшас, вĕсене унта тĕл пулакан ют çĕршыв чĕлхинчен кĕнĕ хăш-пĕр сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсене кĕскен ăнлантарса парас тĕллев лартать.

Словарьте пурĕ 900 ытла сăмахпа сăмах çаврăнăшĕ. Вĕсене пурне те алфавит йĕркипе вырнаçтарса тухнă.

Пуçламăш сăмаха (заглавные слова), урăхла каласан, кашни статьяна ăнлантарса панисен уйрăм ятне пысăк саспаллисемпе пичетленĕ. Чăвашла çырнă чухне пĕртте улшăнман пуçламăш сăмахсене, терминсене, тĕслĕхрен: авангард, блок, валюта, антагонизм, империализм, материализм тата ытти çавăн пек пуçламăш сăмахсене словарьте чăвашла тепĕр хут çырман. Чăвашла çырнă чухне улшăнакан сăмахсене, тĕслĕхрен: автономия—автономи, агитация—агитаци, гарантия—гаранти, диалектический—диалектикăллă, колониальный—колониллĕ, объективный—объективнăй тата ытти çавнашкал сăмахсене пуçламăш сăмах хыççăн чăвашла çырса кĕртнĕ.

Словаре пухса хатĕрленĕ чухне çак материалсемпе усă курнă:

Большая Советская Энциклопедия.

Малая Советская Энциклопедия.

„Толковый словарь русского языка“ под редакцией проф. Д. Н. Ушакова.

„Политический словарь“ под редакцией Г. Александрова, В. Гальянова и Н. Рубинштейна.

„Краткий философский словарь“ под редакцией М. Розенталь и П. Юдина.

„Справочник агитатора“, составленный Д. А. Абросиным.

Ку кĕнекесемсĕр пуçне, „Спутник агитатора“, „Блокнот агитатора“ журналсенчи тата хаçатсенчи статьясемпе усă курнă.

Издательство вулакансенчен словарĕн текстĕнче мĕн улăштарма кирлисем çинчен тата мĕн хушмалли çинчен хăйсен шухăшĕсене çак адреспа пĕлтерме ыйтать: *г. Чебоксары, ул. Володарского, Дом печати, Чувашгосиздат.*

## А.

**Абсентеизм**—граждан обязанноҫĕсене пурнаҫласа тă-рассинчен пăрăнни (сăмахран, суйлавран пăрăнни, суйлава хутшăнманни, пухăва пыманни тата ытти те).

**Абсолютизм**—самодержави, влаҫа пĕр ҫын ҫеҫ—князь, король, патша, император хăй аллинче тытса тăни; суйласа лартман, нимĕнпе те пўлмен власть.

**Абсолютная монархия**—абсолютлă монархи—госу-дарство стройĕ. Ҫавăн пек стройра чи аслă власть пĕ-тĕмпех пĕр ҫын (монарх, патша) аллинче тăрать, вăл дворян-помещиксен диктатурине пурнăҫа кĕртсе пырать. Государьпе государство пĕр пулса тăраҫҫĕ (Франци ко-ролĕ Людовик XIV, абсолютизмăн чи паллă представи-телĕ: „государство—вăл эпĕ", тенĕ).

**Абсолютное большинство**—абсолютлă ытларахăш—пĕр пек хисеппе танлаштарсан, чи пысăкки, ытлараххи. „Абсолютное большинство" тенĕ сăмахсене суйлавсем пул-са иртнĕ чухне ытларах асăнаҫҫĕ. Суйлавра пĕр кандидат ытти кандидатсем пурĕ пĕрле илнĕ сасăсен хисепĕнчен ытларах сасă илнĕ пулсан, ҫав кандидата абсолютлă ытларах сасă илнĕ тесе шутлаҫҫĕ, урăх майлă каласан, пĕтĕм сасăран ҫуррине ытларах илекен кандидата аб-солютлă ытларах сасă илнĕ тесе шутлаҫҫĕ. Сăмахран, 300 сасăран пĕр кандидатшăн 20 сасă, теприншĕн—30, виҫ-ҫĕмĕшĕшĕн—45, тăваттăмĕшĕшĕн—50, пиллĕкмĕшĕшĕн—155 сасă панă пулсан, юлашки вара абсолютлă ытларах сасă илнипе суйланнă тесе шутланать. Анчах та суйланма абсолютлă ытларахăшĕ пулмасан та, ыттисемпе танлаш-тарсан, ытларах сасă илни те ҫитет. Вăл ҫакна пĕлтерет: пĕри ытти кандидатсенчен, кашнине уйрăмăн илсе шут-ласан (сăмахран, 5 кандидатран пĕрремĕшĕ 120 сасă,

иккӗмӗшӗ—150, виççӗмӗшӗ—170, тӑваттӑмӗшӗ—180, пиллӗкӗмӗшӗ 190 е 181 çасӑ илнӗ пулсан) юлашки суйланнӑ тесе шутланать).

**Абстрактный**—абстрактлӑ—япала çинчен каланӑ, тӗпчесе вӗреннӗ чухне вӑл япалана çеç уйрӑм илни, унпа çыхӑнса тӑракавнисене шута илменни.

**Абстракция**—абстракци—пулса иртекен ӗç е явлени çинчен, унӑн пур енӗсене илмесӗр, пӗр паллӑрах енӗсемпе тӗп уйрӑмлӑхӗсене кӑна илсе пӗтӗмӗшле ӑнлантарса пани.

**Авангард**—авангард—малти отряд, малта пыракан пай; походра тата наступленире войскӑсен шултӑра соединенийӗсене сыхлама уйӑрнӑ çар чаçӗ. Вӗсем тӗп вӑйсен колонни умӗнче пыраççӗ. Авангард тесе хуларипе ялти ӗç халӑх массисен революциллӗ кӗрешӳвӗнче рабочи класс малти ретре тӑрса ертсе пынине калаççӗ. СССР-ти рабочи класпа мӗнпур ӗç халӑхӗн малти ретре тӑракан, чи революциллӗ, ертсе пыракан пайне—большевиксен партине те авангард тесе калаççӗ. Большевиксен партийӗ Совет Союзӗнчи пӗтӗм ӗç çыннисен авангарчӗ пулса тӑнине Сталинла Конституцин 126-мӗш статьинче питех те уççӑн кӑтартса панӑ.

**Аванпост**—1) войскӑсем умне тӗп çарсене сыхлама кӑларса тӑратнӑ чаçсем; 2) малти позици.

**Авантюрист**—кама та пулин улталаса усӑ курас шутпа мӗнле те пулин юрӑхсӑр ӗç ӑнӑçлӑ пулмӗ-ши тесе, хӑтланса çӳрекен çын.

**Авантюристический**—авантюристлӑ—шанчӑксӑр, ӑнма пултарайман ӗç.

**Авгиевы конюшни**—Авгий витисем—юмахри Авгий ятлӑ патшан чӑн-чӑн пурнӑçра пулман вити. Вӑл витене темиçе çул хушши тасатман пулнӑ пулать те вара çав тасамарлӑха пӗр кун хушшинче юмахри паттӑр Геркулес тасатнӑ пулать. „Авгиевы конюшни" текен сӑмах çаврӑнӑшӗ ытах та таса мар, ирсӗр ӗçе пӗлтерет.

**Авианосец**—çар карапӗ; çав карап çинче самолётсем сывлӑша вӗçсе хӑпармалли тата анса лармалли палуба

тата самолётсене упраса усрамалли пӳлёмсем пур. Пысӑкрах авианосецсем хӑйсем ҫинче 70—100 самолёт илсе ҫӳреме пултараҫҫӗ. Авианосецсем ҫапӑҫусене тинӗс флочӗпе пӗрле хутшӑнаҫҫӗ.

**Автаркия**—автарки—экономикӑллӑ политика, вӑл хӑйӗн умне пӗр-пӗр ҫӗршыва ҫав ҫӗршывра туса кӑларакан (ҫимелли-ӗҫмелли) япаласемпе кӑна пурӑнмалла тӑвас тӗллев лартать. Ҫав политикӑна хӑш-пӗр империалистла государствӑсем вӑрҫӑ туса пыма кирлӗ таварсене ют государствӑсенчен илсе пырса тӑрассинчен пӗтӗмпех хӑтӑлас тесе тытса пыраҫҫӗ. Уйрӑмах вӑл политикӑна фашистла Германи туса пынӑ. Автарки политики ӗҫ халӑх пурнӑҫне сисӗнмеллех начарланасси патне илсе пырать: тавар хакӗсем хӑпараҫҫӗ, ют патшалӑхсенчен тӗрлӗ тавар илсе пырассине чакарнипе ӗҫмелли-ҫимеллисем ҫитми пулаҫҫӗ, лайӑх таварсем вырӑнне япӑххисем ҫеҫ тӑрса юлаҫҫӗ.

**Автобронетанковые войска**—автобронетанклӑ войскӑсем—вӑрҫӑра броньпе витнӗ автомобильсемпе тата танксемпе усӑ куракан войскӑсем.

**Автократия**—автократи—самодержави, тытӑм системи; ҫавӑн пек тытӑм системинче нимӗнпе те пӳлмен власть пӗр ҫын аллинче кӑна тӑрать.

**Автомат**—ҫын пулӑшмасӑр, хӑйне-хӑй ӗҫлесе тӑракан машина е аппарат; вӑл кнопкӑна пуснипех е рычага пӑрнипех ӗҫлеме тытӑнать. Автоматсемпе ӗҫлекен рабочисем-наладчиксем, контролёрсем вырӑнне кӑна пулса ӗҫлеҫҫӗ.

**Автономизм** (автономи сӑмахран)—политикӑллӑ автономи тума тӑрӑшакан движени.

**Автономия**—автономи—самоуправлени, хӑй тӗллӗн тытӑнса тӑни. Автономиллӗ тесе государствӑн уйрӑм правасемпе усӑ куракан тата хӑйсен шалти ӗҫӗсене хӑйсем тӗллӗнех татса пама пултаракан территориллӗ пайӗсене калаҫҫӗ. Совет Союзне кӗрекен республикӑсем хушшинче ҫавӑн пек автономиллӗ республикӑсемпе автономиллӗ облаҫсем пур. Вӗсем пӗрлештерсе тӑракан пӗр-пӗр наци-

сен совет автономи условисенче—хуçалăх, политика тата культура тĕлĕшĕнчен аталанса пымалли майсем пурте пур. Автономи вырăнти тĕп халăх представителĕсенчен власть органĕсем тунипе, нациллĕ культурăна (тăван чĕлхепе вĕрентекен шкулсем, издательствăсем, театрсем) аталантарса пынипе, пĕтĕмĕшлĕ государствăллă план никĕсĕ çинче хуçалăха малалла вăйлатса пынипе пулса пырать. Чăн-чăн автономи Совет Союзĕнче çеç пулма пултарать.

**Автономная область**—автономиллĕ область—союзлă республикăна кĕрекен область (РСФСР-та крайсене те кĕреççĕ). Çав облаçсене союзлă республика территоринче пĕр çĕрте пурăнакан пĕчĕк нацисене, вĕсен наци уйрăмлăхĕсене кура, управлени ĕçĕсене хăйсем тĕллĕн туса пыма май парас шутпа организациленĕ. Автономиллĕ облаçăн государство влаçĕ автономиллĕ область ĕç çынни депутачĕсен Совечĕ пулса тăрать, ăна 2 çуллăха суйлаççĕ. Национальноçсен Советне кашни автономиллĕ область, унта пурăнакан халăх хисепне пăхмасăр, 5-шер депутат суйласа ярать; çакă вăл совет Союзĕнчи халăхсен пĕртанлăхĕнчен тухса тăрать.

**Автономная Советская Социалистическая Республика (АССР)**—Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республика—союзлă республикăна кĕрет. Союзлă республикăра пĕр çĕрте пурăнакан тата союзлă республикăри тĕп наципе танлаштарсан, сахалтарах пулса тăракан нацисене управленин шалти ыйтăвĕсене хăйсем тĕллĕн татса пама ирĕк парас шутпа тунă. Автономиллĕ республикăн уйрăмлăхĕсене шута илекен хăйĕн Конституцийĕ (Тĕп Закон) пур. Çав Конституцие союзлă республика Верховнăй Совечĕ çирĕплетет. АССР-ăн хăйĕн Верховнăй Совечĕ пур, ăна республикăри ĕç çыннисем 4 çуллăха суйлаççĕ, çаплах тата хăйĕн Министрĕсен Совечĕ пур. Национальноçсен Советне кашни АССР, унта мĕн чухлĕ халăх пуррине пăхмасăр, 11-шер депутат суйласа ярать.

**Авторитет**—тивӗҫлӗх; пурте йышӑннӑ пӗлтерӗш е влияни. Авторитетный—авторитетлӑ—влияни парса тӑракан, хӑйӗн тивӗҫлӗхне пула е хӑй лайӑх пӗлнине пула пуриншӗн те хисеплӗ те шанчӑклӑ ҫын.

**Авторитарный** („авторитет“ сӑмахран)—авторитарлӑ. Вӑл сӑмаха ытти сӑмахсемпе пӗрле каласҫӗ. Сӑмахран, „авторитарное государство“, „авторитарный государственный строй“. Демократиллӗ государство стройӗ вӑхӑтӗнче власть органӗсем халӑх умӗнче ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ. Авторитарлӑ государство стройӗ государство влаҫне хӑйӗн аллинче тытса тӑракан ҫыннӑн авторитечӗ ҫинче кӑна тытӑнса тӑрать. Ҫав ҫын вара халӑха мӗн кирлине ыттисенчен ытларах пӗлет имӗш, ҫавӑнпа вара унӑн никам умӗнче те ответлӑ пулса тӑмалла мар. Хӑш-пӗр государствӑсен конституцийӗсенче вӑл „турӑпа истори умӗнче ответлӑ“ тесе ҫырса хунӑ. Ҫавӑн пек стройсем фашистла е ҫурма-фашистла государствӑсенче пуҫ пулса тӑнӑ, тӑраҫҫӗ те.

**Автострада**—автомобильсемпе ҫӳреме тунӑ лайӑхлатнӑ ҫул. Автострадӑна чугун ҫулсене тунӑ пекех чӑнкӑ сӑрт ҫийӗпе касмалла мар тӑваҫҫӗ. Икӗ автострада хӗресле пулмалла пулсан пӗрне тепӗрин ҫийӗпе кӗпер хывса тӑваҫҫӗ. Ҫав ҫула уйрӑмах лайӑх туса йӗркеллӗ пӑхса тӑни хӑвӑрт ҫӳреме те, ытларах автотранспорт ҫӳретме те май парать. Ҫавӑнпа та автострада вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

**Агент**—государство учрежденийӗсем, е ытти организацисем хушнипе, шаннипе ӗҫлекен ҫын; капитализмлӑ ют ҫӗршыв ытти государствӑна янӑ ҫын; шпион, диверсант.

**Агентура**—уйрӑм ҫын е организаци; вӗсем капитализмлӑ ҫӗршывсен разведкин органӗсенчи секретлӑ службӑра тӑраҫҫӗ, вӗсен задачи—ют ҫӗршывсенче, уйрӑмах СССР-та, вӑрттӑн тӗрлӗрен тискер, ирсӗр ӗҫсем тӑвасси пулса тӑрать. Ҫавна пурнӑҫлама вӗсем шпионаж, диверси, сӑтӑрла ӗҫсем, террор тӑваҫҫӗ.

**Агитация**—агитаци—массӑсем хушшинче пӗр-пӗр иде-

йăна тата лозунгсене сарни; мĕнле те пулин шухăшшăн, е ĕçшĕн, çынсене çав ĕç, шухăш майлă çавăрни; массăсене мĕнле те пулин политика тĕрĕссине ĕнентерес шухăшпа ӳкĕтлени; пĕр-пĕр ĕçе тумашкăн пурне те харăс тăма чĕнни.

**Аграрии**—аграрисем—пысăк çĕр тытакансем, помещиксем. Капитализмлă çĕршывсенче аграрисен партийĕсем пур, вĕсем пысăк çĕр тытакансен интересĕсене сыхлаççĕ.

**Аграрный**—аграрлă—çĕр тытса тăнине, çĕрпе усă курнине пĕлтерекен сăмах. Сăмахран, халăх хуçалăхĕнче тĕп отрасль çĕр ĕçĕ пулса тăракан, çĕр ĕçĕпе пурăнакан çĕршыва аграрлă çĕршыв (аграрная страна) теççĕ.

**Аграрный вопрос**—çĕр ыйтăвĕ—çĕре каман тата ăна мĕнле тытмалли, унпа мĕнле усă курса тăмалли çинчен, хресченсем çинчен, вĕсен прависем çинчен, ял хуçалăхĕ çинчен, хресчен ĕçне çăмăллатас тесен, ăна чухăнлăхпа тĕттĕмлĕхрен хăтарса унăн пурнăçне лайăхлатас тесен, ял хуçалăхне мĕнле тытса пымалли çинчен калакан ыйту. Капитализмлă çĕршывсенче хресченсем çĕр сахал пирки нуша кураççĕ. Унта лайăх çĕрсем помещиксемпе капиталистла фермерсем, кулаксем аллинче тăраççĕ. Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă хыççăн чылай çĕршывсенче, чăн-чăн демократиллĕ, халăх влаçĕ туса хунă çĕршывсенче, сăмахран, Польшăра, Румынире, Венгрире, Чехословакире, Болгарире, Албанире шултăра помещиксене пĕтерсе лартса, вĕсен çĕрĕсене хресченсене панă никĕс çинче çĕр реформине туса ирттернĕ. Çĕр ыйтăвне пĕтĕмĕшпе СССР-та кăна Октябрьти социализмлă революцие пула татса панă. Çĕр харпăрлăхне пĕтĕмпех пĕтерсе хурса, Совет влаçĕ ĕлĕк помещиксен, монастырьсен аллинче пулнă çĕре 150 млн. гектар ытла чухăн тата вăтам хресченсене ним укçасăр-мĕнсĕр усă курса тăма пачĕ, хресченсене кашни çул 500 млн. яхăн тенкĕ помещиксене, вĕсенчен çĕр тара илсе акса тăнăшăн, тӳлессинчен хăтарчĕ. Сталин юлташ ертсе пыракан большевиксен

партин ăслă политики колхоз стройĕ пĕтĕмпех çĕнтересси тата кулаксем класс пулса тăрассине таккишпех коллективизаци тунă никĕс çинче пĕтересси патне илсе çитерчĕ. Кулаксене пĕтернине пула ĕç хресченĕсем татах та 80 млн. гектар çĕр туянчĕç. СССР-та çĕр государствăн харпăрлăхĕ, тепĕр тĕслĕ каласан, пĕтĕм халăхăн пуянлăхĕ пулса тăрать. Çĕре государство колхозсене укçасăрах тата сроксăрах, ĕмĕрлĕхех усă курса тăма панă.

**Аграрный кризис** — капитализмлă çĕршывсенче ял хуçалăх таварĕсене ытлашши туса кăларни тата çавна пула вăл таварсен хакĕсем пит йўнленсе кайни. Çавăн пирки вара хресченсем масси-массипе чухăна тухса каяççĕ тата ял хуçалăхĕ те пит хытă юхăнать.

**Агрегат**—икĕ е темиçе машинăна (сăмахран, турбинăпа генераторăн тĕрлĕ пайĕсене) пĕрлештерни.

**Агреман**—агреман—пĕр-пĕр çĕршывăн правительстви хăйĕн çĕршывĕнче тепĕр çĕршывăн пĕр-пĕр çыннине дипломатиллĕ представитель пулса тăма йышăнма килĕшни. Пĕтĕм тĕнчери йĕрке тăрăх, пĕр-пĕр çĕршыва дипломатиллĕ представитель пулса тăмашкăн яма палăртнă çынвăн ятне çав çĕршывăн правительствине пĕлтереççĕ те çав çĕршывра хăйĕн дипломатиллĕ представителĕ пулса тăма килĕшў пама ыйтаççĕ (агремент ыйтаççĕ, теççĕ). Килĕшў (агремент) илнĕ хыççăн çеç вара назначени тăваççĕ.

**Агрессия**—агресси—тапăнни, ют çĕршывсене вăйпа тытса илмелли политика. **Агрессивный**—агрессивлă—ирĕксĕрлесе туртса илме хăтланакан. **Агрессор**—тапăнакан енĕ, чи малтан вăрçăпа тухакан государство агрессор пулать; çавăн пекех пĕр-пĕр государствăн войскисем ют çĕршыв çине кĕрсе кайсан, е унăн войскисем чикĕ урлă каçмасăрах тапăнсан (сăмахран, тинĕс çинчен пăшалпа персен), тинĕс çинче карапсем çине тапăнсан, çав государство вара агрессор пулать. Вăрăхурахла вăрçа чĕртсе яма хĕтĕртекене те агрессор, теççĕ.

**Агрикультура**—ял хуçалăхне наука вĕрентнĕ пек туса

пыни, ял хуҫалăхне лайăх, йĕркеллĕ тупăшлă тытса пыни. Ҫĕр ĕҫлессине тата ял хуҫалăхне тытса пырассине лайăхлатас шутпа тунă ĕҫсене агрикультурăллă мероприятисем теҫҫĕ.

**Агрономия**—ял хуҫалăх ҫинчен вĕрентекен наукăсене пурне пĕрле ҫапла ятпа калаҫҫĕ. Агрономи тенĕ сăмаха хăйне уйрăм илсен, вăл наука тăпра ҫинче ӳсекен апатҫимĕҫсен тухăҫлăхне ӳстермелли мелсене вĕрентет, ҫĕрĕҫ системине тата селекци майĕсемпе ял хуҫалăх ӳсентăранĕсен культурине тăвас, ял хуҫалăх ĕҫ тухăҫлăхне ӳстерес тĕлĕшпе ĕҫлет.

**Адепт**—пĕр-пĕр теори, наука, искусство хыҫҫăн каякан, ăна юратакан. Вăтам ĕмĕрте адепт тесе тĕрлĕрен тĕн сектисенче член пулса тăракан ҫынсене каланă. Ҫав сектăсен членĕ пулса тăни ҫинчен официальнăй чиркӳрен пытармалла пулнă. Ҫавăнпа та час-часах адепт тесе пĕр-пĕр организацие е идейăна вăрттăн хапăл туса тăракан ҫынна калаҫҫĕ. Хăш-пĕр буржуалла-демократиллĕ ҫĕршывсенче (сăмахран, Англире), уҫҫăнах фашистсем майлă тăракан ҫынсемсĕр пуҫне, фашистсен вăрттăн адептисем пур, тепĕр тĕслĕ каласан, сăмахпа фашизма хирĕҫ калакан, ĕҫре фашизма вăрттăн пулăшакан политиксем пур.

**Адэкватный**—адэкватлă—тан, пĕр пек, пĕр йышши. Адэкватлă пĕлӳ—япалан е явленин пур чи кирлĕрех паллисене тĕрĕс кăтартса паракан пĕлӳ.

**Ажиотаж**—спекуляци; спекуляци тăвас шухăшпа хака хăпартса яни; капитализмлă ҫĕршывсенче хаклă хутсемпе тата таварсемпе спекуляци туса ытларах услам илме тăрăшни.

**Аккредитование дипломатических представителей**—пĕр-пĕр государствăн правительстви ҫумĕнче представитель пулса тăма посола, посланника, полпреда тата ытти дипломатиллĕ представительсене яни.

**Аксиома**—ĕнентермесĕрех лайăх курăнса тăракан чăнлăх.

**Актуальный**—актуальнăй—чи кирли, хальхи вăхăтшăн чи пахи.

**Акцепт** (французсен „аксепте“ сăмахран пулса кайнă)—йышăнас тенине пĕлтерет. Акцепт—кам та пулин, е банк, е фирма, е учреждени, е организаци счĕта е векселе (нумай вăхăтлăха панă обязательство) тӳлеме килĕшӳ панине пĕлтерет. Çав килĕшĕве счĕт çине е вексель çине çырса çирĕплетмелле. Çавăн пек çырса çирĕплетнине те акцепт, теççĕ. СССР-та акцептлă çырусене тавар счĕчĕсем çине çыраççĕ. Çырассине заказчиксем çыраççĕ, çапла туса вĕсем тавар тăрататакан организацирен е предприятирен илнĕ тавар счĕт çинчипе пĕр пек пулнине ĕнентерсе параççĕ. Госбанк тавар тăратакансен счĕтне заказчиксем ĕнентерсе панă çыру пулсан çеç, тепĕр майлă каласан, акцепт пулсан çеç тӳлет.

**Альтернатива**—мĕнле те пулин ыйтăва татса панă чухне икĕ тĕрлĕ решенирен хăшне те пулсан пĕрне суйласа илме тивнине калаççĕ; „иккĕрен пĕри“.

**Альфа и омега**—альфапа омега—греексен алфавитĕнчи чи малтанхипе чи юлашки саспаллисем; урăх япала çинчен каланă чухне—пуçламăшпе вĕçĕ, ĕмĕрлĕх символĕ, тенине пĕлтерет.

**Альянс**—1) союз, уйрăмах политикăллă союз. Сăмахран, 1914—1918 çç. империализмлă вăрçă вăхăтĕнче Англипе Франци хушшинче Германие хирĕç тунă вăрçă альянсĕ (союзĕ) пулнă; 2) обществăллă организацисен союзĕ, сăмахран, пĕтĕм тĕнчери кооперативлă альянс кооперацисене пĕрлештерсе тăрать.

**Амбиция**—амбици—хăйне хăй ытлашши юратни, кутăна пени, шăрчăкланни.

**Амбразура**—укреплени стенинче, çар карапĕнче, окопăн çĕр купаланчăкĕнче тупă е пулемĕт кĕпçи валли тунă шăтăк, тĕнĕ; бойница.

**Американская федерация труда (АФТ)**—Америкăри ĕç федерацийĕ—Америкăри профсоюзсен реформистла

организацийӗ, ӑна 1881 ҫулта туса хунӑ. Ҫав союза квалификациллӗ тата ытларах ӗҫ укҫи илекен рабочисем кӗреҫҫӗ. АФТ-ра 3,5 млн. ытларах член шутланса тӑрать. „Рабочисен аристократийӗ" ҫине таянса, АФТ пуҫлӑхӗсем (Грин тата ыттисем те) рабочи класс хушшине шултӑра буржуазин реакциллӗ политикине кӗртсе пыраҫҫӗ.

**Амстердамский интернационал профсоюзов**—(юлашки вӑхӑтчен профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери пӗрлешӗвӗ пулнӑ)—ӑна 1919 ҫ. июль уйӑхӗнче Амстердам хулинче тунӑ. Унта Европӑри капитализмлӑ ҫӗршывсенчи реформистла профсоюзсем чылайӑшӗ, Америкӑри ӗҫ федерацийӗ тата ыттисем те кӗнӗ. Амстердамри интернационалра пӗтӗмпе 13 млн. яхӑн ҫын тӑнӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вӑл хӑйӗн ятне тӗппипех ҫӗртрӗ. Ӑна халӗ реакциллӗ профсоюзсем кӑна усрасшӑн кӗрешеҫҫӗ. Тӗнчери прогрессивлӑ профсоюзсем Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен федерацине (ун ҫинчен каланине пӑхӑр) туса хунӑ.

**Амфибия**—амфиби—1) ҫак сӑмахӑн чӑн-чӑн пӗлтерӗшӗ—икӗ тӗрлӗ (ҫӗр ҫинче те, шывра та) пурӑнакансем тени пулать. Ҫавӑн пек ятпа ҫӗр ҫинчи чӗрчунсене—шыв шапине, ҫӗр шапине, саламандрӑна калаҫҫӗ, вӗсен личинкисем жабрӑсемпе сывлаҫҫӗ, ҫитӗнсе ҫите пуҫланисем ӳпкепе сывлама тытӑнаҫҫӗ. 2) Амфибия—уйрӑм типлӑ самолӗт, ӑна ятарласа шыв ҫинчен те, ҫӗр ҫинчен те вӗҫсе хӑпарса, анса лармалла тунӑ. Вӑл вӗҫекен кимӗ пек, шыв ҫине ларнӑ чухне урапясене хӑй ӑшне, ҫунатсенчи пӳлӗмсене пуҫтарса кӗртет. 3) Танк амфибия—ҫӗр ҫинче те, шывра та ҫӳреме пултаракан ятарласа тунӑ танк.

**Анализ**—тӗпчени; пӗр-пӗр япалана е явление унӑн уйрӑм енӗсем ҫине пайласа тӗпчени.

**Аналогия**—аналоги—пӗр япалана е явление тепӗр япалапа е явленипе вӗсен пӗтӗмӗшлӗ паллисем тӑрӑх танлаштарса пӑхни; пӗрпеклӗх, пӗр евӗрлӗх. Ҫакӑнтан аналогичный тенӗ сӑмах пулса кайнӑ. Аналогиллӗ япала тени—ҫавӑн пек, тепӗр япала пек, пӗр пек япала тенине пӗлтерет.

**Анархизм**—вак буржуаллă политикăллă юхăм, марксизмăн тăшманĕ. Унăн чи паллă представителĕсем—Прудон, Бакунин, Кропоткин. Анархизм кирек мĕнле государствăна та (çав шутрах пролетари диктатурине те) йышăнмасть, капитализмлă строя хирĕç организациленсе политикăллă кĕрешсе пынине хирĕç тăрать, пролетари диктатурине тата пролетари партин ертсе пырас рольне хирĕç пырать. Анархизм государство деятелĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн вĕлерсе пыма (террор) пропагандăлать, çапла тунипе вăл пролетариата массăллă кĕрешӳрен пăрса ярать тата рабочи движение йĕркерен кăларать, дезорганизацилет.

**Анархия**—анархи—тытăмсăрлăх, влаçсăрлăх, йĕркесĕрлĕх, пăтранчăклăх, дисциплинăсăрлăх.

**Анархия производства**—производство анархийĕ—обществăллă производствăри йĕркесĕрлĕх, плансăрлăх; ун пек йĕркесĕрлĕх капитализмлă хуçалăхшăн характерлă пулса тăрать. Çавăн пек йĕркесĕрлĕхе производство хатĕрĕсем уйрăм харпăрлăх пулни, таварсене тупăш илесшĕн кăна туса кăларни çуратать. ССР Союзĕнче социализмлă экономика производство анархине пĕлмест, производство пĕтĕмпех план тăрăх пулса пырать, социализмлă экономикăра анархи пулма та пултараймасть.

**Анатомия**—выльăх-чĕрлĕхпе этемĕн ӳт-пĕвĕ е вĕсен уйрăм органĕсем мĕнле тытăнса тăни çинчен вĕрентекен наука, ӳсентăрансен анатомийĕ—ӳсентăрансем микроскопически вĕтĕ пайсенчен тытăнса тăни çинчен вĕрентекен наука.

**Ангар**—аэродром çинчи самолётсене лартса усрамалли витнĕ çурт.

**Английская „белая книга"**—Англин „шурă кĕнеки"—Англире „шурă", „кăвак" (хуплашка тĕсне кура) кĕнеке тесе документсен сборникне калаççĕ, вĕсене правительство тулашри политикăн пĕр-пĕр ыйтăвĕ çинчен пичетлесе кăларать. Час-часах çав кĕнекесенче малтавласа секретлă тесе шутланă документсене те пичетлеççĕ. Вăл

сборниксене мӗнле те пулин событисемпе, паллӑрах дипломатиллӗ калаҫусемпе, парламентри пренисемпе тата ытти паллӑрах ӗҫсемпе ҫыхӑнтарса пичетлесе кӑлараҫҫӗ. Правительство, ҫав кӗнекесене пичетлесе кӑларса, пичетленӗ документсемпе хӑйӗн политики тӗрӗссине е парламентран мӗн те пулин ыйтни (сӑмахран, пӗр-пӗр паллӑ ӗҫ валли укҫа пама ыйтни) тӗрӗс пулнине кӑтартса пама тӑрӑшать.

**Английский парламент**—Англи парламенчӗ—тӗнчери чи ватӑ парламент. Вӑл 1316 ҫултанпа ӗҫлет. Англи законӗсем тӑрӑх вӑл государство влаҫӗн аслӑ органӗ. Королӗн нимӗнле власть та ҫук. Король чаплӑ ята ҫеҫ илтсе ларать, ӗҫе туса пымасть, ҫапах та законсене унӑн ячӗпе кӑлараҫҫӗ, правительство программине король хӑйӗн тронлӑ текен сӑмахӗнче парламент заседанинче каласа парать. Парламент икӗ палатӑран тӑрать: лордсен палати (ҫӳлти палата) тата общинӑсен палати (аялти палата). Хальхи вӑхӑтра закон пӗтӗм влаҫа общинӑсен палати аллине панӑ, общинӑсен палати камран тӑнине кура правительство составӗ те (министрсен совечӗ) ҫавӑн пек пулса пырать. Анчах, чӑннипе власть вӑйлӑ капиталистла организацисен, шултӑра банксемпе промышленность предприятисене пӗрлештерсе тӑраканскерсен, аллинче тӑрать. Правительство составӗ (общинӑсен палати составӗ те) камран тӑрасси вӗсенчен килет, вӗсем общинӑсен палати закон кӑларас ӗҫе те тата правительство политики ҫине те пысӑк влияни парса тӑраҫҫӗ.

**Англо-Советский союзный договор**—Англипе Совет Союзӗ хушшинчи союзлӑ договор—ку договора 1942 ҫулхи майӑн 26-мӗшӗнче ССР Союзӗпе Великобритани хушшинче „Гитлерла Германие тата унӑн Европӑри тусӗсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра союзлӑ пуласси тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн ҫыхӑнса тата пӗрне-пӗри пулӑшса тӑрасси ҫинчен" ҫырса алӑ пуснӑ. Анчах вӑрҫӑ пӗтнӗренпе Англи правительстви ҫав договора пурнӑҫласа пырассинчен темле майсемпе те хӑтӑлма тӑрӑшать. 1949 ҫул пуҫламӑшӗнче Англи прави-

тельстви Çурçĕр-Атлантика пактне (ун çинчен каланине пăхăр) тунă çĕре хутшăннă. Çав пакт Англипе Совет Союзĕ 1942 çулта тунă договора тӳрремĕнех хирĕç пырать.

**Англо-Советский профсоюзный комитет** — Англипе Совет профсоюзĕсен Комитечĕ. Ăна 1941 ç. октябрĕн 6-мĕшĕнче организациленĕ. Унта ВЦСПС тата Британи тредюнионĕсен Конгресĕн Генеральнăй Совечĕ кĕнĕ. Англипе Совет профсоюзĕсен Комитечĕ ССР Союзĕпе Великобритани гитлерла Германие хирĕç туса пынă вăрçă кунĕсенче вăйсене пухма тата ССР Союзĕн, Великобританин правительствисене тăшмана çĕнтерме мĕнпур вăйпа пулăшнă. Гитлерла Германие хирĕç кĕрешнĕ çĕрте профсоюзсем пысăк вырăн йышăнса тăнă. Вĕсем пĕрмаях анлă массăсене ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыма, вăрçа кирлĕ япаласене ытларах туса кăларма мобилизациленĕ. Çакă Англипе Совет профсоюзĕсен Комитечĕн тĕп задачи пулса тăнă.

**Аннексия**—аннекси—ют халăх çĕрне ирĕксĕр туртса илсе тепĕр государство çумне пĕрлештерни. Сăмахран, Германи фашизмĕ 1938 çулхи март уйăхĕнче Австри çĕрĕ çине çĕмĕрсе кĕрсе, Австрие ирексĕрех Германи çумне пĕрлештернĕ, Австри халăхĕн политика, экономика тата культура тĕлĕшĕнчи никама пăхăнманлăхне пĕтерсе хунă. Пирĕн Совет Çарĕ Австри халăхне, çавăн пекех Европăри ытти халăхсене те ирĕке тухма пулăшнă.

**Антагонизм**—тăшманлăх, хирĕçӳ, интерессен уйрăмлăхĕ, ниепле те килĕшме пултарайман хирĕçӳ, çав хирĕçӳ çапăçусем патне илсе пырать. Сăмахран, буржуазипе пролетариат хушшинчи антагонизм, ăна социализмлă революци кăна татса пама пултарать.

**Антагонистическое общество** — антагонистла общество—вăл килĕшме пултарайман хирĕçӳллĕ общество, унта пуç пулса тăракан тата пусмăрта пурăнакан классем пур. Çав классем пĕр-пĕрне тăшманла пулса тăраççĕ, вĕсем хушшинче яланах килĕшме пултарайман кĕрешӳ

пырать. Тĕслĕхрен, буржуази обществи çавăн пек общество пулса тăрать.

**Антагонистические классы**—антагонистла классем—кирек мĕнле класлă обществăра та—чуралăх, феодаллă, капитализмлă обществăра пуç пулса тăракан классем тата пусмăрта пурăнакан классем пур. Вĕсем хушшинче ниепле те килĕшме пултарайман хирĕçӳсем пур. Çав классен интересĕсем пачах та урăхла, мĕншĕн тесен пуç пулса тăраканнисем пусмăрта пурăнаканнисен вăйĕпе тăранса пурăнаççĕ. ССР Союзĕнче кăна антагонистла классем çук, этеме этем эксплоатацилени те çук, мĕншĕн тесен ССР Союзĕнче социализм çĕнтерчĕ. СССР-ти классем пĕр-пĕринпе туслă пурăнаççĕ.

**Антанта** (**согласие**)—государствăсем хушшинчи политикăллă килĕшӳ, уйрăм договорпа çирĕплетмен килĕшӳ. 1904 çулта Англипе Франци хушшинче антанта пулса тăнă: Англипе Франци, ятарласа килĕшӳ çырмасăрах, вăрçă тухас мĕн пулсан пĕрле пуласси çинчен калаçса татăлнă. 1907 çулта Виçĕ енлĕ килĕшӳ, е Антанта—Англи, Франци тата Россия хушшинчи союз пулса тăнă. 1914—1918 çулсенчи империализмлă вăрçă вăхăтĕнче, Англи, Франци, Россия енче Германипе унăн союзникĕсене хирĕç вăрçа кĕнĕ пур государствăсене те Антанта тесе ят панă. Россиăра Октябрьти Аслă социализмлă революци çĕнтернĕ хыççăн Антанта вырăссен шурă гварди генералĕсемпе пĕрле пирĕн социализмлă революцие хĕçпăшаллă вăйсемпе пăвса пăрахма хăтланса пăхнă. Ленинпа Сталин ертсе пынипе çав интервенцие Хĕрлĕ Çар çапса салатнă. Хальхи вăхăтра государствăсем хушшинче договор çырса çирĕпленнĕ килĕшӳсемпе союзсене те антанта теççĕ.

**Антей**—авалхи грексен юмахри геройĕ. Унăн амăшĕ çĕр турри пулнă. Халапсем каланă тăрăх, Антей çĕрпе çыхăнса тăнă чухне, ăна никам та çĕнтерме пултарайман. Ăна Геркулес çĕртен уйăрса илнĕ те сывлăшра пăвса вĕлернĕ. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн 1937 çулхи

февраль—март уйăхĕнче пулнă пленумĕнче Сталин юлташ, çав авалхи халапа илсе, Антей çĕрпе—хăйĕн амăшĕпе çыхăнса, вăй илсе тăнă пекех, большевиксем те халăхпа çыхăнса тăнинчен вăй илсе тăраççĕ, терĕ. „Вĕсем хăйсен амăшĕпе, халăхпа, çыхăну тытса тăнă чухне вĕсене никам та çĕнтерес çуккине шанса тăма пултараççĕ“ (*Сталин*).

**Анти...**—хирĕç тенине пĕлтерет. Сăмахран, антифашистский—фашизма хирĕçле.

**„Антикоммунистический блок“**—„Коммунизма хирĕçле блок“—çавăн пек ят панă пулнă хăйсен вăрçăллă-политикăллă союзне Германи, Итали тата Япони. Çав виçĕ агрессор влияни сферисене валеçесси, тĕнчене валеçесси çинчен калаçса татăлса пакт тунăччĕ. Вăл пакт тăрăх Японин „аслă хĕвелтухăç Ази çĕрĕсене“, Германипе Италин—Европăна илмелле пулнă. Виçĕ агрессор хăйсен планне пурнăçлас шутпа тĕнчери иккĕмĕш вăрçа пуçарса ячĕç. Çав вăрçă хăйсене пĕтерсе лартасси патне илсе çитерчĕ.

**Антимилитаризм**—милитаризма хирĕç, капитализмлă çĕршывсем хĕçпăшалланнине хирĕç, вăрçа хатĕрленес тĕлĕшпе тунă тăкаксене тата империализмлă вăрçăсене хирĕç пыракан обществăллă движени.

**Антипатия**—мĕне те пулин ним сăлтавсăрах юратманни, мĕнрен те пулин йĕрĕнни. Пĕр-пĕр йĕрĕнтерсе çитервĕ ĕç е япала çинчен хăсăк килтерекен пулчĕ, теççĕ. А н т и п а т и ч н ы й—йĕрĕнчĕк, юратмалла марскер.

**Антипарламентаризм**—парламентаризма хирĕçле—рабочи движенинчи „сулахай“ оппортунистла вак буржуаллă юхăм, çав юхăм парламента тата ытти органсене суйланă çĕре хутшăнассине те, вăл органсенче ĕçлессине те пĕтĕмĕшпех хирĕç тăрать.

**Антисемитизм**—еврей халăхне курайманни, хĕсĕрлени; еврейсене наци тĕлĕшĕнчен курайманлăха ятарласах чĕртсе яни; еврейсене наци тĕлĕшĕнчен курайман кăмăла пуç пулса тăракан классен ытларах реакциллĕ сийĕсем чĕртсе яраççĕ. Сăмахран, нимĕç фашисчĕсем еврейсене

вĕлерсе пĕтерессине, асап кăтартассине организациленĕ, вĕсенчен граждан прависене туртса илнĕ тата ытти тĕрлĕ тискер ĕçсем те тунă. Антисемитизмăн тĕллевĕ— пусмăрçăсене хирĕç кĕрешесрен массăсене пăрса ярасси. Антисемитизм вăл нимрен ытларах капитализм чуралантаракан хуларипе ялти вак буржуаллă массăсемпе усă курать, вĕсен тулса çитнĕ çиллине еврейсене кураймасăр пурăнас суя çулпа ярать.

**Античный**—античнăй — авалхи; çав сăмахпа авалхи Грецин тата авалхи Римăн обществăллă стройĕ, искусстви, культури тата ыт. çинчен те каланă чухне усă кураççĕ.

**Аншлюс**—пĕрлештерни. Политикăллă пурнăçра çак сăмах 1914—1918 çç. империализмлă вăрçă хыççăн уйрăм вырăн йышăнса тăракан пулнă. Сăмахран, Германи хăй çумне Австрие пĕрлештернине аншлюс тенĕ.

**Апелляция**—апелляци—кĕçĕн органсем йышăннă решени е постановлени тĕрĕс мар тесе çӳлти органсене жалоба пани.

**Апломб**—хăй çине хăй мăнкăмăллăн шанни, калаçура мăнкăмăллăн тыткалани.

**Апогей**—кирек мĕнле те пулин ĕçĕн чи çӳлти шайĕ; чи çӳлти пусăм; чи çӳлти пусăмри аталану.

**Аполитизм**—аполитизм—политикăллă пурнăçпа интересленменни, ун çине йĕрĕнерех пăхни. Ĕç халăхне капитализмлă стройпа кĕрешессинчен пăрса ярас тесе, буржуази вĕсене политикăллă пурнăçпа интересленмелле мар тума, политикăллă пурнăç çине йĕрĕнерех пăхма вĕрентме тăрăшать. Аполитицизм буржуази аллинче хăйĕн класлă шухăшĕсене пытарса тăмалли меслет пулса тăрать.

**Аполитический**—политикăпа интересленмен (сын).

**Апологет**—мĕнле те пулин теорие е сĕнĕве хӳтĕлекен тата çав теори е сĕнӳ енче тăракан.

**Апофеоз**—авалхи грексем çынна турă вырăнне хуни, кама та пулин чапа кăларса ытла та мухтани; халĕ политикăпа обществăллă пурнăçри, литературăри, искусст-

вӑри, харпӑрхӑй пурнӑҫӗнчи аталану е событисем калама ҫук ӑнаҫлӑн вӗҫленнине пӗлтерекен сӑмах.

**Апробация**—апробаци — ӗнентерсе пани, ҫирӗплетсе пани. Агрономире—вӑрлӑх пахалӑхне палӑртса хаклани.

**Арбитраж**—икӗ еншӗн (сӑмахран, икӗ государство, икӗ предприяти хушшинчи) тавлашуллӑ ыйтӑва килӗшӳллӗ татса пама ятарласа полномочи панӑ ҫынсем татса пани.

**Арбитр**—икӗ ҫын е организаци хушшинчи тавлашуллӑ ӗҫе татса паракан орган, ҫав органра ӗҫлекен ҫын, третейски судья. Совет Союзӗнче арбитрсем государство учрежденисемпе хуҫалӑх организацисем хушшинчи тавлашуллӑ ӗҫсене пӑхса тухса татса параҫҫӗ. Государствӑсен пӗтӗм тӗнчери практикинче икӗ государство хушшинче пыракан тавлашуллӑ ыйтӑва, ҫав икӗ государство ыйтнипе, хутшӑнса татса паракан государствӑна арбитр теҫҫӗ.

**Арена**—циркра артистсем тухса выляса кӑтартмалли вырӑн; урӑхла, пӗр-пӗр ӗҫре палӑрса ӗҫлени.

**Аристократ**—дворянсен е буржуасен ҫӳлти сийӗнчен тухнӑ ҫын.

**Аргументация** (аргумент сӑмахран пулса кайнӑ)—ӗнентерсе панине е ӗнентерсе парас тесе хӑш-пӗр фактсене илсе кӑтартса панине пӗлтерет. **Аргументировать**—пӗр-пӗр шухӑша ӗнентерсе пама илсе кӑтартнӑ тӗслӗхсем, доводсем.

**Армада**—ҫар карапӗсен пысӑк соединенийӗ, пысӑк та вӑйлӑ эскадра.

**Армия**—ҫар—1) темиҫе корпуса, дивизие, авиаципе танксен соединенине пӗр командовани пӗрлештерсе тӑрать пулсан ҫар (арми) теҫҫӗ; унӑн ҫине мӗнле задача пурнӑҫа кӗртме хушнине шута илсе ҫарӑн составӗ тӗрлӗрен пулма пултарать; 2) государствӑн мӗнпур хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем.

**Арсенал**—вӑрҫӑ хатӗрӗсене ҫӗнӗрен тумалли, тӳрлетмелли, тытса усрамалли вырӑн (сӑмахран, ҫарпа тинӗс-ҫар

арсеналĕсем). Пирĕн арсенал текен терминпа артиллери валли материальнăй ча̧ссем ç̆енĕрен туса хатĕрлекен предприятисене калаççĕ.

**Артиллерия**—артиллери—1) тупăсенчен персе вăрçакан çар; тăшманăн мĕнле вăйĕсемпе вăрçма тивнине кура, артиллери хирти (полевой), çыран хĕрринчи (береговой), крепоçри, карапсем çинчи тата зенитлă (сывлăш) артиллерийĕ çине пайланать; 2) вăйлă орудисем (тупăсем). Артиллери тупписедм тĕрлисем пур: гаубица, мортира, тупă. Кучухнехи артиллери инçене, хăвăрт тата тĕл пеме пултарать. Полевой текен орудисем 25 километр таран переççĕ, инçене перекеннисем 120 километра çити переççĕ. Зенитлă орудисем пĕлĕтелле 13 километра çити переççĕ. Тинĕсрисемсĕр пуçне ытти орудисене лашасемпе, тракторсемпе, автомобильсемпе турттарса çӳреççĕ. Хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсене—самоходные орудия, самоходки теççĕ.

**Арьергард**—çарăн тĕп вăйĕнчен кая юлса тылра пыракан пайĕ. Вăл тĕп вăйсем çине тăшман хыçалтан, тылран пырса тапăнасран сыхласа пырать; çарăн тĕп вăйĕ каялла чакса пынă чухне çулсене, кĕперсене, шыв урлă каçмалли хатĕрсене çĕмĕрсе пырать.

**Ассамблея**—пуху. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблеи—пур çĕршывсен представителĕсен пухăвĕ.

**Ассигнование**—ассигновани—пĕр-пĕр ĕçе тума малтан палăртса хунă чухлĕ укçа пани. Сăмахран, министерствăсем государствăн халăх хуçалăх планĕ тăрăх расходлама палăртнă бюджетĕнчен (ассигновани) укçа-тенкĕ илеççĕ.

**Ассоциация**—ассоциаци—пĕр пек ĕçе пурнăçа кĕртме пĕрлешнĕ çынсен ушкăнĕ, союзĕ.

**Ассы**—вĕçев ĕçĕсен мастерĕсене çапла калаççĕ. Французсен чĕлхинче „ас“ тени „туз“ тени пулать. Вăл сăмах час-часах „хăйĕн ĕçĕн мастерĕ“ тата „шурăпа хурана курнă лĕтчик“ тесе каланине пĕлтерет.

**Атеизм**—турăсăрлăх; турă çукки çинчен тата ытти

тĕрлĕрен куçа курăнман вăйсем çукки çивчен вĕрентни.

**Атлантическая хартия**—Атлантика хартийĕ—Англипе Америка пĕрле 1941 çулхи августăн 14-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă декларацие çапла калаççĕ. Çав документ США президенчĕпе Великобритани премьер-министрĕ пĕрле тĕл пулнă хыççăн пичетленсе тухнă. Вĕсем Атлантика океан бассейнинче çар карапĕ çинче тĕл пулнă (çакăнтан пулнă вăл документăн ячĕ—„Атлантика хартийĕ"). Пĕтĕмĕшпе илсен деклараци çаксем çивчен каласа парать: 1) США тата Великобритани хăйсем çумне çĕнĕ территорисем пĕрлештерме пикенмеççĕ; 2) территори тĕлĕшĕнчен пулакан улшăнусемпе, çав территоринче пурăнакан халăхсем вăл улшăнăва хăйсен ирĕкĕпе ырламан пулсан, вĕсем килĕшме пултараймаççĕ; 3) пур халăхсен те хăйсен государствине тытса тăма мĕнле форма суйласа илес теççĕ, çавăн пек форма суйласа илме право пур, США-па Великобритани çав правасене хисеплеççĕ тата халăхсен тивĕçлĕ прависем тăрăх хăйсен çĕршывне хăйсем тытса тăрассине çĕнĕрен туса хума пулăшаççĕ; 4) пур çĕршывсем те пĕртан правасемпе—суту-илӳ тума та, чĕртаварсен пуянлăхĕсемпе усă курма та пултараççĕ; 5) пуриншĕн те лайăх пурнăç туса парас тесе, экономика аталанса пыма услови туса парас тесе тата инкек-синкек пулсан пулăшмалла тумашкăн экономика тĕлĕшĕнчен пур çĕршывсем хушшинче те çыхăну пулмалла; 6) гитлерла тиранине тĕппипех пĕтернĕ хыççăн мирлĕ пурнăç тумалла, çав мирлĕ пурнăç пур çĕршывсене те хăрушлăхсăр пурăнма майсем туса памалла; 7) тинĕссемпе океансем тăрăх ирĕклĕн, ним кансĕрлемесĕр çӳрессине тумалла (тинĕссен ирĕклĕх принципĕ); 8) мирлĕ пурнăçпа пурăнма килĕшнĕ пур государствăсен тепĕр государствăна хирĕç вăйпа тухассине пăрахмалла, анлă та шанчăклă пĕтĕмĕшле хăрушсăрлăх системине туса хуриччен агрессиллĕ çĕршывсене хĕçпăшалсăрлатмалла. 1941 çулхи сентябрь уйăхĕнче ССР Союзĕн Правитель-

стви ҫак декларацин тĕп принципĕсемпе килĕшнĕ, ҫав вăхăтрах вăл деклараци принципĕсем пĕтĕмĕшле характерлă пулнине тата конкретлă обстановкăсене шута илсе, ҫав принципсене пăхса тухса вĕсене тĕрĕсрех тумаллине палăртнă. Вăрҫă хыҫҫăн Англипе Америка правительстви-сем хăйсен Атлантика хартийĕнче панă сăмахĕсене манчĕҫ, хартире кăларса тăратнă принципсене хирĕҫле ĕҫсем туса пыраҫҫĕ.

**Атрибут**—япалан, ĕҫĕн паллă тĕп енĕ, **унсăр** япала пулмасть. Сăмахран, движени материн атрибучĕ пулса тăрать.

**Атташе**—дипломатиллĕ представительствăри (посольствăри тата миссири) чи кĕҫĕн должность. Ятарласа уйăрса лартнă атташесем пур: ҫар, тинĕс-ҫар, авиаци, суту-илӳ, финанс, пресса атташисем. Вĕсем хăйсен специальноҫĕсем тăрăх посолăн советникĕсем пулса тăраҫҫĕ тата ют государствăсенче хăйĕн ҫĕршыв ҫарĕн, тинĕс-ҫар, авиацин тата ыттисен те представителĕсем пулса тăраҫҫĕ. Буржуази правительствисем час-часах дипломатиллĕ представительсен атташисене шпион ĕҫне туса пыма хушаҫҫĕ.

**Аудиенция**—аудиенци—1) государство пуҫĕнче тăраканни е правительство членĕсем ют государство представителĕсене официально йышăнни; 2) мĕнле те пулин аслă ĕҫлĕ вырăнти ҫын патне малтанах каласа хунă вăхăтра ĕҫпе пыни.

**Аутентичный**—чăн-чăнни, тĕп-тĕрĕсси. Ҫак сăмаха тĕрлĕрен чĕлхепе ҫырнă пĕтĕм тĕнчери договорсенче тата килĕшӳсенче, договорăн тексчĕ хăш-хăш чĕлхепе ҫырни чăн-чăнни, урăх чĕлхерен куҫарманни пулса тăнине кăтартса парас тесе асăнаҫҫĕ. Ҫапла туни договор текстне пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куҫарнă чухне мĕнле кирлĕ, ҫапла ăнлантарса парассинчен сыхлать.

**Афера**—вĕрсе хăпартнă ĕҫ; иккĕленмелле ĕҫ; ултавлăн, ҫăмăллăн пуйма пикенни.

# Б.

**Бактериологическая война**—бактериллӗ вӑрҫӑ. Бактерисем вӗсем ахаль куҫпа курма ҫук вӗтӗ, пур ҫӗрте те пурӑнакан чӗрчунсем, пӗр е темиҫе клеткӑран пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсене микроскопсӑр курма ҫук. Хӑш-пӗр бактерисем ҫынсене те, выльӑхсене те калама ҫук хӑрушӑ сикекен чирсем—чума, халера, тиф, шатра чирӗ, ҫӗпӗр язви тата ыт. чирсене те ертме пултараҫҫӗ. Нимӗҫ фашисчӗсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫавӑн пек бактерисене тата ытти ҫӗнӗ бактерисене те хӑйсене хирӗҫ вӑрҫакан ҫӗршывсен тылне ярса хӑрушӑ чирсем сарма шутланӑ. Пӗтӗм тӗнчери килӗшӳсем тӑрӑх, вӑрҫӑра бактерисемпе усӑ курассине чарнӑ. Нимӗҫ фашисчӗсем темӗнле тискер ӗҫсем тума та хатӗр пулнӑ, анчах пирӗн Совет Ҫарӗ нимӗҫ фашисчӗсене бактериллӗ вӑрҫӑ пуҫарса яма май памарӗ, вӗсен бактериллӗ вӑрҫӑ тӑвас планӗсене путарса лартрӗ.

**Базис**—базис, тӗпри, никӗс. Обществӑн экономикӑллӑ базисӗ—обществӑн экономикӑллӑ никӗсӗ. Материальнӑй пуянлӑх (апат-ҫимӗҫ, тумтир, пӳрт-ҫурт, хутмалли япаласем тата ыттисене те) туса кӑлармалли меслет обществӑн никӗсӗ пулса тӑрать. Ҫав никӗс ҫинче вара обществӑллӑ ӑнланӑвӑн паллӑ формисем чӑмӑртанаҫҫӗ, юридически тата политикӑллӑ надстройкӑсем тытӑнса тӑраҫҫӗ. Совет обществин экономикӑллӑ никӗсӗсем ҫаксем пулаҫҫӗ: хуҫалӑхӑн социализмлӑ системи тата производство средствисен социализмлӑ харпӑрлӑхӗ.

**Базироваться**—пӗр ҫӗртен тепӗр ҫӗре куҫса вырнаҫни.

**Баланс**—равновеси, пӗр пек пулни. Баланс предприятия—пӗтӗмӗшле ведомость; пӗр-пӗр паллӑ число тӗлне, яланах уйӑх пӗтнӗ ҫӗре е ҫулталӑк пӗтнӗ ҫӗре предприятин тупӑшӗсемпе расхочӗсене пӑхса тухни; вӑл предприятин хуҫалӑх ӗҫӗн итогӗсене тӑвать.

**Балканская Антанта**—Балканри Антанта—1934 ҫулӑн пуҫламӑшӗнче Румыни, Югослави, Греци тата Турци

хушшинче тунă договор. Договор тăрăх çав государствăсем Балкан çурутравĕн чиккисене пĕр-пĕрне пулăшса сыхласа тăмалла пулнă. Çав договор тăрăх вăл государствăсенчен пĕри теприн çине вăрçăпа тапăнсан, ытти-сен тăшман тапăннă государствăна пулăшмалла пулнă. Балканри Антанта Франци хĕтĕртнипе пулса тăнă. Анчах каярахпа Балканри Антантăна кĕрекен государствăсем Франци сăмахне итлеми пулнă. Гитлерла Германи вăрçăпа тухса çав Антантăна кĕрекен государствăсенчен пĕрин çине тапăнсан, теприсем ăна пулăшман. Çапла вара Балканри Антанта сапаланса кайнă. Çавăн хыççăн вара гитлерла Германи Румыние, Югославие, Греціе оккупациленĕ. Вăл çĕршывсем Совет Çарĕ пулăшнипе кăна каярахпа фашистла Германи пусмăрĕнчен тухрĕç.

**Баллотировка**—пĕтĕмĕшпе илсен, алă çĕкленине, сасăланине пĕлтерет. Ĕлĕк балл тесе калакан чăмăрсене (шарсене) ещĕк (урна) ăшне ярса сасăланă, шурă чăмăрĕ (е сылтăм енне хуни) суйлавсемшĕн сасăланине пĕлтернĕ, хура чăмăрĕ (е сулахай енне хуни) хирĕç сасăланине пĕлтернĕ. Баллотировка тени сасăланине е суйланнине пĕлтерет.

**Банзай**—Япони халăхĕн чĕнĕвĕ, пирĕн вырăс халăхĕн „урра" сăмахĕ пекки.

**Банкротство**—банкрота тухни; уйрăм капиталистсем акционерлă обществăсене е государствăна кивçен илнĕ укçана тӳлеме пăрахни, шанчăкран тухни. Банкрот— 1) кивçен илнĕ укçана, парăма парса татайман çын; 2) пĕрпĕр ĕçе тума пултарайманнипе путланса ларнă, мăшкăла тухнă çын.

**Белый дом**—США президенчĕн Вашингтонри (США столици) керменне (двореңне) çапла калаççĕ. Политикăллă калаçусенче „Шурă çурт шухăшĕ", „Шурă çурт тавралăхĕнче" тесе каланисем президент шухăшĕсем, президентпа туслăрах тăракан политикăллă деятельсем хушшинче тенине пĕлтерет. „Белый дом" („Шурă çурт") тени час-часах „США правительстви" тенине те пĕлтерет.

**Бенилюкс**—ку сӑмах „страны Бенилюкса" текен сӑмах ҫавӑрӑнӑшӗнче тӗл пулать. Бенилюкс ҫӗршывӗсен хисепне Бельги, Нидерланди (Голланди) тата Люксембург государствисем кӗреҫҫӗ.

**Берлинская конференция**—Берлинри конференци. Вӑл 1945 ҫулхи июнӗн 17-мӗшӗнчен пуҫласа августӑн 2-мӗшчен пулса иртнӗ. Унта виҫӗ аслӑ держава (Совет Союзӗ, Великобритани, США) правительствисен пуҫлӑхӗсем тӗл пулнӑ. Конференцин ларӑвӗсем Потсдам ҫывӑхӗнчи Сесилиан-Хорра ятлӑ вырӑнта пулса пынӑ. Конференцире паха решенисемпе килӗшӳсем тунӑ. Ытти тӗрлӗ ыйтусем тӑрӑх та пӗрпӗрин шухӑшӗсене палӑртнӑ. Ҫав ыйтусене малашне конференцире туса хунӑ Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен Министрӗсен Совечӗнче сӳтсе явмалла пулнӑ. Конференцире Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен Министрӗсен Советне тӑвасси ҫинчен, Германи государствин пуласлӑхӗ ҫинчен, Германирен вӑрҫӑ тӑкакӗсене шыраса илесси ҫинчен, Германин ҫар флочӗпе суту-илӳ карапӗсем ҫинчен, Кенигсберг хулипе ун ҫывӑхӗнчи район ҫинчен, вӑрҫӑ преступникӗсем ҫинчен, Австри ҫинчен, Польша ҫинчен, мирлӗ договорсем тӑвасси тата Пӗрлешнӗ Нацисен Организацине йышӑнасси ҫинчен, опекӑна илнӗ территорисем ҫинчен, союзниксен Румынири, Болгарири тата Венгрири Контроль комиссийӗсен ӗҫӗсем ҫинчен, Германи халӑхне куҫарассине йӗркелесси ҫинчен, вӑрҫӑ ыйтӑвӗсем ҫинчен решенисем йышӑннӑ. Анчах та, юлашки вӑхӑтра ҫав килӗшсе йышӑннӑ решенисене США, Великобритани, Франци правительствисем пӑсма пуҫларӗҫ, вӗсене пурнӑҫа кӗртсе пырассине хирӗҫ кӗрешеҫҫӗ. Вӗсем Германие вакласси патне илсе ҫитерчӗҫ, хӑйсен оккупациленӗ зонисенче США-па Великобритани „Бизони" (икӗ зона) туса хучӗҫ. Совет Союзӗ кӑна ҫав решенисене тӗрӗс пурнӑҫласа пырать, вӗсене пурнӑҫа кӗртсе пымалла тӑвассишӗн кӗрешет.

**Беспрецедентный** — прецедентсӑр, урӑхла каласан, курман-илтмен (ӗҫ). Прецедент (латин сӑмахӗ) тесе ӗлӗк, авал, унччен малтан ҫавӑн пек пулнӑ ӗҫе, унтан кайран

çавăн пек ĕççемшĕн тĕслĕх пулса тăнă ĕçе калаççĕ. Гитлеровецсем вăхăтлăха оккупациленĕ территорисенче тунă çав тери тискер ĕççем нихçан курман-илтмен ĕççем пулнă, мĕншĕн тесен гитлерла бандитсем тунă çавăн пек ирсĕр ĕççем этем историнче нихçан та, ниçта та пулман.

**Бизония** – Бизони—икĕ пĕрлешнĕ зона (вырăн, район) тенине пĕлтерет. 1946-мĕш çулхи декабрĕн 3-мĕшĕнче США-ан государственнăй секретарĕ Бирнс тата Англи ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бевин, иккĕшĕ пĕрле, Америкăпа Англин Германири оккупациленĕ зонисене экономика тĕлĕшĕнчен пĕрлештересси çинчен килĕшӳ туса алă пуснă. Çапла икĕ уйрăм зонăран (Германие оккупацилекен государствăсен СССР-ăн, Англин, Францин, США-ăн кашнин хăйĕн зони пур) пĕр зона пулса тăнă. Çавна вара Бизони тесе ят панă. Çав килĕшӳ 1947-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнче пурнăça кĕнĕ. Вăл килĕшӳ Германие политика тĕлĕшĕнчен вакласcин пĕрремĕш утăмĕ пулса тăнă.

**Бизнесмен** (акăлчансен сăмахĕ)—пысăк тупăшлă сутуилӳ тума пултаракан çын тенине пĕлтерет, ăна коммерсант теме те пулать; пĕр-пĕрин хушшинче е икĕ организаци хушшинче кирек мĕнле ĕçе те ăнăçлăн, хăйшĕн е хăйĕн организацийĕшĕн пысăк усăллă ĕç тума пултаракан çын.

**Биржа**—капитализмлă çĕршывсенчи шултăра хуласенчи учреждени; унта укçа вырăннех хурса шутлакан хаклă хутсене (фондовăй биржа) е таварсене (тавар биржи) сутса илесси пулса пырать. Биржăн администрацийĕ çав хутсене е таварсене сутас е илес пирки калаçса татăлнине регистрацилет тата укçа вырăнне шутланакан хутсен хакне (курс) пичетлесе кăларать. Шултăра банксем, делецсем тата спекулянтсем час-часах пĕр-пĕр укçа вырăнне шутланакан хаклă хута е тавара юриех вĕсен хакĕсене хăпартса ытларах сутăн илме (ăна: „игра на

повышение"—„хакне хăпартас тесе выляни", теççĕ) тытăнаççĕ е юриех сутăн илме пăрахаççĕ (ăна: „игра на понижение"—хака йӳнетес тесе выляни, теççĕ). Вара биржăра çавăн пек выляв пынине пула спекулянтсем укçа вырăнне шутланакан хутсене сахалтарах тытакан çынсем банкрота тухса пынипе пуяççĕ.

**Биология**—биологи—чĕрчунсем çинчен вĕрентекен мĕнпур наукăсене пĕрле илсе каланине пĕлтерет, тĕллĕнех каласан, пур органикăллă тĕнчешĕн те пĕр пек пулса тăракан явленисемпе тивĕçлĕ виçелĕхсем (закономернăçсем) çинчен вĕрентекен наука.

**Блеф** (англичансен сăмахĕ)—суйнине, хăратнине, тыттарнине пĕлтерет. Картла выляна чухне хăшĕ те пулин вăйлă картсем пур тесе хăратса ларнине блеф тесе калаççĕ. Вăй е укçа-тенкĕ çук пулсан та, пур тесе каппайланнине блеф теççĕ; хăй вăйсăр пулсан та, вăйлă тесе кăтартасшăн пулнине, е хăй тума пултарайманнине те тума пултарнă пек пулнине, блеф теççĕ. Çав мелсемпе нимĕç фашисчĕсем анлăн усă курнă. Çапла вĕсем, Европăра иккĕмĕш фронт уçăлас хăрушлăх килсе тухсан, „Атлантика валĕ" çинчен сӳпĕлтетме тытăннă. Анчах вăл фашистсен суя сăмах çаптарни çеç пулнине пĕтĕм тĕнче пит те лайăх курчĕ.

**Ближневосточная Антанта**—Çывăхри хĕвелтухăç Антанти—Çывăхри хĕвелтухăçĕнчи тăвата çĕршыв: Турци, Иран, Ирак тата Афганистан государствисем хушшинче Иран столицинче—Тегеранра 1937 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче тунă килĕшӳ.

**Ближний восток**—Çывăхри хĕвелтухăç—Вăтаçĕр тинĕсрен хĕвелтухăçнелле тата кăнтăр-хĕвелтухăçнелле выртакан çĕр тăрăхĕн пĕтĕмĕшле ячĕ. Вĕсен чи ытларах пайĕ Кĕçĕн Ази тата Арави çурутравĕсем çинче выртать. Кунта Турци, Сири, Палестина, Трансиордани, Иран, Сауди, Иемен, Аденц, Хадрамаут, Оман тата Ковейт çĕршывĕсем кĕреççĕ. Çак асăннă çĕршывсенче пуринче те арабсем пурăнаççĕ. Çавăнпа та вĕсене тата Араб

хӗвелтухӑҫӗ (Арабский восток) тесе те калаҫҫӗ. Ҫывӑхри хӗвелтухӑҫне ялавах Ирана та (ӗлӗк Перси ятлӑ пулнӑ), ҫавӑн пекех тата Египета та кӗртеҫҫӗ.

**Блок**—союз; государствӑсен, партисен е ытти организацисен пӗрле тухма шут тунӑ политикӑллӑ килӗшӗвӗ.

**Блокада** (англичансен сӑмахӗ)—тӑшманӑн ҫӗршывне, е унӑн пӗр пайне, е уйрӑм хулине вӑрҫӑ тӗлӗшӗнчен, политика е экономика тӗлӗшӗнчен вӑйпах ытти ҫӗршывсенчен уйӑрса илсе ҫыхӑну тытма паманни, ҫавӑрса илни; тӑшмана ытти ҫӗршывсемпе, ҫулсемпе, ҫынсемпе ҫыхӑну тытма, суту-илӳ тума тата ыт. те вӑйпах пӑрахтарни.

**Блокирование**—ҫавӑрса, хупӑрласа илни; тӑшманӑн пӗр-пӗр ҫирӗплетнӗ пунктне, тупӑран е пулеметран перекен точкине, хулине е пӗтӗм государствӑна хӗҫпӑшаллӑ вӑйпа ҫавӑрса илни; Совет Ҫарӗ нимӗҫ захватчикӗсен питех те ҫирӗплетнӗ пункчӗсене, укреплениййӗсене ҫавӑра-ҫавӑра илсе пӗтерсе пычӗ.

**Бойкот**—государство, обществӑллӑ организаци е уйрӑм ҫын тепӗр государствӑпа, организаципе е уйрӑм ҫынпа хутшӑнма пӑрахни.

**Брюссельский пакт** — Брюссельри пакт — Хӗвеланӑҫ Европӑри пилӗк ҫӗршыв (Великобритани, Франци, Бельги, Голланди тата Люксембург) хушшинче 1948-мӗш ҫулхи март уйӑхӗнче Брюссель хулинче тунӑ союз. Ҫак союз вӑрҫӑллӑ-политикӑллӑ союз пулса тӑрать. Ӑна Совет Союзне тата халӑх демократин государствисене хирӗҫ кӗрешме тунӑ. Вӑл договора тунипе Великобританипе Франци агрессие хирӗҫ пыракан политикӑна — Ялтӑпа Потсдамри конференцисенче йышӑннӑ политикӑна пурнӑҫа кӗртме пӑрахрӗҫ. Вӗсем мирлӗ пурнӑҫа юратакан халӑхсем умне питех те пысӑк хӑрушлӑх кӑларса тӑракан ҫӗнӗ политика ҫулӗ ҫине тӑчӗҫ. Ҫак политика вӗсем Европӑри ытти халӑхсене хайсене пӑхӑнтарса пуҫ пулса тӑрас тӗллев лартнине пӗлтерет. Ҫавнашкал тӗллевсене пурнӑҫа кӗртес ӗҫре вӗсем ӗнерхи агрессорпа та, вӑрҫӑ пӗтнӗ

хыççăн хăйсене пăхăнса тăракан агрессорпа та усă курма шутлаççĕ. Брюссельте тунă пакт—колонисем тытса тăракан державăсен союзĕ. Колонисенче хăйсем ĕмĕрех пысăкрах правăсемпе усă курнине сыхласа хăварас тесе, вĕсем çарпа политика енчен халĕ туса хунă ушкăнпа усă курса, çав колонисенчи нацисен ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕвне пусарса лартма тăрăшаççĕ.

**Бургомистр**—Хĕвеланăç Европăра хула управленийĕн (магистрачĕн) пуçĕнче тăракан ĕçлĕ çын.

**Бум**—шав, сенсаци, элек, сăмах сарни. **Б у м б и р ж е в о й**—таварсен тата укçа вырăнне шутланакан хаклă хутсен хакне ятарласа кĕске вăхăта хăпартни. Шултăра капиталистсем çав бума (шава), унтан ытларах услам илес тесе, ятарласах тăваççĕ.

**Бутафория**—бутафори—итальянецсен чĕлхинчен кĕнĕ сăмах. Тӳрех каласан чăн мар (суя, илемлетсе тунă) япалана пĕлтерет. Сăмахран, театрсенче артистсем вылянă чухне усă куракан япаласем (тумтир, хĕç-пăшал, апат-çимĕç тата ытти çавнашкал япаласем) инçерен пăхсан чăн япаласем пекех курăнаççĕ, анчах вĕсем чăн-чăн япаласем мар. Политика ăнлавăвĕ çине куçарса каласан, çав сăмах суйнине, чăн мар япалана чăн тесе ĕнентерме тăрăшнине пĕлтерет.

**Буферный**—буферлă. Буфер тесе вагонсем вĕçĕнчи тимĕр дисксене калаççĕ, вĕсене пружина çине вырнаçтарса лартнă, çавна пула вагонсем поезд чарăннă чухне пĕр-пĕрин çумне пырса çапăнсан ытлашши сикмеççĕ, вĕсене пружинăсем çемçетеççĕ. Урăхла пĕлтерĕшпе илсен, пĕр-пĕррин çумне пырса çапăнман е пĕр-пĕринпе кĕрешекен икĕ ен хушшинче тăракана калаççĕ. Сăмахран, 1918-мĕш çулта большевиксемпе троцкистсем хушшинче Бухарин „буферла группа“ туса, кĕрешĕве „çемçетме“ хăтланса пăхнă. Чăннипе илсен, ун чухнех Бухарин троцкистсене пулăшса пынă. Буферлă тесе икĕ тăшманла енсем хушшинче тăракан çынна, е ушкăна, е государствăсене калаççĕ. Çавăн пек тĕнчери иккĕмĕш вăрçă

умӗн пансем пуҫ пулса тӑракан Польша государстви фашистла государствӑпа СССР хушшинчи буферла государство вырӑнне пулса тӑвӑ.

**Бюджет**—государствӑн (государство бюджечӗ), предприятин, учрежденин е уйрӑм ҫыннӑн пӗр вӑхӑтлӑх тупӑшсемпе расхочӗсен планӗ.

**Бюджет баланса**—государство бюджетӗнчи е вырӑнти бюджетри тупӑшсемпе расхутсене танлаштарса кӑтартни. Тулашри суту-илӳри суту-илӳ балансӗ—ют ҫӗршывсенчен тавар илсе килнине (импорт) ҫӗршывран тавар илсе кайнипе (экспорт) танлаштарса пӑхни.

**Бюрократия**—бюрократи—ҫак сӑмах французсен „бюро“ сӑмахӗпе (вӑл сӗтел, ҫавӑн пекех тата ҫыру сӗтелӗ ларакан кабинет, пӳлӗм тенине пӗлтерет) грексен кратос—„вӑй“ сӑмахран пулса кайнӑ. Вырӑс чӗлхи ҫине тӳрех куҫарсан „сӗтел управленийӗ“, „кабинет хуҫи“ тенине пӗлтерет. Вӑл сӑмах Францире XIX-мӗш ӗмӗр пуҫламӑшӗнче тухса кайнӑ. Ҫав сӑмахпа массӑсенчен уйрӑлса кайнӑ, массӑсенчен аякра тӑракан ҫынна е учреждение, политика ӑнланӑвӗнче тӗрлӗ привилегисемпе усӑ куракан ҫынсем ертсе пыракан государство режимне ӑнлантарса параҫҫӗ. Крепӑсла тата буржуаллӑ государствӑсенче бюрократи—чиновникла чи аслӑ учреждени.

## В.

**Вавилонское столпотворение**—библире калана тӑрӑх, авалхи ҫынсем пӗлӗте ҫити ҫӳллӗ башня тума тытӑннӑ пулать, ҫавна кура вара турӑ ҫынсем ҫине ҫиленнӗ те „чӗлхесене хутӑштарса“ янӑ пулать. Халӗ ҫав сӑмахпа йӗркесӗр, пӑтраштаруллӑ, усӑсӑр ӗҫ туни ҫинчен калаҫҫӗ.

**Валовая продукция**—предприятире, хуҫалӑхӑн пӗрпӗр отраҫлинче е пӗтӗм халӑх хуҫалӑхӗнче пӗр-пӗр паллӑ вӑхӑт хушшинче (уйӑхра е ҫулталӑкра) туса хатӗрленӗ продукцин е изделин пӗтӗм хисепӗ. Ҫав пӗтӗм продукцирен е изделирен илсе сутма панӑ пайне таварлӑ продукци тесе калаҫҫӗ.

**Валюта**—правительство законĕпе йышăннă укçа виçи; металран тунă çӳрекен укçа хаклăхĕ (рубль, червонец, доллар, франк, марка тата ыт. те).

**Валютный демпинг**—валюта демпингĕ—ылттăн укçа йӳнелсе кайнă çĕршывсенчен ылттăн укçа хаклă пулнă çĕршывсене тавар, чĕртавар ытла та нумай турттарни. Çав валюта демпингĕ ытти çĕршывсене ытларах тавар турттарса каякан çĕршывра инфляцие (валюта, укçа йӳнелнине) пула ĕç укçи чакнипе çыхăнса тăрать.

**Валютный хаос**—валютăллă йĕркесĕрлĕх — инфляци (валюта, укçа йӳнелни) пирки пулаканскер; пĕр государствăн укçа-тенки йӳнелнипе ытти тĕрлĕрен çĕршывсенче те валютăсем хушшинчи çирĕплĕх пăсăлса каfive. Çĕршывсен валютисем хушшинчи шайлăх мĕнле пулассине пĕлме çукки шанчăклăн суту-илӳ тăвассине пăсса пăрахать. Çапла вара пĕтĕм тĕнчери суту-илӳре тата пĕтĕм тĕнчери укçа-тенкĕ çыхăнăвĕнче йĕркесĕрлĕх (хаос) туса хурать.

**Вандализм**—авалхи грексен нумай йăхĕсенчен пĕрин (вандалсен) ячĕнчен пулса кайнă сăмах. Çав йăхсем IV-мĕшпе V-мĕш ĕмĕрсенче Çурçĕр Европăран (хальхи Германи территоринчен) Кăнтăр Европăна, Италие тата Испание кĕрсе кайнă, вăл вăхăтра вандалсен йăхĕ хуласене ним тĕлсĕр, сĕмсĕр ишĕлтерсе тăкнă, культура япалисене пĕтернĕ. Çавăнтан вара сĕмсĕрленсе, культура çурчĕсене, ытти япаласене хаяррăн та тискеррĕн пĕтернине вандализм тесе калама пуçланă.

Нимĕç фашисчĕсем хăйсен калама çук тискерле ĕçĕсемпе авалхи вандал йăхĕсенчен темиçе хут ытларах ирсĕр вандалсем пулса тăраççĕ.

**Варварство** — варварлăх — калама çук усал, тискер, хаяр ĕçсем туни; усаллăх, хаярлăх, тискерлĕх. Кучухнехи нимĕç фашисчĕсем, культурăпа цивилизацие ишĕлтерекенскерсем, ăçта çитнĕ—унта вилĕм хăвараканскерсем, варварсем пулса тăчĕç.

**Вассал**—вайлăраххине пăхăнса пурăнни, пулăшса тăни, çын куçĕнчен пăхса пурăнни. **Вассальное государство**—вассаллă государство—тепĕр вайлăрах государствăна пăхăнса, ун куçĕнчен пăхса тăракан государство. **Вассал агрессора**—агрессорăн вассалĕ—агрессиллĕ тулашри политикăна, тепĕр майлă каласан, хĕç-пăшал вăйпе ют çĕршывсене пăхăнтарас политикăна тытса пыракан государство хыççăн каякан государство.

**Ватикан**—пур çĕршывсенчи католик духовенствин пуçлăхĕн—папăн—Рим хулинчи çурчĕ, резиденцийĕ; папăн тытăмĕ. Папăн çурт-йĕрĕ йышăнса тăракан территорие Италири фашистла правительство 1929 çулхи договор тăрăх Ватикан государствин территорийĕ тесе йышăннă. Çав „государствăн" территорийĕ—44 гектар; халăх шучĕ—1000 çынна яхăн, вĕсенчен нумайăшĕ папăн тарçисем. Унăн хăйĕн чугун çулĕ, радиостанцийĕ, почти, телеграфĕ, хăйĕн укçа-тенки, хăйĕн суд органĕсем, хăйĕн „çарĕ" (вăтам ĕмĕрти тумтирсем тăхăннă, винтовкăсем вырăнне вăрăм аварлă пуртăсемпе хĕçпăшалланнă 142 гвардеец) пур. Папа пĕтĕм тĕнчери политикăра мĕнле вырăн йышăнса тăни ун патне тĕнчери чылай государствăсем хăйсен посолĕсене янинчен те пит те лайăх курăнать. Папа та чылай государствăсене хăйĕн посолĕсене ярать.

**Вашингтонский договор** — Вашингтонри договор. Вашингтонра çырнă договорсем пĕтĕмпе виççĕ. Вĕсене пурне те пĕр вăхăтра Вашингтонри (США) пĕтĕм тĕнчери конференцире 1922 çулăн пуçламăшĕнче çырнă. Пĕри—„тăхăр держава договорĕ" (Англи, США, Япони, Франци, Итали, Бельги, Голланди, Португали, Китай) Китай территорийĕ çине тапăнмалла марри тата политика тĕлĕшĕнчен Китай никама пăхăнса тăмалла марри çинчен çырнă договор (çав договор тăрăх Японин хăйĕн çарĕсене хăй тытса илнĕ Çурçĕр Китай провинцинчен—Шандуньрен — кăлармалла пулнă); иккĕмĕшĕ — „тăватă держава договорĕ" (Англи, США, Япони, Франци) Лăпкă океан

çинчи империализмлă вăйсен шайлăхне (хăш-пĕр базăсене çирĕплетмелле марри çинчен) тытасси çинчен сырнă договор; виççĕмĕшĕ—„пилĕк держава договорĕ" (Англи, США, Япони, Франци тата Итали); ку договор çине алă пусакан çĕршывсен линейнăй çар флочĕсен хисепĕ çакăн пек пулмалла: 5 : 5 : 3 : 1,75 : 1,75. Çак договорсенчен виççĕмĕшне Япони, договор тунă хыççăнах, официально пăрахăçа кăларнă. Пĕрремĕшне те вăл часах пăснă. Иккĕмĕшне те пурнăçа кĕртсе пыман.

**Вегетация**—вегетаци—ÿсентăран шăтса тухса çитĕнни, пиçсе çитни. Тĕрлĕ ÿсентăраншăн тата пĕр тĕслĕ ÿсентăранăн тĕрлĕ сорчĕсемшĕн те вегетаци вăхăчĕ тĕрлĕрен пулать. Вегетаци вăхăчĕ тăпраран, çанталăкран тата агротехника меслечĕсенчен килет. Çумăр сахал пулакан районсемшĕн ÿсентăрансен хунанипе пиçсе çитнĕ вăхăтне кĕскетни пысăк выран йышăнса тăрать. Совет науки ку тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем тунă.

**Веймарская республика**—Веймар республики—Германире 1918 çулхи ноябрьти революци (монархие сирпĕтнĕ революци) хыççăн туса хунă государство стройĕ. Çав строй 1933 çулхи январĕн 30-мĕшчен, тепĕр майлă каласан, фашистсем влаçа хăйсен аллине тытса иличчен тытăнса тăнă. Çав республика стройĕ мĕнле пулмаллине 1919 çулта Веймар хулинче (çакăнтан вара ячĕ те Веймарский) пухăннă учредительнăй собрани йышăннă конституци татса панă. Веймарти конституцирех ĕнтĕ фашистла режим çуралмалли вăрлăх пулнă. Веймар республики ĕнтĕ 1918 çулта ноябрьти революци çĕнсе илнисене пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех пĕтерсе пынă. Вăл хресченсене те, вак буржуазие те ним те паман.

**Вейсманизм**—нимĕç ученăйĕ Вейсман йăха куçаслăх (наследственность) çинчен вĕрентни. Çак вĕрентÿ иртнĕ ĕмĕр вĕçĕпе хальхи ĕмĕр пуçламăшĕнче пуçланса кайнă. Вăл Дарвинăн аталану çинчен калакан теорин материалистла никĕсне хирĕç пырать. Вейсман хăйĕн вĕрентĕвне неодарвинизм (çĕнĕ дарвинизм) тесе ят панă, анчах

чӑннипе вӑл дарвинизмӑн материалистла енӗсене пӗртте йышӑнманни пулса тӑнӑ, вӑл биологие идеализмпа метафизика илсе кӗртнӗ. Чӗрӗ ҫутҫанталӑк аталаннин материалистла теорийӗ организм хӑйӗн пурнӑҫӗнчи паллӑ условийӗсенче туянакан уйрӑмлӑхсем йӑха куҫма пултарассине йышӑнмасӑр тӑма, туянакан пахалӑхсем йӑхран-йӑха куҫнине йышӑнмасӑр тӑма пултараймасть. Вейсман ҫак материалистла положение пӗтерсе хума хӑтланнӑ. Туянакан пахалӑх йӑха куҫнине пӑрахӑҫа кӑларса, Вейсман йӑха куҫакан уйрӑм вещество пуррине шухӑшласа кӑларса ҫапла калать: „йӑха куҫман вещество ядрора (тӗшре) пулать", „эпир шыракан йӑхлӑха тытса пыраканни вӑл—хромосомӑсем ятлӑ япалара", „хромосомӑсенче япалан пуҫламӑшӗсем пур, ҫав пуҫламӑшӗсенчен кашнийӗ" организмӑн пӗр паллӑ пайӗн пуҫланса каяссипе пулса ҫитес формине палартса тӑрать, тет. Вейсман калать: „икӗ пысӑк категори чӗрӗ вещество пур: йӑха куҫакан вещество е идиоплазма тата тутлӑхлӑ япала е трофоплазма" пур, тет. Малалла Вейсман йӑха куҫакан вещество усраканнисем „хромосомӑсем уйрӑм тӗнче евӗрлӗ", вӑл тӗнче организм ӳтӗнче те, унӑн пурнӑҫ условийӗсенчен те уйрӑм тӑрать, тесе пӗлтерет. Чӗрӗ ӳте йӑха куҫакан веществошӑн ҫимӗҫ парса тӑракан никӗс ҫеҫ туса хурса, Вейсман вара йӑха куҫакан вещество вилӗмсӗр тата вӑл ҫӗнӗрен нихҫан та ҫуралмасть, тесе пӗлтерет. Ҫапла вара Вейсман калавӑ тӑрӑх, куҫаслӑх веществинчен ҫӗнӗ япаласем пулмаҫҫӗ, индивидуум аталанӑ чухне йӑха куҫаслӑх вещести аталанмасть, условисене пула та нимӗнле те улшӑнмасть. Йӑха куҫаслӑх веществи вилӗмсӗр, вӑл чӗре ӳт-пӳ аталанӑвӗн уйрӑмлӑхӗсенче пулма пахалӑхран килмест, вӑл вилӗмлӗ ӳте тытса тӑрать, анчах ҫак ӳтрен пулса пымасть. Ҫакӑн пек ӗнтӗ Вейсман „неодарвинизм" текен сӑмах виттипе туртса кӑларнӑ уҫҫӑнах идеалистла, хӑйӗн ӑшчиккипе тӗшмӗшле концепцийӗ. Ҫак реакцилле вӗрентӳ Мичурин вӗрентӗвне (ку сӑмаха пӑхӑр) хирӗҫле пырать.

Вексель—кивçен илнĕ укçашăн, кĕтмелле илнĕ таваршăн е урăх парăмшăн кăтартнă вăхăтра тӳлеме пулса, алă пусса панă хут.

**Великая стена**—(„вунă пин *ли* тăршшĕ стена")—„Аслă хӳме"—Çурçĕр Китайри калама çук пысăк чул хӳме. Ăна пирĕн ĕмĕрчченхи 213 çулта Цин патша династинчи Ши Хуанди вăхăтĕнче Китай территорине гун халăхĕсенчен сыхлама тата Гань-супа Шань-си провинцийĕсем урлă Тĕп Азие каякан суту-илӳ çулне сыхлама тунă. XVI-мĕш ĕмĕрте çав стенана çĕнĕрен 450 километр тăснă. Унăн тăршшĕ пĕтĕмĕшпе 2400 километра яхăн.

**Великобритания**—Англи государстви; утрав ячĕ.

**Венгерская советская республика**—Венгрири совет республики—1919 çулхи мартăн 21-мĕшĕнче Венгри пролетариачĕ влаçа хăй аллине илсе Венгрире совет республики туса хунă. Рабочисем ыйтнипе социал-демократла парти çулпуçĕсен сăмахпа коммунистсен платформине (программине) йышăнса вĕсемпе пĕрлешме тивнĕ. Пĕрлешнĕ партисенчен туса хунă Совет правительстви буржуазирен хĕç-пăшал туртса илме тытăннă, революциллĕ трибунал туса хунă, банксене, фабрикăсемпе заводсене национализациленĕ, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ тунă, ĕç укçине ӳстернĕ, буржуази пурăнакан хваттерсене рабочисене панă. Анчах та Венгрие часах ют çĕршывсен контрреволюциллĕ çарĕсем хупăрласа илнĕ. Венгрири совет влаçĕ çапла вара 135 кун пурăннă хыççăн пĕтсе ларнă.

**Венский арбитраж**—Венăри арбитраж—1940 çулхи август уйăхĕнче Гитлер хушнипе Венăра Трансильванин çурçĕр пайне Румынирен туртса илсе Венгрие памалла туни çинчен çырнă решени. Пĕр енчен Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисем, тепĕр енчен, Румыни правительстви хушшинче 1944 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче çырнă Килĕшĕвĕн 19-мĕш статьи тăрăх, союзлă правительствăсем „Венăри Арбитраж" текен решение пăрахăça

тухнă тесе шутланă, вара Трансильвание пĕтĕмпех Румыние тавăрса панă.

**Вербальная нота**—вăл дипломатиллĕ нота тенине пĕлтерет. Пĕр-пĕр государствăн дипломатиллĕ представителĕ тепĕр государствăн дипломатиллĕ представительне сăмах вĕççĕн мĕн çинчен те пулсан официальнăй йĕркепе каланипе пĕртан пулса тăракан нота. Вербальнăй нота çине алă пусмаççĕ, ăна ярасса та ытти хутсене янă пек çеç яраççĕ; пĕр-пĕр паллăрах событи пирки çыракан нота çине вара дипломатиллĕ представитель алă пусать, çырасса та ăна чаплăрах çыраççĕ, ярасса та ытти хутсене янă пек йĕркепе ямаççĕ.

**Вербальные заверения**—хут çине çырса ĕнентерсе памасăр сăмахпа калани. Дипломатиллĕ калаçура пĕр государствăн дипломатиллĕ представителĕ тепĕр государствăн дипломатиллĕ представительне сăмахпа ĕнентерсе каланисем çинчен вербальные заверения, тесе калаççĕ.

**Верительные грамоты**—ĕнентерӳ грамотисем—пĕр-пĕр çын тепĕр государствăра хăйĕн государствин полпречĕ, посолĕ, посланникĕ е урăх дипломатиллĕ представителĕ пулса тăни çинчен ĕнентерсе паракан документ. Дипломатиллĕ представитель хăйне янă государствăн столицине—тĕп хулине çитсен, вăл хăйĕн верительнăй грамота текен хутне государство пуçлăхне парать. Çав грамотăна панă чухне государство пуçлăхĕ умĕнче урăх государствăн дипломатиллĕ представителĕ сăмах калать. Грамотăна государство пуçĕнче тăракан çынна парассине чаплă туса ирттереççĕ, çав кунтан пуçласа вара дипломатиллĕ представитель хăйĕн ĕçĕсене тума тытăннă тесе шутланать. Дипломатиллĕ представителе каялла чĕнсе илнĕ чухне (сăмахран, ун вырăнне тепĕр çын янă чухне) дипломатиллĕ представитель вара хăй тухса каякан государство пуçлăхне отзывные грамоты (калле чĕнсе илни çинчен пĕлтерекен хут) парать.

**Версальский мирный договор**—Версальти мирлĕ до-

говор—1914—1918 çç. империализмлă вăрçă хыççăн çирĕплетнĕ мирлĕ договорсенчен пĕри. Вăл договора Версаль хулинче (Франци) 1919-мĕш çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче союзниксемпе Германи хушшинче çирĕплетнĕ. Германи çĕршывĕн сакăр пайран пĕр пайĕ, халăх йышĕн вуникĕ пайĕнчен пĕр пайĕ ют государствăсен аллине кусна. Çав договор тăрăх, Германи хăйĕн колонийĕсене çухатнă, унăн çарĕнче 100 пин çынран ытла пулмалла мар, сывлăш флочĕ те пулмалла мар туна. Тинĕс çар флотне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех союзниксене панă, паровозсемпе вагонсене те чылайăшне Германи аллинчен туртса илнĕ. Вăрçă тăкакĕсене Германин тӳлемелле пулнă.

**Версия**—мĕнле те пулин факт, событи çинчен пĕлтермелли меслетсенчен пĕри, пĕр-пĕр япала çинчен тĕрĕс каласа панипе пĕрлех урăхлатса каласа пани.

**Верфь**—карапсене çĕнĕрен тăвакан е юсакан вырăн; карапсене туса кăларакан завод (карапсем тăвакан верфь).

**Верховный Совет Союза ССР**—ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕ. Сталинла Конституци тăрăх, ССР Союзĕн государство влаçĕн чи аслă органĕ Верховнăй Совет пулать. Верховнăй Совет икĕ палатăран тăрать: Союз Совечĕ,—ăна ССР Союзĕн мĕнпур гражданĕсем, вĕсем мĕнле наци çынни пулнине пăхмасăрах, çакăн пек нормăпа суйлаççĕ: 300 пин халăхран пĕр депутат; Национальноçсен Совечĕ,—ăна СССР гражданĕсем союзлă тата автономиллĕ республикăсем, автономиллĕ облаçсемпе нациллĕ округсем тăрăх çак нормăпа суйлаççĕ: кашни союзлă республикăран 25-шер депутат, кашни автономиллĕ республикăран 11-шер депутат, кашни автономиллĕ облаçран 5-шер депутат тата кашни наци округĕнчен пĕрер депутат (34-мĕшпе 35 статьясем).

Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕ иккĕшĕ те пĕртан праваллă. „Аялтипе“ „çӳлти“ палатăсем çук пирĕн. Вĕсен иккĕшĕн те закон кăлармалли право пур. Кирек мĕнле закон та çак икĕ палата йышăннă хыççăн кăна çирĕпленнĕ шутланать.

**Ветеран**—ватă салтак; пĕр-пĕр ĕçре нумай вăхăт хушши ĕçленĕ çын; чаплă ĕçлекен çын.

**Вето**—латин сăмахĕ, „чаратăп“ тенине пĕлтерет. Хальхи вăхăтра хаçатсенче çакăн пек сăмах çаврăнăшĕсенче тĕл пулаççĕ: „наложить вето“, „право вето“. Ку сăмах çаврăнăшĕсем çаксене пĕлтереççĕ: государствăн пĕр-пĕр органĕн (монарх е президент) государствăн урăх органĕсем (парламент) кăларнă законсене părахăçа кăларма е чарса лартма право пуррине пĕлтерет. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче, сăмахран, президент конгресс (парламент) çирĕплетнĕ кирек мĕнле закона та пăрахăçа кăларма пултарать (ăна вырăсла „наложить вето“ теççĕ). Анчах вето хунă пулсан та, тепĕр тĕслĕ каласан, пăрахăçа кăларнă пулсан та, конгресс членĕсем виçĕ пайĕнчен иккĕшĕ сасăласа çирĕплетсен, закон пурнăçа кĕме пултарать. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацин тĕп органĕн—Хăрушсăрлăх Советне кĕрекен пилĕк аслă державăн (СССР-ăн, США-ан, Англин, Китайăн, Францин) вето прави пур. Пуриншĕн те килĕшӳллĕ решени йышăнас пирки калаçса татăлаймасан, çак пилĕк державăран пĕри çав решение пурнăçа кĕртессине чарса лартма пултарать. Халĕ США-па Англи представителĕсем Генеральнăй Ассамблейăн сессийĕсенче çав вето правине пĕтерсе хурасшăн тăрăшаççĕ, килĕшсе ĕçлемелли принципа хирĕç тăраççĕ.

**„Вечное процветание“**—„ĕмĕрех чечекленсе тăрасси“—Америка буржуазийĕ шутласа кăларнă теори. Ăна пĕтĕм тĕнчери социал-демократи çирĕппĕнех хӳтĕлесе пырать. Çав теори „организованный капитализм“ текен теорипе пĕр пекрех теори. „Вечное процветание“ текен теори 1927—28 çулсенче çуралса тухнă. Çак теори тăрăх, Америкăри капитализм çав тери пуян та çав тери лайăх организациленнĕ пулать имĕш, ăна нимĕнле кризис та хăрушă мар пулать вара, вăл хуçалăх енчен „ĕмĕр-ĕмĕрех чечекленсе“ тăма пултарать имĕш. 1929 çулта пулнă кризис çав теори тĕрĕс маррине уççăнах кăтартса пачĕ: США-ра

кризисчен те ĕçсĕр тăрса юлнисем 5 миллион çын пулнă. Çак фактах ĕнтĕ „чечекленсе пырасси" капитализм чухне пулма пултарайманнине лайăх кăтартса парать.

**Виза**—паспорт çине, е ĕнентерӳ хучĕ çине çав паспорт, е хут (ĕнентерӳ) йĕркеллĕ, тĕрĕс тесе государство органĕнче ĕçлекен çын çирĕплетсе алă пусни. Виза теви тата пĕр-пĕр государствăна каякан çыннăн паспорчĕ çине çав государствăн консулĕ унта кайма ирĕк парса палла тунине те пĕлтерет. Виза тунин тĕллевĕ—государствăшăн хăрушă пулса тăракан çынсене çав государствăна пырса кĕме чăрмантарасси пулса тăрать. ССР Союзĕнчен ют çĕршыва тухса кайма та виза кирлĕ.

**Визитация**—визитаци—уçă тинĕсре суту-илӳ карапĕсене, вĕсем шанчăклă мар пулсан, чарса вĕсен документчĕсене тĕрĕслеме тата хăш-пĕр чухне вĕсене арестлеме те право пурри.

**Виртуоз**—мĕнле те пулин ĕçе тума калама çук лайăх, ăста вĕренсе çитнĕ çын.

**Витрина**—япала усрамалли, кăтартмалли кантăк хупăлла ещĕк; çынсене куранмалла пултăр тесе тĕрлĕ пĕлтерӳсем çапакан юри тунă вырăн.

**Витязь**—паттăр; вăрçăра хăюллă та хастар çапăçакан çын, вăрçă паттăрĕ.

**Вице**—тĕрлĕрен должноçсем çумне хушакан сăмах пайĕ, çав пай помощнике е заместитель пулса тăнине пĕлтерет (вице-директор, вице-губернатор тата ыт. те).

**Влияние**—влияни—хăй енне çаварни; хăй пек шухăшлаттарни, итлеттерни.

**Внутренняя Монголия**—Шалти Монголи. Шалти Монголи тесе Китай территорине кĕрекен Монголин кăнтăр пайне тата Тĕп Азири çĕршывсене калаççĕ. В н е ш н я я  М о н г о л и я (Тулашри Монголи) тесе ĕлĕк Монголин çурçĕр пайĕнчи территорине, халĕ хăйне уйрăм государство пулса тăракан Монгол халăх республикине калаççĕ. Вăл ССР Союзĕпе кӳршĕллĕ государство.

**Водевиль**—кĕске, кулăшла, хаваслă, пĕр актлă пьеса.

**Водоизмещение**—карап пысăкăшĕпе хĕссе кăларакан шыв виçи, вăл карап йăтма пултаракан виçе чухлĕ пулать. 10 пин тонна водоизмещениллĕ карап çине 2 пин салтак вырнаçма тата вĕсен пĕтĕм хĕç-пăшалĕсемпе вăрçă хатĕрĕсене тиеме пулать, е 200 вăтам танк, е 250 броньăллă автомобиль тиеме пулать.

**Военная конвенция**—вăрçă конвенцийĕ—икĕ е темиçе государство хушшинче тунă вăрçă договорĕ. Вăрçă-мĕн пуçланас пулсан, пĕр государство тепĕр государствăна пулăшма алла хĕç-пăшал тытса тухасси тата вăрçăн ытти ыйтăвĕсене те татса парасси çинчен тунă килĕшӳ.

**Военный потенциал**—вăрçă потенциалĕ. „Потенциал" сăмах пулма пултаракан тенине пĕлтерет. Халлĕхе курăнмасăр тăраканскер, анчах та кирек мĕнле вăхăтра та хăй пуррине, хăйĕн вăйне, хăйĕн пахалăхĕсене кăтартма пултарать. Кирек те мĕнле пулсан çĕршывăн вăрçă потенциалĕ тесе çав çĕршыв вăрçăра кăтартма пултаракан вăйсене, çав çĕршыв мĕн тума пултарнине калаççĕ. Кунта çав çĕршыв мобилизацилесе кăларса тăратма пултаракан салтаксен шучĕ, хĕçпăшалланнă салтаксен шучĕ, çар службинче пулнă е çар службинче пулмасăр вăрçă ĕçне вĕреннĕ граждансен шучĕ кĕрет. Кунта çакăн пекех тата çара мĕн кирлине парса тăма пултаракан, çарпа халăха продовольстви, промышленность валли чĕртавар çителĕклĕ парса тăма пултаракан хуçалăх пуянлăхĕсемпе транспорт кĕрет.

**Возвратный кредит**—калле тавăрса памалла кивçен илнĕ укçа. Вырăнти промышленноçпа промкооперации предприятийĕсем госбанкпа промбанкран хăйсен çурчĕсене тĕпрен юсама кивçен укçа илме пултараççĕ. Çав кивçен илнĕ укçапа вĕсем çĕнĕ строительство та тума пултараççĕ. Вăл укçана предприятисем яланлăха мар, пĕр-пĕр вăхăтлăха кăна илеççĕ, палăртнă вăхăт иртсен, çав кивçен илнĕ укçана вĕсем госбанка е промбанка (ăçтан илнине кура) каялла тавăрса параççĕ.

**Волонтёр** (французсен сăмахĕ)—çар службине, вăрçа хăй ирĕкĕпе кайнă çын.

**Вотум доверия** (или недоверия) — шанчăк вотумĕ. Вотум латин сăмахĕ; мĕнле те пулин сĕнӳшĕн сасăланине пĕлтерет. Буржуалла-демократиллĕ çĕршывсенчи парламент ĕçĕнче вотум доверия (или недоверия) тени парламент членĕсем вĕсен нумайăшĕ алă çĕклесе правительство политикине е уйрăм министрăн ĕçне, политикине ырланине (е ырламаннине) пĕлтерет. Сасăласа ырлас (е ырлас мар) ыйтăва правительствăпа парламент хушшинче мĕнле те пулин тавлашу тухсан лартаççĕ,—сасăласа ырлассине (вотум доверия) правительство хăй лартать, сасăласа ырлас мар (вотум недоверия) ыйтăва оппозициллĕ партин представителĕсем лартаççĕ. Парламент хăйĕн ытларахăшĕпе сасăласа ырламасан, правительствăн (е министрăн) вара отставкăна тухмалла пулать. Парламентăн ытларахăшĕ правительствăн е министрăн ĕçне сасăласа ырласан, правительство е министр хăйсен вырăнĕнчех юлаççĕ.

**Временщик**—çак сăмах Российăра XVIII-мĕш ĕмĕрте тухса кайнă. Государствăра ăнсăртран, вăхăтлăха пысăк ĕçе кĕрсе ларма пултарнă çын. Патша çывăхĕнче тăракансем, хăйне юратакан çынсем пулăшнипе политикăллă влаçа хăй аллине вăхăтлăха тытса илнĕ çынна „временщик" тесе чĕннĕ. Ун пек çынсем, влаçа ытларах хăйĕн аллинче тытса тăрас тесе, тискерле ĕççем тума та чарăнса тăман. Гитлерла оккупантсене те временщиксем тесе калама май пулнă.

**Вульгарный**—вăтанман, намăссăр, сĕмсĕр (çын). Пĕрпĕр верентĕве ытлашши çăмăллатса, пăсса каласа е çырса панине вульгаризацилени (пăсни) теççĕ.

## Г.

**Гаагский международный трибунал**—Гаагăри пĕтĕм тĕнче трибуналĕ; официально ăна „Постоянная палата международного суда" теççĕ. Ăна Нацисен Лиги уставĕн

14-мĕш статьи тăрăх 1920 çулхи февралĕн 13-мĕшĕнче туса хунă. Палата Гаага хулинче (Голланди столици) ĕçлесе тăнă. Çав палатăра 11 судья тата вĕсен 4 заместителĕ пулнă, вĕсене Нацисен Лигине кĕрекен тата Лигăна кĕмен çĕршывсен правительствисем палăртнă кандидатсенчен Нацисен Лиги пленумĕ тата Совечĕ 9 çуллăха суйласа лартнă. Палата членĕсем 9 çуллăха председательпе вице-председателе суйланă.

Трибуналăн задачи тĕрлĕ государствăсен правительствисем хушшинче тухакан хирĕçӳсене пăхса тухасси пулнă. Решенисене ытларахăш сасăпа йышăннă. Халĕ вăл трибунал пăрахăçа тухнă.

**Газетное объединение „Скриппс-Говард Ньюспейперс“**—США-ри икĕ шултăра хаçат тресчĕсенчен пĕри. Трест аллинче 24 хулара кашни кун тухса тăракан 24 хаçат. Вĕсенчен чи шултăри „Нью-Йорк уорлд телеграмм“ Нью-Йоркра тухса тăрать. „Скриппс-Говард“ трестăн хаçачĕсем буржуалла-демократиллĕ хаçатсем пулса тăраççĕ. Америкăри тепĕр шултăра трест (Херст) хаçачĕсем реакцилле-фашистла хаçатсем пулса тăраççĕ.

**Гангстер** (англичансен сăмахĕ)—бандит тенине пĕлтерет, бандитсен шайкинчи çын.

**Гарантийный договор**—гарантиллĕ договор—пĕтĕм тĕнчери договор. Çав договор тăрăх пĕр е темиçе государство тепĕр государство умĕнче виççĕмĕш государство (е государствăсем) çине хунă обязательствăсене пурнăçа кĕртсе пырассишĕн ответ тытма пулаççĕ е пĕрпĕр государствăсене ытти государствăсем хăрушлăх кӳресрен хӳтĕлеме пулаççĕ, шантараççĕ. Çавна гарантиллĕ договор теççĕ.

**Гарантия**—гаранти—шантару, шантарни; пĕр-пĕр ĕçе тума сăмах парсан, панă сăмаха чăнах та тăватăп тесе шантарни, çирĕп сăмах пани, е мĕнпе те пулин тӳлleme пулса обязательство илни.

**Гарант**—шантарнине пурнăçа кĕртнине тĕрĕслеме пул-

нă çын е государство. Пĕтĕм тĕнчери государствăсем хушшинчи хутшăнура пĕр-пĕр государство договора тата килĕшĕве чăнах та пурнăçа кĕртĕпĕр тесе сăмах паракан государствăна гарант теççĕ. Çав государство хăй çине илнĕ договора тата килĕшĕве ытти государствăсем пăсас-тăвас пулсан, вĕсене апла тума вăйпа чарма хăй çине обязательство илет.

**Гармонический**—çыпăçуллă, пур пайĕ те вырăнлă, килĕшӳллĕ пулни.

**Гастролёр**—1) пĕр-пĕр çĕре вăхăтлăха пынă артист е музыкант; 2) тепĕр чухне хушнă ĕçе тумасăр янкаса çӳрекен çынна та калаççĕ; пĕр-пĕр ĕçре кĕске вăхăт пурнакан çын.

**Гвардия**—малтанлăха—государство пуçлăхне е çар начальникне упраса тăма тунă охрана тенине пĕлтернĕ; каярахпа—çарсен чи паха, çирĕп те харсăр пайĕсене çапла ятпа чĕне пуçланă. Российăра гварди Петр I-мĕш вăхăтĕнчен пуçласа Октябрьти Аслă социализмлă революциччен пурăннă. 1941 çулхи кĕркунне çĕнĕ никĕс çинче гвардие çĕнĕрен организациленĕ. Гварди ятне СССР-ăн хĕçпăшаллă вăйĕсен уйрăмах палăрнă чаçĕсене, соединенийĕсене, карапсене параççĕ. Хĕрлĕ гварди—1905—1907 тата 1917—1918 çулсенчи революциллĕ обстановкăра пуçланса кайнă рабочисен хĕçпăшаллă отрячĕсем.

**Гегемония**—гегемони—ертсе пыни, пуç пулса тăни; мĕнле те пулин государство ытти государствăсем хушшинче пуç пулса тăни; класс гегемонийĕ — мĕнле те пулин класс ытти классемшĕн ертсе пыракан класс пулни.

**Генералиссимус**—çар ĕçĕпе ĕçлекен çынсене паракан чи аслă звани (ят); СССР-та генералиссимус ятне, çав ята парасси çинчен СССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1945 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх тунăскерне, вăрçă вăхăтĕнче государствăн пур хĕçпăшаллă вăйĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе тăван çĕршыв умĕнче чаплă ĕçсем тунăшăн параççĕ. 1945 çулти июнĕн 27-шĕнче

генералиссимус ятне СССР Верховнăй Совет Президиумĕ СССР-ăн пĕтĕм Хĕçпăшаллă Вăйĕсен Верховнăй Главнокомандующине, халăхсен çулпуçне, Иосиф Виссарионович Сталин юлташа панă.

**Генеральная ассамблея** — Генеральнăй ассамблея — Пĕрлешнĕ Нацисен Организацин чи аслă органĕсенчен пĕри. Унта Пĕрлешнĕ Нацисен Организацин членĕсенчен пуринчен те пĕрер çын кĕрет. Генеральнăй ассамблейăна пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăх ĕçне тĕреклетмелли килĕшӳ принципĕсене пăхса тухма ирĕк панă. Çавăн пекех тата Генеральнăй ассамблея хĕçпăшалсăрланас тата вăрçă хатĕрĕсене чакарас принципсене те пăхса тухсан, çав принципсем тăрăх организаци членĕсене е Хăрушсăрлăх Советне сĕнӳ пама пултарать. Генеральнăй ассамблея Пĕрлешнĕ Нацисен Организацин е Хăрушсăрлăх Совечĕн кирек хăш членĕ те ун умне лартнă ыйтусене, пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăç тăвас хăрушсăрлăха хӳтĕлес тĕлĕшпе панă сĕнӳсене пурне те пăхса тухса сӳтсе явма пултарать. Вăл тĕнчери мирлĕ пурнăçпа хăрушсăрлăха пăсма пултаракан лару-тăру пулса тăни çинчен Хăрушсăрлăх Советне пĕлтерет, çав ыйтăва сӳтсе явма хушма пултарать. Унсăр пуçне Генеральнăй ассамблейăн халăхсем хушшинчи экономикăллă, социаллă тата культурăллă çыхăну тытса пырас ĕçе аталантарса пырас тĕлĕшпе те пысăк полномочисем пур. Çав тĕлĕшпе Устав Экономикăллă тата Социаллă советсем туса хума хушать. Генеральнăй ассамблея сессийĕсенче Совет Союзĕн делегацийĕ мирпе хăрушсăрлăх ĕçне çирĕплетессишĕн çине тăрсах кĕрешет, çĕнĕ вăрçă пуçарма тăрăшакансене тăрă шыв çине кăларса пырать. Генеральнăй ассамблейăн иккĕмĕш сессинче Совет Союзĕ хĕç-пăшалсене пĕтĕмĕшлех чакарасси çинчен, вăрçă чĕртсе яма тăрăшакансене айăплассы çинчен сĕнӳ пачĕ. Виççĕмĕш сессире Совет Союзĕн делегацийĕ пилĕк аслă державăн хĕç-пăшалĕсене тата хĕçпăшаллă вăйсене пĕр çул хушшинче виçĕ пайран пĕр пайне чакарасси çинчен, атомлă хĕç-пăшалпа усă курас-

сине чарасси çинчен сĕнÿ пачĕ. Анчах США-па Англи делегацийĕсем çав сĕнÿсене йышăнмарĕç. Тăваттăмĕш сессире каллех Совет Союзĕ чылай çĕршывсенче, уйрăмах США-па Англире çĕнĕ вăрçа хатĕрленнине сивлес, атомлă хĕç-пăшалпа вăрçă ĕçĕнче усă курассине чарас, пилĕк аслă держава—США, Англи, Китай, Франци тата СССР хушшинче мирлĕ пурнăçа çирĕплетмелли пакт тăвас тесе сĕнÿ пачĕ.

**Генеральный консул**—чи çÿлти рангра тăракан (аслă) консул, вăл пысăк хулара пурăнать. Çав чи çÿлти рангра тăракан консул хăй консул пулса ĕçлекен государствăна хăйĕн государствинчен пынă ытти консулсене ертсе пырать. Генеральнăй консул—дипломатиллĕ представительствăн пĕр форми, хăйĕн государствин ĕçĕсене туса пыма ют государствăна шанса янă çын; хăйсем тĕллĕн пурăнакан тесе шутланакан, анчах çав вăхăтрах ытти государствăсене пăхăнса тăракан государствăсенчи (доминионсенчи) дипломатиллĕ представитель.

**Генеральный штаб**—генеральнăй штаб—чи аслă штаб. Çар командованипе управленин органĕ, унта нумай пĕлекен пысăк специалистсем ĕçлеççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче вăл командовани валли решенисем йышăнма кирлисене хатĕрлесе, командовани решенийĕсене, приказĕсемпе приказанисене пурнăçласа пырать, вĕсене пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăрать. Мирлĕ вăхăтра генеральнăй штаб вăрçа хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли пĕтĕм оперативлă ĕçсене туса пырать.

**Гений**—чи ăслă çын, питĕ чаплă ĕç тунăскер.

**Геноцид**—геноцид—раса тата наци (религи) сăлтавĕсемпе халăхсен уйрăм ушкăнĕсене пĕтерес тесе тунă преступленисем. Çавăн пек преступленисен чылай факчĕсене Нюрнбергри трибунал, вăрçăн тĕп преступникĕсене—Геринга, Гесса, Риббентропа, Кейтеле, Розенберга, Франка, Калтенбруннера тата ыттисене те суд тунăскер, ятарласах пăхса тухнă. Çав геноцид текен преступленисене расăллă „теорисене“ саракан фашистсемпе

националистсем, расăллă тата нациллĕ курайманлăха, „çўлти" расăсем пуç пулса тăмалла тата „аялти" текен расăсене пĕтермелле тесе калакан националистсем тăваççĕ. Геноцид текен преступленисем капитализмлă обществăра çеç пулаççĕ. Совет Союзĕнче, ленинла-сталинла наци политикин никĕсĕ çинче халăхсен туслăхĕ çирĕпленсе пынă çĕрте, геноцид текен преступленисем валли вырăн çук, пулма та пултараймасть.

**Генуэзская конференция**—Генуэзри конференци—пĕтĕм тĕнчери экономикăллă конференци, 1922 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа майăн 14-мĕшĕччен пынă. Вăл Европăри капитализмлă çĕршывсен пĕрремĕш конференцийĕ пулнă. Çак конференцие Совет Российи те хутшăннă. Генуэзри конференцире 34 государство (çав шутра Англи доминионĕсем тата Япони) пулнă, США пулман. Совет делегацийĕ составне РСФСР, союзлă советла республикăсен, Хивапа Бухара хулисен тата Инçетри Хĕвелтухăç республикин представителĕсем кĕнĕ. Конференцин официальнăй тĕллевĕ—„Европăна экономика тĕлĕшĕнчен ура çине тăратасси" пулнă, чăннипе—конференци Совет Российипе капитализмлă çĕршывсем хушшинчи çыхăну мĕнле пулса пымалли йĕтăва татса памалла пулнă.

**Герб**—государствăна, облаçе, хулана, корпорацие е йăха урăххисенчен уйăрса илмелли паллă. Государство гербĕ—пĕр-пĕр государствăн официальнăй палли. Совет Союзĕн гербĕ, палли—çурлапа мăлатук. Герб флагсем, пичетсем, укçасем çинче тата ыт. пулать.

**Герника**—Çурçĕр Испанири, Басконири питĕ кивĕ хула ячĕ. 1937 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче Испанири граждан вăрçи вăхăтĕнче (1936—1939 çç.) Герника хули çине фашистсен самолĕчĕсем (чи малтан нимĕç самолĕчĕсем) пырса тапăннă та хула çине бомбăсем пăрахнă, пулемĕтран пенĕ. Çапла вара хулан историшĕн питĕ хаклă пулса тăракан памятникĕсене нумайăшне пĕтернĕ, нумай ачасене, хĕрарăмсене, ватă çынсене тата нумай гражданссене вĕлернĕ. Мирлĕ пурăнакан хулана сывлăшран пырса

тискерле ишӗлтернипе пӗтӗм тӗнче калама ҫук ҫиленнӗ. Ҫавӑнтан вара „герника“ тени чи усал ӗҫ тунине пӗлтерекен сӑмах пулса тӑнӑ.

**Геростратова работа**—Герострат ӗҫӗ. Герострат ятлӑ грек ҫынни чапа тухас тесе питӗ ҫуннӑ, анчах нимӗнле ырӑ ӗҫ туса та чапа тухаймасӑр вӑл пирӗн эрӑчченхи IV-мӗш ӗмӗрте, хӑйӗн ятне этемлӗх асӑнмалла тӑвас тесе, унчухнехи вӑхӑтри архитектура искусствин чи паха япалине—Эфесри Диана чиркӳне чӗртсе ҫунтарнӑ. Герострат ӗҫӗ—ним тӗллевсӗр, ишӗлтерекен, ӑссӑр ӗҫ тенине пӗлтерет. Геростратова слава—Герострат чапӗ тени, япӑх, чыса тӑман чап тенине пӗлтерет.

Фашистсем, историн культура тӗлӗшӗнчи хаклӑ япалисене, хуласене самолётсем ҫинчен бомбӑсем пӑрахса, тупӑсенчен персе ишӗлтернӗскерсем, усалран та усал геростратсем пулса тӑнӑ. Нимӗҫ фашисчӗсен ҫак геростратла ӗҫӗсем этемлӗх историне калама ҫук усал ӗҫ пулса кӗрсе юлчӗҫ, нимӗҫ фашисчӗсем хӑйсен ҫав тери тискер ӗҫӗсемпе Герострат чапне илме тивӗҫ пулчӗҫ.

**Гестапо**—гестапо—нимӗҫсен икӗ сӑмахне (Geheime Staatspolizei) кӗскетсе калани, „государствӑн вӑрттӑн полицийӗ“ тенине пӗлтерет. Фашистла Германири политикӑллӑ охранкӑна ҫак ятпа чӗннӗ. Гестапо пуҫӗнче Гиммлер тӑнӑ. Гестапо хӑйӗн калама ҫук тискер ӗҫӗсемпе паллӑ пулса тӑнӑ. Вӑрҫа фашистла Германие ҫапса ҫӗмӗрнипе вӗҫлесен, Гиммлера тытса, суд туса ҫакса вӗлернӗ, унӑн виллине ҫунтарса кӗлне ҫилпе вӗҫтерсе янӑ.

**Гетто**—тӗрлӗ ҫӗршывсенче кирек мӗнле хулара та еврейсем пӗр-пӗр паллӑ кварталсенче ҫеҫ пурӑнма пултарнӑ. Власть ирӗк памасӑр еврейсем урӑх квартала пурӑнма куҫма пултарайман. Еврейсем пурӑнакан кварталсене гетто, тенӗ. Гетто текен кварталсем тавра стенасем пулнӑ. Геттосене Европӑри хуласенче буржуаллӑ революцисем пулса иртнӗ тапхӑрта пӗтерме тытӑннӑ. Геттосене Римра 1870 ҫулта, Краковпа Львов хулисенче 1867 ҫулта кӑна пӗтернӗ. Еврейсем ҫеҫ пурӑнакан гетто текен

кварталсем Марокко тата мусульмансен ҫӗршывӗсен хулисенче халӗ те пур-ха.

**Гибрид**—икӗ тӗслӗ япалана хутӑштарнипе пулнӑ япала; выльӑх-чӗрлӗх е ӳсентӑран тӗнчин тӗсӗ (особь); вӑл икӗ пӗр-пӗринчен уйрӑм тӑракан тӗссем, пӗр расӑри тӗс тепӗр расӑри тӗспе, пӗр сорт тепӗр сортпа ылмашӑннипе пулать.

**Гибридизация** — гибридизаци — ылмаштарни (скрещивание), ӳсентӑрансен тата выльӑх-чӗрлӗхсен пӗр тӗсне тепӗр тӗсӗпе ятарласа ылмаштарса, вӗсенчен пачах уйрӑм тӗс туса илни. Ҫакӑ выльӑх-чӗрлӗх ӑратне тата культурӑллӑ ӳсентӑран сорчӗсене лайӑхлатас ӗҫре калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

**Гимн**—чаплӑ та мухтавлӑ юрӑ; государствӑллӑ, класлӑ пӗрлӗх пуррине кӑтартса паракан символ вырӑнне йышӑннӑ чаплӑ юрӑ, СССР-ӑн государственнӑй гимнӗ— „Ирӗклӗ республикӑсен ишӗлми Союзӗ“ ятлӑ юрӑ пулса тӑрать; ВКП(б)-ӑн гимнӗ—„Интернационал“.

**Гипотеза**—фактсемпе ҫирӗплетсе паман наукӑллӑ шухӑш, ҫапла пулмалла тесе калакан шухӑш.

**Гомерический**—калама ҫук пысӑк. Ҫак сӑмах грексен Гомер ятлӑ чаплӑ поэчӗ вӑхӑтӗнче тухса кайнӑ. Унӑн „Илиадӑпа“ „Одиссея“ ятлӑ поэмисен геройӗсен сасси ҫав тери вӑйлӑ пулнӑ, ҫиессе те вӗсем калама ҫук нумай ҫинӗ, калама ҫук вӑйлӑ пулнӑ. Ҫакӑнтан вара г о м е р и ч е с к и й х о х о т (Гомер пек кулни), г о м е р и ч е с к а я с и л а (Гомерӑн пек вӑй) тата ытти сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем те тухса кайнӑ.

**Гоминдан** — Китайри политикӑллӑ партин ячӗ, ҫав партие 1912 ҫулта Сун Ят-сен туса хунӑ. 1924 ҫулччен Гоминдан Китай ҫӗрне пӗрлештерессишӗн ҫурҫӗрти милитаристсене хирӗҫ кӗрешсе пынӑ. 1917 ҫулти Октябрьти социализмлӑ революци хыҫҫӑн, Совет республики большевиксен партийӗ ертсе пынипе интервентсене хирӗҫ ӑнаҫлӑн кӗрешсе пынине курэ, Сун Ят-сен Гоминданӑн ӗҫ меслечӗсене улӑштарать. 1924 ҫулта Гоминдана коммунист-

сем те кӗреҫҫӗ, ҫавӑнтан вара Гоминдан нациллӗ ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен массӑллӑ организаци пулма тытӑннӑ. 1926—27 ҫулсенчи ҫурҫӗр похочӗ хыҫҫӑн Китай буржуазийӗ, рабочи движени тата та анлӑн сарӑлса каяссинчен хӑраса, нацин пӗрлӗх фронтне тӗрӗс ҫул ҫинчен пӑрса ярать. Паллах, рабочисем ҫакӑнпа килӗшме пултараймаҫҫӗ. Рабочисемпе хресченсен массисем Китайри коммунистсен партийӗ тавра пӗтӗҫеҫҫӗ те Китайра совет районӗсем тата Хӗрлӗ Ҫар туса хураҫҫӗ. Гоминдан вара рабочисемпе хресченсен движенине хӗсӗрлеме тытӑнать, Советсем туса хунӑ районсенчи рабочисене, Китай Хӗрлӗ Ҫарне хирӗҫ 6 хутчен похода тухать. Анчах та Китайра Япони агрессийӗ вӑй иле пуҫласан, Гоминданӑн хӑйӗн политикине пӑрахӑҫа кӑлармалла пулнӑ. 1937 ҫулта Япони империалисчӗсем Китай ҫине вӑрҫӑпа кӗрсе кайсан, Китай халӑхӗ хушшинче Японие хирӗҫ движени пуҫланса каять. Япони империализмне хирӗҫ халӑх масси ҫине тӑрсах кӗрешнипе кура Гоминдан Китайри коммунистсен партийӗпе килӗшсе пӗр фронт туса хурать. Ҫарсене те пӗрлештерне. Анчах Гоминдан пыра-киле, Китай пысӑк хӑрушлӑх умӗнче—Япони чури пулса тӑрас хӑрушлӑх умӗнче тӑнине пӑхмасӑрах, пӗрлӗх фронтне пӑсать. Япони империалисчӗсемпе кӗрешес вырӑнне Китайри коммунистсен партине, рабочисене, Китайри революциллӗ халӑх ҫарне каллех хӗсӗрлеме пуҫлать. Апла пулин те халӑха ирӗке кӑларассишӗн пыракан кӗрешӳ Китайра кунран-кун вӑйланать, халӑха ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен ҫар Гоминдан ҫарӗ ҫине хытӑран та хытӑ наступлени туса пыма тытӑнать. Китайра халӑха ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен ҫар Манчжурие, Ҫурҫӗр Китая, Тӗп Китайӑн пысӑк пайне гоминдановецсенчен пӗтӗмпех тасатнӑ. Китайри халӑха ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫакан ҫар ҫивӗччӗн пыра-пыра ҫапнипе пула Гоминдан ҫарӗ саланса каясси патне ҫитсе тӑчӗ. 1949 ҫулхи октябрӗн 1-мӗшӗнче Пекин хулинче пухӑннӑ халӑхсен политикӑллӑ консультативлӑ конференцийӗ пӗтӗм Китай халӑхӗн

ирĕкĕпе Китай Халăх Республики туса хуни çинчен пĕтĕм тĕнчене пĕлтерчĕ. Китайра Центральнăй Халăх Правительствине туса хунă, унăн пуçĕнче Китайри коммунистсен партин çулпуçĕ Мао Цзе-дун тăрать. Китая реакциллĕ гоминдановецсенчен пĕтĕмпех тасатасси çитес çывăх вăхăтрах вĕçленсе çитмелле.

**Государственный бюджет**—государство бюджечĕ—государствăн укçа-тенкĕ тупăшĕсемпе расхочĕсен своче. Ăна яланах çулталăклăха тăваççĕ. СССР государство бюджечĕ—финанс планĕ, вăл совет государствине пĕр палла вăхăт хушши тупăшсемпе расходсем мĕнле пулмаллине палăртса хурать. СССР государство бюджечĕ тата союзлă советлă социализмлă республикăсен бюджечĕсем пĕрле пĕрлĕхлĕ государство бюджечĕ пулса тăраççĕ, ăна СССР Верховнăй Совечĕ çирĕплетет те вара вăл закон пулса тăрать. Государство бюджетне халăх хуçалăх планĕ палăртса хурать, вăл плана тултарас çĕрте вăйлă хĕç-пăшал пулса тăрать, пирĕн çĕршывра коммунизм тумалли вăйлă средство пулса тăрать.

**Государственный департамент** — Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин официалла ячĕ.

**„Государство Виши"**—„Виши государстви". Гитлер хушнипе туса хунă Петенпа Лаваль правительствин столици Виши ятлă курорт пулнă. Хăйсем Гитлера сутнă Франци çĕршывне вĕсем Франци республики тесе мар, „Франци государстви" тесе ят панă. Французсем „Франци государстви" тенине кулăшла ятпа „Виши государстви" тесе ят панă.

**Градация**—градаци—пĕр тĕсрен тепĕр тĕсе майĕпен куçса пыни, аялти пусăмран çӳлти пусăма майĕпен улăхса пыни.

**График** — производствăри, транспортри тата ытти çĕрте те пĕтĕм ĕç мĕнле пулса пырассине тĕплĕн кунсем, сехетсем тата минутăсем тăрăх çырса хуни. Куçа лайăх курăнмалла пултăр тесе, графике хут çине чертеж пек çырса хураççĕ. ВКП(б)-ăн Пĕтĕм Союзри XVIII-мĕш

конференцийĕ (1941 çулхи февраль) кашни предприяти малтанах туса хунă график тăрăх кашни кунхи производство программине тултарса пымалла тăвас задача кăларса тăратрĕ.

График—ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн, производствăра йĕркелĕхпе культурăна пурнăçласа пырассишĕн, ритмăллă ĕçлесе пырассишĕн, пысăк пахалăхлă продукци пĕр тикĕс кăларса пырассишĕн пыракан кĕрешĕве анăçлă туса пыма пулăшакан условисенчен пĕри пулса тăрать.

**Гуманный**—ăшă кăмăллă, çынна хĕрхенекен.

**Гуманизм**—прогрессивлă литературăллă тата философиллĕ юхăм; вăл юхăм 14—15 ĕмĕрсенче пуçланса кайнă. Çак юхăм феодаллă-чиркÿлле идеологи вырăнне çĕнĕ, пурнăçа çирĕплетсе паракан мировоззрени, этем ятне хисеплекен мировоззрени кăларса тăратнă. Буржуази прогрессивлă класс пулса тăнă вăхăтра унăн представителĕсем феодализма, крепăсла правăна, религи тĕн-сĕрĕм сарнине хирĕç гуманизм ялавĕпе тухса кĕрешнĕ. Капитализм хăйĕн прогрессивлăхне çухатсан, империалистла буржуази куç-кĕретех реакциллĕ теорисем енне куçать тата реакциллĕ ĕçсем тума тытăнать, этеме курайманлăха чĕртсе ярать. Социализмлă гуманизм—революциллĕ, пролетариллĕ гуманизм пулать. Унăн тĕллевĕ—пур расăсемпе нацисен ĕç халăхне социаллă пусмăртан, пĕртанмарлăхран хăтарасси, этемĕн чăн-чăн ирĕклĕхĕпе чыслăхне çирĕплетесси. СССР-та, этеме этем эксплоатацилессине пĕтернĕ çĕрте, çынна пур енчен те аталанса пымалли пур условисене те туса панă.

## Д.

**Дайренская конференция**—Дайренри конференци—1921 çулхи август уйăхĕнче Япони правительствин представителĕсемпе Инçетри Хĕвелтухăç Республикин представителĕсем хушшинче пулса иртнĕ конференци. Конференци пуçлансан унта РСФСР представителĕсем те пынă. Конференцие Инçетри Хĕвелтухăç Республикин прави-

тельстви Япониле экономикăллă çыхăну пуçарас тата чи малтан Инçетри Хĕвелтухăç Республики территорине Япони оккупанчĕсенчен тасатас тĕллевпе пухнă. Çав вăхăтра Япони Сахалинăн çурçĕр пайне тытса илнĕ тата унăн çарĕсем Приморьере, Владивостокра, Амур шывĕ çинче пулнă, вĕсем шурă гвардеецсемшĕн тĕрек пулса тăнă. Дайренри конференци 1922 çулхи апрелччен тăсăлнă, анчах нимĕнле результат та паман. Япони интервенчĕсене Хĕрлĕ Çар çапса çĕмĕрнĕ хыççăн кăна Япони оккупанчĕсем 1922 çулхи кĕркунне Владивостокран тата Сахалинăн çурçĕр пайĕнчен тухса тарнă.

**Дальнобойный** — инçе яракан, инçе перекен (тупă, пăшал).

**Дамоклов меч**—Дамокл хĕçĕ. Çак сăмах çаврăнăшĕ пирĕн эра пуçланиччченхи IV-мĕш ĕмĕргенпех çӳрет. Сиракуз тиранĕ Аслă Дионисси ĕçкĕ тунă вăхăтра хăйĕн вырăнне хăйне çывăх тăракан Дамокла, Дионисси тиран пулса тăнине хапсăнакансскере, лартнă та унăн пуçĕ тĕлне лаша хӳринчи хĕлĕх пĕрчипе çыхса хĕç çакма хушнă пулать. Хĕçĕ кĕç-вĕç пуç çине татăлса анас пек çакăнса тăнă пулать. Çакăнтан вара Дамоклов меч (Дамокл хĕçĕ) тени—кĕç-вĕç тухма пултаракан хăрушлăха пĕлтерекен сăмах çаврăнăшĕ пулса кайнă.

**Дарвинизм**—ӳсентăрансемпе чĕрчунсем, çав шутрах тата этем мĕнле аталанса пыни (эволюци) çинчен акăлчансен аслă ученăйĕ Чарльз Дарвин тĕпчесе хатĕрленĕ вĕрентӳ. Чарльз Дарвин 1809—1882 çулсенче пурăннă. Вăл хальхи вăхăтра пурăнакан чĕрчунсемпе ӳсентăрансем нихçан улшăнман япаласем мар, вĕсем нумай ĕмĕрсем хушши аталанса пырса, таврари çутçанталăк условийĕсене хăнăхса тата хăйсен пурнăçне малалла тăсассишĕн кĕрешсе пырса çавăн пек пулса çитĕннине кăтартса панă. Чĕрчунсемпе ӳсентăрансен хăйсене пурăнма май паракан енĕсем çеç çамрăк ăрусене куçса, çирĕпленсе тата нумайланса пыраççĕ. Çавăн пек майпа пулса пырать те ĕнтĕ çутçанталăк чĕрчунсемпе ӳсентăрансене суйласа хă-

варасси (естественный отбор). Çутçанталăк чĕрчунсемпе ӳсентăрансене çапла суйласа хăварнине, вĕсем пурнăç условийĕсене хăнăхса пынине пула вумай ăрусен ĕмĕрĕ хушшинче çĕнĕ йышши чĕрчунсемпе ӳсентăрансем ӳссе çитĕнеççĕ. Марксизм никĕсне хывакансем Дарвин вĕрентĕвне питех те хакланă, вĕсем çав вĕрентӳре, Маркс сырнă пек, диалектикăллă материализмăн „çутçанталăкăн историллĕ никĕсĕсене“ курнă. Дарвин теорине пысăк хака хунипе пĕрлех, марксизм классикĕсем унăн йăнăшĕсене те кăтартса панă. Дарвин теорийĕ хăйĕн тĕп шухăшĕсемпе материалистла теори пулса тăрать пулин те унта чылай пысăк çитменлĕхсем пур. Çавна пула, Дарвин хăйĕн эволюци теорине материалистла шухăшсемпе пĕрлех реакциллĕ мальтусла идейăсене кĕртни унăн пысăк йăнăшĕ пулса тăрать. Çак пысăк йăнăша хальхи вăхăтра реакциллĕ биологсем ытларах сарма тăрăшаççĕ. Дарвин çутçанталăк суйласа илни (естественный отбор) çинчен вĕрентнине обществăллă пурнăçа механически куçарма хăтланнине—ăслăлăхпа килĕшсе тăман çак буржуаллă шухăша та Маркспа Энгельс татăклăнах критикленĕ. Дарвинизм тĕне çав тери хыттăн пырса çапнă; вăл тĕн мĕнпур ӳсентăрансене, чĕрчунсене тата этеме темиçе кун хушшинчех туса хунă тесе вĕрентни пĕтĕмпех суя пулнине кăтартса панă; çавăнпа ĕнтĕ пупсемпе ăрăмçăсем дарвинизма хирĕç хаяррăн кĕрешеççĕ.

**Даунинг-стрит**—Лондон хулинчи Даунинг ятлă урам; çав урамра ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви вырнаçнă. Çакăнтан вара—„Даунинг стрит политики“ (политика Даунинг-стрита), „Даунинг стритра кун пирки нимĕн те пĕлмеççĕ“, текен сăмах çаврăнăшĕсем тухса кайнă. Вĕсем ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин политики, ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче кун пирки нимĕн те пĕлмеççĕ тенине пĕлтереççĕ.

**Дауэсизация**—дауэсласси, дауэслани. Ку сăмах Америкăри государство деятелĕ тата банкир Дауэс хушаматĕнчен тухса кайнă. Пĕр-пĕр çĕршыва экономика тĕлĕ-

шӗвчен пăхăнса тăракан тунине пӗлтерет. Çак сăмаха 1924 çулта Дауэс ертсе пыракан комисси Германие Дауэс ятлă плана сӗнсе йышăнтарнă хыççăн пӗтӗм тӗнчипех кала пуçланă. Çав план Германин Версальти мирлӗ договор тăрăх репараци (вăрçă тăкакӗ) укçине мӗнле тӳлесе тăрассине татса панă.

**Дебаты**—пренисем, пӗр-пӗр пухура, заседанире шухăшсене каласа парса, вӗсене сӳтсе явни.

**Девальвация**—девальваци—укçа-тенкӗ тӗлӗшӗпе тунă улшăнăвăн (реформăн) пӗр тӗсӗ: хут укçасен хакӗ ӳссе пынăран, вӗсен хакне чакармашкăн çӗнӗ укçасем кăларса, ылттăн е кӗмӗл укçасене вӗсен хакӗпе танлаштарни.

**Девиз**—пӗр-пӗр теорин, ӗçӗн тӗп шухăшне кӗскен каласа пани; литература, искусство е наука произведенийӗсене конкурса панă чухне авторсем хăйсене малтанах палăртас мар тесе чăн-чăн хушамат вырăнне пӗр-пӗр ят çырса параççӗ. Çавна девиз тесе калаççӗ.

**Дегенерация**—халăх е выльăх, е йывăç-курăк начарланса вӗтелсе пӗтсе пыни. Д е г е н е р а т—пӗтсе пыракан йăх çынни.

**Деградация**—каялла чакса пыни, хуллен чакса пыни, ӳксе пыни, пӗрмай вӗтелсе, пӗтсе пыни. Авалхи е кивве тухнă хуçалăх формисем патне каялла таврăннине, обществăллă организацисем каялла чакса пынине, политикăпа культура пурнăçӗ ӳксе пынине çапла калаççӗ.

**Дезавуирование** — мӗнле те пулин правительство хăйӗн агенчӗ тунă ӗçсемпе килӗшменни çинчен уççăн калани, е мӗнле те пулин правительство пӗр-пӗр çын унăн агенчӗ пулса тăнă пулин те, чăннипе вăл унăн агенчӗ мар, ăна çав ӗçе тума хушман, тесе уççăн тухса калани.

**Дезинфекция**—дезинфекци — пӳртри усал сывлăша тасатни; сывлăша, япалана куçа курăнман чӗрчунсенчен (микробсенчен) сыпăçакан, ерекен чир хыççăн эмелсемпе тасатни.

**Дезорганизация** — йӗркесӗрлӗх; йӗркелӗх çукки, е

йĕркелĕхе пăсни, ĕçе йĕркелессине пăсни. Дезорганизатор—мĕнле те пулин ĕçе, дисциплинăна пăсакан çын.

**Декларация**—деклараци—тĕп принципсем çинчен халăхсене пĕлтерни; пĕр е темиçе государство пĕтĕм тĕнчери пĕр-пĕр ыйту тăрăх халăха каласа пĕлтерни.

**Декрет**—1) СССР-та Совет влаçне туса лартнă хыççăнхи малтанхи çулсенче законсене декрет тесе каланă (сăмахран, 1917 çулта çĕре харпăрхăй алликче тытса тăрассине пăрахăçа кăларасси çинчен кăларнă декрет); 2) Францире 18-мĕш ĕмĕрти буржуаллă революци тата 1871 çулхи Париж Коммуни туса хунă аслă органсем йышăннă закон вырăнне пулса тăракан постановленисене декрет, тесе чĕннĕ; 3) буржуаллă çĕршывсенче—правительство кăларнă акт ячĕ, ăна вăл закона пурнăçа кĕртес йĕркепе, управлени йĕркипе кăларса тăрать.

**Деклассированный**—пĕр класран уйрăлса тепĕр класс çумне хутшăнман, пăсăлса кайнă, йĕркерен тухнă çын.

**Демагог**—пурнăçа кĕртме пултарма çук, çапах та çавна тума сăмах парса, çынсене хăй енне çавăрма тăрăшакан çын; ултавçă, суеççĕ.

**Демаркация**—демаркаци—договорсем тăрăх чикĕсене палăртасси; паллă тăвасси, канав алтса чикĕ палăртса тухасси; пырса кĕме чăрмавсем тăвасси, вăрманта просек касасси, чикĕри юпасене, паллăсене лартса тухасси. Чикĕри паллăсем кивелсен е ишĕлсе ансан, вăрманти просексем йывăççемпе шăтса ларсан, чикĕ лайăх палăрми пулсан редемаркаци тума тивет, тепĕр тĕслĕ каласан, тĕрлĕрен юпасемпе паллăсене лартса çĕнетсе тухма, вăрманта просексем касса тухма тата ыт. те тума тивет.

**Демаскировать**—маскăна илсе, сирсе пăрахас, тăшманран пытарнă орудисене е çарсене курăнмалла тăвас, тенине пĕлтерет.

**Демарш**—пĕр-пĕр çĕршывăн дипломатиллĕ представителĕ тепĕр государствăн представительне нота панине е мĕн çинчен те пулин сăмахпа каланине демарш турĕ

тесе калаççĕ. Питĕ кирлĕ те палла ыйту тăрăх нота панине, сăмахпа каланине çеç демарш, теççĕ.

**Демилитаризация**—демилитаризаци — чикĕ хушшинчи укреплевисене илсе пăрахни, гарнизонсене тылалла илсе кайни; хĕçпăшалсăрлатни (Версальти договор тăрăх Рейн зонине çапла хĕçпăшалсăрлатнă пулнă; халĕ Берлинри конференци решенийĕсем тăрăх гитлерла Германие хĕçпăшалсăрлатмалла тунă).

**Демиург**—1) авалхи грексен философинче (Платон)—тĕнчене „тăвакан" турă ятне çапла каланă; 2) пĕр-пĕр ĕçе тума пулăшакан вăй, ĕçе тăвакан.

**Демобилизация**—демобилизаци—государствăн хĕçпăшаллă вăйĕсене вăрçă вăхăтĕнчинчен мирлĕ вăхăтри чухлĕ чакарни; хуçалăхăн пур отраçлисене те вăрçă вăхăтĕнчинчен мирлĕ вăхăтри пек ĕçлеме тытăнтарни; çар службинчи çынсене киле яни, запаса е отставкăна яни.

**Демократия**—демократи—халăх ирĕкĕ, халăх влаçĕ тени пулать. Государствăна пĕтĕм халăх ячĕпе тытса тăракан йĕрке. Анчах та чăн-чăн демократи пролетари диктатури вăхăтĕнче кăна пулма пултарать.

**Демократический централизм**—демократиллĕ централизм—большевиксен партин организациллĕ тытăмĕн тĕп принципĕ. Демократизм принципĕ çакă: суйланасси; суйланнă органсем суйлакан органсем умĕнче, кĕçĕн органсем аслă органсем умĕнче отчёт парса тăрасси, партин ертсе пыракан органĕсене аялтисенчен пуçласа çӳлтисене çитичченех улăштарма пултарасси, партин пурнăçĕнче, унăн ĕçĕнче партин пур членĕсем те активлăн хутшăнасси. Централизмăн принципĕ: партин пур ĕçне те пĕр центртан ертсе пырасси, партин çирĕп дисциплинине пăхăнса тăрасси, аялта тăракан организацисемпе партин уйрăм членĕсен пурин те çӳлти органсем йышăннă решенисене обязательнăй йĕркепе пурнăçа кĕртсе пырасси пулса тăрать.

**Деморализовать**—пăсас, йĕркесене пăхăнма пăрахтарас, йĕркесĕрлентерес тени.

**Демпинг**—капитализмлă государствăсем ют çĕршыва

кăларакан таварĕсемпе ытти çĕршывсен таварĕсене хĕссе кăларас тата ют çĕршыв валютине пухас тесе йӳнĕ, таварăн хăйне ларакан хакĕнчен те йӳнĕ хакпа сутни.

**Денацификация** — денацификаци. Германири нацизм каяшĕсене, гитлерла режим юлашкийĕсене тĕппипех пĕтерес, фашистла идеологие пĕтерес, çĕршыври общество-ла-экономикăллă тата политикăллă пурнăç çине фашистла деятельсем влияни парса тăрассине сирес тата Германин политикăллă пурнăçне демократиллĕ никĕс çинче юсаса çĕнетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене çапла калаççĕ.

**Денонсировать** — пурте пĕлсе тăмалла тăвас тенине пĕлтерет. Дипломати чĕлхинче пĕр-пĕр ĕçе малашне туса пыма, договора пурнăçа кĕртсе пыма пăрахни çинчен калани, договорăн срокĕ тухсан тепĕр срока тăсма килĕшменни çинчен пĕлтерни пулать. Пĕтĕм тĕнчери договорсенче договор тăваканнисем мĕнле условисенче ăна пăрахăçлама пултарни çинчен кăтартса пани пур. Çав условисене пăхăнса пырсан договора малашне пурнăçласа пыма пăрахни ăна пăсни вырăнне шутланмасть.

**Депеша**—телеграмма; дипломатсен васкавлă çырăвĕ.

**Депрессия** — депресси — капитализмлă çĕршывсенче кризис хыççăн промышленность малалла аталанса пыма чарăнса ларни. Депресси чухне таварсем кайми пулаççĕ, производствăн шайлăхĕ чакать, ĕççĕрлĕх ӳсет, япаласен хакĕ ӳкет тата ыт. те.

**Державы-гаранты**—пĕтĕм тĕнчери пĕр-пĕр договора тунă чухне çав договора тăвакан государствăсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурне те пурнăçласа пырĕç тесе шантарса калакан государствăсем.

**Десант**—салтаксене карапа е самолётпа илсе кайса, тăшман çĕрĕ çине кăларни, антарни.

**Деспот**—халăха хăй ирĕкĕпе мĕнле тытса тăрас тет, çапла тытса тăракан, хăй мĕн тума шутланă, çавна туса пырса, халăха тарăхтаракан патша е пуçлăх; нимĕнпе те пӳлмен праваллă пуçлăх. **Деспотизм**—хĕсĕрлемелли йĕрке; пуçлăх хăй каланине, хăй тăвас тенине тутарса

пурӑнни; пӗр пӗччен пуҫ пулса, влаҫа пӗр пӗччен тытса тӑрас йӗрке.

**Де-факто**—чӑн-чӑн, ӗҫре, пурнӑҫра пурри, пулса тӑни.

**Де-юре**—законлӑ пулса тӑни, закон тӑрӑх, формальнӑ пулса тӑни.

**Дефицит**—1) тӑкак, тӑкаксем тупӑшсенчен ытларах пулни; 2) мӗн те пулин ҫитменни.

**„Джентльменское" соглашение**—„джентльменла" килӗшӳ—хут ҫине ҫырса нимӗнле договорпа та, нимӗнле хутпа та ҫирӗплетмен пӗтӗм тӗнчери килӗшӳ. Ҫав килӗшӳ килӗшме пулнӑ ҫӗршывӑн дипломатиллӗ представителӗсем сӑмах панипе кӑна, тепӗр тӗслӗ каласан „джентльмен сӑмахӗ" ҫинче кӑна тытӑнса тӑрать. Тепӗр чухне ҫав „джентльменла" килӗшӗве каярахпа хут ҫине ҫырса ҫирӗплетеҫҫӗ. Сӑмахран, Совет Союзӗ малтан Монгол халӑх республикипе „джентльменла" килӗшӳ кӑна тунӑ, кайрантарахпа, 1936 ҫулта, пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен хут ҫине ҫырса договор тунӑ.

**Диалектика**—диалектика тени грексен „диалего" сӑмахӗнчен пуҫланса кайнӑ. Вӑл калаҫас тенине, тавлашас тенине пӗлтерет. Ӗлӗк авал диалектика тесе противникӑн калаҫӑвӗнчи хирӗҫӳсене кӑтартса парса, ҫав хирӗҫӳсене пӗтерсе пырса чӑнлӑха тупас искусствӑна каланӑ. Каярахпа ҫак сӑмаха тӗпчесе пӗлмелли метод тенине пӗлтерекенни пулса тӑнӑ. Ҫав тӗпчесе пӗлмелли метод „ҫутҫанталӑк явленийӗсене ӗмӗрех куҫса тата улшӑнса пыракан явленисем тесе пӑхнӑ, ҫутҫанталӑк аталанӑвне—ҫутҫанталӑкри хирӗҫӳсен аталанӑвӗн результачӗ, ҫутҫанталӑкри хире-хирӗҫле вӑйсем ҫыхӑнса пырса пӗр-пӗрне улӑштарнин результачӗ тесе пӑхнӑ" (Сталин). Диалектика хӑйӗн никӗсӗпе метафизикӑна тӳрех хире-хирӗҫле. Материализмлӑ диалектикӑна Маркспа Энгельс туса хунӑ тата Ленинпа Сталин малалла аталантарнӑ. Вӑл ҫутҫанталӑкӑн, этем обществин тата ӑс-тӑнлӑхӑн движенипе аталанӑвӗн пӗтӗмӗшле законӗсем ҫинчен вӗрентекен наука (диалектикӑллӑ материализм ҫинчен каланине пӑхӑр).

Материализмлă диалектикăран и д е а л и з м л ă диалектика пачах урăхла, вăл аталану ăнлануне пăсать, ун шучĕпе аталану, имĕш, пĕр дух тата ăс-тăн аталанса пынинче кăна пулса пырать (Фихте, Шеллинг, Гегель философсем çапла шутланă).

**Диалектический материализм**—диалектикăллă материализм—вăл марксистла-ленинла партин мировоззренийĕ пулса тăрать. Ăна Маркспа Энгельс туса хунă, Ленинпа Сталин малалла аталантарнă. „Çак мировоззрение диалектикăллă материализм тесе акă мĕншĕн калаççĕ: вăл çутçанталăк явленийĕсем çине диалектикăллă пăхать, унăн çутçанталăк явленийĕсене вĕренес меточĕ, унăн çав явленисене тĕпчесе пĕлес меточĕ д и а л е к т и к ă л л ă метод пулса тăрать, вăл çутçанталăк явленийĕсене ăнлантарса пани, вăл çутçанталăк явленийĕсене ăнланни, унăн теорийĕ—м а т е р и а л и з м л ă теори пулса тăрать" (С т а л и н). Марксистла диалектикăллă методпа марксистла философиллĕ материализмăн тĕп паллисем çинчен Сталинăн „Диалектикăллă тата историллĕ материализм çинчен" ятлă произведенийĕнче классикăллă характеристика панă.

**Диверсия**—диверси—тăшман ăна хăш тĕлтен пырса çапнине ан пĕлтĕр тесе тăвакан вăрçăллă операцисем. Çавăн пекех тăшмана систермесĕр, кĕтмен çĕртен çарсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарнине, пĕчĕк отрядсем тăшмана пыра-пыра çапнине, тăшман тылне пĕчĕк отрядсем ярса тăшманăн чугун çулне, кĕперĕсене ишĕлтерме, склачĕсене чĕртсе яма, аэродром çине тапăнма янине те диверси теççĕ, урăхла каласан, сиен кӳни, сăтăр туни пулать. Çавăн пек диверсиллĕ ĕçсене тăшман вăрçă вăхăтĕнче кăна мар, мирлĕ вăхăтра та тума пултарать.

**Дивиденд**—акционерлă общество хăйĕн пайщикĕсем—акцисене тытса тăракан çынсем хушшинче валеçме уйăрса хуракан усламăн пĕр пайне дивиденд теççĕ.

**Диктат**—хирĕç ним сăмах хушма ирĕк памасăр, пĕрпĕр ĕçе тума хушни. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн

Генеральнăй ассамблейĕн сессийĕсенче США-па Англи представителĕсем хăйсене çавăн пек тыткалаççĕ.

**Диктатор**—государствăна хăй ирĕкĕпе тытса тăракан çын; мĕнле те пулсан ĕçре нимĕне пăхмасăр хăйне пăхăнтарса тăракан çын.

**Дипломатия**—дипломати—ют çĕршывсем хушшинчи ĕççене йĕркене кĕртсе тытса пыни; государствăсемпе, çынсемпе килĕштерсе пурăнма пĕлни; ют çĕршыври представительство.

**Дипломат**—ют çĕршывсемпе çыхăнса тăрас ĕççене туса пыракан çын; ют çĕршыв правительствипе мĕнле те пулин ĕççем тăрăх калаçма шанса, хушса янă çын.

**Дипломатический багаж**—дипломатиллĕ багаж—дипломатиллĕ представительствăн (посольствăн, консульствăн) е уйрăм дипломатиллĕ представительсен (посолăн), посольство советникĕн, консулăн тата ыт. те) вĕсем илсе тăракан е ярса паракан япалисем. Дипломатиллĕ представительсен, представительство вырнаçнă çĕршыври административлă органсемпе суд органĕсем тĕкĕнме пултарайман право пур. Дипломатиллĕ представительствăсен çуртне те, пĕтĕм почтăна та (çырусене тата ыт. те) никам та тĕкĕнме пултараймасть. Çавăн пекех вĕсен япалисене (багажне) те никам та тĕкĕнме пултараймасть. Чикĕ урлă каçнă чухне дипломатиллĕ представительствăн япалисене (багажне) пичет хунă пулсан, таможня пăхма пултараймасть. Таможня работникĕсем дипломатиллĕ представительствăн пичечĕ тăракан ещĕксене, арчасене, чемодансене, çыхăсене тата ыт. те уçса пăхма пултараймаççĕ.

**Дипломатический корпус**—дипломатиллĕ корпус—пĕр-пĕр правительство çумĕнчи дипломатиллĕ представительсене пурне те пĕрле илсе, дипломатиллĕ корпус теççĕ.

**Дипломатический курьер**—дипломати курьерĕ—дипломати корреспонденцине илсе çÿрекен çын. Дипломати курьерĕ, вăл чăн çав çын пулса тăнине кăтартакан хут пулсан, ăна тата ун аллинчи хутсене никам та тĕкĕнме пултараймасть.

**Дипломатический обозреватель**—дипломатиллĕ обозреватель. Дипломатиллĕ обозреватель (е дипломати корреспонденчĕ) тесе Англире тăтăшах пĕтĕм тĕнчери паллăрах событисем, дипломати калаçăвĕсем, конференцисем çинчен ăнлавтарса паракан хаçат сотрудникĕсене калаççĕ.

**Дискредитировать**—мĕне те пулин ĕненсе тăрассине ĕненме пăрахтарни, камăн та пулин авторитетне итлемевни, итлемелле мар тума тăрăшни, ятне пăсни.

**Дискриминация**—дискриминаци. Çак сăмаха дипломати хучĕсенче икĕ государствăн представителĕсем калаçу иртернĕ чухне асăнаççĕ, вăл мĕнле те пулин государство тепĕр мĕнле те пулин государствăн прависене пĕчĕклетнине, шута илменнине, вĕсемшĕн тан мар режим туса хунине пĕлтерет.

**Дискуссия**—дискусси—пĕр-пĕр ыйтăва пухура, хаçатсем çинче, куçа-куçăн калаçнă чухне сӳтсе явни, тавлашу.

**Дислокация**—çĕршыв территоринче çарăн чаçĕсемпе учрежденийĕсене вырнаçтарса тухни; тинĕс çар флочĕн карапĕсене ялавлăха е хĕл вăхăтĕнче вырнаçса тăма палăртса тухни. Дислокаци çарăн вăрттăнлăхĕ пулса тăрать.

**Дисциплина**—1) пĕр-пĕр коллектив членĕсен çав коллективра тунă çирĕп йĕркене обязательно пăхăнса тăрасси; большевиксен партиллĕ дисциплини — пур парти организацисемшĕн те тата партин пур членĕсемшĕн те чи паллă обязанность пулса тăрать. Партири çирĕп дисциплина ВКП(б) тытăнса тăмаллин, унăн вăйĕпе халĕн, ирĕк пĕрлĕхĕпе ĕçсен пĕрлĕхĕн никĕсĕ пулса тăрать. Партиллĕ дисциплина аялти органсем çӳлти органсене, сахалтарахăшĕ ытларахăшне пăхăнса тăрассине ыйтать. Партиллĕ дисциплина вăл ăна ăнланса тата ăна пăхăнса тăракан хăй ирĕкĕпе пăхăнса тăнипе çирĕп пулса тăрать, мĕншĕн тесен ăнланулла дисциплина кăна чăн-чăн тимĕр пек çирĕп дисциплина пулса тăрать, тет Сталин юлташ. Партиллĕ дисциплина парти организацисемпе парти членĕсенчен

партин программине, уставне, политикине пурнăçласа пыма, партипе унăн органĕсем йышăннă решенисене пĕр пăркаланмасăр ĕçе кĕртсе пыма, партин политикăллă линине таса тытса тăрассишĕн вирлĕн кĕрешме, коммунизм тăвассишĕн активлăн кĕрешме ыйтать; ĕç дисциплини— ĕç тухăçлăхне хăпартмалли чи кирлĕ фактор пулса тăрать; ĕç дисциплини ĕç çине ăнланса пăхнă никĕс çинче тытăнса тăрать, ĕç СССР-та чыслă ĕç, чаплă ĕç, паттăрла ĕç пулса тăчĕ; 2) наукăллă пĕлĕвĕн уйрăм отраçли.

**Диференциация**—диференциаци—пайланни, пĕр япала темиçе пая пайланни; сăмахран, капитализмлă обществăра хресченсем темиçе пая (чухăнсем, вăтамсем, кулаксем çине) пайланса тăраççĕ.

**Договор о взаимной помощи**—пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен калаçса килĕшни. Çав договор тăрăх калаçса таталакан государствăсем пĕрин çине кам та пулин вăрçăпа тапăнас-мĕн пулсан вăрçă енĕпе пулăшу пама пулаççĕ.

**Договоры международные**—пĕтĕм тĕнчери государствăсем хушшинче тунă килĕшӳсем. Тепĕр чухне вĕсене трактат, пакт, конвенци тесе калаççĕ. Вĕсене протокол пек, акт пек, деклараци пек çырса тăваççĕ, е пĕр-пĕрин хушшинче нотăсем парса илнипе тăваççĕ. Пĕтĕм тĕнчери договорсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ: политикăллă килĕшӳсем (туслă пуласси çинчен, мирлĕ пурăнасси çинчен, союзлă пуласси çинчен, пĕр-пĕрин çине тапăнас марри çинчен, нейтраллă пуласси çинчен тата ыттисем те); экономикăллă килĕшӳсем (суту-илӳ тăвасси çинчен, финанс тĕлĕшĕпе т. ыт. те), администраципе техника ыйтăвĕсем тăрăх тунă килĕшӳсем (чугун çул, тинĕс, почтăпа телеграф, санитари т. ыт. ыйтусем тăрăх та).

**Доктрина**—вĕрентни, наука е философи теорийĕн системи.

**Доктрина Монроэ**—Монроэ доктрини тесе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тулашри политика ĕçне ертсе пыракан шухăшсенчен пĕрне калаççĕ. Вăл шухăша чи мал-

тан XIX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Америка президенчĕ Монроэ каланă. Çав доктринăн тĕп шухăшĕ çак лозунгра пулса тăрать: „Америка—американецсемшĕн". Монроэ çав сăмахсемпе Америка тĕнчен ытти пайĕсен ĕçĕсене хутшăнмасăр тăрать, ытти державăсем те вара Америка континенчĕн ĕçне ан хутшăнччăр тесе каласшăн пулнă. Халĕ США политикĕсем çав доктринăна пăрахăçа кăларса Европăпа Ази ĕçне куç-кĕретех хутшăнаççĕ.

**Дон-Кихот**—Сервантес ятлă писатель 17-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче çырнă „Дон-Кихот Ламанчский" ятлă романăн геройĕ; çак герой—кулăшла ĕмĕтленме юратакан çын, вăл пурнăçра пулма пултарман ĕçе тума ĕмĕтленет тата хăйĕн вăйне чăн-пурнăçра çук, куçа курăнакан чăрмавсене хирĕç кĕрешнипе вырăнсăр пĕтерет. Литературăра Дон-Кихот тесе пурнăçа пĕлмен, хăйсен вăйĕсене пурнăçра пулма пултарайми япаласемшĕн ним ăссăр „кĕрешсе" пĕтерекен çăмăлттай этемсене калаççĕ. „Дон-Кихотсен пурнăç туйăмĕ пачах та çук; çавăнпа ĕнтĕ вĕсене Дон-Кихотсем теççĕ" (Сталин).

**Доминионы** — доминионсем — тесе Британи империн хăш-пĕр пайĕсене ĕлĕкрех колонисем вырăнне пулнă, кайран хăйсене хăйсем тытса тăрас права илнĕ пайĕсене калаççĕ. Доминионсем пурĕ улттă: ирĕклĕ Ирланди государстви (Кăнтăр Ирланди), Канада, Нью-Фаундленд, Кăнтăр Африка Союзĕ, Австрали тата Çĕнĕ Зеланди. Доминионсем ытти государствăсемпе хăйсем тĕллĕнех договор тума пултараççĕ, вĕсен хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсем пур. Хăш-пĕрисен (Австралипе Çĕнĕ Зеланди) тата колонисем те пур. Апла пулин те доминионсем экономика тата вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен Англипе питĕ пысăк çыхăну тытса тăраççĕ. Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă хыççăн Англи правительстви Индипе Бирмăна та доминион прависем панă пек турĕ. Анчах унта халĕ те Англи пуç пулса тăрать.

**Доминировать**—пуç пулса тăрас, ытларах, вăйлăрах пулса тăрас, çӳлерех тăрас тенине пĕлтерет. Домини-

рующая высота тесе вăрçăпа стратеги ĕçĕнче, тавралăхри вырăнпа танлаштарсан, çÿллĕрех вырăнсене, сăртсене, тусене калаççĕ. Доминирующий фактор— ытти фактсенчен е факторсенчен ытларах, пахарах вырăн йышăнса тăракан факт е фактор.

**Досье** (французсен сăмахĕ)—хутсене, документсене хумалли папка тенине пĕлтерет, вырăс чĕлхинче ĕç (дело) тенипе пĕр пек. Пĕтĕм тĕнчери çыхăнусенче пĕр-пĕр ыйту тăрăх каласа паракан, пĕр-пĕр правительство паллă ыйтусем тăрăх мĕн тунине кăтартса паракан, пĕр-пĕр учрежденин е министрăн ĕçне кăтартса паракан документсене пĕр çĕре пухса кăларнине те досье теççĕ.

**Драконовские меры**—чи хытă, тискерле мерăсем. Дракон авалхи грексем вăхăтĕнчи Афинăра закон кăларакан çын пулнă. Вăл çырса кăларнă уголовнăй законсем пăртак айăпа кĕнĕшĕнех калама çук хытă айăплама хушнă. „Драконла законсем" текен сăмахпа çав законсем ытла та хытă пулнине палăртса каланă. Нимĕç фашисчĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ районсенче вĕсем тискерле ĕçсем туни çинчен каланă чухне нимĕç фашисчĕсем „драконла ĕçсем" турĕç, тесе калаççĕ.

**Драпироваться в тогу**—тога—вăрăм тумтир, ăна авалхи Римра пуян çынсен представителĕсем тăхăнса çÿренĕ. Халĕ „драпироваться в тогу" тени хăйне урăх çын вырăнне йышăнччăр тесе урăх çыннăн тумтирне тăхăннине, е урăххисем каланă пек калаçма хăтланса пăхнине пĕлтерет.

**Дуче**—Итали фашисчĕсем Мусолинне çак ятпа (титулпа) чĕннĕ.

## Е.

**Европеизация**—Европăри пек культура йăлисем, йĕркесем тăвас тенине пĕлтерет; капитализмлă çĕршывсем колонисенче тытса пыракан хăйсен империалистла пусмăрла политикине çав сăмахпа витсе пытарма тăрăшаççĕ.

**Европейская консультативная комиссия**—Европăри

консультативлă комисси — США, Великобритани тата Совет Союзĕн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Конференцийĕ йышăннипе тунă комисси. Европăри консультативлă комиссие вăрçă аталанса пынă май тухса тăнă ыйтусене, Европăна тивекен ыйтусене пăхса тухнă çĕрте виçĕ держава—Совет Союзĕ, Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем—килĕшсе ĕçлессине çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе тунă. Комисси задачи—çав ыйтусене вĕренсе пĕлесси тата виçĕ правительство валли сĕнӳсем туса хатĕрлесси пулнă. Вăл комисси ĕçе тăвакан орган мар, консультаци паракан орган кăна пулса тăнă, унăн ячĕ те çавăн çинченех калать.

Комиссине Великобританин, Совет Союзĕн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсем кĕнĕ. Вăл Лондонра ĕçлесе тăнă. Берлинри Конференци йышăннă решени тăрăх ăна пĕтермелле тунă.

**Ересь**—пуç пулса тăракан тĕне хирĕçле çĕнĕ тĕн çинчен вĕрентни; пуç пулса тăракан тĕн çав вĕрентĕве суя тесе айăплать. Ересь тесе нумайăшĕ йышăннă правилăсенчен пăраннине те калаççĕ.

## Ж.

**„Желтая пресса"**—хаçат королĕсен (Англире—Ротермир, США-ра—Херст) аллинче тăракан буржуаллă хаçатсене çапла калаççĕ. Çав хаçатсем суя хыпарсене пичетленипе, çиелтен пăхсанах суйи курăнакан документсене пичетленипе пурăнаççĕ. Херст хаçачĕсем Совет Союзне хирĕç кампани туса пыраççĕ, Совет Союзĕ çинчен элеклĕ те суя материалсем пичетлеççĕ; вĕсем империалистсене çĕнĕ вăрçă пуçарса яма чĕнеççĕ.

**Жюри**—выставкăсене тăратнă япаласене, спорт вăййисем мĕнле пулса пынине, писательсен ăмăртăва тăратнă сочиненийĕсене тата ыт. преми (парне) памалла тăвассине пахалама пĕлекен çынсенчен вăхăтлăха суйласа хунă ушкăн, комисси, суд.

# З.

**Закрытое море**—хупă, шалти тинĕс. Пĕр-пĕр тинĕсĕн çыранĕсем пĕтĕмпех пĕр государствăн пулса тăраççĕ пулсан, çав тинĕсе пĕтĕм тĕнчери право ăнланăвĕнче шалти, хупă тинĕс теççĕ. Хупă тинĕссĕр пуçне уçă тинĕссем пур, ун пек тинĕссем тăрăх, пĕр-пĕр государствăн территорийĕ шутне кĕрекен тинĕссемсĕр пуçне, мĕнпур государствăсен пароходĕсем те çÿреме пултараççĕ тата мĕнпур государствăсем çав тинĕс çинче промысласем тума пултараççĕ.

**Заложник**—залога панă, залога илнĕ çын.

**Замороженные кредиты или капиталы**—пĕр-пĕр фирма, банкне государство ют çĕршывра мĕнле те пулин фирмăна, банка е правительствăна кивçен укçа парать е заём парать. Çав кивçен панă укçана е заёмшăн тавăрса илмелли укçана вăхатра каялла тавăрса илес шанчăк пĕтсен, „замороженные кредиты или капиталы" теççĕ.

**Западная Европа**—Хĕвеланăç Европа—Российăн вăрçăчченхи чиккинчен хĕвеланăçнелле выртакан, Балкан çурутравĕнчи çĕршывсемсĕр пуçне, пур çĕршывсене те пĕлтерекен термин.

**Западный Союз**—Хĕвеланăç Союзĕ—Хĕвеланăç Европăри пилĕк çĕршыв хушшинче 1948 çулта тунă союз. 1948 çулхи март уйăхĕнче Брюссель хулинче Великобритани, Франци, Бельги, Голланди тата Люксембург пĕр-пĕрне пулăшасси тата коллективлă оборона çинчен договор турĕç. Çакă вăл Хĕвеланăç Европăри пилĕк государствăн хăйсен уйрăм ушкăнне туса хурас ĕçе пуçласа янă. Вăл ушкăна „Хĕвеланăç Союзĕ" тесе ят панă. Хĕвеланăç Союзне Совет Союзĕпе халăх демократин государствисене хирĕç кĕрешме тунă. Тепĕр енчен ку союза çак государствăсенчи рабочи класа, ÿссе пыракан демократи вăйĕсене, колонисенчи тата пăхăнса тăракан çĕршывсенчи халăхсен ÿссе пыракан кĕрешĕвне, ирĕке

тухассишĕн пыракан кĕрешĕве пусарса лартас шутпа тунă. Хĕвеланăç Европăри пилĕк государство союзĕ — вăл Европăра „Маршалл планне“ пурнăçласа пыма Европăри çĕршывсем тунă экономикăллă пĕрлешĕвĕн тепĕр пайĕ, унпа çыхăнса тăракан вăрçăллă-политикăллă союзĕ пулса тăрать. Европăри çĕршывсен çак ушкăнĕсене иккĕшне те Англипе Америка блокĕн влаçра тăракан ушкăнĕсем ертсе пыраççĕ. Англипе Америка блокĕн влаçра тăракан ушкăнĕсем, çав маларах асăннă ушкăнсенче тăракан çĕршывсен чăн-чăн нациллĕ-государствăллă тĕллевсене пурнăçа кĕртме, е вĕсен экономикин тĕллевĕсене те пулин пурнăçа кĕртме пачах тăрăшмаççĕ. Вĕсем хăйсен çарпа стратеги тата экономика позицийĕсене çирĕплетме тата малалла аслатса пыма çеç тăрăшаççĕ. „Маршалл планне“ пурнăçа кĕртсе пыни вăл Европăри государствăсен экономикине юсаса аталантарма пĕртте пулăшмасть. Çавăн пекех çĕнĕ ушкăн туса хурас ĕçе те пĕр-пĕрне пулăшас, Хĕвеланăç Союзне кĕнĕ çĕршывсене коллективлă йĕркепе хӳтĕлес шутпа туман, мĕншĕн тесен, Ялтăра тата Потсдамра тунă килĕшӳсене пурнăçа кĕртсе пырсан, çав çĕршывсене нимĕнле агресси те хăратса тăрас çук. Хĕвеланăç Союзĕн тĕллевĕ вăл Англипе Америкăра влаçра тăракан ушкăнсен Европăри вăйне, вĕсене унта пуç пулса тăма май паракан вăйне çирĕплетме тата малалла ӳстерсе пыма, Европăри çав союзра тăракан государствăсен тулашри политикипе шалти политикине пĕтĕмĕшпех Англипе Америкăри влаçра тăракан ушкăнсен интересĕсене пăхăнтарма шут тытнине пĕлтерет. Хĕвеланăç Союзĕ хăйне организаци тĕлĕшĕнчен йĕркелесе çитерес тĕлĕшпе сахал мар мерăсем йышăннă ĕнтĕ, сăмахран, вăл Консультаци Совечĕ туса хунă. Ку çеç те мар-ха. Лондонра çав союзăн пилĕк государство представителĕсенчен тăракан яланхи органне те туса хунă. Çавăн пекех Хĕвеланăç Союзĕн Çар комитечĕн оборона штабĕ те пур. Ку штабра пилĕк государство штабĕсен

начальникĕсем ĕçлесе тăраççĕ, Вĕсене Британи фельдмаршалĕ Монтгомери ертсе пырать.

**Золотой стандарт** — ылттăн стандарт — укçа-тенкĕ çаврăнăшĕн системи. Ылттăн стандарт системи пуç пулса тăнă чухне çав çĕршывра хут укçа кăна çÿрет. Вĕсен хакĕ ылттăн укçа хакĕпе пĕртанах. Ют çĕршывран таварсем илсен банкнотсемпе (хут укçасемпе мар) ылттăн укçапа кăна тÿлеççĕ.

**„Зона пустыни“** — „Пушхир зони“. Зона тесе мĕнле те пулин паллăсемпе уйрăлса тăракан пĕр-пĕр территорие, вырăна калаççĕ. Совет Çарĕ пыра-пыра çапнипе парахса хăваракан территорие нимĕç захватчикĕсем „пушхир зони“ туса хăварма шутланă. Нимĕç фашисчĕсем çав территорисене пĕр çынсăр, пĕр ялсăр тăратса хăварма, чугун çулсене ишĕлтерсе пĕтерме, çав вырăнсене пушхир пек туса хăварма тăрăшрĕç. Чакнă чухне вĕсем хăйсемпе пĕрле совет çыннисене те хăваласа кайнă. Çынсене хăваласа кайма май çук чухне вĕлерсе пĕтернĕ. Совет Çарĕ хăвăрт наступлени туса пыни темиçе çĕр пин совет çыннине нимĕç тыткăнĕнчен çăлса хăварчĕ, хамăр çĕршыва „пушхир зони“ туса хăварма памарĕ.

**Зондировать почву** — зонд—медицина инструменчĕ, унпа аманнă вырăнсене е шалти органсене, сăмахран, хырăма сăнаса пăхаççĕ. Çакăнтан „зондировать“ сăмах пулса кайнă. Вăл сăнаса пăхнине, мĕн те пулин туса пăхнине пĕлтерет. „Зондировать почву“ тени тăпрана сăнаса пăхнине те пĕлтерет, анчах çак сăмах çаврăнăшĕпе яланах урăхла ăнланăва пĕлтернĕ чухне усă кураççĕ. Ун пек чухне вăл мĕнле те пулин ĕçе тăвас умĕн çав ĕç ăнăçлăн вĕçленме пултарнипе пултарманнине малтанах сăнаса пăхнине пĕлтерет. Кирек мĕнле дипломатиллĕ калаçу умĕн те, çав калаçăва пуçлаччен, ĕç мĕнле татăлассине малтанах сăнаса пĕлме тăрăшаççĕ. Çав дипломатиллĕ калаçăва хутшăнаканĕ кашниех ыттисем мĕнле сĕнÿсем пама пултарнине, хăшĕсем вĕсемшĕн—юрăхлă,

хăшĕсем—юрăхлă маррине, çав сĕнÿсемпе хăш представитель килĕшме пултарнине е килĕшме пултарманнине малтанах пĕлме тăрăшать. Калаçу умĕн—кашниех ытти çĕршывсен представителĕсен шухăшĕсене тĕплĕнрех пĕлме тăрăшаççĕ, çавна „зондировать почву" теççĕ.

## И.

**Игнорирование**—юри курман-пĕлмен пек пулни, хисепсĕре хăварни, хисепе хуманни, шута илмесĕр хăварни.

**Игра-ва-банк** — картла вылякансен терминĕ, французсен сăмахĕ. Банкра мĕн чул укçа пур, çавна пурне те вылянине пĕлтерет. Урăхла ăнланура çав сăмахпа питĕ хăрушă япала тунине—мĕн те пулин пулĕ тесе тунине, лайăх пулассине пĕлмесĕрех мĕн те пулсан пулĕ тесе тунине ăнлантарса параççĕ. Вырăссен „была не была", чăвашсен „пулин-пулмин" е „мĕн пулать те, мĕн килет" текен сăмахсем çавăн пекрех пулса тăраççĕ.

**Идеализм**—философири икĕ тĕп çул-йĕрсенчен пĕри. Идеализм материализмран пачах урăхла, чăн-чăн наука вĕрентнине пăхмасăрах идея, ăнланулăх, дух малтанхи (первичное), çутçанталăк вара, пурнăçра пурри (бытие), матери—иккĕмĕшĕнчи (вторичное) тесе ĕнентерме тăрăшать. Идеализм тĕнпе питĕ тачă çыхăнса тăрать тата философи историнче реакциллĕ классен идеологийĕ вырăнĕнче шутланать. Субъективлă идеализм (берклианство, махизм тата ыт. те) материальнăй тĕнче объективлă, никам хутшăнмасăр тытăнса тăнине хирĕç тăрать, вăл пур уйрăм çыннăн ăнланулăхне, уйрăм çыннăн туйăмлăхне (ощущение) çеç йышăнать. Объективлă идеализм (Шеллинг, Гегель тата ыт. те) абсолютлă идея, тĕнче (мировой) духĕ, урăхла каласан, турă пĕтĕм пурнăçа тăваканни пулса тăрать тесе вĕрентет.

**Идеализация** — идеализаци — пĕр-пĕр япалана лайăх енчен кăна, вăл чăнвипе лайăх пулмасан та чи лайăххи пулăă пек илсе кăтартни.

**Идеал**—шухӑш; чи лайӑх пулса ҫитнӗ, ӗренне шухӑш; пӗр-пӗр ӗҫре мӗн те пулин чи пулса ҫитнӗ тесе шутлани; пӗр-пӗр туртӑмӑн, шухӑшӑн вӗҫри тӗллевӗ.

**Идеальный**—идеаллӑ—кӑтартулли, чи лайӑххи.

**Идентичный**—чӑн-чӑн пекки, пӗр пекки, пӗр евӗрли.

**Идеология**—идеологи. Ҫак сӑмах икӗ пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Пӗрремӗшӗ—идеологи тесе пӗтӗм обществӑлла ӑнлану формисене: правӑна, морале, наукӑна, искусствӑна, философине, тӗне калаҫҫӗ. Иккӗмӗшӗ,—идеологи тесе пӗтӗмӗшле мировоззрение калаҫҫӗ. Идеологи мӗн пулнине марксизм-ленинизм кӑна ӑслӑлӑх вӗрентни пек тӗрӗс ӑнлантарса парать. Право, мораль, наука, искусство, философи, тӗн,—пӗр сӑмахпа каласан, обществӑллӑ ӑнланавӑн пур формисем те обществӑн экономикӑллӑ структури, тытӑмӗ пулса тӑракан производствӑллӑ отношенисем аталанса пынӑ май аталанса пыраҫҫӗ. Класлӑ обществӑра идеологи класлӑ идеологи пулса тӑрать. Пуҫ пулса тӑракан идеологи—пуҫ пулса тӑракан класс идеологийӗ. Рабочи класс идеологийӗ—марксизм-ленинизм.

**Идея**—шухӑш, тӗп шухӑш; пӗр-пӗр япала ҫинчен кӑларнӑ шухӑш.

**Иезуит**—1) иезуит орденӗнче (ушкӑнӗнче) тӑракан ҫын; 2) чее, усал, хытӑ чӗреллӗ, икӗ питлӗ ҫын.

**Иерархия**—иерархи—чинсен е должноҫсен йӗркелӗхӗ—аялтан пуҫласа ҫӳле ҫитиччен ӳсӗнсе пыни. Иерархи пусми тӑрӑх хӑпарни тени чина ӳстернине, е ытларах пысӑкрах должность илнине пӗлтерет. Ку сӑмаха чиркӳ тавращӗнчи йӗркерен илнӗ, ҫавӑнпа вӑл сӑмахпа кулӑшла ӑнланӑва пӗлтернӗ ҫӗрте ытларах усӑ кураҫҫӗ.

**Изоляция**—уйӑрни, ӑрасна ҫӗре вырнаҫтарни.

**Изоляционисты**—изоляционистсем—США-ра тата Англире ытти государствӑсемпе хутшӑнмасӑр, ҫыхӑну тытмасӑр хайсем тӗллӗн пурӑнма сӗнекен ҫынсене ҫавӑн

пек ят панă. США-ра, сăмахран, изоляционистсем тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче США-на Европа ĕçне хутшăнтарасшăн мар тăратчĕç. Вĕсем Европăра иккĕмĕш фронт уçассине хирĕç тăчĕç.

**Иллюзия**—иллюзи—аташни, тĕлĕрни, тĕлĕкре курăннă пек япала; пĕр-пĕр явлени чăн пулнă пек мар, пĕтĕмпех урăхла курăнни; пулас çук япаласем çинчен шухăшлани; пурнăçа кĕртме çук, чăн пурнăçпа çыхăнса тăман шухăшсем.

**Иллюстрировать**—пĕр-пĕр шухăша ăнлантарса е кăтартса парас тесе, куçа курăнакан тĕслĕхсем илсе кăтартни.

**Иммиграция**—иммиграци—пĕр-пĕр çĕршыва ялан-лăха пурăнма пырса кĕни; эмиграцине хирĕçле явлени. Эмиграци тесе пĕр çĕршывран тепĕр çĕршыва, тĕрлĕ сăлтавсене пула, тухса кайнине калаççĕ.

**Иммунитет**—1) депутата, дипломати çыннине тĕкĕнме юраманни; 2) усал чирсем ерме пултарайманни.

**Империализм**—капитализмăн юлашки, чи çӳлти сыпăкĕ. Ленин империализмăн çак пилĕк енне кăтартса парать: 1) хуçалăх пурнăçĕнче монополисем питĕ паллă вырăн йышăнаççĕ; 2) банк капиталĕпе промышленность капиталĕ пĕрлешсе финанс капиталĕ пулса тăрать, финансистсен пĕчĕк ушкăнĕ çĕршывăн шалтипе тулашри ĕçне хăйсене кирлĕ пек туса пырать; 3) ют çĕршывсене тавар турттарни вырăнне ют çĕршывсене капитал куçарасси (илсе каясси) малти вырăна тухса тăрать; 4) капиталистсен пĕтĕм тĕнчери монополиллĕ союзĕсем организациленеççĕ, вĕсем тĕнчене пайлаççĕ; 5) капиталистла шултăра государствăсем хушшинче çĕрĕн пĕтĕм талккăшне валеçсе пĕтерни. Вăл вăхăтра пайламан çĕр юлмасть, çавăнпа та çĕрсене пĕр-пĕринчен тытса илмелле кăна пулать. Çавăн пирки вара империализмлă вăрçăсем тухса каяççĕ.

**Импорт**—ют çĕршыв таварĕсене илсе килни.

**Инвестиция** — инвестици — ют çĕршыва е пĕр-пĕр предприятие укçа-тенкĕ хывни.

**Индекс**—кăтартса паракан. Çак сăмах экономикăллă литературăра тĕл пулать. Вăл хуçалăхăн пĕр-пĕр отраçлинче производство аталаннине е ӳкнине, япаласен хакĕ, ĕç укçи тата ытти те хăпарнине е ӳкнине цифрăсемпе кăтартса панине пĕлтерет.

**Индекс цен**—хаксен индексĕ—япаласен хакне статистика тăрăх кăтартса пани; унта япаласен хакĕ хăш вăхăтра мĕн чухлĕ хăпарнине е ӳкнине кăтартса панă.

**Инициатива**—пуçару, ĕçе пуçласа яни. Инициатор—пĕр-пĕр ĕçе пуçарса яракан çын.

**Инквизиция**—инквизици—латин сăмахĕ, тĕпчесе пĕлни, ыйтса пĕлни тенине пĕлтерет. Рим папи 1233 çулта „суя тĕнсемпе“ кĕрешме тунă чиркӳ сучĕсем. Инквизиторсен тĕп меслечĕ шпионаж тата провокаци, çынсенчен ыйтса пĕлнĕ чухне тискерле асап кăтартни, час-часах ĕмĕрлĕхех те тĕрмене хупса хуни е вĕлерни пулнă. 1231 çулта папа „еретиксене“ чĕррĕнех çунтарса яма ирĕк паракан закон кăларнă. Фашистла нимĕç захватчикĕсем вăтам ĕмĕрти инквизиторсенчен те темиçе хут ытларах тискерле ĕçсем турĕç.

**Инкогнито**—вăрттăн, хăй камне пĕлтермесĕр, урăх çын ячĕпе пытанса çӳрени.

**Инкриминация**—айăплани çинчен каласа пани, мĕншĕн те пулин айăплани.

**Инсинуация**—суя сăмах сарни; элеклени.

**Инспирировать**—йĕкĕлтени, вăрттăн йĕкĕлтесе хистени; хăйĕн шухăшне, формулировкине кама та пулин вăрттăн каласа панă хыççăн вăл шухăшсене çав хăй каласа кăтартнă çын шухăшĕсем пек туса кăтартни. Капитализмлă государствăсен политикăллă пурнăçĕнче çак сăмах урăхла пысăк вырăн йышăнса тăрать. Час-часах министрсем тата ытти государство деятелĕсем е политикăллă партисен тата ушкăнсен руководителĕсем хăйсен шухăшĕсене хăйсен ячĕпе уççăн калама е мĕнле

те пулсан фактсене хаҫат ҫинче пичетлесе кӑларма пултараймаҫҫе. Ун пек чухне вара вӗсем ун ҫинчен хӑйсен ҫывӑхнерех тӑракан парламент депутачӗсене, пысӑкрах чиновниксене, хаҫат сотрудникӗсене хӑйсен ячӗпе тухса калама е хаҫат ҫинче ҫырса кӑларма хушаҫҫӗ, йекӗлтеҫҫе, хистеҫҫӗ. Вӗсем вара хӑйсен шухӑшне калана пек, ҫырнӑ пек тӑваҫҫӗ. Ҫавсене инспирированнӑй сӑмахсем, е статьясем теҫҫӗ.

**Инсценировать**—театрта сцена ҫинче мӗн те пулсан туса кӑтартни; япалана, ӗҫе пурнӑҫра пулнӑ пек туса кӑтартни.

**Интеллект**—ӑс, ӑс-пуҫ пултарулӑхӗсем; пӗлӳ хастарӗ.

**Интеллидженс-Сервис**—Англин разведка служби. Англире государствӑн шалти полици шпионажӗн, ҫарӑн тата ҫарпа политика шпионажӗн вӑрттӑн организацине (патша охранки евӗрлӗскере) ҫапла калаҫҫӗ.

**Интендантство**—ҫар валли тумтирпе ӗҫме-ҫиме хатӗрлесе тӑрас ӗҫе туса пыракан управлени.

**Интенсивный**—интенсивлӑ, тӑрӑшуллӑ, пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшса, хастарлӑ, ҫине тӑрсах тени пулать.

**Интенсивность**—тӑрӑшни, пӗтӗм вӑй-хӑватпа ӗҫлеме пултарнине пӗлтерет.

**Интервенция**—интервенци—пӗр государство тепӗр государство ҫӗрӗ ҫине ҫарпа пырса унӑн йӗркисене хӑй майлӑ тума тытӑнни е влаҫа хӑй майлисене тытса илме хатӗрленме пулӑшни.

**Интервью**—калаҫни; хаҫатра ӗҫлекен ҫын хаҫат валли пӗр-пӗр пысак ӗҫре тӑракан ҫын патне пырса унпа калаҫнӑ хыҫҫӑн унӑн шухӑшӗсене ҫырса пани.

**Интернационал**—пӗтӗм тӗнчери тенине пӗлтерет; 1) пӗтӗм тӗнчери пӗрлешӳ; Пӗрремӗш Интернационал—Пӗтӗм тӗнчери Рабочисен Юлташлӑхӗ, ӑна 1864 ҫулта организациленӗ пулнӑ, вӑл 1876 ҫулта ӗҫлеме пӑрахнӑ; Маркспа Энгельс организациленӗ Пӗрремӗш Интернационал пӗтӗм тӗнчери коммунистсен партин тата пролетарисен социализмшӑн пыракан кӗрешӗвӗн никӗсӗсене

хывнӑ. Иккӗмӗш Интернационал, 1889 ҫулта тунӑскер, малтанлӑха чылай ҫӗршывсенче, рабочи класс хушшинчи социал-демократиллӗ, профсоюзлӑ тата кооперативлӑ движенине сарма пулӑшнӑ; Иккӗмӗш Интернационал, унӑн ретӗнче оппортунизм вӑйланнипе, пӗтӗм тӗнчери империализмлӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче (1914 ҫ.) намӑсла пӗтсе саланса каять; унта кӗрекен чылай ҫӗршывсенчи социал-демократиллӗ партисем, оппортунизма хирӗҫ вирлӗн кӗрешсе пынӑ большевиксен партисӗр пуҫне, пурте уҫҫӑнах хӑйсен буржуазийӗ енне куҫнӑ. Империализмлӑ вӑрҫӑ хыҫҫӑн (1919 ҫулта) Иккӗмӗш Интернационала каллех чӗртсе ура ҫине тӑратнӑ, вӑл унтанпа буржуазипе класс тӑлӗшӗнчен килӗштерсе ӗҫлесе пырас политикӑна тытса пынӑ тата коммунистла партисене хирӗҫ кӗрешсе пынӑ. Виҫҫӗмӗш Коммунистла Интернационал (Коммунистла Интернационал ҫинчен каланине пӑхӑр) 1919 ҫулта пуҫланса кайнӑ; 2) пролетариатӑн пӗтӗм тӗнчери революциллӗ гимнӗ, ӑна француз рабочийӗсем Потье (сӑмахӗсене) тата Дегейтер (музыкине) ҫырнӑ, вӑл 19-мӗш ӗмӗр вӗҫӗнче сарӑлнӑ; 1917 ҫултанпа 1944 ҫулччен СССР-ӑн государство гимнӗ вырӑнне пулнӑ, халӗ вӑл ВКП(б) гимнӗ пулса тӑрать.

**Интернациональная зона**—пӗтӗм район, е хулан, портӑн пайӗ, унта хӑш-пӗр е мӗнпур ют государствӑсем те уйрӑм льготӑсемпе усӑ кураҫҫӗ.

**Интернировать**—ҫак сӑмах пӗр государствӑн ҫарӗсем, урӑх май пулманнипе чикӗ урлӑ каҫса, юнашар государство ҫӗрӗ ҫине кӗнӗ хыҫҫӑн, вӗсене тытса концентрациллӗ лагере хупнине пӗлтерет. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче нейтраллӑ государствӑсем вӑрҫакан государствӑсен ҫарӗсене вӗсем унӑн территорийӗ ҫине кӗрсен, тытса концентрациллӗ лагере хупаҫҫӗ. Ӑна та интернировать тунӑ теҫҫӗ. Вӑрҫӑ пӗтсен ҫав ҫарсене калле таврӑса параҫҫӗ.

**Интерпелляция** — интерпелляци — ыйту, ыйтса пӗлни. Парламент депутачӗсем правительство представителӗсенчен ыйтса пӗлнине ҫапла калаҫҫӗ. Вӗсем правитель-

ство членӗсем е пӗтӗм правительство мӗнле ҫул-йӗр тытса пыни ҫинчен те ыйтса пӗлме пултараҫҫӗ. Интерпелляци капитализмлӑ государствӑсенчи политикӑллӑ партисем хушшинчи тавлашусен меслечӗ пулса тӑрать.

**Интерпретация** — интерпретаци — ӑнлантарса пани; пӗр-пӗр закона, политикӑллӑ заявление тата ыт. те ӑнлантарса пани.

**Интрига**—1) харкашу, улталани; кам та пулин усал, сиен тӑвас шухӑшпа тавлашу пуҫарса яни; вӑрттӑн усал туни, вӑрттӑн каварлашни; 2) драмӑра, романра, повеҫре тата ыт. произведенисенче кӑтартнӑ ӗҫсене пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарса, сарса яни.

**Инфляция**—инфляци—укҫа ҫаврӑнӑшӗнче хут укҫа ытла та нумай пулни, хуҫалӑх оборочӗ валли кирлӗ пулнинчен ытлашши хут укҫа кӑларни, ҫавӑн пирки вара укҫа хакӗ питӗ чакса кайни.

**Информация**—пӗлтерни; ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен е камӑн та пулин ӗҫӗ ҫинчен пӗлтерни; мӗн ҫинчен те пулсан пӗлтерни.

**Информбюро**—Информацилле бюро. 1947 ҫулхи сентябрь уйӑхӗн вӗҫӗнче Польшӑра тӑхӑр компартин Информацилле канашлӑвӗ пулса иртнӗ. Унта Югослави компарти, Болгари рабочи (коммунистсен) парти, Румыни компарти, Венгри компарти, Польша рабочи парти, ВКП(б), Франци компарти, Чехословаки компарти, Итали компарти представителӗсем пулнӑ. Канашлура пулнӑ представительсем коммунистсен партийӗсен Центральнӑй Комитечӗсен ӗҫӗсем ҫинчен информацилле пӗлтерӳсем итленӗ. Ҫав пӗлтерӳсем тӑрӑх хӑйсен шухӑшӗсене каланӑ хыҫҫӑн, канашлӑва пынӑ представительсем, тӗнчери лару-тӑру ҫинчен тата канашлура пулнӑ представительсем хӑйсен компартийӗсен ӗҫӗсен отчечӗсемпе пӗр-пӗрне паллаштарасси тата пӗр-пӗрин ӗҫӗсене ҫыхӑнтарса туса пырасси ҫинчен сӳтсе явма килӗшнӗ. Тӗнчери лару-тару ҫинчен А. Жданов юлташ доклад туса панӑ. Канашлӑва пынӑ представительсем доклад тӑрӑх хӑйсен шухӑшӗсене

тухса калавӑ. Тӗнчери кучухнехи лару-тӑру пирки тата ҫав лару-тӑруран тухса тӑракан задачӑсем пирки хӑйсен шухӑшӗсем пӗр пек пулнине кӑтартса тата тӗнчери лару-тӑру ыйтӑвӗсем тӑрӑх пӗр шухӑшлӑ пулса, вӗсем деклараци йышӑннӑ. Пӗр-пӗрне хӑйсен ӗҫӗсемпе паллаштарасси тата компартисен ӗҫӗсене ҫыхӑнтарса пырасси ҫинчен тунӑ доклад тӑрӑх канашлу, унта пынӑ представительсен компартийӗсем хушшинче ҫыхӑну пулманнине, партисен ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем пулнине тата малашне пӗр-пӗрне хӑйсен ӗҫӗсемпе паллаштарса тӑни кирлине асра тытса, Информацилле бюро туса хума йышӑннӑ. Информацилле бюрова ҫӳлте асӑннӑ партисен Центральнӑй Комитечӗсен представителӗсем кӗреҫҫӗ. Информацилле бюровӑн задачи—компартисене пӗр-пӗрин ӗҫӗсемпе паллаштарасси тата, кирлӗ пулсан, пӗр-пӗринпе килӗшсе, вӗсен ӗҫӗсене ҫыхӑнтарса тӑрасси. Информацилле бюро хӑйӗн хаҫатне кӑларса тӑрать. Информациллӗ бюро малтан Белград хулинче вырнаҫнӑ пулнӑ, Югослави компарти пуҫӗнче тӑракансем марксистла-ленинла партисен ҫул-йӗрӗнчен пӑрӑнса кайсан Бухарест хулине куҫнӑ. Ҫав канашлу хыҫҫӑн пӑртакҫӑ вӑхӑт иртсенех Югослави компарти пуҫӗнче тӑракансем Информбюро линине хирӗҫ туха пуҫларӗҫ. Халӗ вӗсем хӗрсе кайсах СССР-а, ВКП(б)-на, халӑх демократи ҫӗршывӗсене тата унти компартисемпе рабочисен партийӗсене хирӗҫ кӗрешеҫҫӗ. Тито клики фашистсен ҫулӗ ҫине тӑчӗ, империалистла реакци ушкӑн енне тарса каҫрӗ. Вӗсем халӗ Совет Союзӗпе туслӑ пурӑнас, Информбюро решенийӗсем тӗрӗс, тесе калакан ҫынсене пурне те тӗрмене тыта-тыта хупаҫҫӗ. Тито клики халӗ чи усал фашистла клика пулса тӑчӗ, Америкӑпа Англи империалисчӗсен агенчӗ пулса тӑчӗ.

Инцидент—инцидент—ӑнсӑртран тухса кайнӑ тавлашу, хирӗҫӳ, хирӗҫни. Час-часах пӗр-пӗр событие пысӑках выран йышӑнса тӑман пек кӑтартса пама кирлӗ чухне ҫав сӑмахпа усӑ кураҫҫӗ.

**Ирригация** — уй-хире ятарласа шăварни; ял хуçалăх мелиорацин отраçлĕ; вăл, культурăллă ӳсентăрансем лайăххрах ӳссе çитĕнччĕр тесе, тăпрана нӳрĕлетес тĕлĕшпе ĕçлет.

## К.

**Кабинет министров**—Министрсен кабинечĕ—буржуалла государствăсенче ĕç туса пыракан влаçăн аслă органĕ. Министрсен кабинетне тепĕр майлă Министрсен совечĕ теççĕ тата час-часах правительство теççĕ. Унта министрсем тата вĕсен заместителĕсем (министрсен юлташĕсем) кĕреççĕ. Министрсен советне министрсен совечĕн председателĕ ертсе пырать. Тепĕр майлă ăна премьер, кабинет пуçлăхĕ е правительство пуçлăхĕ теççĕ.

**Кагуляры**—Францири фашистла вăрттăн организаци.

**Кадры**—1) мĕнле те пулсан учрежденин е предприятин, профсоюз е парти организацин тата ыттисен работникĕсен тĕп йышĕ; пĕр-пĕр ĕçре ĕçлекен, мĕнле те пулсан квалификацилле работниксем; 2) çар чаçсен яланлăх йышĕ (переменнăй составран пачах та уйрăм тăрать, переменнăй состава службăна пĕр паллă, кĕске вăхăтлăха кăна чĕнсе илеççĕ).

**Казус**—кĕтмен çĕртен сиксе тухнă ĕç; уйрăм факт.

**Казус белли**—вăрçă кăлармалли формальнăй сăлтав, анчах вăл вăрçа пуçарса янă государствăсен чăн тĕллевĕпе нихăш енчен те çыхăнса тăмасть, вăрçăн чăн-чăн сăлтавĕ империализм пулса тăрать. Империализма пĕтерсе хурсан, вăрçă та пулмасть.

**Каннибал**—1) çынçиен; 2) варвар. К а н н и б а л и з м — тискерлĕх, этемсĕрлĕх. Каннибал сăмах Гаити утравĕ çинчи авалхи çынсен ячĕнчен пулса кайнă, çав çынсем çын çисе пурăннă имĕш.

*Хальхи вăхăтра каннибалсем тесе фашистсене калаççĕ.* Вăрçа вăхăтĕнче тытса илнĕ совет районĕсенче вĕсем, совет çыннисене пĕтерес тесе, темĕн тĕрлĕ ирсĕр ĕçсем тăвасран та тытăнса тăмарĕç.

**Капитал**—1) буржуаллă обществăра—капиталистсен аллинче тăракан тата рабочи класа эксплоатацилемешкесене май паракан производство средствисем (фабрика çурчĕсем, машинăсем тата ыттисем те); 2) капитал—паллă обществăллă отношени пулса тăрать; вăл капиталистсем патĕнче кĕрĕшсе ĕçлекен рабочисен ĕçĕнчен пĕр пайне ĕç укçи тӳлемесĕр хăйсен кĕсйине чикнине пĕлтерет.

**Капитуляция**—капитуляци—парăнни, кĕрешме, вăрçма чарăнни. Çĕнтерекен кăларса тăратнă условисене йышăнса, ăна парăнни.

**Карьера**—общество ĕçĕнче, службăра асла тухса пыни; пысăк чаплă вырăна лекни. **Карьерист**—чапа тухасшăн анчах ĕçлекен çын.

**Кассация**—кассаци—суд решенине, приговора закона тĕлешĕнчен тĕрĕс туманшăн улăштарни; ăна улăштарма ыйтни.

**Кассировать** выборы или судебное решение—пĕрпĕр çынна суйланă чухне е суд тунă чухне йышăннă решение тĕрĕс туман пирки пăрахăçа кăларни.

**Катастрофа**—калама çук пысăк ишĕлтерӳ; хăвăрт килсе тухнă событи, вăл хăйĕн хыççăн калама çук пысăк йывăрлăхсем туса хăварать, е тата пĕтĕмпех ĕçе пĕтерсе лартасси патне илсе пырать. Нимĕçсен фашистла лагерĕ, ăна Совет Çарĕ вăйлăн пыра-пыра çапнипе, кризиса кĕрсе ӳкрĕ, çав кризис ăна катастрофа патне илсе çитерчĕ.

**Кворум**—пуху е лару ĕçне тытăнма кирлĕ хисеп. Пĕрпĕр партин суйланă органĕн пухăвĕ мĕнле те пулин решени йышăнма пултартăр тесен, çав организацин суйланă органĕн уставĕ тăрăх палăртнă чухлĕ членсем е суйланнă çынсем пухура пулни кирлĕ. Çавна кворум теççĕ. Паллăрах ыйту тăрăх решени йышăнмалла чухне уйрăм кворум—пухура членсен нумай ытларахăшĕ пулмалла тăваççĕ.

**Келлога пакт** (или пакт Бриана-Келлога)—пĕтĕм тĕвчери договор, ăна Парижре 1928 çулхи августăн

27-мӗшӗнче 14 государствӑсен (США-ан, Францин, Великобританин, Германин, Италин, Японин тата ыт. те) представителӗсем тунӑ. Келлог пакчӗн тӗп статьи — вӑрҫӑна, наци политикин хӗҫ-пӑшалӗ пулса тӑракансекере, чарасси пулнӑ. Икӗ кунтан 1928 ҫулхи августӑн 29-мӗшӗнче ҫав пактпа ССР Союзӗ те килӗшсе, ун ҫумне пӗрлешет. СССР Келлог пакчӗ ҫумне пӗрлешнӗ вӑхӑтрах, вӑрҫӑ пулмалла ан пултӑр тесе, пӗтӗмӗшле хӗҫпӑшалсӑрланасси ҫинчен сӗнӳ панӑ.

Анчах Келлог пакчӗ ҫине фашистла государствӑсем алӑ пусрӗҫ пулин те, ҫакӑ вӗсене вӑрҫӑ пуҫарса яма чӑрмантарса тӑмарӗ.

**Клайвденовская клика**—Англири аристократсем хушшинчи чи реакциллӗ ушкӑна ҫапла ят панӑ. Ӑна Астор ҫемйин Клайвден ятлӑ ҫурчӗн (замокӗн) ячӗпе каланӑ. Клайвден замокӗнчи салонра ҫав ушкӑна кӗрекенсем пухӑнса канашлаҫҫӗ. Салонӑн (хӑнасене йышӑнмалли пысӑк пӳлӗмӗн) хуҫи виконтесса Нэпси Астор. Вӑл 1919 ҫултанпа общинасен палатин консерваторла депутачӗ пулса тӑрать. Клайвден ушкӑнӗ Мюнхенри кавар вӑхӑтӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ, халӗ те вӑл пысӑк вырӑн йышӑнса тӑма тӑрӑшать.

**Классики**—классиксем—аслӑран та аслӑ мыслительсем, писательсем, художниксем, композиторсем, вӗсен произведенийӗсем питех те чаплӑ, ӗмӗр-ӗмӗрех хӑйсен хакне ҫухатмаҫҫӗ. Марксизм-ленинизм классикӗсем — Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин.

**Клаузула** — договорти, килӗшӳри, законри уйрӑмӑн асӑрхаттарса, палӑртса хӑварни (оговорка).

**Клерикализм** — буржуаллӑ ҫӗршывсен политикӑллӑ тата культурӑллӑ пурнӑҫӗнче чиркӳпе чиркӳ таврашӗнче ӗҫлекен ҫынсем хӑйсен влаҫне ҫирӗплетме тӑрӑшни.

**Клика**—кампани, шайка; тискер ӗҫ, обществӑна юрӑхсӑр ӗҫ тӑвас тӗллевпе пӗрлешнӗ ҫынсен ушкӑнӗ, сӑмахран, фашистла клика, империалистла клика, милитаристла клика, Тито клики.

**Клиринг**—укçасăр расчёт, пĕр-пĕрин хушшинчи парăмсене хире-хирĕç панă обязательствăсем тăрăх шутласа татни.

**Клоака**—политика чĕлхи çине куçарса каласан, пылчăк купи, ним вăтана пĕлмен çынсен ушкăнĕн таврашĕ тенине пĕлтерет.

**Коалиция**—пĕрлешни. К о а л и ц и я д е р ж а в—темиçе государство пĕр е темиçе государствăна хирĕç тухма пĕрлешни, союз туни. Прогрессивлă пĕрлешӳсем те пулаççĕ, сăмахран, темиçе государство агрессие хирĕç кĕрешме пĕрлешни; реакциллĕ коалицисем те пулаççĕ, сăмахран, темиçе государство хăйсем пуç пулса тăрассине çирĕплетес, ирĕклĕхе путарса лартас тата захватчикла вăрçă пуçарса ярас шутпа империалистла тĕллевпе пĕрлешни.

**Коалиционное правительство** — коалициллĕ правительство. К о а л и ц и—союз, килĕшӳ. Коалициллĕ правительство тесе темиçе партисен представителĕсенчен пĕрлешсе тунă правительствăна, тĕслĕхрен, буржуаллă партисемпе пĕрле социал-демократсем те хутшăнакан правительствăна калаççĕ.

**Код**—телеграф тăрăх пĕлтерме тунă уйрăм паллăсен сборникĕ, çав паллăсем тăрăх пĕр сăмахпа е сăмахăн пĕр сыпăкĕпе мĕн кирлисене пĕлтерсе тăма пулать.

**Коллаборационисты**—çак ятпа Францире предательсене, Франци çĕршывне гитлерла Германи оккупациленĕ вăхăтра нимĕçсемпе килĕшсе ĕçленĕ çынсене чĕннĕ. К о л л а б о р а ц и о н и с т—халăха сутакан, тăван çĕршыва сутакан, тăшманпа килĕшсе ĕçлекен çын.

**Колониальные войска**—колонири çарсем—империализмлă государство колонийĕсенче вăрçма ятарласа хатĕрленĕ чаçсем е соединенисем.

**Колониальная политика**—колонири политика—капитализмлă государствăсем колонисене эксплоатацилесе, колонири халăха алăра тытса тăмалли йĕркесем. К о л о н и а л ь н ы е т о в а р ы—колонисенчен илсе килнĕ таварсем.

**Колонизаторы** — колонизаторсем — колонисене тытса илессишĕн тăракансем, колонисенчи ĕç халăхне эксплоатацилессине организацилесе ертсе пыракансем.

**Колонизация** —колонизаци—пĕр-пĕр çĕршыва куçса ларни, час-часах ун пек чухне вырăнти халăхсене хăйсем пурăннă çĕртен хăваласа яраççĕ е чура туса хураççĕ; капитализмлă государство пĕр-пĕр ют çĕршывран хăйĕн колонийĕ туса хуни, вара çав çĕршыв капитализмлă государствăн колонийĕ метрополие пăхăнса тăрать.

**Колония**—колони—малтанлăха Рим патшалăхĕ вăрçса илнĕ ют çĕршывсенче туса лартнă ялсене, хуласене колонисем тесе каланă. Каярахпа колони тесе çаксене каланă: 1) пĕр çĕршывран куçса кайса тепĕр çĕршывра вырнаçнă ялсем; 2) пĕр-пĕр община е çынсен ушкăнĕ; 3) тĕрлĕрен ĕç, воспитани тата ĕçпе юсакан тата ытти тĕрлĕ учреждениисен ячĕ; 4) пĕр-пĕр государствăн инçери е хăйĕн государствин хĕрринче выртакан çĕрĕсем, вĕсем метрополипе пĕртан тăмаççĕ, унăн законĕсем те метрополинчи пек мар, уйрăмрах, пĕчĕкрех; 5) социаллă экономикăллă енĕпе илсен—вĕсем кая юлнă тата вăйсăр çĕршывсем пулса тăраççĕ, вĕсене вăйлă державăсем тытса илсе эксплоатацилесе тăраççĕ, анчах уйрăмлăх та пур: пĕрисенче пĕтĕмпех пĕр-пĕр империализмлă çĕршыв пуç пулса тăрать, вĕсене колонисем теççĕ; теприсенче пурнăçра колонисенчи пекех империализмлă государство е темиçе государство пуç пулса тăрать пулсан та, хут çинче вăл никама пăхăнса тăман çĕршыв вырăнĕнче шутланса тăрать, ун пеккисене çурма-колонисем теççĕ (Латинла Америка çĕршывĕсем).

**„Коммандос“** — союзниксен ятарласа тунă ударлă-десантлă отрячĕсем. Çав отрядсем тăшман çĕрĕ çине чи малтан пырса кĕнĕ. Вĕсен задачи—тăшман çĕрĕ çинче унăн çĕршывне шаларан та шаларах кĕрсе пырса десантăн тĕп вăйĕсене çул уçса парасси пулнă. Çав ятарласа тунă отрядсене Англире 1940 çулта тума тытăннă. „Коммандос“ тенĕ отрядсем 1940 çулхи июнь уйă-

хĕнче Францин Булонне, 1941 çулхи февраль уйăхĕнче Итали территорине, 1941 çулхи март уйăхĕнче Норвеги территорине, 1942 çулхи март уйăхĕнче Сен-Назара, унтан Дьепа, кайран Çурçĕр Африкăна кĕрсе кайнă. Ку операцисенче „коммандос" отрячĕсем пысăк вырăн йышăнса тăнă. Юлашкинчен вĕсем 1944 çулта Франци территори çине десант антарас çĕрте пысăк усă кÿнĕ. „Коммандос" отрячĕсенчи салтаксем пурте хăйсен ирĕкĕпе çар службине кĕнĕ.

**Комментарий** — комментари — мĕнле те пулин документа, статьяна, тухса каланă сăмаха, ыйтăва ăнлантарса пани. К о м м е н т а т о р — ăнлантарса паракан çын; к о м м е н т и р о в а т ь — ăнлантарса памалла тени пулать. „Комментари кирлĕ" тени пĕр-пĕр документа ăнлантарса пама кирлĕ тенине пĕлтерет. „Комментарии излишни" тени ăнлантарса памасăрах паллă тенине пĕлтерет. Ют çĕршывсенчен килекен телеграммăсенче час-часах радиокомментатор текен сăмаха тĕл пулма пулать. Çакă вăл пĕр-пĕр радиостанци тăрăх яланах мĕнле те пулин событисем (пулса иртнисем) çинчен ăнлантарса паракан çын тенине пĕлтерет.

**Коммивояжĕр** — хушнă ĕçе туса çÿрекен çын тенине пĕлтерет. Коммивояжĕр тесе суту-илÿ фирмисен хуларан хулана тавар тĕслĕхĕсене кăтартса çÿресе, хайĕн фирминчен тавар илме сĕнсе çÿрекен çынна калаççĕ. Политикăра çав сăмахпа кулса, тăрăхласа калана чухне усă кураççĕ. Сăмахран, пĕр-пĕр çĕршывăн политикăллă деятелĕ хăйĕн çĕршывне хирĕçле пыракан ĕçе, урах çĕршыв хушнăскере, тăвать пулсан, ăна тăрăхласа коммивояжĕр тесе калаççĕ.

**Коммуникация** — коммуникаци — тĕрĕсрех, коммуникаци линийĕсем. Çак сăмах çыхăну хатĕрĕсене те пĕрлештерсе каланине пĕлтерет: чугун çулсемпе мăн çулсем, шыв çулĕсемпе сывлăш çулĕсем, телеграф, телефон çыхăнăвĕсем, — çаксене пурне те коммуникаци теççĕ. Коммуникаци сăмахпа ытларах вăрçă ĕçĕнче усă кураççĕ, вăл сăмах

фронтпа тыл хушшинчи ҫыхӑнӑва пӗлтерет. Фронтпа тыл хушшинчи ҫыхӑнӑва пӗтерсе лартас тӗлӗшпе тӑвакан операцисене тӑшманӑн коммуникацийӗсене татас, ҫӗмӗрес, пӗтерес тӗлӗшпе тувӑ операцисем теҫҫӗ.

**Коммунистический Интернационал,** Коминтерн, Третий Интернационал — тӗнчери коммунистла партисемпе организацисен пӗтӗм тӗнчери пӗрлешӗвӗ; вӑл 1919 ҫулта организациленнӗ. Тӗнчери революциллӗ движенин историллӗ опычӗ ҫине тайӑнса, Коммунистла Интернационал хӑйӗн ӗҫенче марксистла-ленинла теорипе усӑ курса тӑнӑ. Коммунистла Интернационал пролетариатӑн тӗнчери революциллӗ движенийӗ аталанса пынӑ ҫӗрте, оппортунизма хирӗҫ, фашизмпа реакцие хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Уйрӑм ҫӗршывсенче коммунистла партисемпе вӗсен ертсе пыракан кадрӗсем ӳсние тата политика енчен пиҫсе ҫитнине шута илсе, Коммунистла Интернационала тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, 1943 ҫулхи майӑн 15-мӗшӗнче, Коммунистла Интернационалӑн ӗҫне туса тӑракан комитечӗн президиумӗ йышӑннипе салатса янӑ.

**Коммюнике** — пӗлтерни, официаллӑ пӗлтерӳ. „Коммюнике" сӑмахпа яланах дипломатиллӗ документсемпе дипломатиллӗ калаҫусенче усӑ кураҫҫӗ.

**Компенсация** — компенсаци — пӗр-пӗр ӗҫ тунӑ чухне сиен курнӑшӑн тӳлени.

**Компетенция** — компетенци — пӗр-пӗр ҫын, учреждени е власть органӗ ӗҫе татса пама пултаракан ыйтусем. Мӗнле те пулин ҫын пӗр-пӗр ыйтӑва, ӗҫе тӗплӗн пӗлнине те компетенци теҫҫӗ. Ҫав ҫын ҫинчен вара вӑл ҫавӑн пек ыйтусене, ӗҫе тӗплӗн пӗлекен (компетентлӑ) ҫын теҫҫӗ.

**Компромисс** — хире-хирӗҫле шухӑшра е ӗҫре пӗрпӗрин сӑлтавӗсемпе килӗшсе, пӗр-пӗрин умӗнче чакса тунӑ килӗшӳ.

**Конвенция** — конвенци — килӗшӳ. Конвенци пӗтӗм тӗнчери договорсенчен, протоколсенчен тата ытти пӗтӗм тӗнчери килӗшӳсенчен хӑйӗн формипе уйрӑмрах тӑрать, конвенци тесе иккӗмӗш вырӑнта тӑракан пӗчӗкрех килӗшӗве калаҫҫӗ. Сӑмахран, суту-илӳ тӗлӗшӗпе тунӑ конвенци, почта конвенцийӗ, ҫар-тинӗс конвенцийӗ.

**Конверсия** — конверси — финанс операцийӗ; малтанхи ҫулсенче кӑларнӑ облигацисене ҫӗнӗ облигаципе, кивӗ облигацисенчен уйрӑмах ҫӗнӗ условисемпе кӑларнӑскерпе, улӑштарнине конверси тесе калаҫҫӗ. Конверсин (улӑштарнин) тӗп тӗллевӗ ӗлӗкхи заёмсен условисене улӑштарни пулса тӑрать, малтанхи заёмсем тӑрӑх государство ытларах процент тӳленӗ пулсан, ҫӗнни тӑрӑх сахалтарах процент тӳлеме пулать, ӗлӗкхи заём срокӗ пӗтсе килнӗ пулсан, улӑштарнӑ хыҫҫӑн унӑн пӗтес срокӗ тепӗр вӑхӑта тӑсӑлать.

**Конгломерат** — тӗрлӗрен геологиллӗ элементсенчен пӗрлешсе ларнинчен пулнӑ породӑн татӑкӗ. Политикӑллӑ пурнӑҫра конгломерат тесе час-часах тӗрлӗрен политикӑллӑ тата социаллӑ элементсенчен пӗрлешнӗ, ҫавӑнпа та пӗр май хирӗҫсе пурӑнакан партисене е организацисене калаҫҫӗ.

**Конгресс американский** — Америка конгресӗ — США-ри парламента ҫапла калаҫҫӗ. Америка конгресӗ икӗ палатӑран тӑрать: ҫӳлти палатӑран е сенатран тата аялти палатӑран е представительсен палатинчен. Сенат 96 ҫынран тӑрать, унта США-на кӗрекен 48 штатран кашнинченех икшер ҫын суйласа яраҫҫӗ. Вӗсене 6 ҫуллӑха суйлаҫҫӗ, анчах та суйлавсем кашни 2 ҫулта пулса иртеҫҫӗ, кашни суйлавра сенатӑн виҫҫӗмӗш пайӗнчен пӗр пайне кӑна ҫӗнетеҫҫӗ. Представительсен палатинче членсем сенатринчен ытларах. Представительсен палатине кашни штат халӑх шутне кура депутатсем уйӑрса ярать. Представительсен палатин членӗсене икӗ ҫуллӑха суйлаҫҫӗ. США-ра пӗтӗмӗшлӗ суйлав законӗсем ҫук. Кашни штатӑн хӑйӗн суйлав законӗ пур. США-ра президента

суйласси сената е представительсен палатине суйлассинчен ытларах паллă ĕç пулса тăрать. Президента 4 çуллăха суйлаççĕ. США-ра президент пысăк влаçпа усă курать. Министрсем те (США-ра вĕсене секретарьсем теççĕ) конгресс умĕнче ответ тытмаççĕ. Хăйсен ĕçĕсемшĕн вĕсем президент умĕнче кăна ответлă пулса тăраççĕ.

**Кондиция** — кондици — 1) услови, договор; 2) норма, стандарт, хисеп, договорти условисем тăрăх пулма тивĕçлĕскерсем. Кондиционный — условире, договорта кăтартса панă пек пулмалли.

**Конкордат** — 1) папăпа пĕр-пĕр государство правительстви хушшинче тунă договор, унта çав договор тăвакан çĕршывра католикла чиркӳ мĕнле правасемпе усă курнине татса панă, тепĕр тĕслĕ каласан, государствăпа чиркӳ хушшинчи класлă килĕшĕвĕн формине татса панă. Конкордат пĕтĕм тĕнчери договорсем пекех пулса тăрать; 2) Францин тата ытти буржуаллă государствăсен суту-илӳ правинчи кивçен илнине тӳллеме пултарайман кивçен илекен çынпа ăна кивçен паракан çын хушшинче тунă килĕшӳ ячĕ.

**Консерватизм** — кивви патне туртăнни, кивĕ строя, кивĕ йĕркесене юратни, вĕсене пурнăçласа пырассишĕн тăрăшни. Консерватор — кивĕ, кивве тухнă йĕркесене упраса хăварасшăн тăрăшакан çын. Политикăри консерваторсем — реакци енче тăракансем, сăмахран, Англи консерваторĕсем.

**Консервативный** — консервативлă — кив йĕркепе пурăнма тăрăшакан, çĕнĕ йĕркесене, çĕнĕ шухăшсене, çĕннисене пурне те юратман, йышăнман çын.

**Консерваторы**—1) консерваторсем тесе хăйсен ĕмĕрĕсене ирттернĕ йĕркесене тытса пыракансене, кирек мĕнле çĕнĕ йĕркесене те хирĕç тăракансене калаççĕ; 2) буржуазин консервативлă политикăллă партийĕн членĕ; усал реакционер.

**Консолидация** — 1) çирĕплетни, пĕрлешни, пĕтĕçтерни. Сăмахран, консолидация сил — вăйсене пĕтĕçтерни,

çирĕплетни; 2) государство кĕске вăхăтлăха илнĕ кивçенсене нумай вăхăтлăха тăсни.

**Конспирация** — конспираци — вăрттăн туни, вăрттăнлăх.

**Констатировать** — çирĕплетсе каласа пани.

**Конституция** — конституци — государствăн тĕп законĕ, вăл граждансен прависемпе обязанноçĕсене палăртса парать.

**Консул** — пĕр-пĕр çĕршывăн ют çĕршыври ĕçлĕ сынĕ, дипломатиллĕ представитель. Посол хăйĕн çĕршывĕпе ют çĕршыв хушшинче çыхăну тытса тăрать. Консул хăйĕн çĕршывĕн уйрăм гражданĕсен нушисене йĕркелет, хăйĕн çĕршывне кайма визăсем (ирĕк пани) çырса парать. Ун урлă ют çĕршывра пурăнакан граждансем хăйсен тăван çĕршывĕпе çыхăну тытаççĕ. Консулăн тĕп задачи — суту-илӳ çыхăнăвне аталантарассине пулăшса пырасси пулать. Çавăнпа та консульствăсене шултăра суту-илӳпе промышленность центрĕсенче, портсем пур хуласенче уçаççĕ. Консульствăсенчен пĕри тĕп консульство пулса тăрать, ăна генеральнăй консульство теççĕ, ун пуçĕнче тăракан консула — генеральнăй консул теççĕ. Консулсене те посолсем пекех никам та тĕкĕнме пултараймасть. Вĕсене ют çĕршыв сучĕ суд тума та пултараймасть. Вырăнти влаçсем арестлеме те, консульство çурчĕсенче ухтарма тата унта консул ирĕк памасăр кĕме те пултараймаççĕ.

**Консультация** — консультаци — 1) мĕнле те пулсан ĕçе ăста пĕлекенсем (сăмахран, врачсем, юристсем тата ыт. те) справкăсем тата канашсем панă вырăн; 2) пĕрпĕр ыйту тăрăх ăна ăста пĕлекен çын панă канаш.

**Консультативный пакт** — пĕтĕм тĕнчери договор; çав договор çине алă пуснă державăсем мĕнле те пулсан ĕç тăвас тесен договор хушнă тăрăх пĕрлешсе, мерăсем йышăнас пирки канашланса пăхмалла. Вăл договора, консультациллĕ договор тума килĕшмен государство договора хутшăннă государствăсем çине тапăнма пултар-

нине сиссе, тăваççĕ. Анчах та çав договор пĕрне-пĕри пулăшу парасси çинчен çырнă договор мар. Пĕр-пĕр государство договора хутшăннă государство çине тапăнсан ыттисенчен ăна пулăшасси çинчен сăтсе явма çеç ыйтма пултарать.

**Континентальная политика**—континент е материк тесе йĕри-тавра тинĕссемпе тата океансемпе хупăрласа тăракан типĕ çĕрĕн пысăк пайне калаççĕ. Континентальный—континентри, континента тивĕç (сăмахран, континентри климат тата ыт. те). Континентальная политика тесе утравсем çинчи государствăсем (сăмахран, Англин) кӳршĕри континентсенчи государствăсем тĕлĕшпе тытса пыракан политикăна калаççĕ.

**Контрабанда**—государство чикки урлă тавара вăрттăн каçарни; чикĕ урлă вăрттăн каçарнă тавар.

**Конфиденциальный**—вăрттăнскер, пурне те пĕлтермелле марри. Çак сăмахпа дипломатиллĕ калаçусенче тата дипломатиллĕ хутсем çинче усă кураççĕ.

**Конфискация** — конфискаци — çыннăн пурлăхне (çĕрне, мулне, кил-çуртне) суд хушнипе туртса илни; революциллĕ правительство йышăннипе капиталистсенчен вĕсен предприятийĕсене, помещиксенчен — вĕсен çĕрĕсене туртса илни.

**Концентрация** — концентраци — пĕр çĕре пĕрлешни, пухăнса илни.

**Концентрационный лагерь** — концентрациллĕ лагерь— 1) вăрçăра тыткăна илнĕ çар çыннисене тата çарта тăман граждан çыннисене тыткăна илсе хупса хумалли вырăн; 2) судпа айăпланă е ссылкăна янă çынсене тытса усрамалли, ĕçлеттермелли вырăн.

**Концентрированный** — пĕрлештернĕ; çăратнă; пĕр çĕре пухса пĕр вăйлă чăмăр туса хуни. „Концентрированный удар“ — вăл тĕрлĕ çарсемпе (пехота, артиллери, броньăллă-танклă чаçсем, авиаци тата ыттисем те) пĕрлешсе пĕтĕм вăйпа тăшмана пырса çапнине пĕлтерет. Пирĕн Совет Çарĕ нимĕç çарĕсене çавăн пек

пыра-пыра çапса хамăр çĕршыва фашистсенчен ĕмĕрлĕхе хăтарчĕ.

**Концепция** — концепци — мĕнле те пулин явлени çине пăхни; мĕнле те пулин явление пăхмалли мел, ăнланмалли мел; художникăн, поэтăн, ученăйăн тата ыттисен пĕтĕмĕшле шухăшĕ. Концепцисем тĕрлĕрен пулаççĕ. Гитлерла ирсĕрсен этемлĕхе юратман, вăрă-хурахла концепцийĕ ирĕклĕхе юратакан пĕтĕм тĕнчери халăхсен концепцийĕнчен пачах урăхла.

**Концессия** — концесси — тӳрех каласан, çул уçса пани тенине пĕлтерет. Концесси тесе пĕр-пĕр çĕршыв правительстви уйрăм фирмăна предприяти тума ирĕк панине калаççĕ. Пĕтĕм тĕнчери концессисем, тепĕр тĕслĕ каласан, пĕр-пĕр çĕршыв правительстви ют çĕршыв фирмине предприяти тума, çĕр пуянлăхĕпе усă курма ирĕк пани империализмлă çĕршывсемшĕн паха пулса тăрать. Концессисем империалистсемшĕн çурма-колонисен экономикăллă позицийĕсене хăйсен аллине тытса илмелли мелсенчен пĕри пулса тăраççĕ.

**Координация** — тĕрлĕрен ăнланусене, ĕçсене пĕр пек, пĕр майлăрах туни. Координировать — килĕшӳллĕ тувине, пĕр-пĕр ĕçе ыттисем майлăрах тунине пĕлтерет.

**Коричневая чума** — этемлĕхшĕн чума пекех хăруша пулса тăракан гитлеровецсене пĕтĕм тĕнчипех çапла ят панă. Çав ята нимĕçсен фашистла бандичĕсем хăйсен партийĕ валли суйласа илнĕ тĕс ячĕпе панă. Гитлер хăйĕн бандине организациленĕ хыççăн çав тĕсе тĕп тĕс туса хунă. Штурмовиксен кĕписем хăмăр пулнă, гитлерла организацисем вырнаçнă çуртсене хăмăр тĕспе сăрланă тата ыт. те.

**Корифей** — авалхи грексен чĕлхинчен тӳрех куçарсан, çулпуç, ертсе пыракан тенине пĕлтерет. Хальхи ăнланура корифей тени наука, искусство, литература тата ыт. питех те чаплă деятелĕ, мĕнле те пулин аслă открыти тунă çын.

**Корпорация** — корпораци — союз, пĕрлешӳ. США-ра

корпораци тесе промышленность предприятийĕсен пĕрлешĕвĕсене, трестсене калаççĕ. Сăмахран, США-ри паллă хурçă трестне хурçă корпорацийĕ теççĕ.

**Корпоративное государство** — фашистла диктатурăн государство стройĕ; ун пек строй пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçăччен Италире пулнă. Парламентла демократие сирсе пăрахса, фашизм ун вырăнне сословиллĕ корпорацисем тунă, çав корпорацисем кашниех хуçалăхăн шултра отраçлинче ĕçлекен çынсен ушкăнĕ пулса тăнă. Пĕр отраçлĕре ĕçлекен рабочисем фашистла профсоюза кĕнĕ, çав отраçлĕри предпринимательсем фашистла предпринимательсен союзне пĕрлешнĕ. Вăл союзсен представителĕсем пĕрле пухăнса корпораци туса хунă. Корпорацисене ертсе пыма корпораци министерстви пулнă, ун пуçĕнче Муссолини тăнă. Корпорацисенче рабочисем те предпринимательсемпе пĕр пек правапа усă кураççĕ, тенĕ вĕсем. Фашистла государство рабочисемпе предпринимательсен интересĕсене пĕр пекех сыхлать, çапла вара вĕсем класс кĕрешĕвĕн тымарĕсене пĕтерсе хураççĕ, тенĕ. Паллах, фашизмăн çак корпоративлă витĕрех суя та ултавлă сăмахĕсем Италири пролетариатăн пуçне пăртак пăтратнă та.

**Коррупция** — влаççем, чиновниксем, парламентсен депутачĕсем тата ытти политикăллă деятельсем, пичет ĕçĕнче ĕçлекен çынсем тата ытти те взяткăсем илни, сутăнни.

**Космополит** — хăйне нихăш национальность çынни те мар, тесе шутлакан, пĕтĕм тĕнчене хăйĕн тăван çĕршывĕ вырăнне хуракан çын. Çавăн пек йăхсăр-тăвансăр космополитсем юлашки вăхăтченех театр критикĕсен ретне хĕсĕнсе кĕнĕ. Ун пек тăванлăхсăр космополитсем литература, киноискусство, музыка критикĕсем хушшинче тата наукăн ытти облаçĕсенче пулнă. Çак çынсем тĕнчери чи малти ретре тăракан совет театрĕ, совет драматургийĕ, совет литератури, совет искусстви çине элекленĕ, ăна буржуаллă литературăпа искусствăран кая хунă. Вĕсем вырăс литературипе искусстви тата пĕ-

тĕм совет культури ҫине элек сарма хăтланнă, пирĕн ҫĕршыври тăванлă халăхсен, чи малтан аслă вырăс халăхĕн культурине хурлама хăтланнă. Буржуаллă Хĕвеланăҫ умĕнче тата унăн йĕрĕнчĕк культури умĕнче чура пек упаленсе, ăна мухтаса тăнă.

Космополитизм—„космополит" сăмахран пуҫланса кайнă. „Космополит" сăмах грексен чĕлхинчен куҫарсан „тĕнче гражданинĕ" тенине пĕлтерет. Космополитизм вăл—„тĕнче гражданлăхĕ" ҫинчен вĕрентни, кирек мĕнле наци ҫынни пулма та килĕшни, „пĕтĕм тĕнче", „этемлĕх" культури гăвас тенипе витĕнсе, нациллĕ традицисемпе халăхсен культурин нациллĕ уйрăмлăхĕсене пĕтерсе хума хăтланнине пĕлтерет. Космополитизм вăл—халăхсен аталанăвĕнче истори енĕпе пулса тăнă уйрăмлăхсене йышăнманни, нациллĕ интерессене, нациллĕ никама пăхăнманлăха, халăхсен государство суверенитетне йышăнманни пулать. Космополитизм мĕн хăй пуҫланнă вăхăтран тытăнса паянхи кунсене ҫитичченех эксплоататорла классен захватчикла политикине тӳрре кăлармалли, ăна витсе тăмалли идеологиллĕ хĕҫ-пăшал пулнă, пулать те. Космополитизм хăйĕн аталанăвĕнчи ҫӳлĕ пусăма капитализм вăхăтĕнче ҫитнĕ, капитализм вăхăтĕнче космополитизм буржуазин ют территорисене, ҫĕнĕ колонисемпе рыноксене туртса илмелли политикăна хӳтĕлекен идеологиллĕ меслет пулса тăрать. Космополитизм вăл—буржуаллă национализмăн тӳнтер енĕ. Национализм космополитизмпа таччăн ҫыхăнса тăни уйрăмах империализм саманинче—капитализмăн чи ҫӳлти тата юлашки сыпăкĕнче—яр-уҫҫăн палăрчĕ. Империалистла буржуази хăйĕн агрессиллĕ тата шовинистла политикине пурнăҫлана чухне, конкретлă лару-тăру мĕнле килсе тухнине кура, космополитла идейăсемпе витĕнсе те, нимĕнле витĕнмесĕр те хăйĕн националистла сăк-сăпатне палăртать. Кучухнехи буржуазишĕн космополитизм вăл империалистла ҫаратусемпе вăрă-хурахла ĕҫсене пытарса тăмалли пĕркенчĕк, ытти халăхсене чуралантарма, революциллĕ

юхăма путарса хума, çĕнĕрен тĕнче вăрçи чĕртсе яма, ку е вăл империалистла çĕршыв тĕнчере пĕр пĕччен хуçа пулса тăма хăтланнине витсе тăмалли пĕркенчĕк пулать. Тĕнчипе пуç пулса тăма хăтланни вăл — империалистла политикăн тĕллевĕ пулать, урăхла каласан, империализм вăрçи пулать. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи хыççăн космополитизм — империалистла реакцин идеологиллĕ хупăлчи, Уолл-стритпа унăн агентурин хĕç-пăшалĕ пулса тăчĕ. Америка империалисчĕсем кун йĕркине пĕтĕм тĕнчипе пуç пулса тăрас ыйтăва кăларса тăратнă хыçăн космополитизма çӳле çĕклерĕç, унпа усă курса вĕсем ют çĕршывсене тытса илмелли плансем хатĕрлеççĕ, социализмпа демократин пĕтĕм тĕнчипе ӳссе пыракан вăйĕсене хирĕç, Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç кĕрешеççĕ. Кучухнехи условисенче космополитизм Америка пĕтĕм тĕнчипе пуç пулса тăмалли идеологи, халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне путарса лартмалли идеологи, Европăри çĕршывсене, тата вĕсене çеç те мар, колонизацилемелли идеологи пулса тăрать.

Большевиксен партийĕ хăй мĕн пуçланнăранпах буржуаллă национализма хирĕç, нациллĕ нигилизма хирĕç пĕр вĕçĕмсĕр кĕрешнĕ. Ленинпа Сталин пире: интернационаллă культура — вăл нацисен культурисĕр пулмасть, тесе вĕрентеççĕ. Ленинпа Сталин кăтартса панисене асра тытса, большевиксен партийĕ, совет халăхĕ ют çĕршывсен культури умĕнче пуç таяссине хирĕç, буржуаллă национализмпа космополитизма хирĕç питĕ вăйлă кĕрешеççĕ.

Америкăпа Англи империалисчĕсен агенчĕсем, çĕрсе пыракан буржуаллă культура умĕнче пуç тайса, космополитизмпа усă курса, аслă вырăс халăхĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине пĕтересшĕн, Совет Союзĕнче социализм тунă çитĕнӳсене хисепрен кăларасшăн, совет патриотизмне тата халăхсен туслăхне вăйсăрлатасшăн, совет государствин хăватне тĕреклетме парасшăн мар,

хамăр çĕршывра коммунизм тума пулнине ĕненмелле мар тăвасшăн. Анчах та ратсăр-йăхсăр космополитсене пирĕн çĕршывра хăюллăн та татăклăн тăрă шыв çине кăлараççĕ, вĕсене намăс юпи çумне пăталаса лартаççĕ.

**Кредит** — кĕтевле (укçа, тавар) пани; кредитор — кивçен паракан.

**Крейсер** — çар карапĕ, вăл артиллерипе ытларах хĕç-пăшалланнă: çӳрессе хытă çӳрет, разведкăра, дозорта пулать, транспортсене хуралланать.

**Кризис** — 1) чирĕн чи хăрушă вăхăчĕ; 2) суту-илӳ таврашĕнче тавар çуккипе суту-илӳ чарăнни; 3) промышленноçра тавар ытлашши нумай пирки каймасăр фабрикăсемпе заводсем ĕçе чакарни.

**Кризис кабинета** — кабинет кризисĕ — буржуаллă государствăсенче министрсен кабинечĕ тесе министрсен советĕнчи пĕчĕк коллегине, е час-часах правительство тесе калас вырăнне „кабинет" теççĕ. Кабинет кризисĕ е, тепĕр тĕслĕ каласан, правительство кризисĕ вăл кабинетра уйрăм министрсем хушшинче хирĕçӳ тухнипе е кабинетпа парламент хушшинче хирĕçӳ тухнипе пулать. Яланах вара кабинетпа парламент хушшинчи хирĕçӳ кабинета отставкăна тухасси патне илсе çитерет. Çавăн хыççăн вара государство пуçлăхĕ (монарх, президент) премьера е министрсен совечĕн председательне çĕнĕ çынна лартать. Кивĕ правительство отставкăна кайса çĕнĕ правительство çирĕплетиччен иртекен вăхăта кабинет кризисĕ е правительство кризисĕ теççĕ.

**Критерий** — критери — чăнлăхăн, тĕреслĕхĕн виçине пĕлтерекен сăмах. Марксизм-ленинизм хăйĕн критерийĕ тесе обществăллă практикăна шутлать.

**Крымская конференция** — Крымри конференци — 1945 çулхи февраль уйăхĕнче Союзлă виçĕ держава руководителĕсен Крымра пулса иртнĕ конференцийĕ. Крымри конференци пĕтĕмĕшле тăшмана пуçĕпех çапса аркатас тĕлĕшпе вăрçă планĕсене палăртса хунă. Крымри

конференци Германие çӗнӗрен татах та хӑвӑртрах пырса çапассин срокӗсене, çавӑн пек тата пырса çапмалли вӑйӗсен пысӑкӑшне тата çав ӗçӗн йӗркисене тӗплӗн палӑртса хунӑ кӑна мар, ирӗке юратакан халӑхсем çине Германи милитаризмӗ çӗнӗрен вӑрӑ-хурахла пырса тапӑнмалла мар условисем туса хума палӑртнӑ. Крымри конференцире Союзлӑ державӑсем „Ирӗке кӑларнӑ Европа çинчен калакан деклараци“ йышӑннӑ. Çав декларацире ирӗке кӑларнӑ Европӑри политикӑпа экономика ыйтӑвӗсене демократиллӗ принципсем тӑрӑх татса парас ӗçе виçӗ державӑн политикине пӗр-пӗринпе килӗштерсе пӗтӗçтерессине тата вӗсем пӗрле ӗçлессине палӑртса хунӑ. Виçӗ Союзлӑ державӑн конференцийӗ тата Польша çинчен тӑракан ыйтӑва та, Югослави çинчен тӑракан ыйтӑва та сӳтсе явнӑ. Виçӗ Союзлӑ держава татах та вӑйлӑ та ирӗклӗ, никама пӑхӑнман тата демократиллӗ Польша туса хурас тӗлӗшпе виçӗ держава пӗр кӑмӑллӑ пулнине тепӗр хут çирӗплетсе панӑ.

Анчах та пӗтӗм тӗнчери иккӗмӗш вӑрçӑ пӗтнӗ хыççӑн США-па Англи правительствисем çак килӗшӳсене пӑхӑнма пӑраха пуçларӗç, вӗсене хирӗç кӗрешме тытӑнчӗç. Совет Союзӗ кӑна çав килӗшӳсене пурнӑçа кӗртессишӗн çине тӑрса кӗрешет.

Кулуары — кулуар тени коридор тени пулать. Парламент таврашӗнчи ӗçсем çинчен калаçнӑ чухне кулуар тесе парламент вырнаçнӑ çуртӑн коридорне кӑна мар, депутатсем тата ытти политикӑллӑ деятельсем, журналистсем тата финанс капиталӗн представителӗсем пухӑнакан çуртсене пурне те (тепӗр чухне парламент çуртӗнче кӑна мар, вӗсем урӑх çӗрте те: пӗр-пӗр кафэре, пӗр-пӗр паллӑрах политикӑллӑ деятелӗн хваттерӗнче пухӑннисене те) кулуарсем теççӗ. Унта вӗсем пухӑнса хӑйсен шухӑшӗсене пӗр-пӗрне каласа параççӗ, парламентра тухса калас сӑмаха хатӗрлесе хураççӗ, тӗрлӗрен политикӑллӑ комбинаци çинчен калаçса татӑлаççӗ. Паллах, кулуарсенче, пӗр-пӗрне курса калаçнӑ чухне, вӗсем иккӗ-

ленсе тăмасăр, хăйсем мĕн шухăшланине пытармасăр каласа парассĕ, анчах парламентра тухса каланă чухне, вара вĕсем хăйсен шухăшĕсене пĕтĕмĕшпех каласа памассĕ. Çавăнпа та буржуаллă хаçатсем кулуарта мĕн калаçнине пĕлесшĕн пит хытă çунассĕ. Çавăн пек информацин тĕп содержанийĕ — тĕрĕслемен сăмах-юмахсем пуласçĕ, тепĕр чухне йĕкĕлтекен сăмахсем те пулса тăрассĕ, хăш чухне чăн-чăн питĕ кирлĕ информаци те пуласçĕ.

**Культ** — турăсене кĕлтумалли йĕркесем, формăсем. Ваттисен культчĕ — тахçан вилнĕ ватă, мĕнле те пулин чапа тухнă асаттесене пуççапса пурăнни.

**Культура** — 1) анлă пĕлтерĕшпе каласан — этем обществи тунă мĕнпур япаласем тата çынсем хăйсен физически ĕçĕпе, ăс-тăн ĕçĕпе пурнăçра пур пулса тăракан япаласем пурте; материальнăй культура — кашни историллĕ тапхăрти обществăн производство средствисемпе ытти материальнăй хаклалăхсем пурте пĕрле; духовнăй культура — кашни историллĕ тапхăрта общество наукăра, искусствăра тунă, государствăллă тата обществăлла пурнăç тĕлĕшĕнче, йăла тĕлĕшĕнче тунă çитĕнӳсем пурте пĕрле; класлă обществăра культура класлă характерлă пулса тăрать (чуралăх культури, феодаллă к., буржуаллă к.); пролетариллĕ к. — ăшчик тĕлĕшĕнчен социализмлă, форма тĕлĕшĕнчен нациллĕ пулса тăрать, вăл пролетариллĕ революци çĕнтерне хыççăн çирĕпленет тата социализмлă строительство пынă майпа аталанса пырать; унăн идейăлла-теориллĕ никĕсĕ марксизм-ленинизм пулса тăрать; нациллĕ культура — кашни халăхăн историллĕ традицисем, йăлисем, чĕлхи, литературн тата искусстви; 2) пĕр-пĕр отраçлĕн пĕлĕвне е ĕçлĕхне (ĕç культури, сăмах культури, физкультура тата ытгисем те) вĕренсе пĕлсе илес çĕрте тунă ӳсĕмĕн шайлăхĕ; 3) ял хуçалăхне ĕрчетни, ӳсентăрансене лартса, пăхса туса илни; акса ĕрчетсе пĕр-пĕр вырăншăн яланлăх тума тăрăшакан ӳсентăран; 4) тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе лабораторисенче пĕр-пĕр

бактерисене ĕрчетни; çапла майпа туса илнĕ бактерисен ушкăнĕ.

**Культуртрегер** — „культурăна илсе çӳрекенни“ тенине пĕлтерет, çак терминпа империалист-колонистсем çинчен, колонири халăхсем хушшинче культура саратпăр текен лозунгпа витĕнсе колонири халăхсене пусмăрласа пурăнакансксрсем çинчен калаçнă чухне тĕртсе, кулса калаççĕ.

**Курия** — 1) авалхи Римри патрицисем пайланнă ушкăнсен ячĕсем; 2) авалхи Римри сенат пухăнакан çурт; 3) вăтам ĕмерте — вассалсемпе сановниксенчен пулса тăракан король çумĕнчи совет; 4) папă влаçăн тĕп учрежденийĕсене пурне пĕрле илсе калани; 5) хăш-пĕр буржуаллă çĕршывсенчи суйлав системисенче, сăмахран, патша Российинче, суйлавçăсене разрядсем тăрăх (сослови тăрăх, пурлăх цензĕ тăрăх тата ытти те) пайлани.

**Курс** — 1) пĕр-пĕр государствăн хаклă хучĕсен е вексельсен хакĕ; хаклă хутсен (акцисен) биржăри хакĕ; 2) пĕр-пĕр ăслăлăхăн шкулта вĕрентекен пайĕ, мĕнле те пулин ăслăлăха е унăн пайне тĕпчесе çырнă кĕнеке; 3) çул-йĕр; курс корабля тени — корабль тивĕçлĕ çулпа пырать тенине пĕлтерет.

**Курьер** — ĕçлĕ хутсене салатса çӳрекен çын.

## Л.

**Лабиринт** — авалхи Египетпа Грецире питĕ нумай пӳлĕмлĕ, аташса каймалла тунă пысăк çурт. Кун пек çуртсене час-часах çĕр айĕнче алтса тунă. Тĕпне-йĕрне пĕлсе пĕтерме май çук вырăн, çурт, ĕç, вăтратса пĕтернĕ япаласем, шухăшсем.

**Лагерь** — 1) çар пухăнса тăракан вырăн, позици; 2) пионерсен лагерĕ; 3) политикăра пĕр-пĕр партие хирĕç тăракан партисем.

**Лавировать** — 1) кимĕпе ăшăх çĕртен е чулсем хушшинче кукăр-макăр çулсемпе çиле хирĕç ишсе пыни;

2) пурнӑҫра чӑрмавсенчен чеелӗхпе иртсе кукӑр-макӑр ҫулпа пыр тени пулать.

**Лаконизм** — шухӑшсене питӗ кӗскен калани; **лаконический** — кӗскен калани.

**Ламаркизм** — органикӑлла ҫутҫанталӑк майӗпен улшӑнса пыни ҫинчен вӗрентни; ҫав вӗрентӳ Франци ученӑйӗ Ламарк (1744 — 1829) шухӑшӗсем ҫинче никӗсленсе тӑрать.

**Лапидарное постановление** — калама ҫук кӗскен тата кӗске пуплевсемпе ҫырнӑ постановлени. Ҫавӑн пек кӗскен ӗлӗк тупӑк ҫине хуракан чулсем ҫине ҫырнӑ.

**Латинская Америка** или латино-американские страны — Кӑнтӑртипе тӗп Америкӑри ҫӗршывсене ҫапла ятпа калаҫҫӗ. Вӗсенчен нумайӑшӗ ҫиелтен пӑхсан никама та пӑхӑнман пек (никама пӑхӑнса тӑман республикӑсем пек), анчах вӗсем аслӑ государство куҫӗсенчен пӑхса тӑраҫҫӗ. Кӑнтӑртипе тӗп Америкӑри пысӑках мар территоринче Европӑри державӑсен тата США-ан колонийӗсем выртаҫҫӗ. Тӗп Америкӑра ҫакӑн пек республикӑсем пур: Мексика, Гватемала, Сан-Сальвадор, Гондурас, Никарагуа, Коста-Рика, Панама, Куба (Куба — утравӗ ҫинче), Гаити, Сан-Доминго (вӗсем иккӗшӗ те Гаити утравӗ ҫинче) тата ҫак колонисем: Британи Гондурасӗ, Ямайка утравӗ, Багам утравӗсем (кӳ колонисем пурте Англин), Порто-Рико утравӗ (США-ан) тата Кӗҫӗн Антиль утравӗсем (пӗр пайӗ Англин, тепри — Францин). Кӑнтӑр Америкӑра ҫакӑн пек республикӑсем пур: Колумби, Венецуэла, Бразили, Эквадор, Перу, Боливи, Парагвай, Уругвай, Аргентина, Чили тата колонисем: Франципе Голланди колонийӗсем тата Британи Гвиани, Кюрасо утравӗ (Голланди колонийӗ) тата Тринидад утравӗ (Англи колонийӗ).

**Латифундия** — шултра ҫӗр тытса тӑракан хуҫалӑх, поместье.

**Лауреат** — авалхи Римра поэтсев, юрӑҫӑсен, музыкантсен ӑмӑртӑвӗнче чи аслӑ та хаклӑ парне—лавр йывӑҫҫисенчен тунӑ пуҫ кӑшӑлӗ (венок) пулнӑ. Лавр кӑшӑлне

илекен ҫынна „лауреатус“ — лаврпа чыс тунӑ ҫын тесе ӗҫлекен ҫынна „лауреатус“ — лаврпа чыс тунӑ ҫын тесе чӗннӗ. Халӗ лауреат тесе пӗтӗм тӗнчере е ҫӗршыври конкурсра е ӑмӑртура аслӑ награда е преми илнӗ музыканта, художнике, поэта, писателе е урӑх искусствӑн представительне тата ученӑя калаҫҫӗ.

**Легальный** — законпа чарман; уҫҫӑн, законлӑ.

**Легенда** — ӗненмелле мар, тӗрӗсси-суйине пӗлмелле мар калав; авалхи ӗҫсем ҫинчен халӑх хушшинче ҫӳрекен тӗлӗнмелле юмах-сӑмах.

**Легендарный** —халапри пек тӗлӗнмелле; пулман-илтмен.

**Ленд-лиз** — кивҫен, тара пани тенине пӗлтерет; хӗҫпӑшал, тупӑ пӑшал тавращсене тата чӗртаварсене, продовольствие тата Америкӑра тунӑ ытти производство продукчӗсене союзлӑ государствӑсене кивҫен парасси ҫинчен йышӑннӑ закон, ӑна США конгресӗ пӗтӗм тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче йышӑннӑ, президент Рузвельт 1941 ҫулта алӑ пусса кӑларнӑ.

**Лейбористы** — лейбористсем — Англири реформистла соглашателле парти. Лейбористсен партин членӗсен ытларахӑшӗ лейбористсен партин членне пӗтӗм коллективӗпе кӗнӗ профсоюз членӗсем тата кооперативлӑ организацисен членӗсем пулса тӑраҫҫӗ. 1945 ҫултан пуҫласа лейбористсем Англи правительстви пуҫӗнче тӑраҫҫӗ.

**Либерализм** — буржуаллӑ революцисем вӑхӑтӗнчи промышленнӑй буржуазин экономикӑллӑ тата политикӑллӑ шухӑшӗсен системи; буржуази политикӗнче — пӗчӗк реформӑсемшӗн, ирӗклӗ конкуренцишӗн тӑрӑшакан сулӑнчӑк; принципсӑрлӑх, примиренчество, ҫурма шухӑшлӑх.

**Либерал** — либерал — либераллӑ парти членӗ; тӑшманпа килӗшесшӗн тӑракан, принципсӑр ҫын, ҫитӗнӳсемпе мӑнкӑмӑлланакан, ҫирӗп мар, шухӑшлӑ ҫын.

**Лига наций** — Нацисен лиги—тӗнчери пӗррремӗш вӑрҫӑ (1914—1918 ҫҫ.) пӗтнӗ хыҫҫӑн мирлӗ пурнӑҫа вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗнчен сыхласа тӑма пултаракан пӗтӗм тӗнчери организаци туса пӑхма хӑтланнӑ. Ҫавӑн пек организаци вара Нацисен лиги пулса тӑнӑ. Вӑл Версальти договорпа пӗрле йӗрке-

ленсе ҫав договорӑн пӗр пайӗ пек пулса тӑнӑ. Нацисен лиги 20 ҫул пурӑннӑ. Версальти договорпа пӗрле ҫуралса, унпа пӗрле тенӗ пекех пӗтсе ларнӑ. Нацисен лигине формально салатса яман пулин те, вӑл Европӑра пӗтӗм тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ пуҫлансан пӗтсе ларнӑ.

Лидер (акгличансен сӑмахӗ)—„ҫулпуҫ“ тенине пӗлтерет. Лидер тесе партисен, профсоюзсен тата тӗрлӗрен политикӑллӑ ушкӑнсен тӗп руководителӗсене калаҫҫӗ. Лидер тесе тата вӑйлӑн хӗҫпӑшалланнӑ шултӑра миноносецсене те калаҫҫӗ. Лидер тесе ун пек карапсене вӗсем ыттисем умӗнче, малта пынӑран калаҫҫӗ.

Лимит — мӗнле те пулин япалан чи пысӑк норми; вӑл виҫерен иртсе кайма чарни, пӳлни. Лимит капитальных работ — тӗпрен тумалли ӗҫсен лимичӗ. Тӗпрен, ҫӗнӗрен тумалли ӗҫсен лимичӗ тесе предприяти тӗпрен, ҫӗнӗрен тумалли ӗҫе тума (ҫӗнӗ строительство, предприятие аслӑлатма, ҫӗнӗ оборудовани илме тата ыт. те) мӗн чухлӗ укҫа хума пултарнине калаҫҫӗ.

Лимитрофы — юнашар, пускил, кӳршӗ государствӑсем.

Линия Керзона — Керзон линийӗ. Польшӑн хӗвелтухӑҫри чиккисем пирки тӑракан ыйтусене 1919 ҫулта Парижра пухӑннӑ мирлӗ конференцире сӳтсе явнӑ. Ҫав конференцирех Версаль договорне те йышӑннӑ, Польша ыйтӑвӗсем пирки ятарласа комисси туса хунӑ. Польшӑпа Россия чиккисем ҫинчен тӑракан ыйтӑва хатӗрленӗ чухне ҫав комисси союзлӑ державӑсен — Англи, Франци, США, Итали, Япони делегачӗсем малтанах йышӑннӑ решенисене тӗпе хурса ӗҫлесе пынӑ. Союзлӑ ҫӗршывсен делегацийӗ Польша территорине чӑн-чӑн поляксен этнографиллӗ облаҫӗсене кӑна кӗртмелле тесе каласа хӑварнӑ. Ҫав решение тӗпе хурса Парижри мирлӗ конференцин территори комиссийӗ Польшӑн хӗвелтухӑҫ чиккине палӑртса хӑварнӑ, ӑна союзлӑ державӑсем Версальти мирлӗ договора ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн йышӑннӑ. Спа хулинче пулса иртнӗ союзлӑ державӑсен конференцийӗ те ҫаплах йышӑнать. Ҫав решение тӗпе

хурса, Британин ют ҫӗршывсен министрӗ Керзон Совет Союзӗпе Польша хушшинчи чикӗ пирки нота ҫырать, ӑна вӑл Совет правительствине 1920 ҫулхи июлӗн 12-мӗшӗнче ярса парать. Анчах Польша правительстви пуҫӗнче тӑракансем ҫав решенисемпе килӗшмен, вӗсем Хӗвеланӑҫ Украинӑпа Хӗвеланӑҫ Белоруссн территорине тытса илме шутланӑ. Вӗсем, Совет республики йывӑр условисене кӗрсе ӳкнипе усӑ курса, Совет Российӗ ҫине вӑрҫӑпа пырса кӗреҫҫӗ. Анчах та Совет Российӗ вӗсене вӑйлӑн пырса ҫапнӑ хыҫҫӑн, тата хӑйсем пуҫарса янӑ вӑрҫӑ вӗсемшӗн усӑллӑ пулас ҫуккине туйса, союзлӑ правительствӑсенчен Совет правительствипе калаҫса татӑлма пулӑшу ыйта пуҫлаҫҫӗ. Ҫавӑн чухне те Англин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Керзон Польшӑпа Совет Российӗн чиккисем ҫинчен ҫырнӑ нотӑна Совет правительствине ярса парать. Ҫав нотӑра Польшӑпа Совет Союзӗн чиккисене палӑртса хунӑ пулнӑ, ҫавӑнтан вара ӑна „линия Керзона“ тесе ят панӑ. Нотӑра ҫапла каланӑ: „вӑл лини ҫапларах пулмалла: Гродно—Яловка — Немиров — Брест-Литовск — Дорогуск — Устилуг, Грубешовран хӗвелтухӑҫнерех, Крылов урлӑ, унтан Рава-Русская хулинчен хӗвеланӑҫнерех, Перемышльрен хӗвелтухӑҫнерех Карпата ҫити“. Гродно хулинчен ҫурҫӗререх Польшӑпа Литва чиккине кӑтартса панӑ пулнӑ. Анчах та Польша правительстви Керзон кӑтартса панӑ тӑрӑх чикӗ тума килӗшмен, Совет Российине хирӗҫ вӑрҫма чарӑнман. Совет ҫӗршывӗн йывӑрлӑхӗсемпе усӑ курса, вӑл 1921-мӗш ҫулта пире урӑх чикӗ йышӑнтарнӑ, Совет Украинипе Совет Белоруссин хӗвеланӑҫ облаҫӗсене тытса илсе хӑйӗн территори шутне кӗртнӗ, унпа пирӗн килӗшмелле пулнӑ. Ҫав тӗрӗс мар ӗҫе эпир 1939 ҫулта тӳрлетрӗмӗр. Совет Украинипе Совет Белоруссин хӗвеланӑҫ облаҫӗсем унта пурӑнакан украинецсемпе белоруссем ыйтнипе каллех Совет Союзӗн территорине кӗчӗҫ.

**Линия Мажино** — Мажино линийӗ — Франципе Германи хушшинчи ҫирӗплетнӗ линие ҫапла ят панӑ, ун

чухне Францин çар министрĕ пулнă Мажино генерал ячĕпе каласçĕ. Çав лини çурçĕрте Бельги чиккине, кăнтăрта Швейцари чиккине пырса перĕнет. Вăл линин тăршшĕ 300 километр. Кашни пĕр-ик километрта форт тунă, çав фортсенче темĕн чухлĕ тупăсем, пулемĕтсем лартса тухнă, çĕр айне темĕн тĕрлĕ çуртсем чавса хатĕрленĕ. Фортсене çĕр айĕн пыракан шăтăксем çыхăнтарасçĕ. Фортсем хушшинчи вырăна фортсенчи тупăсенчен, пулемĕтсенчен урлă-пирлĕ персе тăнипе сыхламалла тунă. Çавăн пек çирĕплетнĕ линисене темиçе рет туса тухнă, вĕсене çапла çĕр айĕн пыракан шăтăксемпе çыхăнтарнă. Нимĕçсем Мажино лини патне пырса çапăçса вăхăта ирттермен, вĕсем çав линин çурçĕр вĕçĕнчен Бельги территорипе кайса Франци территорине çăмăллăнах кĕрсе кайнă.

**Линкор** (линейный корабль) — линкор чи пысăк çар карапĕ; вăл тупăсемпе ытларах хĕçпăшалланнă, çине броньăпа витсе çирĕплетнĕ; линкорсене тăшмана тинĕсри çапăçусенче вирлĕн çапса çĕмĕрес шутпа тата тăшманăн çыран хĕрринчи укрепленийĕсене персе аркатас шутпа тунă.

**Линчевание** — Линч сучĕ. Линч — США-ри Виргини штатĕнче судья пулса ĕçленĕ çын. Вăл çынсене судсăр-мĕнсĕрех, нимĕнле закона пăхăнмасăрах, тыта-тыта илнĕ. Çаванпа та США-ра линчевание е Линч сучĕ тесе çынсене судсăр-мĕнсĕрех вĕлернине каласçĕ. США-ра ялан тенĕ пекех негрсене ним айăпсăрах тискерле асаплантарса вĕлерессĕ. Хальхи вăхăтра США-ра Линч сучĕ калама çук хытă ашкăнса кайнă, ним айăпсăр çынсене, империализмпа килĕшмен çынсене вĕлере-вĕлере пĕтерессĕ, тĕрмесене хупа-хупа хурассĕ.

**Логика** — шухăш законĕсем çинчен, шухăшсем мĕнле пулса йĕркеленсе пыни çинчен вĕрентекен наука.

**Локализация** — локализаци — „локаль" сăмахран пулса кайнă, вăл „вырăн" тенине пĕлтерет. Локализаци тесе,

сăмахран, пĕр-пĕр çурта вут тивсе кайсан пушар ытти çуртсем çине сиксе ӳкесрен сыхланса тăвакан ĕçсене калаççĕ. Ун чухне вара пушара сикме паман, локализациленĕ теççĕ, е чире те сикме чарма, локализацилеме пулать. Локализаци—пĕр вырăнта пуçланнăскере тепĕр вырăна сикме, куçма паманни, сиенсĕрлетни.

**Локарнский договор**—Локарнăри договор—Локарно хулинче (Швейцари) 1925 çулта тунă пĕтĕм тĕнчери договор; вăл договора çав çулах Лондон хулинче алă пусса çирĕплетнĕ. Германи Локарнăри договор тăрăх Германипе Франци хушшинчи чикĕсене тата Германипе Бельги хушшинчи чикĕсене, Версальти договор тăрăх тунăскерсене, никам та тĕкĕнме пултараймасть тенипе килĕшнĕ (тепĕр тĕслĕ каласан, вăл 1914—1918 çулсенчи вăрçăра çухатса Франци çумне куçнă Эльзаспа Лотаринги облаçĕсене тата Бельги çумне куçнă Эйтнăпа Мальмеди облаçĕсене калле тавăрасси çинчен манма пулнă). Франципе Бельги те Германи çине тапăнмалла мар обязательствăсем йышăннă. Яланхи пекех Германи çак договора чи малтан пăсрĕ. Вăл чи малтан Бельги çĕрĕ çине, унтан Франци çĕрĕ çине кĕрсе кайрĕ. Союзлă державăсем çеç 1944 çулта Франципе Бельги территорине нимĕçсенчен тасатрĕç.

**Лондонское сити** (сити—англичансен сăмахĕ, хула тенине пĕлтерет). Сити тесе Лондон хулин шултăра банксем тата биржăсем вырнаçса тухнă пайне калаççĕ. Анчах „Сити" текен сăмах хулан пĕр пайĕ тени кăна мар, ытларах, анлăрах ăнланулла сăмах пулса тăрать, вăл Англири шултăра банкирсен, биржа акулисен тата вĕсемпе çыхăннă биржа ĕçĕсене çавăрттаракансен ушкăнне пĕлтерет. Çав ушкăн Англи правительствин шалтипе тулти политикине мĕнле тытса пымаллине катартса пырать. Тĕрĕсрех каласан, Англи правительствин политики мĕнле пулассине çав ушкăн кăтартса парать те ĕнтĕ.

**Лорд**—Англири дворянсен титулĕ (ячĕ). Лорд ятне король парать, çав ят вара ăруран ăрăва куçса пырать.

Лорд ятне епископа та парать. Лорд ятне çавăн пекех тата ĕçре те илме пулать: хăш-пĕр хуласен пуçлăхĕсене тата ытти сановниксене те лорд ятне пама пултараççĕ.

**Лорд-мэр**—Лондон хули пуçлăхĕн ячĕ (титулĕ), çавăн пекех ытти пысăкрах хула пуçлăхĕсене те лорд титулне пама пултараççĕ.

**Лояльный**—йышăннă обязательствăсене пурнăçласа пыракан; тытăнса тăракан влаçа пăхăнса тăракан, çав влаçа майлă тăракан çын.

## М.

**Магнаты**—магнатсем—латинсен „магнус" сăмахĕнчен пулса кайнă, вăл аслă тенине пĕлтерет. Феодализм вăхăтĕнче магнат тесе вăйлă та пуян, нумай çĕр тытакан тата политика тĕлĕшĕнчен пысăк влиянипе усă куракан феодалсене каланă. Капитализмлă çĕршывсенче феодализм вăхăтĕнчен тăрса юлнă нумай çĕрлĕ хуçалăхсем (латифундисем) юлашки вăхăтченех пулнă, вĕсен хуçисене (уйрăмах Венгрире) магнат тесе чĕннĕ. Çав сăмахпа урăхла ăнланăва та пĕлтереççĕ, сăмахран, капитализмлă шултăра трестсен (хурçа тресчĕ, нефть тресчĕ тата ыт. те) пуçĕнче тăракансене, шултăра капиталистсене те магнат теççĕ.

**Максимальный**—чи пысăкки, пуринчен ытли.

**Малая антанта**—Кĕçĕн антанта—Югослави, Чехословаки тата Румыни хушшинче пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçăччен çарпа политика тĕлĕшĕнчен тунă союз. Çав Кĕçĕн антантăна тума Франци хавхалантарса пынă. Вăл ăна Германи империализмĕ ют çĕршывсене тытса илме пикеннине хирĕç тăма пултаракан союз Балкан утравĕ çинче пултăр тесе тунă, анчах çав антанта ССР Союзне хирĕç кĕрешмелли база вырăнне те пулса тăмалла пулнă.

**Мальтузианство**—реакциллĕ буржуаллă теори. Çак теори ĕç халăх масси капитализм условийĕсенче чухăн пурăнни—вăл халăх йышĕ ытлашши ӳссе пыниччен (закон

абсолютного перенаселения) килет, тесе ӗнентерме тăрăшать. Çав теорие шухăшласа кăларнă Мальтус (1766—1834) ӗç халăх масси чухăн пурăнни социаллă сăлтавсенчен килмест, ăна пӗтӗмпех хăйне хăй пулса пыракан законсемпе ăнлантарса памалла, тесе вӗрентнӗ. Мальтус сăмахӗпе çынна пурăнма кирлӗ япаласем халăх шучӗ ӳснинчен майпентерех ӳссе пыраççӗ, çавăнпа та вăл ӗç çыннисене авланасран та ача çуратасран та тытăнса тăма хушать. Мальтусăн çав „закон народонаселения" текен теорине пурнăç хăех тăрă шыв çине кăларса пырать. Капитализмлă çӗршывсенче вăхăтран вăхăта пулса пыракан экономикăллă кризиссем çав йăнăш теорие пӗтӗмпех ӳпӗнтерсе хураççӗ. Класс кӗрешӗвӗ çивӗчленсе пыма пуçласан буржуаллă ученăйсем мальтузианствăна чӗртсе яма тăрăшаççӗ. Çав реакциллӗ буржуаллă теорипе— мальтузианствăпа империалистсем ют çӗршывсене тытса илес тата вăрçă пуçарса ярас политикăна пурнăçласа пырас çӗрте усă кураççӗ.

**Мандат**—мӗнле те пулин ӗçе тума ирӗк паракан хут.

**Мандатные страны**—мандатлă çӗршывсем—пӗтӗм тӗнчери иккӗмӗш вăрçăччен Нацисен лиги туса хунă мандат режимӗпе пурăннă территорисем. 1914—1918 çç. империализмлă вăрçă пӗтнӗ хыççăн Англипе Франци Германипе Турцин колонийӗсемпе çӗрӗсене ахаллӗнех валеçме палăртса хунă, анчах та США-па Итали хирӗç пулнипе çав колонисене валеçме май пулман, вара çав çӗрсене тытса тăма Нацисен лиги „мандатсем" панă. Вăл „мандатсене" вăрçăра çӗнтернӗ государствăсем илнӗ. Çапла вара çак çӗршывсем мандатлă çӗршывсем пулса тăраççӗ. Вӗсем çаксем: Турцин ӗлӗкхи владенийӗ—Сири (ăна Франциe панă); Палестина, Ирак (кусене Англие панă); Германин Африкăри ӗлӗкхи колонийӗсем—Того, Камерун, Танганьика, Руанда (вӗсене Англи, Франци тата Бельги хăйсем хушшинче валеçнӗ); Лăпкă океан çинче—Çӗнӗ Гвинейăн пайӗ, Ян утравӗсем тата ытти сем те (Англипе унăн доминионӗсем тата Япони валеçсе илнӗ).

**Маниак**—ăсран кайнă, ăсран тухнă çын; пӗрмай пӗр

шухӑшпа анчах муталанса ҫӳрекен. Сӑмахран, хӑш ҫын пӗрмаях вӑрӑсенчен хӑраса ҫӳрет—ку маниак пулать. Тепри хӑйне вӗлересрен хӑраса ҫӳрет—ку та маниак пулать. Гитлер—вӑл хӑйне чи аслӑ ҫын, пӗтӗм тӗнчене ҫӗнсе илме пӳрнӗ ҫын тесе шухӑшланӑ, ҫавӑнпа та вара ӑна маниак тесе ят панӑ.

**Маринизм**—империализмлӑ ҫӗршывсем хӑйсен тинӗсри ҫар вӑйне ӳстерсе, тинӗс ҫинче чи вӑйлӑ государство пулас тесе тӑвакан ӗҫсем.

**Марионетка**—пуканесен театрӗнче мӗнле те пулин роль вылякан пукане; политикӑллӑ пурнӑҫра марионетка тесе пӗр-пӗр государствӑн е пӗр-пӗр ҫыннӑн ирӗкне пӑхӑнса тӑрса, вӗсем хушнисене туса пыракан государствӑна е ҫынна калаҫҫӗ.

**Марксизм** (марксизм никӗсне хывнӑ Карл Маркс (1818—1883) ячӗпе)—„Марксӑн шухӑшӗсемпе вӗрентӗвӗн системи“ (Ленин), ӑна Маркс хӑйӗн тусӗпе тата соратникӗпе Фридрих Энгельспа (1820—1895) пӗрле тунӑ. Марксизм вӑл—„рабочи класӑн тӗп интересӗсене наука тӗлӗшӗнчен палӑртни“ (Сталин). Марксизм—„пӗтӗмӗшле мировоззрени, философиллӗ система пулать, унтан Марксӑн социализмӗ хӑйне хӑех тухса тӑрать. Ҫак философиллӗ системӑна диалектикӑллӑ материализм тесе калаҫҫӗ“ (Сталин). Марксизм малтанхи наукӑллӑ пӗлӗвӗн историллӗ ҫитӗнӗвӗсем ҫине таянса аталаннӑ, вӑл пӗртенпӗр, чӑн-чӑн наукӑллӑ тата вӗҫне ҫити революциллӗ мировоззрени пулса тӑрать, вӑлниепле тӗшмӗшпе те, ниепле реакципе те килӗшме пултараймасть. Марксизм рабочи класӑн тата пур ӗҫ халӑхӗн революциллӗ кӗрешӗвӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать, вӑл ҫав кӗрешӳре вӑйлӑ хӗҫ-пӑшал пулса тӑрать. Марксизм чи пуҫласа историллӗ аталану ҫинчен калакан законсене тунӑ. Капитализмлӑ общество аталанӑвӗн законӗсене уҫса, марксизм капитализмран кирек мӗнле пулсан та социализм патне куҫмаллине наука вӗрентнӗ тӑрӑх кӑтартса ҫирӗплетсе панӑ тата коммунистсен партийӗ ертсе пыракан класс кӗре-

шĕвĕн, рабочи движенин, пролетариллĕ революцин, пролетариллĕ диктатурăн, коммунизмлă общество тăвассин теорипе практикине наука тĕлĕшĕнчен никĕслесе панă. Марксизм вăл догма мар, ĕç тумалли руководство, вăл яланах аталанса, çĕнелсе пырать. Маркспа Энгельс вилнĕ хыççăн Ленинпа Сталин марксистла теорие малалла аталантарса пынă тата ăна пролетариатăн класс кĕрешĕвĕн çĕнĕ условийĕсенчи çĕнĕ опычĕпе пуянлатнă. Ленинизм марксизма малалла аталантарни пулать, пролетариатăн çĕнĕ условийĕсенчи класс кĕрешĕвĕнчи марксизм пулать, империализмпа пролетариллĕ революцисен тапхăрĕнчи марксизм пулать, пĕтĕм çĕр чăмăрĕн ултă пайĕнчен пĕр пайĕнче социализм çĕнтернĕ тапхăрти марксизм пулать. Марксизм—ленинизмăн тĕп уйрăмлăхĕ, ăна оппортунизмăн пур тĕсĕсенчен те уйăрса тăраканни вăл пролетариат диктатури çинчен, ăна кĕрешсе илмелли, çирĕплетмелли условисем çинчен вĕрентни пулать.

**Масштаб**—1) пĕр-пĕр пысăк япалана хут çине пĕчĕккĕн ӳкернĕ чухне пысăк виçе вырăнне илнĕ пĕчĕк виçе. Плансен, карттăсен—пурин те масштаб пур; масштаб япалан пысăккăшĕ ӳкерчĕкре миçе хут пĕчĕккĕ пулнине кăтартать; 2) анлăх, пысăк йĕритавралăх.

**Материк**—тĕп çĕр. Пирĕн планета çинче тĕп çĕр пиллĕк: Ази, Америка, Африка, Европа, Австрали.

**Материя**—матери—наукăра тĕп япала; япаласен пуçламăшĕ.

**Материализм**—философири тĕп çул-йĕр, пĕтĕм тĕнче никĕсĕ матери пулса тăрать текен вĕрентӳ. Вăл вĕрентӳ идеализма пачах та хирĕçле пулса тăрать. *Идеализм*—буржуаллă классен вĕрентĕвĕ, *материализм*—пролетариат вĕрентĕвĕ. Материализм çапла калать: а) тĕнче хăйĕн пуçламăшĕпех (природипе) материальнă, тет; б) матери, çутçанталăк, бытие ăс-тăн тулашĕнче, ăс-тăнран килсе тăман объективлă чăн-чăн пурнăç пулса тăрать, матери—пуçламăшри тата вăл туйăмсен çăлкуçĕ пулса тăрать, ăс-тăн—иккĕмĕшри, материрен тухса пулаканни;

в) тĕнчене тата унăн тивĕçлĕ виçелĕхĕсене (закономерность) пĕлме май пур тесе ĕрентет. Материализм, философири тĕп çул-йĕр пулса тăраканскер, авалхи Грецирех пуçланса кайнă (Гераклит, Демокрит, Эпикур); вăл философире 17—18 ĕмĕрсенче тата 19-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче (Бэкон, Гоббс, Локк, Спиноза, Ломоносов, Дидро, Гольбах, Гельвеций, Радищев, Фейербах) ытларах аталанать. Çапах та Марксчченхи материализмăн чылай пысăк çитменлĕхĕсем пур: вăл ытларах механистла, метафизикăлла, аякран çеç пăхса тăракан материализм пулнă, вăл обществăри явленисем çине сарăлман. Çак çитменлĕхсенчен хăшĕ-пĕрисем вырăссен классикăллă философин материализмĕнче (Белинский, Герцен, Чернышевский, Добролюбов) пулман, çапах вăл та историе материалистла ăнланасси патне çитеймен. Маркспа Энгельс материализмăн чи аслă формине—диалектикăллă материализма туса хунă (*диалектикăллă материализм* сăмаха пăхăр). Материализмпа обществăна ăнланса пĕлсе илес çĕрте усă курса, вĕсем историллĕ материализм туса хунă. Диалектикăллă тата историллĕ материализм наукăллă коммунизмăн теориллĕ никĕсĕ, Ленин—Сталин партийĕн мировоззренийĕ пулса тăраççĕ.

**Меджлис**—Хĕвелтухăçри чылай çĕршывсенчи парламента çапла ятпа чĕнеççĕ (сăмахран, Иранра, Турцире).

**Медиация**—медиаци—икĕ çын, учреждени е çĕршыв ĕçĕсене хутшăнса çураçтарни; уйрăмах халăхсен, нацисен хушшинчи ĕçе татса пани, пĕтĕм тĕнчери тавлашăва, хирĕçĕве мирлĕ майпа, тавлашăва е хирĕçĕве хутшăнман виççĕмĕш государство хутшăнса канаш панипе ĕçе мирлĕн татса пани. Анчах та вăл арбитраж мар. Арбитраж калани икĕ енĕшĕн те татăклă решени пулать, кун пек посредник (виççĕмĕшĕ) хутшăнса мĕнле те пулин ĕçе татма сĕнни обязательно пулса тăмасть.

**Международный валютный фонд**—пĕтĕм тĕнчери валюта фончĕ—1944 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче Пĕрлешнĕ Нацисен Организаципе ун çумне хутшăннă нацисен экс-

перчĕсем Пĕтĕм тĕнчери Валюта фончĕ туни çинчен пĕлтерчĕç. Ку вăл пĕтĕм тĕнчери валютăсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса тăма, валютăна ылттăн никĕсĕ çинче çирĕплетме тата пĕтĕм тĕнчери суту-илӳпе валюта тĕлĕшĕпе пулакан чăрмавсене пĕтерсе пыма тунă ялан ĕçлекен учреждени. Çав фонд составне кĕрекен çĕршывсене вĕсен тӳлеме пултаракан балансĕ вăйсăрлансан, валюта фончĕн вара вĕсене, валюта чăрмавсем ан пулччăр тесе, пулăшу памалла пулать. Совет валюти капитализмлă çĕршывсен валютинчен уйрăмах урăхла вырăн йышăнса тăрать. Совет экономики социализмлă экономика пулса тăнипе тата вăл планпа ĕçлесе пынипе пирĕн государство хăйĕн валютин курсĕ (хакĕ) ӳкесрен тумалли ĕçсене хăех вăхăтра туса пырать, ăна тума урăх механизм та кирлĕ мар. Çавăнпа та вăл фонд совет валютишĕн пысăк вырăнах йышăнса тăмасть.

**Мелиорация** — мелиораци — типĕтсе е шăварса çĕре лайăхлатни.

**Меморандум**—тӳрех каласан „асра тытса çырса хунă хут" тени пулать. Меморандум тесе дипломатиллĕ нотăна калаççĕ. Меморандум—пĕр-пĕр правительство мĕнле те пулин ыйту тăрăх тепĕр государствăна хăйĕн шухăшĕсене кăтартса панă хут. Çав хут çине юриех тепĕр правительство, фактсене асра тытса тăтăр тесе, питех те нумай фактсене кăтартса çыраççĕ. Меморандум ытти дипломатиллĕ нотăсенчен çакăнпа уйрăм тăрать: дипломатиллĕ нотăсем кĕске пулаççĕ тата унта фактсем те сахалтарах, меморандум вăрăмрах та тата унта фактсем те ытларах.

**Мемуары**—мемуарсем—çын хăй курни çинчен, хăй хутшăнса ĕçлени çинчен çырнă литературăллă произведени; асаилӳсем.

**Менделизм-морганизм**—Австри ученăйĕн Менделĕн тата Америка биологĕн Морганăн йăха куçаслăх тивĕçлĕ йĕркепе пулса пыни çинчен калакан вĕрентĕвĕ. Менделизм-морганизм Вейсманăн тĕшмĕшле схемине пĕтĕ-

мĕшпех йышăннă тата ăна тарăнлатнă. Менделистсемпе морганистсем Вейсман хыççăн хромосомăсенче темĕнле уйрăм йăха куçаслăх вещества пур теççĕ, çав вещество организм ӳтĕнче хупăлча ăшĕнчи пек выртать, вăл пулас ăрусене ӳтĕн пахалăх уйрăмлăхĕсене тата унăн пурнăç условийĕсене пăхăнмасăрах куçса пырать, имĕш. Çав концепцирен акă мĕн тухса тăрать: организм паллă условисенче аталаннă тата пурăннă чухне пулнă пахалăхсемпе уйрăмлăхсем йăха куçма пултараймаççĕ. Вĕсем эволюцишĕн нимĕнле вырăн та йышăнса тăмаççĕ. Çав теори тăрăх, ӳсентăран тата чĕрчун организмĕсем туяннă пахалăхсем, сыпăкран-сыпăка, йăхран-йăха куçма пултараймаççĕ. Çак реакциллĕ теори Мичурин вĕрентĕвне хирĕç пырать. Вăл наука чĕрĕ организма, уйрăмăн илсен—ӳсентăрана, çын хăйĕн кăмăлне килнĕ пек улăштарма пултараймасть, тесе çирĕплетет. Çапла çирĕплетсе калани вăл ăру уйрăмлăхĕсем ăрура хăйне евĕрлĕ вещество пуррипе малалла тăсăлса пыраççĕ текен суя „теори" çинче никĕсленсе тăрать. Çав вещество вара организм ӳт-пĕвĕпе тата вăл пурăнакан условисемпе нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмасть, имĕш. Ăру малалла вилмест тата çĕнĕрен те çуралса тухмасть, тесе вĕрентеççĕ буржуалла ученăйсем. Вăл пĕр ăруран тепĕр ăрăва нимĕн улшăнмасăр куçса пырать. Ӳсентăран хăй аталаннă чухне туяннă уйрăм енсене ăру япали тĕкĕнмест, çавна пула вара ун пек енсем çамрăк ăрăва куçмаççĕ, имĕш. Çак теори çутçанталăк вăйĕсене пăхăнса пурăнма вĕрентет, çынсене çутçанталăка хăйсен интересĕсене пăхăнтарас ĕçре хĕç-пăшалсăр тăратса хăварать. Çав теорисем витĕрех реакциллĕ пулнине ăнланма йывăр мар ĕнтĕ. Вĕсем чĕрĕ çутçанталăк малалла аталанма, çынсем çутçанталăка лайăхлатса пыма пултарнипе пачах та килĕшмеççĕ. Вăл теорисем хыççăн кайсан пирĕн вара ӳсентăрансен çĕнĕ формисене, çĕнĕ тата лайăхрах сортсене çутçанталăк хăех туса парассине кĕтсе пурăнмалла пулать. Мичурин вĕрентĕвĕ çутçанталăкăн ăнсăртран пулакан парнисене

лăпкăн, нимĕн тумасăр кĕтсе ларассине татăклăнах пăрахăçа кăларать. Мичуринла наука çынсем ӳсентăрансен кирлĕ формисене хăйсемех тума пултараççĕ, ӳсентăрансен пурнăç йĕркине урăхлатса çĕнетме пултараççĕ тесе вĕрентет. Ӳсентăранăн хăйне евĕрлĕ енĕсене тепĕр ăрăва пама пултаракан нимĕнле уйрăм вещество та çук. Вĕсем ӳсентăранăн мĕнпур клеткисенчен, мĕнпур улшăнăвĕсенчен малалла куçса пыраççĕ. Ӳсентăран хăй пурăннă тата аталаннă вăхăтра туяннă уйрăмлăхсене пурне те çĕнĕ ăрăва парать. Пĕр пекех пулнă икĕ ӳсентăрана илсе, икĕ пĕр пек евĕрлĕ условире ӳстерсе çитĕнтерсен, вĕсен вăрлăхĕсем те икĕ тĕрлĕ пулаççĕ. Ăрăвăн хăйне евĕр енĕсем тулашри условисене кура улшăнаççĕ.

**Метафизика**—шухăшлав меточĕ, вăл диалектикăна тӳрех хирĕçле тăрать. Метафизика аталанса пыракан тата пĕр-пĕринпе çыхăнса тăракан явленисем çине пăхнă пек пăхмасть, йăлтах урăхла, вăл пĕр-пĕринчен уйрăм, лăпкăн тăракан тата тапранман, чарăнса тăракан, улшăнман япаласем çине пăхнă пек пăхать. Метафизика аталану процесне ӳсĕмĕн ахаль процесĕ çине пăхнă пек пăхать. Кунта вăл количествăллă улшăнусем качествăллă улшăнусем патне илсе пымаççĕ, аталану процесĕ çине пĕрмай, пĕр йĕрпе çаврăнса тăнă пек, малтан мĕнле пулнă, кайран та çавăн пекех пулса пынă пек пăхать. Метафизика çутçанталăкăн япалисемпе явленийĕсенче шалти хирĕçӳсем пуррине йышăнмасть.

**Метрополия**—метрополи—колонисене хăйне пăхăнтарса пурăнакан государство. Сăмахран, Англи колонийĕ пулнă Индишĕн Англи метрополи вырăнне шутланса тăнă.

**Мизантропия** — мизантропи — çынна курайманни, çынна ним вырăнне те хисеплеменни. Мизантроп—çынна хисеплемен, пĕтĕм тĕнчери çынна хурлакан, çынна курайман, инкек тума юратакан. Гитлеровецсем чăн-чăн мизантропсем пулнă.

**Микробиология** — микробиологи — чи вĕтĕ чĕрчун-

сене—микроорганизмсене е микробсене пур енчен те тĕпчесе вĕренекен наука.

**Микроорганизмы**—микроорганизмсем—куçа курăнман чи вĕтĕ организмсем. Вĕсене микроскоппа пăхсан çеç курма пулать. Çавăн пек чи вĕтĕ организмсенчен нумайăшĕсем йӳçĕтме, органикăллă япаласене çĕртме, сикекен чирсене сарма тата ыт. те тума пултараççĕ.

**Милитаризм**—вăрçă интересĕсене пуринчен мала хуни; государство хăйĕн пур вăйĕ çитнĕ таран çарне, вăрçă хатĕрĕсене вăйлатни; империалистсем çĕнĕ çĕрсем, колонисем, çĕнĕ рыноксем тытса илес тĕлĕшпе вăрçа хатĕрленни, ытти çĕршывсемпе вăрçма яланах тăрăшни.

**Мимикрия**—чĕрчунсен е ӳсентăрансен тĕнчинче хăшпĕр чĕрчунсем е ӳсентăрансем ытти чĕрчунсем е ӳсентăрансем пек пулма тăрăшнине, е хăйсен пурнăçне сыхласа хăварма таврари япаласем тĕслĕрех пулма тăрăшнине мимикрия теççĕ. Сăмахран, лĕпĕш çулçă пек пулма тăрăшать, калта хăйăр тĕслĕ пулма тăрăшать. Хăш-пĕрисем çулталăкра темиçе хут та хăйсен тĕсĕсене улăштараççĕ (сăмахран, мулкачă). Хăш-пĕрисем тата урăх япаласемпе витĕнме тăрăшаççĕ. Тинĕсри крабсем губкăсемпе витĕнеççĕ. Мимикрия буржуаллă çĕршывсенчи политикăллă пурнăçра та тĕл пулать. Ăна политикăллă мимикрия теççĕ. Хăш-пĕр политикăллă деятельсем е партисем хăйсене демократиллĕ пек туса кăтартма тăрăшаççĕ. Ун пек час-часах суйлавсем умĕн пулать. Халĕ те хăш-пĕр çĕршывсенчи партисемпе политикăллă деятельсем хăйсене хăйсем, вĕсенчен фашистсен шăрши перет пулин те, эпир демократие юратакансем тесе улталаса ĕнентерме тăрăшаççĕ.

**Минимум**—пуринчен те пĕчĕкки, чи сахалли.

**Министр без портфеля**—портфельсĕр министр—капитализмлă çĕршывсенче, правительство (министрсен совечĕ) конституци тăрăх парламент умĕнче ответлă пулса тăраканскер, çакăн пек йĕркепе йĕркеленет: государство пуçĕнче тăраканни (монарх е президент)

правительство пуçлăхне—премьер-министра (пĕрремĕш министра) уйăрса лартать, премьер вара ытти министрсене хăй уйăрса лартать. Пĕрне, калăпăр, çар министрĕ тăвать, тепĕрне—почта министрĕ тата ытти те. Министрсен должноçне çапла вара портфель тесе калаççĕ. Пĕри çавăн пек портфель илнĕ, тепри çавăн пек портфель илнĕ, теççĕ. Хăш-пĕр чухне тата хăйĕн партин политикăллă позицийĕсене çирĕплетес тесе е хăйĕн политикăллă союзникĕсем ыйтнине пурнăçлас тесе премьерăн правительствăна министрсен должноçĕсем сахал пулин те министрсене ытларах кĕртмелле пулать. Çавăн пек чухне вара премьер политикăллă деятельсене правительство шутне кĕртсе министр пулма уйăрса лартать, вĕсем вара правительство ларăвĕсенче сасăлама та пултараççĕ, анчах та вĕсен должноççем пулмаççĕ, министерство пуçĕнче тăмаççĕ. Çавăнпа та вара вĕсене портфельсĕр министрсем теççĕ.

Миноносец—торпедăсемпе хĕçпăшалланнă çар карапĕ.

Мировоззрение—мировоззрени—çутçанталăкпа этем обществи çине пăхассин системи. Диалектикăллă материализм—марксистла-ленинла партин мировоззренийĕ пулса тăрать. „Маркс вĕрентĕвĕ чи хăватлă вĕрентӳ, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕс. Вăл тулли те йĕркеллĕ, вăл çынсене нимĕнле тĕшмĕшлĕхсемпе, нимĕнле реакципе, буржуалла пусмăра нимĕнле хӳтĕленипе те килĕшмен пĕр пĕтĕм мировоззрени паратьʻʻ (*Ленин*).

Миссия—мисси—ĕç хушни, пĕр-пĕр государство деятелĕ правительство хушнипе мĕнле те пулин паллă ĕç тунипе çапла калаççĕ. Çав ĕçе тума çĕршывсем хушшинчи экономикăллă тата дипломатиллĕ çыхăну пурри кирлĕ. Тепĕр чухне посольствăна та дипломатиллĕ мисси теççĕ.

Миссионер—тĕн ĕçĕ тоаврашсен миссийĕн членĕ: пуп е манах. Çавăн пек миссисене колонисенче е çурмаколонисенчи халăхсем хушшине пуç пулса тăракан тĕне сарма яраççĕ. Çак тĕлĕшпе ăна шкулсем те, тата тĕншĕн ĕçлекен ытти учрежденисене те уçма ирĕк параççĕ.

Миссионер ҫӗршыва шаларах кӗрсе пӑхма, ытларах пӗлсе илме май илет. Вӑл хӑйне янӑ ҫӗршывӑн чӗлхине, культурине, таварӗсене те сарма тӑрӑшать. Ҫапла вара, кая юлнӑ ҫӗршывпа империализмлӑ ҫӗршывсем хушшинчи экономикӑллӑ ҫыхӑну ҫирӗпленсе пырса, ҫав кая юлнӑ ҫӗршыва колони туса хумалли условисем ҫитӗнсе ӳсеҫҫӗ. Миссионер хӑй пулас тет-и, пулас темест-и, империализмӑн разведчикӗ пулса тӑрать.

**Мистификация**—мистификаци—тем те пӗр каласа кӑтартса суйви, улталани; тӗшмӗшлӗхпе аташни, пӑтрашни.

**Миф**—1) ӗлӗк ӗненнӗ турӑсем; 2) паттӑрсем ҫинчен калакан халап (юмах). Пулма пултарайман шухӑш, юмах пек япала.

**Мичуринское учение**—мичуринла вӗрентӳ. Мичурин—паллӑ совет ученӑйӗ. Вӑл чӗрӗ ҫутҫанталӑк ҫинчен хӑйӗн вӗрентӗвне—мичуринла вӗрентӗве—туса хунӑ. Ҫав вӗрентӳ буржуази ученӑйӗсен теорийӗнчен тӗпренех уйрӑлса тӑрать. Мичуринӑн чи паха ӗҫӗ—ӳсентӑрансене ҫынна пӑхӑнтарса пыма май пуррине, вӗсене ҫынна кирлӗ пек туса улӑштарма май пуррине кӑтартса пани пулать, Мичурин хӑйӗн пӗтӗм ӗҫне: „Эпир ҫутҫанталӑкран ырлӑхсем кӗтсе тӑмалла мар, вӗсене унран илесси—пирӗн задача", текен идея тӑрӑх туса пынӑ. Вӑл ҫутҫанталӑка урӑхлатса ҫӗнетекен аслӑ ҫын пулнӑ. Хӑйӗн пурнӑҫӗнче Мичурин культурӑллӑ ӳсентӑрансен ҫӗнӗ сорчӗсене 300 ытла тунӑ. Ҫавӑн пек питӗ нумай сортсем халиччен урӑх никам та туса ҫитӗнтереймен. Ҫакӑ вӑл ӑнсӑртран килсе тухнӑ ӑнӑҫлӑх мар. Мичурин чӗрӗ ҫутҫанталӑк аталанӑвӗн тивӗҫлӗ виҫелӗхӗсене тарӑн вӗренсе ҫитнӗ. Ҫав законсене пӗлни ӗнтӗ ӑна ҫутҫанталӑкӑн хуҫи пулма май панӑ. Мичурин ҫутҫанталӑкран ӑнсӑртран пулакан парнесем кӗтмен, вӑл ӑна хӑйне пӑхӑнтарса пынӑ. Буржуаллӑ ученӑйсен—Мендель, Вейсман, Морган пек ученӑйсен „теорийӗ" пачах та урӑхла. Ҫав „теори" ҫутҫанталӑк вӑйӗсене пӑхӑнса пурӑнма вӗрентет, ҫынсене ҫутҫанталӑка хӑйсен интересӗсемшӗн пӑхӑнтарас ӗҫре

хӗç-пӑшалсӑр тӑратса хӑварать. Çав теори витӗрех реакциллӗ пулса тӑрать. Мичурин вӗрентӗвӗ çутçанталӑкӑн ӑнсӑртран пулакан парнисене лӑпкӑн, нимӗн тумасӑр кӗтсе ларассине татӑклӑнах пӑрахӑçа кӑларать. Мичуринла наука çынсем ӳсентӑрансен кирлӗ формисене хӑйсемех тума пултараççӗ, ӳсентӑрансен пурнӑç йӗркине урӑхлатса çӗнетме пултараççӗ, тесе вӗрентет. Ӳсентӑрансем хӑйне евӗрлӗ енӗсене тепӗр ӑрӑва пама пултаракан нимӗнле уйрӑм япала та çук. Вӗсем ӳсентӑранӑн мӗнпур клеткисенчен, мӗнпур ӳт-пӗвӗнчен малалла куçса пыраççӗ, ӳсентӑран хӑй пурӑннӑ тата аталаннӑ вӑхӑтра туяннӑ уйрӑмлӑхсене пурне те çӗнӗ ӑрӑва парать. Пӗр пекех пулнӑ икӗ ӳсентӑрана илсе икӗ пӗр пек мар условире ӳстерсе çитӗнтерсен, вӗсен вӑрлӑхӗсем те икӗ тӗрлӗ пулаççӗ. Ӑрӑвӑн хӑйне евӗрлӗ енӗсем тулашри условисене кура улшӑнаççӗ. И. В. Мичуринӑн вӗрентӗвне Т. Д. Лысенко малалла аталантарнӑ. И. В. Мичуринпа Т. Д. Лысенко туса хатӗрленӗ пирӗн совет биологийӗ ют çӗршывсенчи Мендель, Вейсман, Морган тата ытти ученӑйсен реакциллӗ биологийӗнчен шӑпах çакӑнпа уйрӑлса тӑрать те ӗнтӗ. Менделистсем чӗрӗ организма, унӑн ӑру пахалӑхӗсене пурнӑç условийӗсем улӑштармаççӗ, теççӗ. Мичуринла биологи науки ӳсентӑрансемпе чӗрчунсен ӑру пахалӑхӗ пурнӑç условисенчен килет, тесе вӗрентет. Чӗрӗ организмра ӑру уйрӑмлӑхӗсем, тулашри условисем пулӑшнипе çитӗнсе йӗркеленеççӗ, тет мичуринла биологи. Çав условисене улӑштарсан, унпа пӗрле ӳсентӑран хӑй те улшӑнать. Çак шухӑш тӗрӗс пулнине Т. Д. Лысенко академик хӑйӗн опычӗсемпе уççӑнах çирӗплетсе кӑтартнӑ.

**Мобильность**—хӑвӑрт куçса çӳреме пултарни.

**Модернизация**—çӗнетни; промышленность, çар тата ытти техникӑна кучухнехи наукӑпа техника кӑтартса панӑ пек улӑштарас тӗлӗщпе туса ирттернӗ ӗç.

**Модификация**—модификаци—1) тӗс улшӑнни, тӗсе улӑштарни (видоизменение); 2) биологире организмӑн

свойствисемпе паллăлăхĕсем йăхран-йăха куçса улшăнни, çав улшăнусем тулашри улшăнса тăракан факторсен влиянийĕпе пулса пыраççĕ.

**Модус вивенди**—хальхи пек пулса пыракан лару-тăру, япаласен йĕрки, „пурнăç йĕрки“.

**Молекула**—япалан чи пĕчĕк пайĕ. Хăй çав тери пĕчĕк пулин те вăл çав япалан свойствисеве çухатмасть. Молекула темиçе атомран пулса тытăнса тарать, тепĕр чухне пĕр атомран та пулса тăрать. Телосен физикăпа химиллĕ свойстви молекулăсем пĕрмай куçса тăнинчен тата вĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса (взаимодействие) тăнинчен килет.

**Монархия**—государство пуçĕнче пĕр çын (монарх) тăракан государство, власть çав çын аллинче ĕмĕрлĕхех пулса тăрать тата хăй вилсен ун вырăнне увăн ывăлĕсем çеç ларма пултараççĕ. Нимпе чарман е абсолютлă монархи—вăл çакăн пек монархи пулать: чи çӳлти власть пĕтĕмпех патша аллинче тăрать, закон кăларнă çĕре тата управлени мĕнле пулса пынине контроллесе тăрас çĕре халăх пĕртте хутшăнмасть, вăл—чиновниксемпе полици мĕн тăвас тенĕ, çавна тума ирĕк пани пулать, халăх ним правасăр пурăнни пулать. Пӳлнĕ е конституциллĕ монархи—ку вăл çакăн пек монархи пулать: монархипе юнашар буржуаллă парламент пур, çав парламентпа килĕштермесĕр монарх пĕтĕм государство валли законсемпе распоряженисем кăларма пултараймасть.

**Монизм**—философиллĕ вĕрентӳ, вăл тĕнчери пур явленисен никĕсĕ те пĕр пуçламăш: е матери (материализмлă монизм), е дух (идеализмлă монизм) пулать, тесе ĕнентерет; ăна хире-хирĕçле тăраканни дуализм пулать. Материализмлă монизмăн наукăллă форми диалектикăллă материализм пулать.

**Монолит**—пĕр çирĕп, тачă пĕрлешсе çыхăннă япалла; вăл пĕр япаларан тунă пек пулса тăрать. Монолит-

ность—çирĕппи, пĕр пекки; монолитный—çирĕпскер, тачă çыхăннăскер, пĕрпекскер.

**Монополия**—монополи—пĕр-пĕр ĕç, пĕр-пĕр тавара туса сутасси пĕр çын е учреждени аллинче пулни. Ют çĕршывсемпе суту-илӳ тăвас ĕç государство алливче çеç пулни.

**Монополистические тресты**—монополиллĕ трестсем—капитализмлă трестсем. Весем хăйсен аллине промышленноçăн пĕр-пĕр отраçлин мĕнпур пек продукцине пуçтарса илеççĕ. Çавăн пек трест вара япалана мĕн хакпа сутмаллине хăй кăтартса пама пултарать. Промышленноçăн пĕр-пĕр отраçлинче вăл вара пĕртен-пĕр хуçа пулса тăрать. Капитализмлă çĕршывсенче пуринче те çавăн пек трестсем хуçалăхра пуç пулса тăракан позицисене йышăнса тăраççĕ.

**Монополия государственная**—государствăн монополийĕ. Мĕнле те пулин япалана туса кăларма, сутма е эксплоатацилеме государство çеç пултарнине, çавна тума унăн çеç право пуррине государство монополийĕ теççĕ. Капитализмлă çĕршывсем, уйрăмах Германи тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче монополипе усă курнă, анчах вăл вăхăтлăх мера çеç. Мирлĕ вăхăтра капитализмлă государствăсем вăхатран вăхăта кăна, хысна доходне ӳстерме, монополипе усă кураççĕ. Патша влаçĕ ĕлĕк эрех туса кăларассине, картсем пичетлесе кăларассине пĕтĕмпех хăйĕн аллинче тытса тăнă. Çавăн пек право уйрăм çынсен е кампанисен аллине те пырса кĕме пултарать. Сăмахран, Швецире шăрпăк тăвакан трест ытти государствăсенче те (Румынире) çав правапа усă курнă. ССР Союзĕнче государство монополине пĕтĕмĕшпех социализмлă государство пурнăçа кĕртсе пырать (сăмахран, ССР Союзĕнче ют çĕршывсемпе суту-илӳ тăвасси пĕтĕмпех государство аллинче тăрать).

**Мораторий**—моратори—кивçен илнисем тăрăх тӳлес срока тăсни.

**Московская конференция** — Мускаври конференци.

1943 çулхи октябрĕн 19—30-мĕшĕнче Мускавра США, Великобритани тата СССР ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен конференцийĕ пулса иртнĕ. Конференци тĕрлĕрен деклараци: Пĕтĕмĕшле хăрушсăрлăх ыйтăвĕ тăрăх тăватă государствăн декларацине, Итали çинчен калакан деклараци, Австри çинчен калакан деклараци, тискерле ĕçсем тунăшăн гитлеровецсене ответ тыттарасси çинчен калакан деклараци йышăннă. Чи малтанах конференци вăрçă туса пырас тĕлĕшпе тухса тăракан задачăсем çинче, çавăн пекех тата вăрçă пĕтнĕ хыççăнхи тапхăрти ытларах паллăрах ыйтусем çинче чарăнса тăрса, çав ыйтусене татса панă. Мускаври конференцире виçĕ çĕршыв правительствисем вăрçа пĕтерессине хăвăртлатас задача чи малтан тумалли задача пулса тăрать тесе йышăннă. Çавăн пекех тата Мускаври конференци Совет Союзĕн, Великобританин тата США халăхĕсен туслăхне малашне те çирĕп, мирлĕ пурнăçшăн тата ирĕке юратакан тĕнчери мĕнпур халăхсен хăрушсăрлăхĕшĕн туса пыма пулнине кăтартса панă. Анчах та вăрçă пĕтсен Англипе США правительствисем çак принципсене пурнăçа кĕртсе пыма пăрахрĕç, вĕсем çĕнĕ вăрçă хатĕрлес çул çине тăчĕç. Çурçĕр Атлантика пакчĕ (ун çинчен каланине пăхăр) çавăн çинчен калать те ĕнтĕ.

**Моторизованные дивизии** — автомашинăсемпе ларса çӳрекен пехота дивизийĕсене çапла калаççĕ. Машинăсем пурри çавăн пек дивизисене кирлĕ çĕре хăвăрт çитме, пĕр участокран тепĕр участока хăвăрт куçса пыма пулăшать. Çавăн пекех тата ун пек чаçсем артиллерире те, инженерлă тата ытти чаçсенче те пур. Кучухнехи çарсенче ун пек машинăллă чаçсем ытларах.

**Мотивировать** — пĕр-пĕр ĕçе тумалла е пĕр-пĕр сăмах тухса каламалла пулнă сăлтавсене ăнлантарса пани; çав ĕçе тума е çав сăмаха калама мĕншĕн кирлĕ пулнине ĕнентерсе пани.

**Мумия** — муми — тĕрлĕ тутлă шăршлă эмелсемпе тата смаласемпе сĕрсе çĕресрен сыхласа хăварнă çын е чĕрчун

кĕлетки. Ун пек тунă çыннăн е чĕрчунăн кĕлеткисем пиншер çул сыхланса выртма пултараççĕ. Урăхла каласан, муми сăмах хевтесĕр, çаврăнкалайман, ним туйăмсăр çын тенине пĕлтерет.

**Муниципализация**—муниципализаци—уйрăм çынсен аллинчи çĕрсемпе çурт-йĕрсене государство влаçĕн органĕсем вăйпа туртса илсе, вĕсене хула е ял общинисен аллине пани.

**Муниципалитет** — буржуаллă çĕршывсенче хулари самоуправлени.

**Мутация** — мутаци — 1) организмра пулса пыракан улшăнусем сыпăкран-сыпăка, ăруран-ăрăва куçса пыни; 2) çитĕнсе çитвĕ çыннăн сасси урăхланни.

**Мэр**—муниципалитет учрежденийĕсен пуçĕнче тăракан çын, муниципалитет пуçлăхĕ.

## Н.

**Народный (национальный) доход** — çĕршыв халăх хуçалăхĕн пур отраçлисем те çулталăк хушшинче çĕнĕрен туса кăларнă мĕнпур хаклăх (стоимость). Çулталăк хушшинче туса кăларнă продуктсен пĕтĕм массине çулталăкри продуктăн пĕтĕмĕшлĕ хисепĕ теççĕ, ăна укçа çине хурса шутлаççĕ. Çулталăкри продуктăн пĕтĕмĕшлĕ хисепĕн хаклăхне çаксем кĕреççĕ: ĕçре усă курнă производство хатĕрĕсен хакĕ — чĕр тавар, хутмалли япаласем (топливо), ĕçре пулăшакан материалсем тата оборудовани — машинăсем, çуртсем тата производствăн ытти хатĕрĕсен, ĕçре пулса кивелнĕскерĕн, хакĕсем кĕреççĕ. Капитализмлă çĕршывсенче халăх дохочĕ текенскерĕн пысăк пайне капиталистсемпе помещиксем хăйсен кĕсйине чикеççĕ, унăн пĕчĕк пайĕ кăна ĕç халăх аллине кĕрет — рабочисем ĕç укçи илни тата вак таваропроизводительсем доход илни. Халăх дохочĕ накоплени фончĕ çине тата потреблени фончĕ çине пайланать. СССР-та накоплени фончĕ социализмлă производствăна

анлӑлатнӑ ҫӗре тата государствӑн разервисене тунӑ ҫӗре каять. Потреблени фончӗ ӗҫ ҫыннисен аллине кӗрет (рабочисемпе служащисен ӗҫ укҫи тата колхозниксен ӗҫ кунӗ) тата управлени аппаратне тытса тӑма, ҫӗршывӑн оборонине тӗреклетес ҫӗре, халӑха вӗрентес ҫӗре, халӑх сывлӑхне упрас ҫӗре, ватӑ ҫынсемпе инвалидсене пулӑшас ҫӗре каять. СССР халӑх дохочӗ пӗрмаях ӳсет: 1925 ҫулта вӑл 16,8 млрд. тенкӗ, 1933 ҫулта—48,5 млрд., 1938—105 млрд., 1940 ҫ.—128,3 млрд. тенкӗ пулнӑ, 1950 ҫулта—177 млрд. тенке ҫитмелле.

**Наследственность** — йӑха куҫаслӑх; ӑруран ӑрӑва, сыпӑкран сыпӑка куҫни. Вӑл тулашри пурнӑҫ условийӗсем, малтанхи темиҫе сыпӑк тӑршшӗнче организмсем улшӑнса пынӑ условисем влияни пани пулса тӑрать.

**Натуралист**—1) ҫутҫанталӑка тӗпчесе вӗренекен учӗнӑй; 2) ҫамрӑк натуралистсем (юннатсем)—шкулта вӗренекенсен организацийӗ. Вӗсем ҫутҫанталӑка сӑнаса пырас тӗлӗшпе тата ҫутҫанталӑкри япаласене (ӳсентӑрансене, йывӑҫсене, кайӑк-кӗшӗксене тата ыт. чӗрчунсене те) упраса тӑрас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ.

**Наука**—наука—ӑслӑлӑх, вӗренӳлӗх, пӗлӳ.

**Национализм**—национализм—харпӑрхӑй халӑхне ҫеҫ чапа кӑларма, мала хума, ырӑ тума тӑрӑшни; пусмӑрта пурӑнакан халӑхӑн нацилле кӑмӑл-туйӑмӗсемпе усӑ курнӑ никӗс ҫинче ҫирӗпленнӗ буржуази политики. Буржуази, ӗҫ халӑх массин нацилле кӑмӑл-туйӑмӗсемпе усӑ курса, хӑйӗн нацине мала хурса ырласа, ҫав массӑна юриех ытти нацисем ҫине ӗскӗртсе ярать. Ҫавӑн пек национализм контрреволюцишӗн усӑллӑ пулса тӑрать, буржуази агенчӗсем наци кӑмӑл-туйӑмне чӗртсе ярса, нацин пӗр интерес кӑна тесе сӳпӗлтетнипе класлӑ хирӗҫӗве сӳнтерсе лартма тӑрӑшаҫҫӗ. Национализм тата унӑн чи хаяр контрреволюцилле форми—шовинизм—фашизм политикин никӗсӗсенчен пӗри пулса тӑрать.

**Национализация**—национализаци—капитализмлӑ ҫӗршывсенче пӗр ҫыннӑн е темиҫе ҫыннӑн тата организацин

е организацисен пурлăхĕсене государство пурлăхĕ туса хуни. Национализацилекен пурлăхшăн унта государство укçа тӳлет. Пролетариллĕ национализаци помещиксен çĕрĕсемпе капиталистсен пурлăхĕсене, çуртсене, банксене, фабрикăсемпе заводсене тата ыт. те вĕсенчен укçасăрах илсе, социализмлă государство пурлăхĕ туса хурать.

**Национал-социалисты**—национал-социалистсем—империалистсен партийĕ, тĕнчери мĕнпур империалистсем хушшинчи чи тискер те чи вăрă-хурахла империалистсен партийĕ. Вĕсене фашистсем тесе чĕнеççĕ. Анчах гитлеровецсем фашист тенипе килĕшесшĕн пулман. Вĕсем хăйсене национал-социалистсем тесе чĕннĕ. Вĕсем, чăннипе илсен, чи ирсĕр империалистсем пулнă. Вĕсем—социалистсем мар, социализмăн чи усал, чи хаяр тăшманĕсем, Европăри рабочи класа тата унти халăхсене элементарлă демократиллĕ ирĕклĕхсемсĕр тăратса хăварнă, чи тискер реакционерсем, черносотенецсем пулса тăраççĕ. Гитлерла парти—демократиллĕ ирĕклĕхсен тăшманĕсен партийĕ, вăтам ĕмĕрсенчи реакци тата черносотенла погромсен партийĕ пулса тăрать.

**Национал-царанисты** — национал-царанистсем — Румынири вăрçăчченхи буржуаллă парти, хăйне вăл „хресченсен" партийĕ тесе чĕннĕ, чăннипе вăл кулаксен партийĕ, ют государствăпа çыхăннă шултра буржуази интересĕсене сыхлакан парти пулнă.

**Национальный нигилизм**—нациллĕ нигилизм—пролетариатăн революциллĕ кĕрешĕвĕшĕн наци ыйтăвĕ кирлĕ ыйту пулса тăнине йышăнманни. Вăл чи пысăк „сулахай" оппортунистла, сектантла йăнăш пулса тăрать.

**Нация**—наци—çынсен пĕр-паллă, истори тăршшĕнче пĕтĕçнĕ, çирĕп пĕтĕмĕшлĕхĕ; наци тĕп паллисем: чĕлхе пĕрлĕхĕ, территори пĕрлĕхĕ, экономикăллă пурнăçăн пĕрлĕхĕ, экономика тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринпе çыхăнса пурăнни, психика уйрăмлăхĕн пĕрлĕхĕ.

**Нейтралитет** — нейтралитет — ытти государствăсем хушшинче пыракан вăрçа хутшăнмасăр вĕсемпе мирлĕ

çыхăну тытса тăни. Н е й т р а л ь н ы й—кĕрешĕве хутшăнманскер, тавлашăва, хирĕçĕве хутшăнманскер. Анчах пĕтĕм тĕнчипе вăрçă пынă вăхăтра вăрçа хутшăнмасăр пĕр государство та юлма пултараймасть, вăл мĕнле те пулин пĕр-пĕр вăрçакан государствăна пулăшатех. Çавăн пек Швейцари, Швеци, Испани иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче „нейтральнă" пултăмăр тесе ĕнентерме темĕнле тăрăшсан та ĕнентереймерĕç, вĕсем гитлерла Германие пулăшса тăни пуриншĕн те паллă пулчĕ.

**Нобелевская премия**—Нобель премийĕ. Уйрăм преми, ăна кашни çул физика, хими, медицина тата физиологи наукисенче чи паллăрах открыти тунăшăн, çавăн пекех тата илемлĕ литературăн чи лайăх произведенийĕшĕн тата мирлĕ пурнăçа çирĕплетессишĕн ĕçлекен çынна параççĕ. Çав премисене Швеци çынни ячĕпе, хăй тĕллĕн вĕренсе инженера тухнă Альфред Нобель ячĕпе тунă. Альфред Нобель (1833—1896) взрывсем тăвакан япаласемпе, уйрăмах нитроглицеринпа усă курас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Çав ĕçе туса пынă чухне вăл динамит шухăшласа кăларнă.

**Новатор**—мĕн те пулин çĕннине малалла утма чăрмантарса тăракан кивĕ ăнланусене, йĕркесене, правилăсене, нормăсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкаканскере, çĕнĕ майсене, нормăсене, меслетсене хăюллăн пурнăçа кĕртсе пыракан çын. Çĕннине пурнăçласа пырасси—совет çыннисен пахалăхĕ пулать. Новаторсем—чи малти ретре тăракан çынсем, вĕсем пирĕн халăх хуçалăхĕ малалла утассине хăвăртлатса пыраççĕ.

**Номинальный** — номиналлă — ятра çеç шутланакан, сăмахра çеç пулакан.

**Нота**—хут çине çырса пĕлтерни. Пĕр-пĕр правительство мĕнле те пулин ĕç çинчен пĕр е темиçе правительствăна хут çине çырса пĕлтернине нота янă теççĕ.

**Нотация**—нотаци—выговор, ятлани, вĕрентсе калани; ӳкĕтлесе калани.

**Нотификация** — пӗтӗм тӗнчери правӑра пӗр государство тепӗр государствӑна пӗтӗм тӗнчипе паллӑ ӗҫе тунӑ чухне, сӑмахран, ҫӗнӗ ҫӗрсене йышӑнса илнӗ чухне, блокада тунӑ чухне, нейтралитет тытас тенине пӗлтерни.

## О.

**Оазис** — хӑйӑрлӑ пушхирте йывӑҫ-курӑк ӳсекен уйрӑм пӗчӗк вырӑн.

**Обскурантизм** — ҫӗнӗ шухӑша, наукӑна, халӑха ҫутта кӑларас ӗҫе ытла та хаяррӑн хирӗҫ пыни; ӗрентӳпе наукӑн сӗмсӗр тӑшманӗ.

**Обструкция** — обструкци — хирӗҫӳ, ӗҫе тума паманни. Обструкципе пуринчен ытла парламентсенче усӑ кураҫҫӗ. Унӑн тӗллевӗ — сӑмах тухса калама чарасси тата ларӑва чӑрмангарасси. Обструкци текеннине пренисене тӑснипе, шавланипе е пурте харӑссӑн тухса кайса, сӑмах калама паманнипе тӑваҫҫӗ.

**Объективный** — объективлӑ — 1) ӑс-тӑнран, ҫынтан хӑйӗнчен килмен сӑлтавсем; 2) ӗҫе, ыйтӑва тӗрӗс ҫутатса, тӗрӗс каласа татса пани.

**Оккупация** — оккупаци — ют ҫӗршыв ҫӗрне вӑхӑтлӑха туртса, ҫавӑрса илни. Ҫапла гитлерла Германи, пӗтӗм тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫа пуҫарса ярса, Европӑри чылай государствӑсене тата Совет Союзӗн хӑш-пӗр районӗсене оккупацилерӗ. Фашистла захватчиксене Сталинград патӗнче ҫапса ҫӗмӗрнӗ хыҫҫӑн нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене Совет ҫӗршывӗнчен массӑллӑн хӑваласа кӑларасси пуҫланчӗ. 1944 ҫул вӗҫне пирӗн Совет Ҫарӗ хамӑр ҫӗршыва ӗмӗрлӗхех гитлерла вӑрӑ-хурахсенчен тасатрӗ. Совет Ҫарӗ нимӗҫ ҫӗрӗ ҫине кӗрсе кайрӗ, гитлерла Германие ҫапса антарчӗ те, унӑн пӗр пайне оккупацилерӗ.

**Олигархия** — олигархи — сахал ҫынсем нумайӑшсене хӑйсене пӑхӑнтарса пуҫ пулса тӑракан йӗрке. Государство пуҫӗнче халӑхӑн нумайрахӑшӗн представителӗсем те мар (демократия), пӗр ҫын та мар (тирания) сахалтарах ҫынсен — эксплоататорсен пӗчӗк ушкӑнӗ пуҫ пулса тӑни.

Империализм, хӑй ӳссе пынӑ май, финанс олигархине туса хурать.

**Олимпийское спокойствие** — Олимп сӑмахран тухса кайнӑ, вӑл Грецири тусен ячӗ. Авалхи грексен тӗнӗ тарӑх ҫав тусем ҫинче грексен туррисем пурӑннӑ пулать, вӗсем вара ҫӳлтен Олимп тӑвӗ патӗнче кӗшӗртетекен этемсем ҫине ним хумханмасӑр лӑпкан пӑхса тӑнӑ пулагь. Ҫакӑнтан вара „Олимп пек лӑпкӑ“ („Олимпийское спокойствие“) текен сӑмах ҫаврӑнӑшӗ тухса кайнӑ. Халӗ пӗр-пӗр ӗҫе хӗрсе тумалла чухне аран-аран,васкамасӑр, ним пӑшӑрханмасӑр тӑвакан ҫынран кулса ҫапла калаҫҫӗ.

**Опека** — ҫитӗнмен тӑлӑхсене пӑхса ӳстерме, вӗсен пурлӑхне сыхлама закон тӑрӑх пӗр-пӗр ҫывӑх ҫынна хушни.

**Оппозиция** — оппозици — 1) хирӗҫ тӑни; ыттисен политикине, шухӑшне хирӗҫ калани; 2) парламентра — правительствӑна хирӗҫ пыракан партисемпе ушкӑнсем; 3) партире ыттисемпе килӗшмен пӗр ушкӑн. ВКП(б)-ра пулнӑ оппозицисем — оппортунистла группировкӑсем, вӗсем парти линине хирӗҫ, ленинла линие хирӗҫ лини кӑларса тӑратнӑ. Партие хирӗҫле позицире тӑракан оппозиционерсем (троцкистсем, зиновьевецсем, „сулахайрисем“, сылтӑмрисем — пурте) рабочи класс ретӗнче тахҫанах политикӑллӑ юхӑм пулма пӑрахнӑ, вӗсем фашизмӑн союзникӗсем, агенчӗсем пулса тӑнӑ; вӗсем сӑтӑрҫӑсен, диверсантсен, разведчиксен, шпионсен, ҫын вӗлерекенсен бандисем, рабочи класӑн чи хаяр тӑшманӗсен бандисем пулса тӑнӑ.

**Оппортунизм** — пролетариатӑн класлӑ интересӗсене буржуази интересӗсене пӑхӑнтарни, буржуазипе килӗшни, пролетариат интересӗсене сутни. Сылтӑм социалистсем — оппортунистсем, буржуазин рабочи движенири агенчӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

**Оппортунист** — тӑшманпа килӗшекен, тӑшман майлӑ пулма тӑрӑшакан, принципсӑр ҫын, рабочи класӑн интересӗсене сутакан.

**Оптимизм** — чи лайăххи тенĕ сăмах. Пурнăç çине, малашлăх çине савăнăçлăн, паттăрла шанса пăхни, пуласс сине çирĕп ĕненни. Оптимизма хирĕçле **пессимизм**, — вал йăлтах усаллине кăна курма тăрăшни, малашлăхра лайăххине курма пĕлменни, пурин çине те ĕненмесĕр, шанмасăр пăхни пулать.

**Организация Объединенных Наций** — Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ — виçĕ держава: Совет Союзĕ, США тата Великобритани представителĕсен Крымра (Ялтăра) 1945-мĕш çулхи февраль уйăхĕнче пулса иртнĕ конференцийĕ решени йышăннипе туса хунă организаци. Виçĕ держава руководителĕсен декларацинче çапла каланă: „Эпир çитес çывăх вăхăтрах хамăрăн союзниксемпе пĕрле пĕтĕмĕшлĕ мир тата хăрушсăрлăха сыхласа тăма пĕтĕм тĕнчери организаци туса хума йышăнтăмăр. Çак организацие туса хуни агрессие чарнипе тата мирлĕ пурнăçа юрататакан мĕнпур халăхсен яланах тачă çыхăну тытнипе вăрçăн политикăллă, экономикăллă тата социаллă сăлтавĕсене те сирсе яма кирлĕ, тесе шутлатпăр", тенĕ. „Унăн никĕсне Думбартон-Оксрах туса хунă пулнă. Анчах та унта чи паллă ыйту — сасăлас йĕрке пирки каласса татăлайман. Çав конференцире вăл чăрмава сирсе яма май килнĕ. Эпир Думбартон-Оксра официаллă мар йĕркепе калаçса татăлнă положенисен никĕсĕ çинче çав организацин Уставне туса хатĕрлеме 1945-мĕш çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче США-ра Сан-Франциско хулинче Пĕрлешнĕ Нацисен Организацин конференцине пухма килĕшрĕмĕр", тенĕ. 1945-мĕш çулхи июнь уйăхĕнче Пĕрлешнĕ Нацисен Организацин уставне йышăннă. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацин çакăн пек паллăрах органĕсем пур: Генеральнăй ассамблея, Хăрушсăрлăх Совечĕ, Экономикăллă тата Социаллă Совет, Опека Совечĕ, Пĕтĕм тĕнчери суд тата Секретариат. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн яланхи вырăнĕ Лейк-Саксес (США-ра Нью-Йорк хули çывăхĕнчи) ятлă хула пулса тăрать.

**Организм** — чĕр-чун, органикăллă çутçанталăкăн (ÿсентăранăн, чĕр-чунсен е этемĕн) ÿчĕ, туни. Вăл çак тĕп паллăсемпе: япаласем улшăннипе, ÿснипе, ĕрченипе, пурнăç условисем майлă пулма пултарнипе, протоплазма туса кăларакан химиллĕ составпа уйрăлса тăрать.

**Отзывные грамоты** — пĕр пĕр государство пуçлăхĕ тепĕр государство пуçлăхĕ патне хайĕн дипломатиллĕ представительне каялла чĕнсе илни çинчен официаллă çырса пĕлтерни, ун пек чухне икĕ государство хушшинчи дипломатиллĕ çыхăну пĕтмест. Дипломатиллĕ çыхăнăва татнă чухне е посола хăваласа кăларса янă чухне отзывлă грамотăна çырмаççĕ.

**Официальный** — официаллă — 1) ĕçлĕ, служба ĕçĕсем тăрăх, ĕç ячĕпе; 2) правительствăн ĕçĕ.

**Официоз** — правительство е правительствăн пĕр-пĕр органĕ (сăмахран, ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви) аллинче тăракан хаçатсене, журналсене çапла калаççĕ. Анчах та çав хаçатсемпе журналсем правительство е унăн пĕр-пĕр органĕ аллинче пулнине официаллă йышăнмаççĕ. Официоз правительство шухăшĕсем çинчен çырать, анчах та правительство çав шухăшсемшĕн ответлă пулса тăмасть. Çавăн пек хаçатсем Англире — „Таймс" тата „Дейли телеграф". Çак хаçатсем уйрăм çын аллинчи хаçатсем, анчах та вĕсен редакцийĕсем правительствăпа е правительство органĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ, çавăнпа та вăл хаçатсем çырнине пĕр йăнăшсăрах правительство шухăшĕсем пулаççĕ тесе калама пулать. Тепĕр чухне çав хаçатсем пĕр-пĕринчен урăхларах çыраççĕ, ун чухне вара вăл правительствăра пĕр шухăш çуккине пĕлтерет.

**Официозный**—çурма официаллă; правительствăпа çыхăнса тăракан, унăн директивĕсем тăрăх ĕçлесе тăракан, анчах тулашĕнчен пăхсан правительствăна пăхăнса тăман пек курăнакан.

## П.

**Пакт** — килĕшÿ — пĕтĕм тĕнчери договор, вĕсем пысăк политикăллă пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ.

**Пакт Мира** — Мир Пакчӗ — 1949 ҫулăн пуҫламăшӗнче Америкăри „Интернэйшнл Ньюс Сервис“ агентствин Европăри генеральнăй директорӗ Кингсбери Смит ыйтусем ҫырса Сталин юлташ патне янă. Кингсбери Смит ыйтăвӗсенче кăларса тăратнă сӗнӳсем СССР правительствипе США правительстви ҫак правительствăсем нихăшӗ те пӗрпӗрне хирӗҫ вăрҫăпа тухма шутламанни ҫинчен калакан деклараци пичетлесе кăларасси ҫинчен кăна мар, вӗсенче ҫаплах Мир Пактне пурнăҫа кӗртмелли ӗҫсем, майпен хӗҫ-пăшалсăрланасси патне илсе пыракан ӗҫсем ҫинчен каланăччӗ. Мир Пакчӗ тăвассипе ҫыхăнса тăракан мӗнпур ыйтусене Трумэн президентпа И. В. Сталин Генералиссимус тӗл пулнă вăхăтра сӳтсе явма сӗннӗччӗ. Ҫавăнпа пӗрлех Германи ыйтуне, вăл шутрах Берлин ыйтуне те, татса парас тӗлӗшпе конкретлă сӗнӳсем кăларса тăратнăччӗ. Кинсгбери Смит ыйтăвӗсем ҫине Сталин юлташ панă ответсем пӗтӗм тӗнчене ҫиҫӗм пек хăвăрт саралчӗҫ. Пӗтӗм тӗнчери демократиллӗ ушкăнсем, мирлӗ пурнăҫа тата халăхсем хушшинчи хăрушсăрлăха ҫирӗплетессишӗн тăракан мӗнпур ҫынсем Сталин юлташăн отвечӗсенчен пӗтӗм тӗнчери ҫыхăнусем ҫивӗчленсе кайнине пӗтермелли, Америкăпа Совет Союзӗ хушшинчи хирӗҫӳсене пӗтермелли ҫӗнӗ майсем пуррине курчӗҫ. Совет Союзӗпе Америка хушшинчи Мир Пакчӗ ҫинчен калакан сăмахсем пуриншӗн те чи ҫывăх сăмахсем пулса тăчӗҫ, вӗсем ҫӗршер миллион ҫынсен чи пысăк шанăҫне палăртаҫҫӗ.

Кингсбери Смит ыйтăвӗсенче палăртнă программăна пурнăҫа кӗртни Совет Союзӗпе Америка хушшинче ҫыхăнусене йӗркелесе яма кăна мар, мирпе халăхсем хушшинчи хăрушсăрлăх ӗҫне те чылай ҫирӗплетме май панă пулӗччӗ. СССР правительстви вăл сӗнӳсене шăпах ҫавăн пек хаклана та ӗнтӗ. Мирпе хăрушсăрлăха ҫирӗплетессишӗн яланах тăрăшса ӗҫлесе, вăл Совет Союзӗпе Америка хушшинче Мир Пакчӗ туса, ăна пурнăҫласа пыма, Берлин ыйтуне йӗркелесе яма килӗшни ҫинчен ҫийӗнчех

каласа пӗлтерчӗ. Анчах та США правительстви ҫавна хирӗҫле позици ҫине тӑчӗ. Америкӑри влаҫра тӑракан ушкӑнсем, агрессипе пӗтӗм тӗнчери авантюра политикине тытса пыраканскерсем, Совет Союзӗпе Мир Пакчӗ тума килӗшмерӗҫ.

**Пакт четырех** — 1936 ҫулта Англи, Франци, Германи тата Итали государствисем хушшинче тунӑ пакта (договора) ҫапла каласҫӗ. Ҫав договор тӑрӑх Европӑна тивекен пур паллӑрах ыйтусене те ҫӳлте асӑннӑ тӑватӑ государство хушшинче калаҫса килӗшсен кӑна татса памалла пулнӑ. Тепӗр майлӑ каласан, паллӑрах ыйтусене ҫав договор ҫине алӑ пусман государствӑсен интересӗсем шучӗпе татса памалла пулнӑ. Вӑл, тӗрӗссипе каласан, ҫын шучӗпе агрессортан хӑтӑлмалли мел выранне пулнӑ.

**Паллиатив** — паллӑ результатсемех пама пултарайман, ыйтӑва теппипех татса пама пултарайман япала; вӑл ыйтӑва татса парас вырӑнне ҫиелтен шӑйӑрттарса кӑна ирттерсе яма тӑрӑшни; вирлӗ эмелсем вырӑнне вӑйсӑртараххисене панипе чире, ыратнине вӑхӑтлӑха кӑна сирсе яма пулӑшакан япала. Паллиатив политики—тӗплӗнех татса пама пултарайман политика, ҫӳлте асӑннӑ (паллиативлӑ) мерӑсене йышӑннипе кӑна ирттерсе яма тӑрӑшни. Хӑш-пӗр капиталистла правительствӑсем вӑрҫӑччен ҫавӑн пек политикӑна тытса пынӑ, ун пек туни фашистла агрессорсен арманӗ ҫине ытларах шыв ярса пани кӑна пулса пынӑ.

**Паназиатизм** — „пан" тени „пурте" тенине пӗлтерет. Паназиатизм — пурте Азишӗн тенине пӗлтерет. Ӑна пуринчен ытларах Япони тума тӑрӑшнӑ. Вӑл Японие хӑйӗн захватчикла политикине пурнӑҫа кӗртсе пыма пулӑшнӑ. Паназиатизм — пурте Азишӗн тесе сӳпӗлтетнипе Япони империалисчӗсем пӗтӗм Азие хӑйсен аллине ҫавӑрса илме тӑрӑшнӑ. Чи малтан вӗсем Китая пӗтӗмпех тытса илме хӑтланчӗҫ, хӗҫ-пӑшал вӑйӗпе Китайран Англипе Америка империалисчӗсене хӑваласа кӑларма пикенчӗҫ. Ҫав

тĕллевпе ĕнтĕ Япони 1933 çулта Китая хирĕç вăрçă пуçласа ячĕ, унтан Лăпкă океан çинчи вăрçа пуçарса ячĕ.

**Пангерманизм**—пангерманизм—политикăллă юхăм. Вăл хăй умне нимĕçсем пурăнакан облаçсене (увта нимĕçсем калама çук сахал пулсан та) Германи çумне пĕрлештерсе, нимĕçсене пурне те пĕтĕçтерес задача лартнă. Çав политикăна 1930 çулта йĕркеленĕ „Пангерманский союз" пуçласа янă. Нимĕç фашисчĕсен идеологи арсеналĕнче пангерманизм пĕрремĕш вырăнта тăнă, фашистла Германи хăйĕн тулашри политикине те çав идеологие тĕпе хурса туса пынă. Нимĕç фашисчĕсем „Пангерманский союзăн" лозунгĕсем тăрăх, пĕтĕм Европăна, унтан пĕтĕм тĕнчене Германи империализмне пăхăнтармалли программа туса хунă. Çав программăна пурнăçа кĕртес тесе, нимĕç фашисчĕсем тĕнчери иккĕмĕш вăрçа пуçарса ячĕç. Анчах вĕсем пуçарса янă вăрçă нимĕç фашисчĕсене хăйсене тĕп тăвасси патне илсе çитерчĕ.

**Папа**—католиксен чиркӳ пуçлăхĕ; католиксен аслă архиерейĕ. Папа яланах революцилле движение хирĕç пынă. Вăл 1930 çулта Совет Союзне хирĕç „хĕреслĕ поход" организацилеме чĕннĕ. Халĕ вăл пĕтĕм тĕнчери коммунистсене хирĕç похода тухрĕ.

**Памфлет**—палла çынна хирĕç, политикăллă пурнăçри хăш-пĕр енсене хирĕç тăрăхласа çырнă, пурте ăнланмалла пĕчĕк кĕнеке.

**Парадокс**—пуриншĕн те паллă пулса тăракан, общество йышăннă шухăшсене хирĕç пыракан ăнлану. Çавăн пек хирĕç пыни час-часах çиелтен пăхсан кăна пур пек туйăнать, анчах чăннипе илсен унăн форми кăна хирĕçӳллĕ, ăнлану хăй хирĕçӳллĕ мар.

**Парализовать**—кам та пулин мĕн те пулин тунине чарса, сирсе яни.

**Паразит**—1) ытти организмсен шучĕпе пурăнакан организм; 2) харампыр, çын тăрантарнипе, çын вăйĕпе пурăнакан çын, çын ĕçленипе усă курса пурăнакан.

**Параллельный** — параллеллӗ — пӗр-пӗринчен пӗр пек инҫетри хушӑра юнашар тӑсӑлакан линисем; ун пекех, пӗр вӑхӑтрах пулса пыни.

**Парафировать** — мӗнле те пулин документа хушаматпа ята кӗскетсе е хушаматпа ятӑн пуҫламӑш саспаллисемпе алӑ пусни. Парафирование договора — пӗтӗм тӗнчери договор ҫине, ӑна тӑвакан государствӑсен представителӗсем хӑйсен правительствисем ҫирӗплетиччен (ратификацилеччен) хӑйсен хушамачӗсемпе ячӗсен пуҫламӑш саспаллисене лартни.

**Парии** — парисем — правасӑррисем, пусмӑртисем. Индири ҫынсене калакан ятран тухса кайнӑ сӑмах. Индире пурӑнакан халӑхсен пӗр пайне пуҫ пулса тӑракансем „чи аялтисем“ тесе шутлаҫҫӗ, вӗсене „общество тулашӗнче тӑраканнисем“ вырӑнне хураҫҫӗ, вӗсене „хура шӑмӑ“ вырӑнне шутлаҫҫӗ. Вӗсем ҫумне сӗртӗнсенех ҫын „вараланчӑк“ пулать имӗш. Ҫапла вара чи чухӑн хресченсемпе ял хуҫалӑхри рабочисем парисем пулса тӑраҫҫӗ.

**Парировать** — тапӑннине хирӗҫ тавӑрни (тавлашнӑ чухне сӑмахпа е спорт вӑййинче хирӗҫ выляса, тавӑрни).

**Паритет** — пӗртанлӑх, пӗршайлӑх. Ҫак сӑмахпа тӗрлӗ сӑмах ҫаврӑнӑшӗнче усӑ кураҫҫӗ. Сӑмахран, валютӑсен пӗртавлӑхӗ ҫинчен калаҫҫӗ. Валютӑн паритечӗ тени ылттӑн укҫа вырӑнне кӑларса янӑ хут укҫа ылттӑнпа пӗртаннине калаҫҫӗ, анчах та ылттӑн вырӑнне кӑларса янӑ хут укҫа яланах ылттӑн укҫапа пӗртан пулма пултараймасть.

**Парламентёр** — вӑрҫӑра тӑшмансемпе калаҫма шанса янӑ ҫын, хӑйне вӗлересрен вӑл шурӑ ялав ҫӗклесе каять. Парламентёрпа пӗрле ялава ҫӗклесе пыраканӗ, трубач тата тӑлмач каяҫҫӗ. Пурне те вӗсене вӑрҫӑ йӑли тӑрӑх тата 1899 ҫулти Гаагӑри конвенци тӑрӑх никам та тӗкӗнме пултараймасть. Анчах нимӗҫ фашисчӗсем нимӗнле закона та пӑхӑнман, вӗсем Будапештра пирӗн парламентёрсене вӑрӑ-хурахла вӗлернӗ.

**Парламент**—буржуаллă çĕршывсенче законсем кăларакан суйланă чи аслă орган.

**Партия**—парти—класăн малта пыракан, ăна ертсе пыракан отрячĕ. ВКП(б)—Совет Союзĕнчи рабочи класăн çирĕп чăмăрĕ; коммунистсен партийĕ рабочисемпе хресченсен, пĕтĕм ĕç çыннисен интересĕсене вĕçне çитиех хӳтĕлесе тăрать.

**Парцелярный**—парцелярлă—вак, вакланнăскер. Çак сăмахпа вак-тĕвек хресчен хуçалăхĕсем çинчен каланă чухне усă кураççĕ. Вак-тĕвек хуçалăхсене парцелярлă хуçалăхсем теççĕ. Вĕсен техники питĕ кая юлнă техника, мĕнпур ĕç питĕ те хакла ларать, çавăнпа та вара вак-тĕвек хуçалăхсем юхăнса, саланса пыраççĕ.

**Пасквиль**—кама та пулин усал тăвас тесе, суя сăмах сарса çырнă кĕнеке.

**Пассивный**—пассивлă—ĕçсĕр ларакан, ӳркевçĕ, наян, кахал, пĕр ĕçе те хутшăнман, нимĕнпе те интересленмен çын.

**Патетический**—хĕрӳллĕ, хавуслă, кăмăла хумхантаракан (сасă е сăмах). Çак сăмаха час-часах ытла та çĕклентерсе калаçать тесе куларах каланă чухне асăнаççĕ.

**Паупер**—чухăн, ыйткалакан, хăйне тăрантарса усрамалăх та нимĕн çук çын. Пауперизация—чухăнланни.

**Пауза**—вăхăтлăха чарăнни.

**Пафос**—калама çук хавасланни, хавхаланни.

**Пацифизм**—буржуаллă юхăм, кирек мĕнле вăрçа хирĕç те, çав шутра тĕрĕслĕхлĕ вăрçа хирĕç те пыни. Çак сăмахпа мирлĕ пурнăçшăн тата империализмлă вăрçăсене хирĕç вак буржуази кĕрешес мар тенине (пачах та кĕрешменнине) кăтартса параççĕ. Вак буржуази империализмлă вăрçăсене хирĕç активлăн мар кĕрешни вăл кирек мĕнле кĕрешӳрен те хăраниичен кăна мар, вăрçа хирĕç мĕнле кĕрешсе ăна мĕнпе çĕнтермеллине пĕлменнинчен те килет. Алă айне пулнă кирек мĕнле договора та, килĕшĕве те, вăрçă хăрушлăхне çемçетме е чакарма пултараканскерсене те, хапăл туса йышăнма пăхни çавăнтан килет те ĕнтĕ. Çавă ĕнтĕ вак буржуазин пацифизмĕ, империалистла плансен союзникĕ пулса тăрать.

**Педант** — вĕт-шакăра, вак-тĕвек йĕркесене юратакан çын. çырса панă йĕркесенчен пĕртте пăрăнман çын.

**Перебаллотировка** — çĕнĕрен баллотировка туни, кандидатсене иккĕмĕш хут суйлани. Пĕрремĕш хут сасăланă чухне кандидатсем кирлĕ чухлĕ сасă илеймесен е мĕнле те пулин йăнăш тусан, иккĕмĕш хут сасăламалла пулни.

**Перейти Рубикон** — таварма çук ĕç туни; çак сăмах çавранăшĕ историре пулнă фактран пулса кайнă. Юлий Цезарь сенат чарнине пăхмасăрах хăйĕн легионĕсемпе Рубикон ятлă юханшыв урлă каçнă. Çавă вара Итали халăхĕ хушшинчи вăрçăн пуçламăшĕ пулнă, çавăн хыççăн вара Цезарь Рим хулине хăй аллине тытса илнĕ.

**Перипетии** — чăрмавсем. Çак сăмаха яланах ытти сăмахсемпе пĕрле калаççĕ: „перипетии переговоров", „перипетии совещаний", вăл çав калаçусем питĕ кăткăс, чăрмавлă аталанса пынине пĕлтерет. Капиталистла державăсем хушшинче кирек мĕнле калаçу та çавăн пек чăрмавлă, тытăнчăклă, тикĕс мар пулса пырать.

**Пессимизм** — пур япала çине те ĕненмесĕр, шанмасăр пăхни, йĕрĕнсе пăхни, пурнăç çине хаваслăхсăр, пулассине шанмасăр пăхни.

**Петиция** — петици — государство влаçĕн органне, государство пуçлăхне — парламента, президента, короле, министра, граждансем коллективпа паракан ыйту.

**Пигмей** — авалхи грексен сăмахĕ, „чăмăр пысăкăш" тенине пĕлтерет. Авалхи грексен халапĕ тăрăх таçти кăнтăр çĕршывра калама çук вĕтĕ халăх — пигмейсем — пурăннă пулать. Вĕсем вара кашни кĕркуннех унта вĕççе пыракан тăрнасемпе вăрçнă пулать. Çакăнтан вара „пигмей" сăмаха икĕ ăнланупа калаççĕ, вăл: 1) калама çук пĕчĕк çын тенине тата 2) ниме тăман çын тенине пĕлтерет. Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче пигмей тесе Геббельса калатчĕç, вăл икĕ енчен те чăн-чăн пигмей пулса тăнă — пĕчĕкки те пĕчĕккĕ тата çынни те ниме тăман çын пулнă.

**Пикет** — куҫса ҫӳрекен пӗчӗк хурал отрячӗ, сыхлама тунӑ пӗчӗк ушкӑн.

**Пират** — тинӗс ҫинчи вӑрӑ-хурах.

**Пиррова победа** — ӗненмелле мар хаклӑ тӑракан ҫӗнтерӳ; ҫӗнтерӗве тума тӑкакланӑ вӑй-хал ҫав ҫӗнтерӳрен хаклӑрах тӑрать.

**Плазма** — юнӑн шурӑ тата хӗрлӗ шарикӗсем ҫук шӗвек пайӗ.

**„План Маршалла"** — „Маршалл планӗ" — США-ан ют ҫӗршыв ӗҫӗсене туса пыракан министрӗ Маршалл ятлӑ генерал 1947 ҫулхи июнӗн 5-мӗшенче гитлерла Германи оккупациленипе сиен курнӑ Европӑри ҫӗршывсене США доллӑрпа (США-ан укҫи ячӗ) „пулӑшма" пулни ҫинчен каласа пани. „Маршалл планӗ" — вӑл США империалисчӗсен Европӑна экономика тата политика енчен чуралантармалли планӗ. „Маршалл планӗ" Хӗвеланӑҫ Европӑн экономикине пӗтӗмпех Америка промышленность магначӗсене пӑхӑнтарать. Вӑл чӑннипе Хӗвеланӑҫ Европӑри ҫӗршывсен промышленноҫне, тулашри суту-илӳне, финансне тата валютӑна Америка монополисчӗсем контроллесе тӑрасси патне илсе пырать. „Маршалл планӗ" Хӗвеланӑҫ Европӑри ҫӗршывсем хӑйсен нациллӗ суверенитетне (никама пӑхӑнса тӑманлӑхне) ҫухатасси патне илсе пырать, мӗншӗн тесен вӑл ҫав ҫӗршывсен хӑйсен нациллӗ промышленноҫне аталантарса пырассине чарса чӑрмантарса тӑрать. „Маршалл планӗ" Хӗвелавӑҫри государствӑсен ҫарпа политикӑлла союзӗн никӗсӗ пулса тӑрать, ҫав союза СССР-а тата халӑх демократи ҫӗршывӗсене хирӗҫ, пӗтӗм тӗнчери революциллӗ движение хирӗҫ тунӑ. США ҫак союзра хӑйӗн политикине пурнӑҫласа пырас тӗлӗшпе Хӗвеланӑҫ Германипе усӑ курать. „Маршалл планӗпе" усӑ курса США монополисчӗсем экономикӑллӑ кризис килсе тухас вӑхӑта чӑсма тӑрӑшаҫҫӗ, тахҫанах туса кӑларнӑ никам та илмен таварсене сутма, усламӑн пысӑк пайне хӑйсен аллине тата Европа халӑхне хӑйсем мӗн тума шутланӑ ҫавна тутарасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ.

**Планета** — планета—хӗвел тавра ҫӳрекен пӗлӗт ҫинчи ҫăлтăр пек япала, хăй вăл тĕттĕм, хĕвелрен ҫутă илсе тăрать.

**Плацдарм** — ҫар плацĕ, ҫарсене вĕрентмелли вырăн, ҫавăнтах ҫарсем парад туса ирттереҫҫĕ. Халĕ ҫав сăмахпа урăхла ăнланăва пĕлтереҫҫĕ. Халĕ вăл сăмах ҫарсене наступлени тума хатĕрлесе хунă район тенине пĕлтерет. Кучухнехи вăрҫăра ҫав район (плацдарм) пысăкăшĕ — чикĕ хĕрринчи область территорийĕ пулма пултарать, вăл ҫеҫ те мар — пĕтĕм ҫĕршыв та плацдарм вырăнне пулма пултарать.

**Плебисцит** — пĕр-пĕр ыйтушăн пĕтĕм халăх хăй сассине пани.

**Плутократия** — плутократи — пуянсен влаҫĕ, мул ҫинче тытăнса тăракан власть. Капитализмлă ҫĕршывсенче власть капиталистсен аллинче тăрать, ҫавăнпа кирек мĕнле буржуаллă правительство та плутократсен влаҫĕ пулса тăрать.

**Поверенный в делах** — ĕҫсене тума шанса янă ҫын, дипломатиллĕ агентсенчен кĕҫĕнреххи (кĕҫĕн рангра тăраканни). Вăл посолран ҫакăнпа уйрăм тăрать: посола государство пуҫлăхĕ тепĕр государство пуҫлăхĕ патне хăйĕн государствипе ҫыхăну тытса тăма ярать, ĕҫсене тума шанса янă ҫынна вара министр патне кăна ярать. Дипломатиллĕ мисси начальникĕ пулмасан, унăн ĕҫĕсене туса пыма урăх ҫынна хушма пултараҫҫĕ, анчах ĕҫсене тума шанса янă ҫын темеҫҫĕ. Ĕҫсене тума шанса ятарласа ҫын яраҫҫĕ, ăна поверенный в делах теҫҫĕ.

**Подмандатные территории** — ҫак ятсемпе 1914—1918 ҫҫ. империализмлă вăрҫă хыҫҫăн ҫав вăрҫăра ҫĕнтернĕ государствăсен аллине кĕрсе ӳкнĕ, ĕлĕк нимĕҫсен пулнă колонисемпе вăрҫăчченхи Турцин хăш-пĕр пайне калаҫҫĕ. Вăрҫăра ҫĕнтернĕ государствăсем (Англи, Франци, Япони) ҫав территорисене Нацисен лиги панă мандат тăрăх тытса тăнă. Вăл территорисем колонисенчен нимĕнпе те уйрăм пулман. Мандат тăрăх тытса тăракан территорисем

çаксем: Германин пулнӑ колонисем — Африкӑра: Того, Камерун, Германин пулнӑ Кӑнтӑр-хӗвеланӑç Африка тата Танганайка, Германин Лӑпкӑ океан çинчи пулнӑ утравӗсем тата Кӗçӗн Азире — Турцин пулнӑ территорисем — Сирипе Палестина.

**Позитивный** — позитивлӑ — лайӑххи, чӑн-чӑн пурри; опытсемпе фактсем çинче никӗсленсе тӑраканскер. Политикӑллӑ пурнӑçра „позитивлӑ политика“ текен сӑмаха час-часах асӑнаççӗ. Уйрӑмӑнах ӑна Япони çар çыннисем асӑнатчӗç. Вӗсем лайӑх çар политикине (позитивлӑ çар политикине) малти рете тӑратса негативлӑ политикӑна хирӗç пынӑ. Негативлӑ политика тесе тулашри политикӑна активлӑ мар туса пынине каланӑ. Японин çар çыннисем правительствӑна активлӑрах, хастарлӑрах пулма, ют çӗршывсене тытса илес программӑна активлӑн пурнӑçласа пыма хистенӗ.

**Позитивная акция** — позитивлӑ акци — мӗнле те пулин ӗç тӑвасси çинчен тухса калани е çавна тӑвасси çинчен хут çырса пани. „Позитивная акция“ текен сӑмаха дипломатиллӗ документсенче, политикӑпа государство деятелӗсен калаçӑвӗсенче тӗл пулма пулать. Пӗр-пӗр государство позитивлӑ акци тума хатӗр тӑрать тени вӑл мӗнле те пулин ӗç пирки дипломатиллӗ хутсем çырнипех, нотӑсем янипех ирттерсе ярасшӑн мар, активлӑ ӗçпе ответлеме (хӗç-пӑшалпа тухма) хатӗр тӑрать тенине пӗлтерет.

**Полемика** — пӗр-пӗр ыйту тӑрӑх е пухура, е пичетре хӗрӳллӗн тавлашни.

**Полиплодия** — полиплоди — Мичурин вӗрентӳне хирӗçле теори, организмӑн кӗлеткисенчи хромосомӑсен шучӗ улшӑнни çинчен вӗрентекен теори.

**Политика „открытых дверей“** — „уçӑ алӑксен“ политики — империалистла çӑхавсем Китай пирки туса пынӑ политика. Çавна чи малтан 1899 çулта США государство секретарӗ (ют çӗршыв ӗçӗн министрӗ) Джон Хей пуçарса каланӑ. „Уçӑ алӑксен“ политикине çапла ӑнлан-

малла: Китай территорине никам та тӗкӗнме пултараймасть, ӑна упраса тӑмалла, Китайра хӑйсен вӑрӑ-хурахла ӗҫӗсене тӑвакан империалистла пур державӑсене те пӗртан экономикӑллӑ услови туса памалла. Ҫав „уҫӑ алӑксен“ политики — Китая хӑйсен чури туса хурас пирки империалистла государствӑсем калаҫса татӑлнин результачӗ. 1922 ҫулта Вашингтонра пулса иртнӗ конференцире тӑхӑр державӑсен (Англи, США, Япони, Франци, Итали, Бельги, Голланди, Португали тата Китай) договорне йышӑннӑ. Ҫав договор ун ҫине алӑ пуснӑ государствӑсене Китай тӗлӗшпе „уҫӑ алӑксен“ политикине тытса пыма хушать. Анчах Япони пурӑна-киле ҫав договора хӑй майлӑ ӑнлана пуҫланӑ: ун шучӗпе Китай алӑкӗ Японишӗн кӑна уҫӑ пулмалла, ытти ҫӗршывсемшӗн хупӑ пулмалла пулнӑ. 1934 ҫулта пичетлесе кӑларнӑ декларацире Япони Китайра хӑй пӗччен кӑна хуҫа пулса тӑма шутлани ҫинчен уҫҫӑнах каласа панӑ, ҫавӑн пирки-ех вӑл вӑрҫа та пуҫласа янӑ.

**Политический шантаж**—политикӑллӑ шантаж. Хӗсӗрлесе, улталаса, хӑратса укҫа е ытти пурлӑха, япалана илнине шантаж теҫҫӗ. Политикӑллӑ шантаж—пӗр-пӗр государство тепӗр государствӑна хӗсӗрлесе, улталаса, хӑратса мӗн те пулин тутарни; шантаж — буржуаллӑ дипломатире яланах пулакан япала, вӑл пӗр государство тепӗр государствӑна хӑй айӗнче (пусмӑрӗнче) тытса усрамалли меслет пулса тӑрать. Ун пек политикӑпа фашистла Германи анлӑн усӑ курнӑ.

**Популяция** — популяци—(ӳсентӑран е чӗрчунсен тӗнчинче) хӑйсен ашшӗ-амӑшӗсем енчен пӑхсан, пӗр тӑванран мар пулнӑ япаласен (особьсен) пуххи е хутӑшӗ (смесь).

**Потенциал** — вӑй-хӑват, вӑй-хал; шалти вӑй-хӑват пысӑкӑшӗ тениве пӗлтерет. Ҫак сӑмахпа государствӑн ҫар хисепӗ мӗн чухлине тата унӑн вӑрҫма пултарас вӑй хӑвачӗ мӗнлине (ҫын йышӗ, экономика тата техника ресурсӗсем епле пулнине) пӗлтерсе калаҫҫӗ.

**Преамбула** — умӗн калани: пӗтӗм тӗнчери договорӑн малтан каланӑ, договорӑн пӗтӗмӗшле положенийӗсене ӑнлантарса паракан пайӗ.

**Превентивный** — превентивлӑ — систерекен, сыхлантаракан. Вӑрҫӑ умӗнхи тапхӑрта хаҫатсем ҫинче часчасах „превентивная война" текен сӑмах ҫаврӑнӑшӗ тӗл пулатчӗ. Пӗр-пӗр государство ҫине урӑх ҫӗршыв вӑрҫӑпа пырса тапӑнассине сиссе, вӑрҫма хатӗрленекен ҫав государство вӑрҫӑ пуҫлаччен малтан хӑй вӑрҫӑ пуҫарса ярать пулать, ҫав вӑрҫа империалистсем „превентивлӑ вӑрҫӑ" („систерекен вӑрҫӑ") теҫҫӗ.

**Прелиминарный** — малтанлӑха туса хатӗрлекен (договор, килӗшӳ).

**Прелиминарные переговоры** — малтанлӑха туса иртternӗ калаҫусем. Вӑл калаҫусем калаҫса татӑлакан енсене татӑклӑнах сыхӑнтармаҫҫӗ.

**Прерогатива** — пӗр-пӗр сыннӑн хӑйне ҫеҫ тивӗҫлӗ прави, ҫакӑ вӑл унӑн ӗҫри вырӑнӗпе сыхӑнса тӑрать.

**Пресс-бюро** — пресса (хаҫат-журналсен) бюровӗ, правительство, парти тата ытти тӗп учрежденисем ҫумӗнче обществӑна ҫӗнӗ хыпарсем ҫинчен пӗлтерсе тӑракан орган. Буржуаллӑ государствӑсенче пресс-бюро министрсен ҫумӗнче, ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви ҫумӗнче, хӑш-пӗр ҫӗршывсенче — парламентри фракцисем, партисен комитечӗсем ҫумӗнче пур. Пресс-бюросем посольствӑсемпе миссисем ҫумӗнче те пур.

**Прецедент** — малтан пулни, малтанхи тенине пӗлтерет. Каярахпа пулакан ӗҫсемшӗн кӑтартуллӑ пулса тӑракан, унччен малтан пулнӑ ӗҫсем, тӳркилвисем. Мӗнле те пулин ӗҫ ҫинчен, вӑл унччен малтан пулнӑ ӗҫ пек мар пулсан, ун пек ӗҫсем нихҫан та пулман пулсан, ун ҫинчен „не имеющий прецедента" теҫҫӗ. Нимӗҫ захватчикӗсен тискерле ӗҫӗсем ҫавӑн пек нихҫан пулман-илтмен тискерлӗхсем пулчӗҫ.

**Префект** — 1) авалхи Римри тӗрлӗрен административлӑ тата ҫар должноҫсен ячӗ; 2) Францире тата ытти

çĕршывсенче — правительствăн департаментри, округри органĕсенче ĕçлекен аслă чиновникĕн ячĕ; 3) хăш-пĕр çĕршывсенче — хула полицин начальникĕн ячĕ.

**Придунайские страны** — Дунай шывĕ таврашĕнчи çĕршывсем: Австри, Венгри, Чехословаки, Болгари, Румыни тата Югослави.

**Признание де юре** — пĕтĕм тĕнчере мĕнле те пулин ĕç пулсан, çав ĕç чăн пулнă тесе хут çине çырса пĕлтерни, тепĕр тĕрлĕ каласан, çав ĕç законлă пулса тăрать тесе йышăнни. Мĕнле те пулин государство, сăмахран, тепĕр государствăра халĕ кăна пулса тăнă çĕнĕ политикăллă строя, территори тĕлĕшĕнчен улшăну пулнине, ытти государствăсем хушшинчи килĕшĕве, тепĕр чухне мĕнле те пулин государствăн çĕнĕ правительствине чăн законлă пулса тăрать тесе йышăнма пултарать. Çав çĕнĕ правительствăна, çĕнĕ политикăллă строя, территори тĕлĕшĕнчен улшăннине е ытти государствăсем хушшинчи килĕшĕве факт вырăнне („де факто") мар, чăн-чăн законлă, пĕтĕм тĕнчери правасем тăрăх пулнă ĕçсем тесе йышăнни. Ĕçе татса паракан державăсем çавăн пек йышăнмасан, паллăрах ĕçсем тăрăх чылай вăхăта килĕшӳсем тума çук. Пĕр-пĕр государство тепĕр государствăн территорине тытса илсен, ăна ытти ĕçе татса паракан державăсем законлă тесе шутласан („де юре" йышăнсан), çав территорие тытса илнине тĕрĕс тесе йышăнни пулать.

**Примат** — малта тăни, маларах хурса шутлани; пуç пулса тăни.

**Проблема** — ыйту, задача; наукăри, искусствăри е политикăри татса памалли ыйту; тавлашуллă ыйту.

**Производительность труда** — ĕç тухăçлăхĕ. Ĕç тухăçлăхне пĕр рабочи паллă вăхăтра, сăмахран, пĕр сехет хушшинче туса кăларнă продукци хисепĕпе виçеççĕ. Ĕç тухăçлăхĕн шайĕ производство техника тĕлĕшĕнчен мĕнле хĕçпăшалланнинчен (производство орудийĕсем çĕнни), машинăпа, çутçанталăк вăйĕпе мĕнле усă курнин-

чен, рабочисен квалификацинчен, ĕçшĕн тӳллес система мĕнле пулнинчен, ĕç кунĕпе тивĕçлипе усă курнинчен, ĕç дисциплинине çирĕплетнинчен тата ыттисенчен те килет. Ĕç тухăçлăхне ӳстерни продукцин пĕр единицине туса кăларма тухакан ĕçе чакарать. Оборудованипе материалсемпе усă курас эфекта ӳстерет, косвеннăй тăкаксен пайне, цехри, пĕтĕм заводри тата ытти тăкаксене чакарасси патне илсе пырать, çапла вара, продукцин хăйне ларакан хакне чакарать. Социализмлă обществăн обществăллă ĕç тухăçлăхĕ ӳсни пĕр рабочи туса кăларакан продукцин хисепĕ ӳсни кăна мар, продукци туса кăларма тăкаклакан производство средствисемпе тĕрĕс усă курни те пулать. Машинăсемпе, механизмсемпе тата агрегатсемпе ăнăçлăн усă курнă тĕслĕхсене тата чĕртавара, материалсене, хутмалли (çунтармалли) япаласене, электроэнергие нормăпа пăхнинчен сахалтарах расхутланă тĕслĕхсемпе пурне те паллаштарса пур çĕрте те çавăн пек тумалла туни питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Малти вăтам прогрессивлă техникăллă-экономикăллă нормăсене çĕнсе илни государство планĕн заданисене тултарма кăна мар тата ытлашшипех тултарма май парать. Производство программине ытлашшипех тултарма пулăшакан резервăсем, тавара туса кăларма хăйне ларакан хакне ӳкерме тата социализмлă накопление ӳстерме май паракан меслетсем çакăнта пулаççĕ те ĕнтĕ. Ĕç тухăçлăхĕ вăл çĕнĕ обществăллă строй çĕнтерне çĕрте, юлашкинчен, чи кирли, чи пахи пулса тăрать, тет В. И. Ленин. Социализм ĕнтĕ капитализм тунă ĕç тухăçлăхĕнчен пачах та çĕнĕ, унтан ытларах çӳлти пусăмра тăракан ĕç тухăçлăхне тунипе капитализма татăклăнах çĕнтерет, тесе вĕрентеççĕ Ленинпа Сталин. СССР промышленноçĕнчи ĕç тухăçлăхĕ 1939 çулта, 1933 çултипе танлаштарсан, икĕ хут ӳсрĕ; 1913 çулхипе танлаштарсан, 4,3 хут ӳсрĕ. Совет Союзĕ промышленноçри ĕç тухăçлăхĕ шайĕ тĕлĕшпе Аслă Отечественнăй вăрçă умĕн Европăра пĕрремĕш вырăнта тăнă. Вăрçă вăхăтĕнче совет

рабочийĕсем хăйсен тăван çĕршывне çав тери юратса ĕçленипе ĕç тухăçлăхне хăпартас çĕрте тата та ытларах пысăк çĕнтерӳсем турĕç. Вăрçăн икĕ çулĕ хушшинче кăна, 1942 çулхи майпа 1944 çулхи апрель хушшинче, СССР пĕтĕм промышленноçĕнчи ĕç тухăçлăхĕ вăтам шутпа 40 процент ытла ӳсрĕ. Вăрçă пĕтсен ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн, вăрçă хыççăнхи çĕнĕ пилĕк çуллăх плана тăвată çулта тултарассишĕн пĕтĕм çĕршывĕпе социализмла ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Стахановецсем капитализм вăхăтĕнче нихçан та пулман ĕç тухăçлăхĕн тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Кашни рабочин, колхозникăн, кашни совет гражданинĕн задачи — ĕç тухăçлăхне пĕрмай ӳстерсе пырасси. Çакă вăл пирĕн совет тăван çĕршывĕ малалла чечекленсе пымалли, халăхăн пурнăçĕ лайăхланмалли условисенчен чи тĕп услови пулать.

**Производственный цикл** — халăх хуçалăхĕн пĕр паллă отраçлинче таварлă продукци туса кăларма пĕр-пĕр ĕçе пуçласа вĕçне çити туни. Хура металлургире производственнăй цикла доменнăй цехсемпе хурçă шăратмалли тата прокат цехĕсен ĕçĕсем те кĕреççĕ. Çĕр кăмрăк промышленноçĕнче производственнăй цикла çĕр кăмрăк кăларас тата турттарса тухас ĕçсем пурте: çĕр кăмрăк сийĕсене палăртса тухни, шăтарни, катса илни, вагонеткăсем çине тиени, çирĕплетни, çĕр кăмрăк тиенĕ вагонеткăсене тĕксе тухни тата ыттисем те кĕреççĕ. Производствăн ытти отраçлисенче циклăн вăрăмăшĕ пĕр-пĕр япалана тума мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ пулнă, çавăн чухлĕ пулать. Пĕр-пĕр япалана (изделие) производствăна янă вăхăт циклăн пуçламăшĕ пулать. Япала (издели) пулса тухсан, çав япалан туса кăлармалли цикл пĕтет. Çакăнтан акă мĕн курăнать: предприятире производственнăй цикл мĕн тери кĕскерех, эпир çавăн чухлĕ хăвăртрах продукци туса кăларатпăр. Производственнăй цикла çаксене тунипе кĕскетме пулать: пĕр-пĕр япалана туса кăларма кирлĕ вăхăта кĕскетнипе тата çав япалана туса кăлармашкăн тумалли тĕп ĕçе, ăна тума пулăшас тĕлĕшпе

тунă ĕçсене пĕр вăхăтра тунипе. Производственнăй цикл вăрăмăшне пĕрмаях кĕскетсе пымалла, ăна пурнăçлама çаксене кĕскетмелле: 1) технологи процесĕ пăхнă тĕрлĕрен обработкăсене тума тухакан вăхăта; 2) изделие (япалана) пĕр станок çинчен тепĕр станок çине, пĕр участокран тепĕр участока, пĕр цехран тепĕр цеха куçарма кирлĕ вăхăта; 3) изделие тунă чухнехи вăхăтра, тĕрлĕрен тапхăрта унăн пахалăхне тĕрĕслеме кирлĕ вăхăта; 4) изделие пĕр тĕрлĕ обработкăран тухсан тепĕр тĕрлĕ обработкăна кĕртсе яриччен кĕтнĕ вăхăта кĕскетмелле.

**Прогрессивный** — прогрессивлă — хăйĕн шухăшĕсемпе тата ĕçĕсемпе малта тăракан çын, пурнăçа малалла аталантарма пулăшса пыраканскер; аталанса ӳссе пыраканскер. Прогресс—малалла пыни, ăнăçусем туни.

**Прожект**—пурнăçа кĕме пултарайман проект, пурнăçпа çыхăнса тăман план.

**Прожектĕр**—пурнăçа кĕме пултарайман план тăвакан çын.

**Прокрустово ложе**—ку сăмах çаврăнăшне ĕлĕкхи грексен халапĕнчен илнĕ. Çав халапра пĕр Прокруст ятлă вăрă-хурах иртсе пыракан çынсене хăйĕн çуртне улталаса кĕртнĕ пулать те вĕсене хăйĕн вырăнĕ çине вырттарса вĕсен урисене, вырăнтан вăрăмрах пулсан, касса татнă, е урисем кĕске пирки вырăн тăршшĕ пулмасан, вĕсен мăйĕсене вĕренпе çыхса туртса тăснă пулать. Çав халапри сăмах çаврăнăшĕ пирĕн чĕлхене кĕнĕ. Вăл, ĕçĕ пăсăк пулма пултарать пулин те, мĕнле те пулин япалана ун пек мар япалапа пĕр пек тума тăрăшнине пĕлтерет.

**Пролонгировать**—тăсни (договора, килĕшĕве тăсни).

**Протекторат**—витсе, „хӳтĕлесе" тăни; империалистсен колонилле пусмăрĕн формисенчен пĕри. Империалистла пĕр-пĕр государство хӳттинче тăракан вăйсăртарах çĕршыв колонирен çакăнпа çеç уйрăм тăрать: формально вăл хăй тĕллĕн пурăнакан государство, унăн хăйĕн государство пуçлăхĕ пур, анчах çав государствăн тулашри

политикине ӑна хӳтӗлесе тӑракан империалистла держава контроллесе тӑрать, час-часах вӑл ҫав протекторат текеннин территорийӗ ҫинче хӑйӗн ҫарне те тытса тӑрать.

**Протекционизм**—капиталистла правительствӑсен тулашри суту-илӳ политики; ҫав политика тӑрӑх вӗсем ют ҫӗршывсенчен илсе пыракан таварсем ҫине пысӑк пошлина (налог) хураҫҫӗ. Вӑл политикӑн тӗллевӗ—ҫӗршывра тавар хакӗсене ӳкерес мар тесе тӑрӑшасси тата хӑйсен промышленникӗсене ют ҫӗршыв конкуренцинчен хӳтӗлесси.

**Протоплазма**—кирек-мӗнле чӗрчунсен тата ӳсентӑрансен клеткӑри тӗп япала, вӑл ҫурма шӗвек, тӗссӗр ҫӑра масса, белоксенчен пулса тӑрать.

Путч—кӗске вӑхӑтлӑха, ӑнсӑртран хӗмленни тени пулать. Политикӑри ӑнланура путч тени государство йӗркине улӑштарас тесе правительствӑна хӗҫпӑшаллӑ вӑйпа сирпӗтсе антарнине пӗлтерет. Анчах путч хӗҫпӑшаллӑ восстани мар. Хӗҫпӑшаллӑ восстанинчен путч ҫаксемпе уйрӑлса тӑрать: восстанире халӑхӑн анлӑ масси хутшӑнать, путчра ун пек нумай халӑх масси хутшӑнмасть, унта пӑлхавҫӑсен пӗчӗк ушкӑнӗ кӑна хутшӑнать. Ҫавӑнпа та путч тунипе революци тума ҫук. Революци—вӑл пӗр класс пуҫ пулса тӑнине пӗтерсе хурса, ун вырӑнне тепӗр класс пуҫ пулса тӑрассине ҫирӗплетет. Путч, вӑл ӑнӑҫлӑ пулсан, пуҫ пулса тӑракан класӑн пӗр ушкӑнӗ вырӑнне ҫав класӑн тепӗр ушкӑнне влаҫа лартма пултарать.

**„Пятая колонна“**—„пиллӗкмӗш колонна“—ҫак сӑмах ҫаврӑнӑшне 1936 ҫулта калама пуҫланӑ. Ун чухне фашистсем ним вӑтанмасӑрах Мадрид хули ҫине пирӗн ҫарсен тӑватӑ колонни наступлени туса пырать, пиллӗкмӗшӗ Мадрид хулинчех, республика ҫарӗн тылӗнче тӑрать, тенӗ. Ҫавӑнтан вара хӑйсен умне тыла пӑтратса вӑйсӑрлатас тӗллев лартакан фашистла, шпионла тата диверсиллӗ вӑрттӑн организацисене пурне те „пиллӗкмӗш колонна“ тесе ят панӑ.

# Р.

**Радикалы**—радикалсем—вăл сăмах „тымар“ тенине пĕлтерет. Çакăнтан радикаллă текен сăмах пулса кайнă. Вăл тĕпренех, тымарĕнченех тапратакан ĕçе тунине пĕлтерет. XIX-мĕшпе XX-мĕш ĕмĕрсем хушшинче государство стройне тĕпренех демократизацилессишĕн тăрăшакан буржуази, нимрен ытла вак буржуази партийĕсемпе политикăллă ушкăнсене радикалсем тесе чĕне пуçланă. Вĕсем капитализма тĕкĕнмесĕрех государство стройне тĕпренех, тымарĕпех демократизацилеме пулать тесе шутланă. Каярахпа вĕсем хăйсене социалистсем тесе чĕне пуçланă, апла пулин те вĕсем социализм çывăхне те пымаççĕ. Империализм вăйланнă май радикалсем, хăйсен вăйĕсене çухатса пырса, финанс капиталĕ енне куçаççĕ, унтан фашизмăн тĕрекĕ пулса тăраççĕ.

**Рантье** — капитализмлă çĕршывсенче производствăра хутшăнса ĕçлемесĕр, хăйĕн укçа-тенки тупăш парса тăнипе тăранса пурăнакан çын; харампыр.

**Расовая теория** — реакциллĕ, куçкĕрет суя теори. Çав теори пĕр расăсем тепĕр расăсенчен маларах, çӳлерех тăраççĕ тесе сӳпĕлтетет. Вăл теорие нимĕнрен ытла Германи фашизмĕн „çулпуçĕсем“ ытларах сарма тăрăшнă. Вĕсем этем историйĕ марксизм вĕрентнĕ пек классен кĕрешĕвĕ мар, „расăсен кĕрешĕвĕ“ пулса тăрать тесе вĕрентнĕ. Çак кĕрешӳре, вĕсен сăмахĕ тăрăх, ытларах ăстăнлă расăсем, „çĕнсе илекенсен çурçĕр Германи раси“, çиеле тухать пулать, вара малашнехи пурнăç çав расăсен аллинче пулмалла имĕш. Вăл „теори“ пĕлĕт çĕртен инçе пулнă пекех наукăран инçе тăрать. Халĕ çав теорие США-ра чĕртсе яма тăрăшаççĕ.

**Ратификация**—ратификаци—çирĕплетни. Çак сăмаха дипломатиллĕ чĕлхере тĕл пулма пулать. Ратификаци тени пĕтĕм тĕнчери договора парламент (СССР-та СССР Верховнăй Совет Сессийĕ) е государствăн ытти аслă органĕсем тата пуçлăхĕсем çирĕплетнине пĕлтерет.

Пĕтĕм тĕнчери кирек мĕнле договора та, ăна государствăсен представителĕсем алă пуснă хыççăн, çав государствăсен чи аслă органĕсем çирĕплетни кирлĕ, çавăн хыççăн çеç вăл пурнăçа кĕнĕ тесе шутланать.

Рациональный—усăллă, тĕрĕс, тĕплĕ (пĕр-пĕр ĕçе мĕнле тăвасси çинчен калаççĕ).

Реабилитация—реабилитаци—ырă ята, малтан çухатнăскере, каялла тавăрни, малтанхи правасене çĕнĕрен пани.

Реакция—реакци—1) химире темиçе япала пĕрлешнипе урăх тĕрлĕ япала пулни; 2) политикăра революципанисене пĕтерсе каллех кивĕ йĕркесене пăхăнса пурăнасси патне илсе пыма тăрăшни, каялла чакни; революциллĕ движение хирĕç кĕрешекен политика; рабочи организацисене тата пĕтĕм малта пыракан шухăшсене хирĕç кĕрешни; демократие чарса, путарса пыни; буржуазипе помещиксен тискер те чи кивĕ йĕркисене чĕртсе ура çине тăратни (фашизм, монархи).

Реванш—тавăрни, тавăру. Вăрçăра çĕнтернĕшĕн, çĕмĕрсе тăкнăшăн тавăрма тăрăшни. Сăмахран, фашистла вăрă-хурахсем хăйсене Сталинград çывăхĕнче историре пулман поражени кӳнĕшĕн, вĕсен 330 пинлĕ çарне пĕтерсе тăкнăшăн, пире тавăрма тăрăшрĕç. Вĕсем совет çарĕсене Харьков таврашĕнче çавăрса илсе, „нимĕç Сталинграчĕ“ туса хума тăрăшрĕç. Анчах гитлерла командованин Сталинградшăн тавăрма хăтланни путланса ларчĕ.

Регент—монархиллĕ государствăн вăхăтлăх пуçлăхĕ. Çамрăк патшан, хут çинче государство пуçлăхĕ пулса тăраканскерĕн, опекунне çапла калаççĕ. Регент государство пуçлăхĕн обязанноçĕсене унăн ячĕпе туса тăрать. Патша вырăнне государствăна тытса тăракан çынна регент теççĕ.

Региональный—регионаллă—облаçăн, облаçри тенине пĕлтерекен сăмах (регио—çĕрçыв, область сăмахран пулса кайнă). Вăл пĕр-пĕр çĕршыва е облаçа, вырăнти (облаçри) пĕр-пĕр географиллĕ облаçа е района кĕрекен çĕршывсен интересĕсене пырса тивекен ĕçсем тени

пулать. Региональный пакт—пӗр-пӗр географиллӗ облаҫра вырнаҫнӑ государствӑсен ушкӑнӗ (сӑмахран, Балкан ҫурутравӗнче, Инҫетри Хӗвелтухӑҫра тата ыт. те) пӗрлешсе тунӑ договор е килӗшӳ. Ун пек килӗшӳсенче тӗрлӗрен обязательствӑсем пулма пултараҫҫӗ, сӑмахран, ҫав договора алӑ пусакан государствӑсем хушшинче вӗсене интереслентерекен ыйтусем тӑрӑх информаци, канашлу парса тӑрасси, ҫав килӗшӗве алӑ пусакан ҫӗршыв, килӗшӗве алӑ пусман ҫӗршывпа вӑрҫма тытӑнсан ыттисен, ҫав договор ҫине алӑ пусаканнисен, вӑрҫа хутшӑнмасӑр тӑрасси (нейтралитет тытасси) ҫинчен; килӗшӗве алӑ пусакан государствӑсем пӗр-пӗрин ҫине тапӑнас марри ҫинчен; урӑх государство килӗшӗве алӑ пуснӑ государство ҫине пырса тапӑнсан, ыттисем ӑна пулӑшма тивӗҫли ҫинчен т. ыт. те.

**Редукция**—редукци—а) каялла илсе кайни; б) каялла тавӑрса ӑсатса яни, тавӑрни; в) пӗр-пӗр паллӑ тӗс пани; 1) куҫни, кӑткӑс тӗсрен ансат тӗс туса хуни; 2) биологире—вӑйсӑрланни, пысӑк япаларан пӗчӗк япала туса хуни тата пӗр-пӗр орган, организмшӑн малтанхи пӗлтерӗшӗ ҫухалнипе, хӑйӗн тытӑмне ансатрах пулмалла улӑштарни; 3) чӗлхе наукинче—сасӑ ҫӑмӑлланни.

**Режим**—йӗрке—1) государство йӗрки, ҫӗршыва тытса пымалли йӗрке („кивӗ режим"—кивӗ йӗрке); 2) мӗнле те пулин учрежденири, общежитири тата ытти ҫерти пурнӑҫ йӗрки; 3) тухтӑр сывмар ҫынна мӗнле пурӑнмалли тата ҫимелли ҫинчен каласа панӑ йӗрке.

**Резерв**—запас, хатӗр.

**Резидент**—империалистла государствӑсен формально вӗсене пӑхӑнса тӑман е вӗсен протекторачӗ (протекторат сӑмаха пӑхӑр) пулса тӑракан государствӑсен правительствисем ҫумӗнчи тата вӗсен хӑйсен колонисенчи уполномоченнӑйӗсен ячӗ.

**Резиденция**—резиденци—государство е правительство пуҫлӑхӗ пуранакан вырӑн.

**Резюме**—пысăк шухăша е темиçе çын шухăшĕсене пĕрлештерсе кĕскен каласа хуни, итог, вывод.

**Рейд**—вăрçăра утлă çар е машинăсем çине ларса çӳрекен çар тăшман тылне кĕрсе çĕмĕрни, сиен кӳрсе тухни.

**Рейдер**—вăрçакан государствăсен çыран хĕррисем патнелле хĕç-пăшал, çар материалĕсем, чĕртавар, апатçимĕç тиенĕ çĕршер пăрахутсем пыраççĕ. Вăрçакан çĕршывсенчен кашниех хăйĕн тăшманĕн порчĕсем патне çав пăрахутсене пыма чарса лартма тăрăшать. Тăшман хăйне кирлĕ хатĕрсене ытти çĕршывсенчен илсе килессине хирĕç уçă тинĕсе тухса кĕрешет. Çав тĕллевпе вара крейсерсене е хăвăрт çӳрекен карапсене уçă тинĕсе рейда кăларса яраççĕ, вĕсем вара, лайăх хĕçпăшалланнăскерсем, тĕрлĕрен разведкăпа уçă курса, уçă тинĕсре çул çинче грузсем тиесе пыракан пăрахутсене тĕл пулса вĕсене шыва путараççĕ. Çавăн пек грузсем тиесе пыракан пăрахутсене çул çинче тĕл пулса путаракан карапсене рейдер е катер теççĕ.

**Рейнская демилитаризованная зона**—Версальти мирлĕ договорăн 42-мĕшпе 43-мĕш статьисем тăрăх Германи Рейн шывĕн сулахай енче тата Рейн шывĕн сылтăм енчи 50 километрлă анлăшра нимĕнле çар сооруженисене те тумалла мар, нимĕнле хĕçпăшаллă вăйсем те тытмалла мар тата çар хатĕрĕсене те тытса усрамалла мар тесе обязательство илнĕ. Çак территорие Рейнри демилитаризациллĕ зона тесе ят панă. Германи хăйĕн çав Рейнри зона çинчен пĕтĕм тĕнче умĕнче панă обязательствине тата та тепĕр хут 1925 çулта Локарнори договор çине алă пусса çирĕплетсе панă. Германире фашистсем влаçа хăйсен аллине илсен, çав Локарнори договора пăрахăçа кăларнă та хăйсен çарĕсене Рейн зонине кĕртсе янă.

**Рейхсвер**—1914—1918 çулсенчи империализмлă вăрçă пĕтсен Версальти договора тунă хыççăн Германи çарĕсене çавăн пек ят панă. Версальти договор Германие хăйне сыхлама тата „шалти йĕркене" тытса тăма кăна хĕçпăшаллă вăйсем тытма ирĕк панă. Рейхсверăн 10 ди-

визирен (100 пин салтакран) ытла мар пулмалла пулнӑ. 1935 ҫулта Гитлер Версальти договорӑн ҫар статьисене пӑхӑнма пӑрахнӑ та рейхсвера ытла та нумай ӳстернӗ.

**Реквизиция**—реквизици—уйрӑм ҫынсен е обществӑллӑ организацисен тӗрлӗ япалисене закон тӑрӑх хакне тӳлесе ирӗксӗр туртса илни е вӑхӑтлӑха илни.

**Реклама**—пӗр-пӗр ӗҫ е япала, е ҫын ҫинчен ытлашши мухгаса, пурне те ҫавӑн ҫинчен пӗлтерме тӑрӑшни, пӗлтермелли майсем.

**Реконструкция**—реконструкци—ҫӗнетни, тӗпренех ҫӗнӗлле туни; хуҫалӑха техника тӗлӗшӗнчен малта пыракан туни. Сӑмахран, пӗтӗм халӑх хуҫалӑхӗнче электричество вӑйӗпе, электричество хӑвачӗпе пысӑк усӑ курма пуҫлани.

**Реляция**—реляци—пӗлтерни (ҫар командирӗ янӑ пӗлтерӳ); награда памашкӑн ҫыннӑн паттӑр ӗҫӗсене кӑтартса ҫырнӑ хут.

**Ренегат**—каялла чакакан, ултавҫӑ, сутӑнчӑк, хӑйӗн ӗлӗкхи шухӑшӗсене пӑрахса тӑшмансен енне куҫнӑ ҫын, хӑйӗн ӗлӗкхи шухӑшӗсене хирӗҫ пыракан ҫын.

**Рента**—капитализмлӑ ҫӗршывсенчи мул хуҫисем е помещиксем укҫа-тенке вӑхӑтлӑха усӑ курма тепӗр ҫынна парса, е ҫӗре тара парса илекен тупӑш, услам.

**Реоккупация**—„ре" сӑмах сыпӑкӗ ӗҫе тепӗр хут тунине пӗлтерет. Оккупация—тытса илни, пӗр-пӗр облаҫа ҫарсене кӗртни. Реоккупация ҫӗнӗрен оккупациленине, тепӗр майлӑ каласан, малтан ҫарсене илсе тухнӑ облаҫа е ҫӗршыва ҫӗнӗрен ҫар кӗртнине пӗлтерет.

**Реорганизация**—йӗркесене тепӗр майлӑ туни, йӗркесеве урӑхлатни.

**Репарация**—репараци—вӑрҫа пула тунӑ тӑкаксене тӳлени. Гитлерла Германипе унӑн союзникӗсем, тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫа пуҫарса ярса, вӗсем хӑйсем тапӑннӑ ҫӗршывсене калама ҫук пысӑк сиен кӳчӗҫ. Нимӗҫ захватчикӗсем хӑйсем вӑхӑтлӑха оккупациленӗ совет районӗсенче тискерле ишӗлтернипе, вӑрӑ-хурах пусса ҫаратнипе кӑна вӗсем Совет Союзне 679 млрд. тенкӗлӗх, е Америка

долларĕпе шутласан 128 млрд. долларлăх сиен кӳчĕç. Çав сиене витме Совет Союзĕ Германирен 10 млрд. доллар репараци илме ыйтрĕ. Çакă вăл нимĕç фашисчĕсем хăйсем вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенче тăкак кӳнин вунă пайĕнчен пĕр пайĕ кăна пулать. Апла пулин те, Англипе Америка представителĕсем, Германи буржуазин интересĕсене сыхлаканскерсем тата Совет Союзĕ çине тăшманла пăхаканскерсем, Совет Союзĕ Германирен репараци илессине чăрмантарма хăтланаççĕ. Çав вăхăтрах США тата Англи, Германин хĕвеланăç пайне, промышленность тĕлĕшĕнчен ытларах аталаннă пайне оккупациленĕскерсем, тĕрлĕрен сăлтавсемпе хăйсем тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра сиен курнинчен темиçе хут ытларах пысăк репараци илсе тăраççĕ.

Репатриация—репатриаци—тăван çĕршыва калле таврăнни (тыткăна лекнĕ салтаксемпе ахаль граждансем, куçса кайнисем, политэмигрантсем); Совет Çарĕ Германи рĕ ç ине кĕрсе кайса темиçе пин совет çыннисене, чура тума хăваласа кайнă совет çыннисене, пирĕнпе союзлă çĕршывсен салтакĕсемпе гражданĕсене, нимĕçсен аллине лекнĕскерсене, ирĕке кăларса вĕсене хăйсен тăван çĕршывне таврăрни.

Реплика—асăрхаттарни; хирĕçле сăмах хушни; кĕске ответ.

Репрессия—репресси—таварса хĕсĕрлени; хăратмалла хăруша йеркесем; хытă айăплани.

Рептилия—çын умĕнче йăпăлтатса ırpă пулма тăрăшакан çын, сутăнчак çын; буржуазин сутăнчакла пичечĕ; çĕлен калтасем.

Республика—государство тытăмĕн форми; вăл монархиллĕ влаçран тĕпренех уйрăм тăрать, çав форма пуç пулса тăнă чухне государствăри чи аслă влаçа (парламента, президента) пĕр паллă вăхăта суйласа лартаççĕ. Буржуаллă республикăсенче чăн-чăн власть эксплоататорла сахалрахăшсен — капиталистсемпе помещиксен аллинче, ĕç халăхĕн ытларахăшне эксплоатацилесе пурă-

накансен аллинче тăрать. Советлă Социализмлă Республика—рабочисемпе хресченсен социализмлă государстви пулса тăрать; унта пĕтĕм власть хуларипе ялти ĕç çыннисен аллинче тăрать, çав власть ĕç çынни депутачĕсен Совечĕсем пулса тăраççĕ, вĕсене пурне те тивĕç, пĕртан тата вăрттăн сасăласа суйлаççĕ. Совет республикинче çынна çын эксплоатацилесе пурăнассине пĕтерне, унта чăн-чăн демократи пурнăçа кĕрсе пырать. Советлă социализмлă республикăсем—союзлă республикăсем тата автономиллĕ республикăсем пулаççĕ. Союзлă советлă республикăсем хăйсен ирĕкĕпе пĕртанлăх никĕсĕ çинче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне кĕреççĕ.

Реставрация—реставраци—пăсăлнă, ишĕлнĕ, арканнă япаласене çĕнетсе ĕлĕкхин пек туса хуни; политикăри ăнлавра—сирпĕтсе антарнă монарха, патшана калле престола лартни; революци пĕтерсе хунă строя çĕнĕрен туса хуни, тепĕр майлă каласан, контрреволюци.

Ресурсы—средствăсем, запассем, тупăш çăлкуçĕсем.

Референдум—пĕтĕм халăх сасăлани, пĕтĕм халăхран унăн шухăшне ыйтса тухни. Хăш-пĕр буржуаллă государствăсен (Швейцари) конституцийĕ пĕтĕм тĕнчери тата шалти политикăн хăш-пĕр паллăрах ыйтăвĕсем тăрăх решени йышăннă чухне пĕтĕм халăхран вĕсен шухăшне ыйтса тухма сĕнет. Анчах та буржуаллă çĕршывсенче ун пек туни комеди выляннне кăна пулса тăрать. Пирĕн Совет Союзĕнче кăна вăл пĕтĕм халăхăн чăн-чăн демократийĕ пулса тăрать.

Реформа—йĕркене улăштарни, çĕнетни.

Рецидив—таврăну; кивви патне калле таврăнни. Çакăнтан вара рецидивист сăмах пулса кайнă, вăл усал ĕç тăвакан çын, çав ĕçшĕн тĕрмере ларса тухнă хыççăн, каллех çавăн пек усал ĕç тăвакан пулнине пĕлтерет.

Реэмигрант—яланлăха пурăнма ют çĕршыва тухса кайнă эмигрант, кайран хăй тухса кайнă тăван çĕршывне калле таврăннаскер.

**Реэкспорт**—урăх çĕршывсенчен илсе килнĕ таварсене

тепӗр ҫӗршыва илсе кайса сутни. Ун пек пуринчен ытла Англи хӑтланать, вӑл ытти ҫӗршывсенчен илсе килнӗ таварсене нумайӑшне ытти ҫӗршывсене сутать.

**Ритм**—1) пӗр майлӑ, пӗр вӑхӑтра пулса пыни; килӗшӳллӗ, тикӗс ӗҫлесе, туса пыни; 2) савӑра—ударенисем (пусӑмсем) килӗшӳллӗн ылмашса пыни.

**Рокада**—ҫар анланӑвӗнчи сӑмах, фронт тӑрӑх ҫыхӑну тытса тӑнине пӗлтерет. „Чугун ҫулӑн рокадӑллӑ магистралӗ"—фронт тӑрӑх ҫыхӑну тытса тӑма пулӑшакан (ҫарсене, ҫар техникине, боеприпассене, апат-ҫимӗҫ тата ыт. те вырӑна ҫитерсе тӑма пулӑшакан) чугун ҫул линийӗ.

# С.

**„СА и СС"**—Германи фашизмӗн ҫар организацийӗсен кӗскетсе каланӑ ячӗсем. „СА"—штурмовой отрядсем; ҫав отрядсенчен чи ирсӗр пуҫкасансене суйласа илсе, вӗсенчен сыхӑлӑх (охрана) отрячӗсем тунӑ, вӗсене „СС" тенӗ. „СС" отрячӗсем полици вырӑнче пулнӑ, унсӑр пуҫне тата фашистсен лидерӗсене хураллanӑ. Ҫав отрядсем хӑйсен тискерле сӑн сӑпачӗсене Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче питӗ лайӑх кӑтартрӗҫ.

**Саботаж**—ӗҫе юри пӑсса пыни, вӑрттӑн хирӗҫлени.

**Садизм**—1) хӗрарӑмпа арҫын арлӑ пурнӑҫ тӗлӗшӗнчен аташни (половое извращение); ҫав вӑхӑтра вӗсенчен пӗри теприне асаплантарса пӗтерни; 2) пӗр ҫын тепӗр ҫынна ҫапса, хӗнесе ыраттарса е сӑмахпа каласа асап кӑтартни тата вӑл ҫав тискерле ӗҫпе хӑйӗн кӑмӑлне тултарни. Нимӗҫ фашисчӗсем чи тискер садизм тӗслӗхӗсене кӑтартрӗҫ, вӗсем мирлӗ халӑхсене—арҫынне, хӗрарӑмне, ватти-вӗттине пахмасӑрах асаплантарчӗҫ, хӑйсен калама ҫук тискерле ӗҫӗсемпе мӑнкӑмалланса мухтанчӗҫ.

**Салют**—саламлани, уйрӑм майсемпе—пушӑ патронсемпе тупӑран е пӑшалтан персе, карап ҫинче флага ҫакнипе тата ыттипе те чыс туни.

**Санация**—лайӑхрах ӗҫлекен туни; сывалтарни, сыватни.

**Санкция**—санкци—ирĕк пани е çирĕплетни; мĕнле те пулин киревсĕр ĕçшĕн наказани пани.

**Санкционировать**—çирĕплетни, ырлани.

**Сателлит**—ĕлĕк хăйĕн хуçипе кирек ăçта та пĕрле çӳрекен хĕçпăшаллă тарçа çапла ятпа чĕннĕ. Сателлит тесе тепĕр çын калانине ним шухăшламасăр туса тăракан çынна, тепĕр çынна, унăн чури выранне пулса, унăн куçĕнчен пăхса тăракана калаççĕ. Тĕнчери иккемĕш вăрçă вăхăтĕнче сателлит тесе Финляндие, Венгрие, Румыние тата ытти государствăсене те, гитлерла Германи хушнине туса тăраканскерсене, нимĕç фашисчĕсемпе пĕрле тискер ĕççем тунăскерсене, çапла ят панăччĕ. Совет Çарĕ хытă пырса çапнипе Гитлер сателличĕсем Германи майлă пулса вăрçма пăрахса, ăна хирĕç вăрçма пуçларĕç.

**Сатрап**—авалхи Персири (Иран) провинцин пуçлăхĕ; хăйне пăхăнса тăракансен пурнăçĕпе пурлăхне хăй аллинче тытса тăракан, ĕçе хăй шучĕпе епле тăвас тенĕ çавăн пек тăвакан хаяр чиновник, начальник.

**Свастика**—хĕрес еверлĕ паллă, унăн вĕçĕсене кукăртнă. Вăл авалхи тĕнри хĕрес выранне пулнă паллă. Кайран нимĕç фашисчĕсен палли (эмблеми) пулса тăнă.

**Себестоимость продукции**—продукцин хăйне ларакан хакĕ, пĕр-пĕр тавара туса кăларма тăкакланă укçа шучĕ, продукцин хăйне ларакан хакĕ пулать. Продукцин единицине туса кăларма хăйне ларакан хакне çаксем кĕреççĕ: япалана туса кăларнă чухне ĕçленипе машинăсем тата сооруженисем кивелнин хаклăхĕ (амортизаци), чĕртавар (металл, çĕркăмрăк, çăм тата ыт. те) хаклăхĕ, çав япалана туса кăларма тухнă вспомогательнăй материалсен (топливо, электроэнерги тата ыттисем те) хаклăхĕ, ĕç укçи, управление тытса тăма тухакан тата ытти изделие туса кăларас тĕлĕшпе тунă расходсем. СССР халăх хуçалăхĕн чи паллă задачи—продукцин хăйне ларакан хакне тăтăшах чакарса пырасси пулса тăрать. Продукцин хăйне ларнă хакĕ—предприяти ĕçĕн пахалăхне кăтартса паракан писенчен чи палли пулать. Продукцин хăйне

ларакан хакне йӳнетмелли ҫулсем ҫаксем: ӗҫ тухăҫлăхне хăпартви, чӗргавара, материалсене, хутмалли япаласене, электроэнергие перекетлени, управлени аппаратне тытса тăма тухакан тăкаксене чакарни, производствăн каяшӗсемпе усă курни, япаласене ытлашши турттарса ҫӳрессине чакарни, простойсемпе, машинăсем ӗҫлемесӗр тăнисемпе тата тӗрлӗ ҫухатусемпе, бракпа кӗрешни, пахалăхсăр япаласем туса кăларнине хирӗҫ кӗрешни. Япалан хăйне ларакан хакне йӳнетни социализмлă накоплени тума тата производствăна социализмла анлăлатма, халăх пурнăҫне лайăхлатма май парать.

**Северо-Атлантический союз**—Ҫурҫӗр Атлантика союзӗ. Ку союза малтан Хӗвеланăҫ Европăри пилӗк государство—Великобритани, Франци, Бельги, Голланди, Люксембург тата, вӗсемсӗр пуҫне, Канада, Америкăри Пӗрлешӳллӗ Штатсем кӗнӗ. Ҫак союза Совет Союзне тата халăх демократин ҫӗршывӗсене хирӗҫ тунă. Ҫав ӗҫе Америкăри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи влаҫра тăракан ушкăнсем ертсе пыраҫҫӗ. Ҫурҫӗр Атлантика пакчӗ вăл США-па Великобританири влаҫра тăракан ушкăнсен агрессивлă политикине „Атлантикăн икӗ енӗнче те", урăхла каласан, ҫӗр чăмăрӗн икӗ пайӗнче те пурнăҫласа пымалли тӗп хатӗр пулса тăрать. Ҫурҫӗр Атлантика пакчӗ вăл Англипе Америкăн пӗтӗм тӗнчере пуҫ пулса тăмалли агрессивлă ӗмӗчӗсемпе килӗшсе тăрать. Ку союза каярахпа ытти хăш-пӗр государствăсем те кӗчӗҫ, сăмахран, Итали, Турци, Норвеги, Дани. Ҫак договор ҫумне тата Швецие, франкистла Испание, Португалие пӗрлештерме тăрăшаҫҫӗ. Ҫурҫӗр Атлантика союзӗ тумалли плансене пурнăҫласа пырса, США-па Великобританин влаҫри ушкăнӗсем ҫак ӗҫе нумайтарах государствăсене тӳрех, е урăхла майпа хутшăнтарма, ҫапла вара вӗсене хăйсен аллине ҫавăрса илме тăрăшаҫҫӗ, вӗсене тулашри ӗҫсемпе шалти ӗҫсенче хăйсене уйрăм политика тытса пыма, хăйсен халăхӗсен интересӗсене хӳтӗлекен политика тытса пыма парас мар тесе тăрăшаҫҫӗ. США-па

Великобританири влаçра тăракан ушкăнсем хăйсен агрессивлă планĕсене, Англипе Америкăн пĕтĕм тĕнчери пуç пулса тăмалли планĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре çавнашкал государствăсемпе, вĕсен пулăшăвĕпе усă курма хатĕрленеççĕ. Вĕсем пурнăçласа пыракан агрессивлă политика—çĕнĕ вăрçă пуçласа ямалли политика пулса тăрать.

**Сейм**—хăш-пĕр государствăсенчи парламентсен ячĕ.

**Селекция**—селекци—лайăх ăратлă аçа тата ама выльăхсем е лайăх сортлă вăрлăхсем суйласа илсе, килти выльăх-чĕрлĕхсене тата культурăллă ӳсентăрансене лайăхлатса пыни. Типĕ çанталăкра та вăйлă тырпул паракан сортсем ӳстерсе çитĕнтерни те селекци пулать. Совет Союзĕнче типĕ çанталăка, сивĕ хĕле парăнман, тăкăнман, ӳкмен тата чир-чĕрсенчен сыхланма пултаракан тĕштырă сорчĕсене чылаях ӳстерсе çитĕнтерни. Çавăн пекех лайăх йĕтĕн, çĕр мамăкĕ, улма çырла, пахча çимĕç сорчĕсене те сахалах мар ӳстерсе çитĕнтерне. Улма-çырла йывăççисене лайăхлатса пырас ĕçре уйрăмах совет ученăйĕ Мичурин калама çук пысăк ĕçсем туса ирттерне. ССР Союзĕнчи колхозсенче, совхозсенче ӳсентăрансемпе выльăх-чĕрлĕхсене лайăхлатса пырас тĕлĕшпе пысăк опытсем туса ирттереççĕ. Çак ĕçе колхозсенчи йышлă массăсем хутшăнаççĕ.

**Сенат**—авалхи Римри государствăн аслă учрежденийĕ; Францире—çӳлти палата, патша Российĕнчи государствăн аслă учрежденийĕсенчен пĕри.

**Сенсация**—сенсаци—мĕнле те пулин событи пулса иртни тавра ахалех шавлани.

**Сенсационный**—сенсациллĕ—питĕ нумай каластаракан, тĕрлĕ майлă каластаракан (хыпар).

**Сентиментальный**—пур япалана та чĕре патне илекенскер, хураканскер, чĕринче мĕн пуррине пĕтĕмпех ытлашшипех каласа пама тăрăшаканскер; калама çук кăмăллă—вашаватлă, çав тери çепĕç (çын).

**Сеньорен-конвент**—аслисен совечĕ. „Сеньор" сăмах латинла асли тенине пĕлтерет. Конвент—пуху, канашлу,

съезд тени пулать. Буржуалла-демократиллё çёршывсен парламенчёсенче сеньорен-конвент (аслисен совечё), парламента кёрекен партисен лидерёсенчен пулса тăраканскер, лару вăхăтне, ыйтусене мёнле йёркепе пăхса тухмаллине, тёрлёрен комиссисен составне палăртса хурать.

**Сепаратизм**—уйрăлу шухăшё; государствăн пёр-пёр пайё унтан уйрăлса, хăйне уйрăм государство тума тăрăшни.

**Сепаратный мир**—сепаратлă мир—уйрăм мир, пёр союзра пулса вăрçакан государствăсенчен пёри тăшманпа уйрăмах пёччен тунă договор.

**Сеттльмент**—англичансен сăмахё, ял тенине пёлтерет. Çак сăмахпа час-часах Шанхайри пётём тёнчери сеттльмента пёлтерсе калаççё. 60 çул каярах Шанхай хулин пёр пайне Китай правительствинчен ют çёршыв (чи малтан Англи) купцисем пурăнма „тара илнё". Ун чухне вăл пушхир пулнă. Халё вăл хулан чи лайăх пайё, унта пёр миллиона яхăн çын пурăнать.

**Сервитуты**—капитализмлă обществăсенче ют çын пурлăхёсемпе усă курмалли право.

**Сизифов труд**—Сизиф ёçё. Сизиф—Коринфăн, авалхи Грецин нумай государствисенчен пёрин, патши. Çакăн пек юмах пур: турăсем Сизиф çине çиленнё пулать те вара ăна ёмёр-ёмёрех йывăр чул муклашкине чăнкă ту çине кустарса хăпартмалла суд тунă пулать. Чул муклашки çўле хăпарса çитсен, вăл каллех аялалла кусса аннă та, Сизифăн каллех çав ёçе çёнёрен пуçламалла пулнă пулать. Çавăнпа та ёнтё татти-сыпписёр тăсăлакан, ним усăсăр пулса пыракан ёçе „Сизиф ёçё" теççё.

**Симптом**—пёр-пёр явленин палли (сăмахран, чир палли); мёнле те пулин ёç, факт е событи, ёçлё çыннăн сăмахё, мёнле те пулин пысăк ёçре улшăну пулассине е политикăллă çул-йёр мёнле аталанассине палăртса тăнине симптом теççё.

**„Синие книги“**—кăвак кĕнекесем—Англи парламенчĕ сĕннипе пичетленекен официаллă документсем. „Кăвак“ тесе вĕсене хăйсен яланхи хуппи тĕсĕ тăрăх калаваă, тепĕр чухне хуппи хăмăр е шурă пулсан та вĕсене „кăвак кĕнеке“ тесе калаççĕ. Вĕсене 1681 çултанпа пичетлеме пуçланă. Парламент сессийĕ вăхăтĕнче кашни кунах пренире каланă сăмахсене, ыйтусене тата палатăсен решенийĕсене уйрăм кĕнеке туса—„Кăвак кĕнеке“—кăлараççĕ.

**Сити**—Лондон хулинчи пĕр район ячĕ, унта Англи банкĕсемпе суту-илÿ тата промышленность фирмисен правленийĕсем вырнаçнă. Урăх пĕлтерĕшпе „сити“ тесе Англи правительствин политики мĕнле пулмаллине кăтартса пыракан Англи банкирĕсемпе шултра хуçасене калаççĕ. „В кругах сити“—„сити таврашĕнче“ тени, унти банкирсемпе шултра хуçасем мĕн тума шутлани, мĕн тума хушни пулать.

**Ситуация**—ситуаци—лару-тăру, обстановка.

**Скептицизм**—1) философи вĕрентĕвĕ, çак вĕрентÿ тĕнче çинчен пĕлсе илме пултарнине ĕненмест; 2) иккĕленни, мĕне те пулин ĕненменни. С к е п т и к—пур ĕç çине те иккĕленсе, пурин çине те ĕненмесĕр пăхакан çын.

**Славяне**—славянсем—халăхсен пысăк ушкăнĕ, вĕсен чĕлхи те культури те чылай пĕр пек. Славян халăхĕсем хĕвелтухăçрисем (вырăссем, украинецсем, белоруссем), хĕвеланăçрисем (поляксем, чехсем, славянсем, кашуйсем тата серб-лужичансем) тата кăнтăртисем (сербсем, хорватсем, словенецсем, болгарсем тата македони славянĕсем) çине уйрăлаççĕ. Славянсем ĕмĕр-ĕмĕрех Европăн пысăк пайне, Балтийски тинĕс çыран хĕрринчи çĕрсене, Днепр, Днестр, Дунай, Буг, Висла, Лаба (Эльба), Одер, Драва, Сава, Ока тата Атăл пуçламăшĕнчи çĕрсене йышăнса тăнă.

Славянсем çинчен пирĕн эрăри 1-мĕшпе II-мĕш ĕмĕрсенче асăна пуçланă. Славянсем унчухнехи малта тăра-

кан культурӑна тунӑ тата этем цивилизацине чылай пуянлатнӑ.

**Советско-американское соглашение**—Совет Союзӗпе Америка хушшинче „Агрессие хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра пӗрне-пӗри пулӑшмалли принципсем ҫинчен" тунӑ килӗшӳ. Ӑна 1942 ҫулхи июнӗн 11-мӗшӗнче тунӑ. Ҫав килӗшӳ 1942 ҫулхи майӑн 26-мӗшӗнче Совет Союзӗпе Англи хушшинче тунӑ договорпа пӗрле виҫӗ государство: США, Совет Союзӗ тата Англи хушшинчи коалицин никӗсӗ пулнӑ.

**Советско-Чехословацкий договор**—СССР-па Чехословаки республики хушшинче туслӑ пурӑнасси, пӗрне-пӗри пулӑшасси тата вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрта килӗштерсе пурӑнасси ҫинчен 1943 ҫулхи декабрӗн 12-мӗшӗнче тунӑ договор. СССР-па Чехословаки республики хушшинче тахҫанах туслӑх пулнӑ. Вӗсем 1935 ҫулхи майӑн 16-мӗшӗнче пӗрне-пӗри пулӑшасси ҫинчен договор тунӑ. Мюнхенри валеҫӳ хыҫҫӑн, гитлерла Германи Чехословаки ҫӗрӗ ҫине кӗрсе кайсан, Совет Союзӗ ҫавна хирӗҫ хытӑ протестлерӗ. Гитлерла Германи СССР ҫине килсе тапӑнсан, совет халӑхӗпе Чехословаки халӑхӗ тӑшмана хирӗҫ кӗрешмелли Союз туса хучӗҫ. 1941 ҫулхи июлӗн 18-мӗшӗнче Лондонра СССР-па Чехословаки правительствисем хушшинче Германие хирӗҫ пӗрлешсе вӑрҫасси ҫинчен килӗшӳ тунӑ. Германие хӗвеланӑҫӗнчен те, кӑнтӑртан та, хӗвелтухӑҫӗнчен те пырса ҫапма хатӗрленнӗ чухне СССР-па Чехословаки хӑйсем хушшинчи сыхӑнӑва 20 ҫуллӑха тунӑ договорпа татах та тепӗр хут ҫирӗплетсе пачӗҫ.

**Совет безопасности**—Хӑрушсӑрлӑх совечӗ—Пӗрлешнӗ Нацисен Организацин паллӑрах органӗсенчен пӗри. Мирлӗ пурнӑҫа сыхласа тӑрас ӗҫре Хӑрушсӑрлӑх совечӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Пӗрлешнӗ Нацисен Организаци уставӗн 24-мӗш статьинче ҫапла каланӑ: „Пӗтӗм тӗнчере мирлӗ пурнӑҫа тата хӑрушсӑрлӑха сыхласа тӑрас тӗлӗшпе Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗ, унӑн членӗсем Хӑрушсӑрлӑх совечӗ ҫине чи тӗп ответлӑх

хураççĕ*, тенĕ. Хăрушсăрлăх советне 11 член кĕрет. Хăрушсăрлăх совечĕн яланхи пилĕк членĕ Совет Союзĕ, США, Великобритани, Китай тата Франци пулса тăраççĕ. Гитлерла Германие çапса çĕмĕрес ĕçре Пĕрлешнĕ Нацисен Организацинче аслă державăсем—СССР, США, Англи тата Франци татăклă выран йышăнчĕç. Чи паллăрах ыйтусене çав государствăсем пĕр пулса, килĕшсе татса пани мирлĕ пурнăçа тата хăрушсăрлаха сыхлама пит те кирлĕ услови пулса тăрать. Хăрушсăрлăх совечĕн Çар штаб комитечĕ пур, вăл Хăрушсăрлăх советне мĕнпур çар ыйтăвесем тĕлĕшпе те, сăмахран, агрессие хĕç-пăшал вăйĕпе пусарма тивсен, çарсемпе усă курас ĕçре пулăшса тăрать. Çар штаб комитетне Хăрушсăрлăх совечĕн яланхи членĕсен—СССР, США-н, Англин, Китайăн тата Францин çар штаб начальникĕсем кĕреççĕ. Хăрушсăрлăх совечĕн решенийĕсене çав решенисемшĕн ытларах сасă (7 сасă парсан, çав шутпа советăн яланхи пилĕк членĕ, тепĕр майлă каласан, пилĕк аслă держава) парсан çеç йышăнать. Çапла вара, кирек мĕнле ыйтăва та татса парас тесен, çав решенишĕн СССР, США, Великобритани, Китай тата Франци пĕр пулса сасăлани кирлĕ. Тавлашура хутшăнакан çĕршывсем, тавлашăва мирлĕ майсемпех татса парасси çинчен сăмах пынă чухне, сасăлассинчен тытăнса тăраççĕ. Советра тавлашăва мĕнле те пулсан вăйпа татса парасси çинчен ыйту тănă чухне, тавлашăва хутшăнакан çĕршывсем те сасăлаççĕ. Халĕ США-па Англи, кирек мĕнле пулсан та, пилĕк аслă державăн советра пĕр пулса ĕçлес принципне пĕтерсе лартма тăрăшаççĕ, Генеральнăй ассамблейăн пур сессийĕсенче те вĕсем çав принципа пĕтерсе лартассишĕн кĕрешеççĕ. Совет Союзĕ пачах урăхла: вăл çине тăрсах пĕр пулса ĕçлемелли принципа сыхласа хăварассишĕн кĕрешет.

**Совет по опеке**—Опека совечĕ—Пĕрлешнĕ Нацисен Организацин органĕсенчен пĕри. Çав совет колониллĕ тата мандат тăрăх тытса тăракан территорисем пирки тухса тăракан ыйтусене татса парас енĕпе ĕçлет. Пĕр-

лешнĕ нацисем ҫав территорисенче пурӑнакан ҫынсен пурнӑҫне лайӑхлатассишĕн тӑрӑшаҫҫĕ, унта вĕсен „самоуправленине аталантарса пыма, ҫав халӑхсен политикӑлла ĕмĕт-туртӑмĕсене кирлĕ пек шута илме“ пулаҫҫĕ, „халӑхсене политика, экономика тата социаллӑ ыйтусем тĕлĕшпе малалла аталантарса пыма пулӑшма, хӑйсен тĕллĕнех, никама та пӑхӑнса тӑмасӑр пурӑнмалла тума, этем прависене тата вĕсен раса, ӑру, чĕлхе, тĕн уйрӑмлӑхĕсене пӑхмасӑрах, пурне те тĕп ирĕклĕхсем тума пулӑшма“ пулаҫҫĕ. Анчах та ҫак хӑйсем панӑ чаплӑ сӑмахсене, колониллĕ е мандат тӑрӑх тытса тӑракан государствӑсем чӑннипе опека майĕпе те, тата урӑхла майсемпе те пурнӑҫа кĕртсе пымаҫҫĕ.

**Совет экономической взаимопомощи**—Пĕр-пĕрне экономика тĕлĕшĕнчен пулӑшмалли совет. 1949 ҫулхи январь уйӑхĕнче Мускавра Болгари, Венгри, Польша, Румыни, СССР, Чехословаки представителĕсен экономика ыйтӑвĕсене сӳтсе-явма пухӑннӑ канашлӑвĕ пулса иртнĕ. Канашлу малта асӑннӑ государствӑсем хушшинчи экономикӑллӑ ҫыхӑнусене вӑйлатас ĕҫре чылай пысӑк ҫитĕнӳсем тунине палӑртнӑ. Ҫав ҫыхӑнусем вӑйланни чи малтан, тавар ҫаврӑнӑш нумай ӳснинче палӑрса тӑрать. Экономикӑллӑ ҫыхӑнусем туса хунине тата пĕр-пĕринпе экономика тĕлĕшĕнчен килĕштерсе ĕҫленине пула, халӑх демократин ҫĕршывĕсемпе СССР хӑйсен наци хуҫалӑхне юсаса малалла аталантарас ĕҫе хӑвӑртлатма май тупрĕҫ. Канашлу ҫакна палӑртрĕ: Америкӑри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Англин тата Хĕвеланӑҫ Европӑри хӑш-пĕр ытти ҫĕршывсен правительствисем, чӑннипе илсен халӑх демократин ҫĕршывĕсемпе тата Совет Союзĕпе суту-илӳ тӑвасшӑн мар, суту-илӳ ҫыхӑнӑвĕсене бойкот тӑваҫҫĕ, мĕншĕн тесен Совет Союзĕпе халӑх демократин ҫĕршывĕсем «Маршалл планĕ» вĕсен суверенитетне тата наци экономики интересĕсене пӑсать тесе шутласа, ҫав плана хушнине пӑхӑнма килĕшмеҫҫĕ. Ҫакна шута илсе, канашлу халӑх демократин ҫĕршывĕсемпе СССР пĕр-пĕринпе

экономика тĕлĕшĕнчен анлăрах сыхăнса ĕçлесси çинчен, çавăн пек ĕçлессине организацилеме май пуррипе çукки çинчен сÿтсе явнă.

Халăх демократин çĕршывĕсемпе СССР пĕр-пĕрин хушшинчи экономика тĕлĕшĕнчен анлăрах çыхăнса ĕçлетчĕр тесе, канашлу „пĕр-пĕрне экономика тĕлĕшĕнчен пулăшмалли совет" туса хума йышăннă. Çав совета канашлура пулнă çĕршывсен представительсенчен тумалла, унта кашни çĕршыв представителĕсен хисепĕ пĕртан пулмалла. Вăл совета пĕр-пĕрин хуçалăхри опычĕпе паллашма, пĕр-пĕрне чĕртавар, апат-çимĕç, машинăсем, оборудовани тата ыт. те парса пулăшма туса хунă. Канашлу тата çапла йышăннă: пĕр-пĕрне экономика тĕлĕшĕпе пулăшмалли совет вăл уçă организаци пулса тăрать, унта Европăри ытти çĕршывсем те, çав совет принципĕсене йышăнаканнисем тата малта асăннă çĕршывсемпе экономика тĕлĕшĕнчен анлăн çыхăнма шутлаканнисем, кĕме пултараççĕ. Пĕр-пĕрне экономика тĕлĕшĕнчен пулăшмалли совет пĕр-пĕр ыйтупа интересленекен держава килĕшсен çеç çав ыйту пирки решенисем йышăнать. Çав совет хăйĕн палла срокĕнче пухăнакан ларăвĕсене советра тăракан кашни çĕршывра черетпе ирттерет, унта вара лару пухма сĕннĕ çĕршывăн представителĕ председатель пулать. Çав канашлу хыççăн совет членĕ пулма Албание йышăннă.

**Солидарность**—1) пĕтĕмĕшлĕ ответлăх (пурте кашни çыншăн, кашни пуриншĕн); 2) пĕрлĕхлĕ интерессем, пĕрлĕхлĕ шухăшсем тата ытти те.

**Сома**—ÿт-тир (тело).

**Социальная демагогия**—демагоги тесе итлекенсен шухăшĕсем майлăрах çаптарса, вĕсене агитаци тăваканни енне çавăрас шутпа ултавлă агитаци меслечĕсемпе усă курнине калаççĕ. Массăшăн пыракан кĕрешÿре уйрăмах çавăн пек демагогипе, социаллă демагогипе, тепĕр майлă каласан, тĕрлĕрен социаллă сийсен, обществăллă ушкăнсен тата классен интересĕсене те пырса тивекен ыйтусем

тăрăх вĕсене пурне те татса пама сăмах парассипе ултавлăн усă курни.

**Социалистическая единая партия Германии (СЕПГ)**— Германири социалистла пĕрлехле парти. Вăл икĕ парти: Германири коммунистла партипе социал-демократла парти пĕрлешнипе пулса тăнă. 1946-мĕш çулхи апрелĕн 21—22 мĕшĕнче Берлин хулинче Германири коммунистсен тата социал-демократсен партийĕсен пĕрлештерÿллĕ (объедивительный) 1-мĕш съезлĕ пулса иртнĕ, çав съездах СЕПГ партин учредителлĕ съезчĕ вырăнне те пулса тăнă. Съезд партин Тĕп Правленине суйланă. Правленин председателĕсем пулма Отто Гротевольпа Вильгельм Пика суйланă.

**Спартанский**—спартанла—çирĕп, чăтăмлă. Авалхи Грецири пĕчĕк государство Спарта яланах тĕрлĕрен çар вăййисем туса ирттернипе хăйĕн государствинчи мĕнпур арçынсене çирĕп те чăтăмлă, темĕнле йывăрлăхсене те чăтса ирттерме пултаракан воинсем туса хатĕрленĕ. Çакăнтан вара спартанла (чăтăмлă, çирĕп) текен сăмах тухса кайнă.

**Специфический**—спецификăллă—пĕр япалана е явлениие çеç тивĕçли; хăйне уйрăм, ăрасна тăракан.

**Спиритизм**—вилнĕ çынсен чунĕсем „леш тĕнчере" пурăнаççĕ тата вĕсемпе тĕл пулма та пулать, тесе тĕшмĕшле сÿпĕлтетни, реакцилле шухăш.

**Спиритуализм**—идеализмлă философи; вăл уççăнах тĕнче тура тытса тăнипе кăна пурăнать тесе вĕрентет. Çак реакцилле философи матери (тĕнчере пуррисем) чăн пурвăçра пуррине йышанмасть.

**Спорадический**—вăхăтран вăхăта сиксе тухаканскер, пур çĕрте те пулманскер, тăтăш пулманскер.

**Стабилизация**—стабилизаци — çирĕплении, пĕрмайлă пулса тăни.

**Стадия**—стади—çутçанталăкри е обществăллă пурнăç аталанавĕнчи пĕр-пĕр сыпăк, тапхăр.

**Стандарт**—стандарт—япалан кӑтартулла тӗслӗхӗ, виҫе тата пахалӑх енчен пӗр пек условисене пӑхӑнса тунӑскер. Машинӑсен, строительствӑра кирлӗ материалсен, хутӑн, пир-авӑрӑн стандарчӗсем пур, ҫавӑн пекех ял хуҫалӑх продуктисем: ҫу, ҫӑкӑр, аш-какай, ҫӑм тата ытти валли те стандарт пур.

**Стандартизация** — промышленноҫа, производствӑна рационализацилес тӗлӗшпе пӗр тӗслӗ япала туса кӑларттарма пуҫлани. Апла туни продукци туса кӑларассине йӳнетет тата хӑвӑртлатать, ӗҫ вайне перекетлет.

**Статут**—статут—устав, положени, пӗр-пӗр япалан законӗ; 1) Англире суд решени йышӑнса кӑларакан закона ҫав ятпа калаҫҫӗ; 2) хӗвеланӑҫ славянсен тата вӗсемпе кӳршӗллӗ государствӑсен историнче закон кӑларассин кодексӗсем; 3) 1848 ҫулхи Сардини конституцийӗ, кайран Итали королевствин конституцийӗ пулса тӑнӑскерӗн ячӗ; 4) мӗнле те пулсан орден уставӗн ячӗ (сӑмахран, Хӗрлӗ Ялав орденӗн статучӗ).

**Статус кво**—„хальхи лару-тӑру" тенине пӗлтерет. Политикӑллӑ литературӑра „статус кво" текен сӑмах ҫаврӑнӑшӗпе яланах ҫакӑн пек пуплевре усӑ кураҫҫӗ: „сохранить статус кво", „восстановить статус кво". Вӗсем хальхи лару-тӑрава мӗнле пулнӑ ҫаплипех, тӗкӗнмесӗрех хӑварас е мӗнле те пулин ӗҫ пуличчен, мӗнле те пулин договора тӑвиччен малтан пулнӑ лару-тӑрӑва каллех малтан пулнӑ пекех тӑвас тенине пӗлтереҫҫӗ.

**Стерилизация**—стерилизаци—ҫак сӑмахпа икӗ пӗлтерӗше ӑнлантарса параҫҫӗ: 1) пысӑк температура туса е хими япалисемпе микроорганизмсене пӗтернине; 2) вӑрлӑха пӗтерсе ҫуратмалла мар тунине; ҫынна (е выльӑха) ҫуратмалла мар туни. Рентген ҫутисенче вырттарнипе, уйрӑм эмелсемпе усӑ курса, арлӑх парӗсене кӑларнипе ача ҫуратмалла мар тӑваҫҫӗ.

**Стерлинговый блок**—хӑйсен валютисем (хут укҫисем) тӗлӗшпе килешӳллӗ политика тытса пыракан ҫӗршывсен

ушкăнне çапла ят панă. Çавăн пек килĕшӳллĕ ĕçлесси малтан ятарласа килĕшӳ тумасăрах пулса пырать Вăл Англипе суту-илӳ туса пырассишĕн тăрăшакан чылай çĕршывсем хăйсен пурнăçне пăсас мар тенипе пулса пырать.

**„Стопроцентные американцы“**—США-ри шовинистла буржуазипе мещансем хăйсене США-ри капитализмлă строя сыхлакансем, чăн-чăн тăван çĕршывшăн тăрăшакансем, „çĕр процентлă американецсем“ тесе ĕненгерме тăрăшаççĕ. Вĕсем революцилле рабочи движенине темĕн пек курайманçĕ. Вĕсен лозунгĕсем: „Америка американецсемшĕн çеç“, „ют çĕршыв çыннисем тĕп пулччăр“, „хĕрлисене пурне те çĕршывран кăларса ывăтмалла“, теççĕ. Вĕсен организацийĕсем: вак буржуаллă фашистла „Америка легионĕ“ тата фашистла хулиганла „Ку-Клукс Клан“ пулса тăраççĕ.

**Стратегия военная**—вăрçă тума хатĕрлесси, вăрçă туса пырасси çинчен, государствăн хĕçпăшаллă вăйĕсене ертсе пырасси çинчен вĕрентни.

**Стратегическое сырье**—çара, çар промышленноçне кирлĕ чĕртавар. Вăрçă вăхăтĕнче пĕтĕм промышленность вăрçă валли ĕçлет, апла пулсан пур чĕртавар та çар валли кирлĕ чĕртавар пулса тăрать. Анчах та стратегиллĕ чĕртавар тесе уйрăмах çар валли питĕ кирлĕ чĕртаварсене, государствăшăн вăрçă вăхăтĕнче тупма йывăртарах чĕртаварсене калаççĕ. Ун пек чĕртаварсем—хĕçпăшал тата боеприпассем тумаллисем, каучук, тимĕр руди, çĕр мамăкĕ, кĕмĕл, хура тăхлан, хром руди, нефть.

**Страусовая политика**—страус политики—капланса килекен хăрушлăхран, ăна курман пек пулса, вăл сана тивмесĕрех иртсе каять пек тусан, çăлăнса юлма пулать тесе сӳпĕлтетекен политикăна страус политики теççĕ. „Страус политики“ текен сăмах çаврăнăшĕ французсен юптаравĕнчен тухса кайнă. Çав юптарура пĕр страус çинчен каланă, вăл ун çине хăрушлăх капланса киле

пуҫласан, куҫне хупнă та пуҫне ҫунатти айне пытарнă, ҫапла тунипе вăл хăрушлăхран ҫăлăнса юлма шутланă.

**Стреза**—Ҫурҫĕр Италири хула. Политика сăмахĕсен словарьне ҫак сăмах 1935 ҫулхи апрель уйăхĕнче Стреза хулинче виҫĕ государствăн: Англин, Францин тата Италин конференцийĕ пулса иртнĕренпе кĕрсе юлнă. Ҫав конференци Версальти договор тăрăх ҫар вăйĕсен хисепĕ тĕлĕшпе тунă постановление пăснине хирĕҫ резолюци йышăннă. Резолюцире Германи пĕтĕм тĕнчери договорсене ҫĕнĕрен пăссан, ăна айăпламалла тесе палăртса хăварнă. Асăннă виҫĕ державăн Германие хирĕҫ тунă пĕрлĕх фронтне Стреза фрончĕ тесе ят панă. Анчах ҫав фронт нумая пыман. Абиссинире вăрҫă пуҫланнă хыҫҫăн, Англипе Франци Италие хирĕҫ санкци тусан, Стреза фрончĕ саланса кайнă.

**Субординация**—1) пĕрне-пĕри пăхăнса тăни; 2) кĕҫĕнни аслине пăхăнни, служба дисциплинине ним сăмахсăр пурнăҫа кĕртсе пыни.

**Суверен**—буржуази законĕнче—чиаслă влаҫа тытса тăракан (монархире—патша; демократире—халăх).

**Суверенитет**—1) чи аслă влаҫть, чи аслă правасем; 2) государство ытти государствăсене пăхăнса тăманни. С у в е р е н и т е т г о с у д а р с т в а—государство политика тĕлĕшĕнчен никама та пăхăнса тăманни. Суверенлă государство тесе хăйĕн тулашри тата шалти политикинче тепĕр государствăна пăхăнса тăман государствăна калаҫҫĕ. Европăри ҫĕршывсем тĕлĕшпе США тытса пыракан политика („Маршалл планĕ") ҫав ҫĕршывсен суверенитетне (никама пăхăнса тăманлăхне) ҫухатасси патне илсе пырать.

**Суверенный**—ытти государствăна пăхăнса тăманскер, чи аслă правалли.

**Сфера**—сфера—грексен чĕлхинчен тӳрех куҫарсан—чăмăр тенине пĕлтерет. Анлăрах ăнланупа сфера—область, тĕрлĕрен ыйтусем, тавралăх, обстановка тенине пĕлтерет. С ф е р а в л и я н и я—империалистла ҫăхансем кая

юлнă тата вăйсăр государствăсене политика тата экономика тĕлĕшĕнчен хăйсене пăхăнтарса тăрас формăсенчен пĕри. Вăл çакна пĕлтерет: пĕр-пĕр çĕршывра тавлашакан икĕ е темиçе государство çав çĕршыва хăйсем хуçа пулса тăракан облаçсене (влияни сферисене) валеçесси çинчен пĕрлешсе калаçса татăлаççĕ. Тепĕр чухне вĕсем çăмах вĕççĕнех килĕшеççĕ. Хăйсем хуçа пулса тăмалли облаççем çине çавăн пек çĕршыва валеçнин тĕллевĕ çакă: çав çĕршыва çĕнĕ конкурентсем пырса кĕрессине чарасси, çĕршыв хăйĕн экономикине хăй тĕллĕн аталантарса пырассине чарасси тата унăн политикăпа экономика тĕлĕшĕнчен никама пăхăнманлăхне пĕтерсе лартасси.

**Схоластика**—1) вăтам ĕмĕрти абстрактлă идеалистла философи. Схоластика тĕн вĕрентĕвĕн никĕсĕ çине тайăнса тăнă, вăл „богословин тарçи“ пулнă; 2) пурнăçпа тата практикăпа çыхăнса тăман формальнăй пĕлӳ; ним усăсăр „ăслă“ калаçусем.

**Сцилла и Харибда**—халапри икĕ пысăк та тискер япаласен ячĕ. Авалхи грексем ĕненнĕ тăрăх, çав тискер япаласем Мессина ятлă ансăр проливӑн (Сицилипе Итали хушшинче) икĕ енчи çыранĕсен хĕрринчи чул тусем хушшинче пурăннă пулать. Вĕсем пролива пырса кĕрекен кирек мĕнле карапа та пĕтерсе тăкассипе хăратса тăнă. Çакăнтан вара „Сциллăпа Харибда хушшинче“ текен çăмах çаврăнăшĕ тухса кайнă. Вăл икĕ енчен те пĕр пек хăрушлăх хăратса тăнине пĕлтерет.

# Т.

**Тайное голосование**—вăрттăн сасăлани. Вăрттăн сасăласси çапла йĕркепе пулать: кашни суйлав округĕнче сасă пама темиçе пунктсем тăваççĕ. Кашни пунктра темиçе пĕринчен пĕри уйрăлса тăракан кабинăсем пур. Суйлавçă çав кабинăсенчен пĕрин ăшне кĕрет те алăкне хупса е чаршава карса бюллетень çине çырнă çыншăн сасăлать е бланк çине хăй камшăн сасăлас тет, çавăн

ятне ҫырса хурать. Ҫапла вара, вӑл камшӑн сасӑлани чӑн та никам пӗлми пулса тӑрать. Час-часах карточка ҫине малтанах кандидатсен хушамачӗсене е список номерӗсене ҫырса хураҫҫӗ. Вара суйлавҫӑ камшӑн сасӑлас тет, ҫавӑн ятне е ҫав список номерне ҫеҫ хӑварать, ыттисене хуратса хурать. Унтан вара карточкӑна е бюллетене конверт ӑшне чиксе урна (ещек) ӑшне ярать (кашни суйлав пунктӗнче ун пек ещӗксем (урнӑсем) пур).

**Тайный совет**—вӑрттӑн совет—Англире король совечӗ, унта короле ҫывӑх тӑракан ҫынсем кӗреҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра вӑрттӑн совет хӑйӗн ларӑвӗсене король престола ларнӑ чухне, король авланнӑ чухне кӑна туса ирттерет. Вӑрттӑн совет членӗн ячӗ те чаплӑ ят, титул ҫеҫ пулса тӑрать, унӑн нимӗнле обязанность та ҫук. Кабинет членӗсем тата чиркӳн хӑш-пӗр аслӑрах ҫыннисем вӑрттӑн советӑн членӗсен ячӗсене илсе ҫӳреҫҫӗ. Вӑрттӑн советӑн хӑш-пӗр ятарласа тунӑ комитечӗсем кӑна закон кӑларнӑ чухне сӳтсе явнӑ ҫӗре пӑртак хутшӑнаҫҫӗ.

**Тактика**—умра тӑракан, ума лартнӑ тӗллеве ҫитмелли майсем; вӑрҫӑра ҫарсене ертсе тата вырӑнтан вырӑна куҫарса пымалли искусство. Партисен тактики—партисен хӑйсен тӗллевӗсене пурнӑҫа кӗртмешкӗн мӗнле вӑхӑтра мӗнле ӗҫлемелли майӗсем.

**Талисман**—тӗшмӗшлӗ ҫынсен пӗр-пӗр „хӑватлӑ" япали, вӑл ҫынна усалтан, инкек-синкекрен сыхлать имӗш.

**Таможенная пошлина**—ют ҫӗршывран илсе килекен тавар ҫине налог хуни.

**Твердолобые**—ҫирӗп ҫамкаллисем—Англири политикӑллӑ пурнаҫри термин (тӳрех куҫарсан, чакмасӑр вилекенсем тенине пӗлтерет), консервативлӑ партири пӗр енчи юхӑма ҫапла калаҫҫӗ. Ҫирӗп ҫамкаллӑ консерватӑрсен ретне ытларах ҫӗр хуҫи аристократсем кӗреҫҫӗ.

**Тегеранская конференция**—Союзлӑ виҫӗ держава: СССР, США тата Великобритани руководителӗсен Тегеранра (Иранӑн тӗп хули) 1943 ҫулхи ноябрӗн 28-мӗшӗнчен

пуçласа декабрĕн 1-мĕшĕччен пулса иртнĕ конференцийĕ. Конференци Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле вăрçмалли çинчен тата вăрçă хыççăн вичĕ держава килĕшсе ĕçлесси çинчен деклараци йышăнна, çавăн пекех тата Иран çинчен те деклараци йышăнна.

Тегеранри конференци гитлерла Германие çапса çĕмĕрме конкретлă план туса хатĕрленĕ; Хĕвелтухăçĕнчен, Хĕвеланăçĕнчен тата Кăнтăртан Германи çине пырса çапассин масштабĕсемпе операцисен вăхăчĕ пирки тĕплĕн калаçса татăлнă.

Çав решенисене пурнăçласа пырса, пирĕн Совет Çарĕ хамăрăн çĕршыва, Польша, Румыни, Болгари, Венгри, Чехословаки çĕрĕсене пĕтĕмпех тата Австри, Норвеги çĕрĕсене те нумай пайĕсене нимĕç фашисчĕсенчен тасатрĕ.

**Тезис**—пĕр-пĕр докладăн е произведенин тĕп шухăшĕсене кĕскен çырни; автор е оратор кăтартса парас е хӳтĕлес тесе шутлакан положени.

**Тенденциозный**—1) пĕр-пĕр шухăша çине тăрсах пурнăçласа пыракан; 2) мĕнле те пулин ĕçе е япалана юриех мала хума е палăртса кăтартма, юрăхлă пулмасан та мухтама тăрăшни.

**Тенденция**—тенденци—туртăм, пĕр еннерех сулăнни.

**Территориальные воды**—тинĕсĕн çыран хĕрринчи тăрăхĕ (полоса), вăл çав çыран хĕрринчи государство аллинче тăрать. Вăл шыв çинче çӳрекен карапсен пурте çав государствăн законĕсемпе йĕркисене пăхăнмалла. Государство территори çине кĕрекен шыв чиккисен анлăшне пĕтĕм тĕнчери йĕркепе палăртса хуман. Унăн анлăшĕ час-часах 3 миля (5 километра яхăн) пулать. Анчах та хăш-пĕр государствăсем закон кăларсах çав тăрăхăн анлăшне 12 тата 20 миле çитиех тăваççĕ.

**Территория**—территори—ытти çĕрсенчен паллă чикĕсемпе уйрăлса тăракан çĕр (государство, область, хула, утрав тата ытти территори).

**Террор**—хăйĕн тĕллевĕсене, ĕмĕчĕсене ытла та хăрушă ĕçсем туса пурнăçа кĕртме тăрăшакан система.

**Тип**—хăй еверлĕ япаласен паллисене тĕрĕс кăтартса тăракан япала (çын, явлени, тĕс, сăн, тĕслĕх, сăнар); нумай япалан тĕп сăнĕ.

**Тирания**—хаяр пусмăр, пусмăр çинче тытăнса тăракан йĕрке, правлени.

**Тоннаж**—1) ишекен карап хĕссе кăларнă шывăн йывăрăшĕ (тоннăпа); 2) мĕнле те пулин флотăн мĕнпур карапĕсен пĕтĕмĕшле тоннажĕ; 3) пăрахут е карап хăйĕн ăшне мĕн чухлĕ тонна япала вырнаçтарма пултарни.

**Торпедный катер**—пысăк мар, хăвăрт пыракан карап, унăн торпеда ямалли аппарат пур.

**Тотальный**—пĕтĕмпех, пурне те çавăрса илекен тенине пĕлтерет. Т о т а л ь н а я в о й н а—пĕтĕм тĕнчери нормăсемпе вăрçă йĕркисене пăхăнмасăр, хирĕç вăрçакан çĕршывăн çарĕсене кăна мар, унăн пĕтĕм халăхне хирĕç те мĕнпур майсемпе усă курса вăрçни. Тотальнăй вăрçăн тискер „теорийĕ" фашистла ирсĕрсен империалистла „идеологин" викĕсĕсенчен пĕри пулса тăрать. Т о т а л ь н а я м о б и л и з а ц и я—çĕршывăн мĕнпур халăхне е мĕнпур запасĕсене те (ресурсĕсене те) мобилизацилени.

**Традиция** — традици — ĕлĕкренпех пыракан, кивĕ, авалхи йăла; хăнăхнă йăла.

**Трактат**—ăнлантарса пани, сӳтсе явни, мĕнле те пулин ыйту пирки хăйĕн шухăшĕсене каласа пани; сочинени; пĕтĕм тĕнчери договор.

**Тральщик**—тăшман лартнă мивăсене тытса пĕтерме ятарласа тунă карап.

**Транзит**—таварсене е пассажирсене пĕр çĕршывран тепĕр çĕршыва виççĕмĕш çĕршыв территорийĕ урлă илсе çӳрени.

**Транспорт**—транспорт—çул çӳремелли, турттармалли хатĕрсем; çынсене, таварсене тата ыт. те пăрахутпа, чугун çулпа, автомобильпе, аэропланпа пĕр вырăнтан тепĕр вырăна турттарса куçарни.

**Траектория**—траектори—пуля вĕçсе кайнă лини.

**Трассирующий снаряд**—хăй хыççăн çутă е тĕтĕмлĕ йĕр хăваракан артиллери снарячĕ. Çавăн пекех трассирующи пульăсем те пур. Çакăнтан „трасса", „проложить трассу" сăмахсем пулса кайнă. Вăл—çул, йĕр; çул-йĕр хывасси тенине пĕлтерет.

**Трахея**—трахея—1) этемĕн тата ÿпке-пĕверлĕ чĕрчунсен сывламалли пырĕ; 2) хурт-кăпшанкăсен сывламалли системи пулса тăракан темĕн чухлĕ трубкăсенчен кашнине уйрăмăн çапла калаççĕ.

**Тред-юнионы**—Англири профессиллĕ союзсем, рабочисене производство тăрăх мар, професси тăрăх пĕрлештерет.

**Тресты**—трестсем—темиçе промышленность предприятисене пĕрлештерсе тăракан организаци. Трестсем ССР Союзĕнче те, капитализмлă çĕршывсенче те пур. Анчах пирĕн трестсемпе капитализмлă çĕршывсенчи трестсен экономикăлла çул-йĕрĕ пачах урăхла. Пирĕн трестсене промышленноçа лайăх организацилесе ертсе пырас тĕлĕшпе тăваççĕ. Капитализмлă çĕршывсенче предприятисем трестсене рынокшăн кĕрешмешкĕн, треста кĕмен предприятисенчен рынока туртса илмешкĕн пĕрлешеççĕ.

**Третья империя**—Германири фашистла переворот хыççăн пулнă государство стройне нимĕç фашисчĕсен çулпуçĕсем çавăн пек ят панă. Пĕрремĕш империя тесе Германи нацин „таса Рим империне" каланă. Вăл Германи, Австри, Швейцари, Чехословаки территорисене, Францин чылай пайне тата хальхи Италин пур пайне тенĕ пекех пĕрлештерсе тăнă. Çав вăтам ĕмĕрти государство 961 çулта пуçланнă. Вăл Наполеон вăрçи вăхăтĕнче тĕппипех саланса кайнă.

1871 çулта иккĕмĕш империя пуçланса каять. Вăл нимĕç çĕрĕсене нумайăшне Прусси тавра пĕрлештерсе тăнă. Иккĕмĕш империя 1914—1918 çулсенчи империализмлă вăрçăра пĕтсе ларать. Унăн пĕтсе ларнă салтавсенчен пĕри—вăл хăйĕн чиккисене аслăлатма тăрăшни пулса тăрать.

Гитлерпа унăн фашистла бандичĕсем, фашистла Германие „виççĕмĕш импери“ тесе ят парса, Германи чиккисене пĕрремĕш империн чиккисем таранах сарма шутланă. „Виççĕмĕш импери“ тени ют çĕршывсене тытса илмелли программа тенине пĕлтернĕ.

**Трианонский договор**—1914—1918 çулсенчи вăрçă хыççăн вăрçăра çĕнтернĕ державăсемпе Венгри хушшинчи мирлĕ договор. Договора Трианонра (Париж çумĕнчи хуласенчен пĕри) 1920 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче алă пусса çирĕплетнĕ. Çав договор тăрăх Венгри хăйĕн территорин 70 процентне ытла тата хăйĕн халăх йышне 65 процент çухатнă (вĕсем Чехословакие, Румыние тата Югославие куçнă). Договор тăрăх Венгри гражданĕсене çар повинноçĕ тăрăх çар службине илме пултарайман, вăл тара тытса пухмалли йĕркепе çеç 35 пин салтаклă çар тытса тăма пултарнă. Йывăр артиллерипе авиаци пачах та тытма пултарайман.

**Трибун**—паллă оратор.

**Триумфальный**—çĕнтерӳллĕ, савăнăçлă, хаваслă.

**Трофеи** — трофейăсем — çĕнтерекенсем тăшмантан тытса илнĕ вăрçă хатĕрĕсем.

**Троянский конь**—Троя лаши. Çак сăмах çаврăнăшне авалхи грексен эпосĕнчен илнĕ. Гомер грексем Троя хулине мĕнле илни çинчен çырса пĕлтерет. Вунă çул хушши вăл хулана илес тесе тăрăшнă. Вара ăслă Одиссей сĕннипе грексем йывăçран калама çук пысăк лаша кĕлетки тунă та ун ăшне воинсен пысăк ушкăнне пытарса лартнă. Унтан грексем карапсем çине ларнă та хула çывăхне лаша кĕлетки хăварса кайнă пек тунă. Троя хулинчи çынсем грексем хулана тытса илейменнипе лашана турăсем валли кучченеç хăварчĕç тесе шутланă. Вĕсем аранаран çав лаша кĕлеткине хулана туртса кĕртнĕ, ăна хулана илсе кĕме хула хапхине те илмелле пулнă. Тăшмансем пăрахса кайнипе савăнса уяв туса ирттерсе лăпкăнах çывăрма выртнă. Çĕрле лаша кĕлетки ăшне пытаннă воинсем тухнă та хула хапхи умĕнчи хурала вĕлерсе

пĕтерне, вара карапсем çине ларса кайнă пек тунă грексен çарĕсем каялла таврăннă та троянсене вĕлерсе пĕтернĕ, Троя хулине ишĕлтерсе тăкнă. Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче „Троя лаши“ текен сăмах çаврăнăшĕпе çак ăнланăва пĕлтеретчĕç: нимĕç фашисчĕсем ют çĕршывсенчен вăхăтлăха оккупациленĕ çĕршывсемпе хăйсен вассалĕсем пулса тăракан çĕршывсенчен Германи каторгине, нимĕçсен чурисем пулма илсе пынă миллион-шар рабочисем „Троя лашисем“ пулса тăма пултарассĕ, пулса тăчĕç те. Ют çĕршывсенчен илсе пынă рабочисем хăйсене пусмăрта усракансене курайманнипе тĕрлĕ мелсемпе гитлерла вăрă-хурахсене сиен тума тăрăшрĕç. Союзлă çарсем Германи çĕрĕ çине çитсе кĕрсен вĕсем хĕç-пăшал, мĕн алла лекнĕ çавна илсе, гитлерла çарсене пĕтерме пулăшрĕç.

## У.

**Узурпатор**—влаçа хăйĕн аллине законсăр тытса илекен çын, захватчик.

**Узурпация**—узурпаци. Çын япалине законсăр туртса илни; пуринчен ытла, влаçа законсăр туртса илни çинчен çавăн пек калаççĕ.

**Уклады общественно-экономические**—обществăллă-экономикăллă укладсем—обществăллă хуçалăхăн формисем. В. И. Ленин, социализм тапхăрне куçнă вăхăтри (1918—1921 çç.) пирĕн çĕршывăн экономикине тĕпчесе пăхса, унта пилĕк обществăллă-экономикăллă укладăн элеменчĕсем пур тесе кăтартса панă. Çав укладсем çаксем: 1) патриархаллă, тепĕр тĕслĕ каласан, нумай тĕлĕшпе натураллă хресчен хуçалăхĕ, продуктăсене пасара илсе тухса сутманскер; 2) вак таварлă производство (хресченсен ытларахăшĕ, тырă сутаканнисем); 3) уйрăм харпăрлăхлă хуçалăхла капитализм; 4) государственнăй капитализм (концессисем); 5) социализм (государственнăй тата кооперативлă предприятисем). Çĕнĕ экономикăллă политикăн (нэпăн) малтанхи çулĕсенче хуçалăхăн капиталистла эле-

менчĕсем (усламçăсем, кулаксем) кăштах ӳсни palăрнă. Анчах та унтан та ытларах социализмлă обществăлла-экономикăлла уклад—государство фабрикисемпе завочĕсем, транспорт, совхозсем, коопераци суту-илĕвĕ, колхозниксем ӳсвĕ. Большевиксен партийĕ, Ленин хушса хăварнисем тăрăх, Сталин юлташ ертсе пынипе, çĕршыва ăнăçлăн индустриализацилерĕ тата ял хуçалăхне коллективизацилерĕ, хуларипе ялти капиталистла элементсем çине социализмла наступлени турĕ. Пирĕн çĕршывăн экономикинчи капиталистла элементсене тĕппипех пĕтерсе хунă, вак хресчен хуçалăхĕсене социализм çулĕ çине тăратнă. 1934 çултах ĕнтĕ пирĕн çĕршывра пиллĕкмĕш уклад (социализмла уклад) пуç пулса тăракан уклад пулса тăчĕ.

**Ультиматум**—юлашки, татăклă требовани; пĕр государство тепĕр государствăран мĕн те пулин тума ыйтни, ыйтнине тумасан мĕнле те пулин мера (вăрçăпа тухасси таранах) йышăнма пулса хăратса калани.

**Унитарное государство**—унитарлă государство—федеративлă пайсене уйрăлман государство; государствăна пĕр организципе ертсе пырас йĕрке (федерализм ăна хирĕçле).

**Унификация**—унификаци—вăйпах пĕрлештерни; пĕр тĕслĕ туни; пур хаçатсене те, профсоюзсене те фашизациленине çапла калатчĕç.

**Уолл-стрит**—Нью-Йорк хулинчи урам ячĕ. Çак урамра Америкăн шултра банкĕсемпе суту-илӳ тата промышленность фирмисем вырнаçнă. Политика ăнланăвĕнче Уолл-стрит пĕр-пĕр ĕç çине çапла пăхать тени—Америка банкирĕсем, фабрикăпа завод хуçисем çавăн пек пăхаççĕ тенине пĕлтерет.

**Урна**—ваза—чашкă, тирĕк тенине пĕлтерет. Суйлав урни—вăрттăн сасăланă чухне суйлав бюллетенне ямалли ещĕк.

**Утилизация**—утилизаци—усă курни; ĕçе ярса усă курни (сăмахран, производство юлашкийĕсемпе, татăккĕсĕксемпе усă курни).

**Утилитарный**—пĕр усă кӳнине кăна асра тытакан; пĕр-пĕр ĕçре усăллăх пуррине шута илсе тăракан.

**Утопический**—утопиллĕ—пурнăçа кĕменскер, ĕçе кĕме пултарманскер; фантазиллĕ (шухăш, япала).

## Ф.

**Фабианское общество**—Фабианла общество—Англири интеллигенции организацийĕ, ăна 1884 çулта туса хунă. Вăл хăйĕн умне социализм шухăшĕсене сарас задача лартнă. Обществăна авалхи Рим полководецĕ Фабий ячĕпе, хăйĕн вăрçă операцийĕсене калама çук хуллен туса пынипе палла пулса тăнăскерĕн ячĕпе чĕннĕ. Англири фабианецсен, майĕпен те, асăрханса социализм патне „шăвăнса" пыма вĕрентекенскерсен, тĕп лозунгĕ—васкаманлăх пулса тăрать. Фабианецсем класс кĕрешӳне те, революцие те йышăнмаççĕ, капитализмлă обществăна вĕсем социализмлă шухăшсемпе „шăварасшăн", капитализмран майĕпен, васкамасăр социализм туса хурасшăн тăраççĕ. Обществăна тăваканĕсемпе паллăрах çулпуçĕсем Сидней Вэбб тата Беатрисса Вэбб пулса тăраççĕ.

**Факт**—чăн-чăн пулнă япала, ĕç.

**Фактор**—хавхалантарса малалла илсе пыракан вăй; пĕр-пĕр явление, ĕçе, событие ăнтарса пыракан вăй; мĕнле те пулин ĕçе ăнтаракан сăлтав, средство.

**Фактория**—фактори—колони пулса тăракан çĕршывсенче Европăри купецсем тунă суту-илӳ ялĕсем. Факторисенче колониллĕ çарсем, миссионерсем пурăнаççĕ, вĕсем вырăнти халăхсене пусмăрта тытса усракан тата суту-илӳпе вăрçă тĕлĕшĕнчен вăрă-хурахла çаратса пурăнакан центрсем пулса тăраççĕ.

**Фалангисты**—фалангистсем—„Испани фаланги" ятлă фашистла организацин членĕсем.

**Фальсификация**—фальсификаци—ултавлă, суя ĕç туни; чăн япалана пăсса кăтартни.

**Фанатизм**—пĕтĕм пурнăçа пĕр идейăна пăхăнтарса,

урăхла шухăшламасăр, çав идейăшăн кăна тăрăшса пурăнни.

**Фантазия**—фантази—çыннăн творчествăллă ăс-шухăшĕ (воображение); çĕн япала шухăшласа кăларакан хастарлăх; шухăш, ĕмĕт выляни, шухăша вылятни; шухăш, ĕмĕт, юмах, тĕрĕс мар, чăн пулма пултарайман япала.

**Фашизм**—фашизм текен сăмах итальянецсен „фашио" сăмахĕнчен, „пĕрлешӳ", „союз" тенине пĕлтерекен сăмахран пулса кайнă. Италире çак ятпа тĕрлĕ союзсене каланă. Вăрçăччен вĕсем Италие вăрçа хутшăнтарассишĕн агитациленĕ. 1914—1918 çç. империализмлă вăрçă хыççăн вĕсем фронтра пулнăскерсен союзĕ пулса тăнă („фашио ди комбинати"). 1919 çулта çав „фашио ди комбинатие" тĕпе хурса фашистла парти организациленĕ. Кайран вăл ытти çĕре те саралнă. Фашизм—вăл капитализмлă çĕршывсенчи чи реакциллĕ политикăллă юхăм, финанс капиталĕн чи реакциллĕ, чи империализмлă элеменчĕсен уççăнах террор туса пыракан диктатури. Фашизм хăйĕн чăн-чăн сăпатне, вăл этемлĕхĕн чи хаяр тăшманĕ пулнине пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра пит те лайăх кăтартса пачĕ.

**Фашистский гангстеризм**—гангстеризм сăмах англичансен „гэнг" (ушкăн, шайка) сăмахĕнчен пулса кайнă. Америкăра çав сăмахпа бандитсен шайкине калаççĕ. Çапла вара „гангстеризм" тени бандитизм тенине, г а н г с т е р—бандит тенине пĕлтерет. „Фашистский гангстеризм" тени фашистла бандитизм тенине пĕлтерет.

**Федерация**—федераци—пĕрлешӳ, союз; темиçе государствăсен е облаçсен ирĕклĕн пĕрлешнĕ союзĕ, вĕсем хăйсене тивĕçлĕ ĕçсене хăйсем татса параççĕ, вĕсев тĕпри пĕр власть пур, пĕтĕм федерацие тивĕçлĕ ĕçсене тĕпри власть туса тăрать, ют çĕршывсенчи представительсене тĕп власть ярса тăрать.

**Федеративная республика**—федеративлă республика тесе республикăсем, крайсем, облаçсем хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешсе тунă государствăна калаççĕ. Çав государст-

вăна кĕрекен пайсем пурте пĕртан праваллă пулса тă-раççĕ тата хăйсене тивĕçлĕ ĕççене хăйсем туса пыраççĕ. Буржуаллă тĕнчере Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем федеративлă государство пулса тăраççĕ. Унта пурĕ—48 штат, вĕсен кашнийĕнех парламент, конституци пур, кашниех закон кăларса тăрать. Шалти ĕççене те хăйсем тĕллĕнех туса тăраççĕ пек. Анчах пурнăçра чăн-чăн хуçасем—банксемпе промышленность тресчĕсем пулса тăраççĕ, вĕсем пĕтĕм республика политикине те, уйрăм штатсен шалти политикине те туса тăраççĕ. США конституцийĕ уйрăм штатсене федерацинчен тухма ирĕк памасть. Чăн-чăн федеративлă государство совет стройĕнче кăна пулма пултарать. Совет Союзĕ калама çук пысăк федераци пулса тăрать, унта 16 республика кĕрет, СССР-а кĕрекен РСФСР хăй те федеративлă республика пулса тăрать. Кашни союзлă республика хăйĕн ирĕкĕпе Совет Союзне пĕрлешнĕ, Сталинла Конституци кашнинех Совет Союзĕнчен тухма ирĕк парать.

**Феминизм**—хĕрарăмсене арçынсемпе танлаштарасси-шĕн тăракан буржуаллă юхăмсене пĕлтерекен ят.

**Феодализм**—общество формацийĕ, капитализм умĕнхи обществăллă йĕрке. Çав йĕркере хресченсем çĕр хуçисене (феодалсене) пăхăнса пурăннă. Англири 17-мĕш ĕмерти революципе Францири 18-мĕш ĕмĕр вĕçĕнчи революци (1789) феодализма тĕп туса хунă. Анчах феодализм каяшĕсем нумая пынă. Российăра феодализм юлашкийĕсене Октябрьти социализмлă революци кăна пĕтерсе хунă.

**Ферула**—линейка, унпала ĕлĕк учительсем вĕренекенсене аллисенчен çаптарнă. Çакăнтан ферула сăмах хытă тыткаланине, çирĕп режим тенине пĕлтерет.

**Фестиваль**—праçник, мĕнле те пулин искусство çитĕнĕвĕсене кăтартма ятарласа тăвакан уяв.

**Фетиш**—1) авалхи çынсем кĕлеткесене турра пуç-çапнă пек пуççапакан чунсăр япала; 2) мĕн калана, çавна ним каллĕ-маллĕ шутламасăр туса тăни.

**Фиаско**—„аваççăр ĕç" тенине пĕлтерет. Пĕр-пĕр ĕçе

ăнăçлăн вĕçлеймесен кулса „фиаско тӳснĕ“, „ăнăççăр пĕтнĕ“ теççĕ.

**Фиксировать**—мĕн пулнине палăртни, çырса хуни.

**Фиктивный**—фиктивлă—суяскер, чăн мар япалана, ĕçе чăн пек туса кăтартни.

**Фикция**—фикци—суя, ахаль шухăшласа кăларнă япала.

**Филиал**—учрежденин е организацин уйрăм ĕçлекен пайĕ.

**Филистер**—обыватель; общество пурнăçне хутшăнман, унпа интересленмен, хăйĕн пурнăçĕпе çеç килленсе пурăнакан, кĕске ăслă çын; пĕтĕм ĕç çине те, çав шутра пысăк социаллă явленисемпе историллĕ пысăк событисем çине те хăйĕн паян пурнас та ыран мĕн пулĕ тесе пăхнă пек пăхакан, вĕсем манăн пурнăçа юсама пулăшаççĕ-тĕк лайăх, пулăшмаççĕ-тĕк—ан тив пулса иртчĕр, тесе шутлакан çын.

**Финансовая олигархия**—финанс олигархийĕ—пĕчĕк ушкăн ытларахăша пăхăнтарса тăни. Империализм вăхăтĕнче финанс капиталĕн шултра представителĕсем вăйланса çĕршыври пĕтĕм пурнăçа хăйсен аллине илеççĕ, тулашрипе шалти политикăна мĕнле тытса пырассине çул кăтартса пыраççĕ. Çавна финанс олигархийĕ теççĕ.

**Флагман**—çар карапĕсен шултра соединенин начальникĕ, вăл хăй ертсе пыракан соединенине (отряд е эскадра) кĕрекен пĕр карапĕ çине хăйĕн ялавне çакать.

**Флот**—шыв çинчи карапсем е суту-илӳ карапĕсем.

**Фольклор**—халăхăн сăмах вĕççĕн пурăнакан творчестви: юмахсем, халапсем, юрăсем, ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем, такмаксем тата ыт. те.

**Форейн Оффис**—хаçатсенче „Форейн Оффис“ хуçисем тенĕ сăмах çаврăнăшĕсене тĕл пулма пулать. Англин ют çĕршыв министерстви Форейн Оффис ятлă урамра вырнаçнă. „Форейн Оффис“ хуçисем тени Англин ют çĕршыв министерствин хуçисем тенине пĕлтерет.

**Форма**—япала тĕсĕ, калăпĕ, çиелтен пăхсан курнакан сăнĕ.

**Формализм**—формăна, тĕсе кăна юратса ĕçлени, ĕçĕн йăлине анчах туни, çиелтен шăйăрттарса кайни.

**Форпост**—крепоçсем тавра туса лартнă хытă çирĕплетнĕ вырăнсем; малти позици.

**Фортель**—чее ĕç.

**Форсирование**—тăшман сыхласа тăракан çирĕплетнĕ линисене тата ытгисене те пырса çапса çĕмĕресшĕн тăвакан боевой ĕçсем; сăрт урлă, шыв урлă каçса каясси, чăрмавсене татса кĕресси. Урăххи çинчен калана чухне çав сăмах васкатнине, хăвăртлатнине, вăйлăлатнине пĕлтерет.

**Фортификационные работы**—çирĕплетнĕ линисем, окопсем, тимĕр пралуксемпе карса çирĕплетнĕ линисем, крепоçсем, фортсем туни. Ф о р т и ф и к а ц и о н н ы е с о о р у ж е н и я—вăрçă сооруженийĕсем; вĕсене пĕр-пĕр вырăна çирĕплетес тесе, хăйсен çарĕсемшĕн вăрçма çăмăллатас, тăшманшăн йывăрлатас тесе тăваççĕ.

**Фракция**—фракци—пай, уйрăм; пĕр-пĕр ушкăнра е партире тĕп партинчен ăраснарах тăракан, пĕр шухăшлă çынсен уйрăм ушкăнĕ.

**Франктиреры** (или **франтиреры**)—ирĕклĕ стрелоксем. Çак ятпа Францире партизансене калана. Çав ят 1870—1871 çулсенче Франципе Прусси хушшинче пулнă вăрçă вăхăтĕнче тухса кайнă. Ун чухне, Франци çĕрĕ çине пруссаксем кĕрсе кайсан, Франци халăхĕ „ирĕклĕ стрелоксен“ отрячĕсене организацилесе, пруссаксен отрячĕсем çине тапăнса, захватчиксене вĕлерсе пынă. Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче çавăн пек отрядсем çĕнĕрен вăйланса, нимĕç захватчикĕсене пĕрмай пĕтерсе пычĕç, Франције нимĕç вăрă-хурахĕсенчен тасатнă çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăчĕç.

**Фрахты**—грузсене е пассажирсене турттарса кайнăшăн, чи малтан шыв тăрăх çӳрекен транспортпа турттарса кайнăшăн илекен укçана çапла калаççĕ.

**Фурор**—шавлă ăнăçу; шавласа, хĕпĕртесе ырлани.

# X.

**Хамелеон**—калта евӗрлӗ чӗрчун. Унӑн тӗсӗ таврари япаласен тӗсӗ майлӑ улшӑнать. Хӑйне усӑ кӳрес е хӑрушлӑхран хӑтӑлас тесе, хӑйӗн шухӑшне пӗрмаях улӑштаракан, пӗр ҫынпа пӗр тӗслӗ, тепӗр ҫынпа тепӗр тӗслӗ калаҫакан ҫынна хамелеон теҫҫӗ.

**Харакири**—Япони самурайӗсем хушшинче сарӑлнӑ йӑла—хырӑма ҫурса хӑйне хӑй вӗлерни.

**Хартия**—харти—истори тӗлӗшӗнчен паллӑ пулса тӑракан документ; хӑш класа та пулсан политикӑллӑ ирӗклӗх пани ҫинчен государство кӑларакан акт. Вӑтам ӗмӗрсенче государство кӑларнӑ паллӑ закона, государствӑн тӗп законне харти тенӗ.

**Хаос**—йӗркесӗрлӗх, пӑтранчӑк, ним йӗрки-паллине тупма ҫукки.

**Хеймвер**—Австрире 1918 ҫулта туса хунӑ ҫурма ҫар организацине ҫапла ят панӑ. Ҫав организаци 1934 ҫулта Австрири рабочисен восстанине калама ҫук тискеррӗн путарса лартнӑ.

**Химера**—пурнӑҫра нимӗнле условисенче те пулма пултарайман ӗмӗт.

**Холоп**—авалхи вырӑс патшалӑхӗнчи чура; тарҫӑ; чура пек, тарҫӑ пек хӑйӗн хуҫине е аслине юрама тӑрӑшакан (ҫын).

**Хромосома**—биологире клетка тӗшшинче (ядрора) ӑна тӳрӗ мар уйӑрса пайланипе пулнӑ япалана (тельцона) ҫапла калаҫҫӗ; ҫав япалан ӗнтӗ ӑруран-ӑрава куҫса пыракан свойствӑсем пур имӗш, кирек мӗнле тӗссен организмӗсен те хромосомӑсен хисепӗ яланах пӗр пек пулать, вара.

**Хромосомная теория**—хромосомлӑ теори—ӑрӑва куҫаслӑх ҫинчен вӗрентекен наукана хирӗҫ пыракан теори, ӑна тепӗр тӗрлӗ морганизм—менделизм теҫҫӗ (ҫак сӑмаха пӑхӑр). Ҫав теори йӑха куҫаслӑхан факторӗсем (генӑсем) хромосомӑсенче пулаҫҫӗ тесе ӗнентерме тӑрӑшать. Хро-

мосомăсем—йăхран-йăха куçакан япала имĕш. Йăха куçаслăхăн хромосомăллă теорийĕ тӳрех метафизикăпа идеализм çинче никĕсленсе тăрать.

**Хроника**—пĕр-пĕр вырăнта мĕн пулнине кунран-кун çырса пыни; хаçатра—хальхи вăхăтри вак-тĕвек ĕçсем çинчен çырса пĕлтерни.

**Хронология**—хронологи—историллĕ событисем хăçан пулнине е историллĕ документсене хăçан кăларнине тĕпчекен вĕрентӳ; мĕнле те пулин ĕçсем хăш вăхăтра пулса пынине кăтартса, йĕрки-йĕркипе вăхăт тăрăх çырса пыни.

## Ц.

**Ценз**—çыннăн мĕнле те пулин политикăллă правасемпе (чи малтан суйлав прависемпе) усă курмалли условисем. Капитализмлă çĕршывсенче пурлăх, вĕренӳ, пĕр çĕрте пурăннин цензĕсем т. ыт. пур. Çавăн пек цензсем тунипе ĕç халăх массисен политикăлла прависене чылаях пĕчĕклетсе пӳлеççĕ. Çав цензсене пула капитализмлă çĕршывсенчи ĕç çыннисем нумайăшĕ суйлавсене хутшăнма пултараймаççĕ. Пирĕн Сталинла Конституцире çул цензĕ кăна пур, анчах вăл капитализмлă çĕршывсен çул цензĕнчен те пачах уйрăм тăрать.

**Церемония**—церемони—йăла, йĕрке, тулаш енчен лайăх туса кăтартнă чап.

**Цивилизация**—цивилизаци—вĕренӳллĕх, сутта кăларас ĕç; культура; пурнăç малалла аталанса пыни.

**Циничный**—намăссăр, уççăнах сĕмсĕр, пуççăр, намăссăр (çын).

**Цитогения**—цитогени—биологире клеткăсем ĕрчени; пĕр клеткăллисем пайланнине те, арлăх майĕпе ĕрченине те цитогени теççĕ.

## Ч.

**Чанчунская конференция**—Чанчунри конференци—1922 ç. Японипе СССР тунă конференци. Япони делегацийĕ Инçетри Хĕвелтухăç çĕршывĕнчен хăйсен çарне

илсе каяссипе килĕшнĕ, анчах Сахалинăн çурçĕр енчи пайĕнчен каясси çинчен килĕшĕве ала пусса çирĕплетмен. Конференци ĕçе татмасăрах саланнă.

**Чемпион**—тĕрлĕ спортра мала тухакан.

**Черные рубашки**—хура кĕпесем—вăрçăччĕнхи Итали фашисчĕсен милици членĕ; вĕсем хура кĕпесем тăхăнса çÿренĕ, çавăнпа та вĕсене „хура кĕпеллисем" тенĕ.

**Черный циркуляр**—„хура циркуляр"—Англи профсоюзĕсен генеральнай совечĕ кăларнă циркуляр (хут), çав хут пур профсоюз организацийĕсене те коммунистсене секретарьсем, казначейсем пулса ĕçлеме тата профсоюзăн ытти ĕçĕсенче ĕçлеме те чарать, çавăн пекех коммунистсене конференци делегацийĕ тата профсовет членĕ пулса ĕçлеме те суйлама чарать.

## Ш.

**Шаблон**—1) япаласене пĕр калăппа (виçепе) массăллăн туса кăларни; 2) урăхлатса каласан—пĕрмай пĕр яланах калакан шухăшпа, сăмах çаврăнăшĕпе усă курни.

**Шантаж**—хĕсĕрлесе, хăратса укçа, ытти пурлăха илни е мĕнле те пулин ĕçе тутарни. Çав меслетпе государствăсем те усă кураççĕ. Уйрăмах унпа фашистла государствăсем хăйсен тулашри политикине туса пынă чухне усă курнă. Халĕ çав меслетпе США правительстви пуçĕнче тăракансем ытларах усă кураççĕ.

**Шовинизм**—массăсене вĕсен хăйсен нацийĕ „суйласа илнĕ", „аслă", „уйрăм хаклă" наци пулса тăрать тесе ĕнентерме тăрăшакан реакциллĕ политика, çапла тунипе вара массăсене ытти нацисемпе хирĕçтерсе пурăнма хăтлансни. Шовинизмпа усă курса массăсене ĕскĕртсе ытти халăхсене кураймасăр пурăнмалла тăвасси—фашизмăн политикăллă меслечĕсенчен чи юратнă меслечĕ. Халĕ çав меслетпе Америка империалисчĕсем усă кураççĕ.

**Шпион**—вăртăн, кам та пулин е мĕнле те пулин государство хушнипе тĕпчесе, сăнаса çÿрекен тăшман.

**Эмиграция**—эмиграци—çынсем массăллăн пĕр çĕршывран тепĕр çĕршыва куçса кайни. Эмигрант—пĕр çĕршывран тепĕр çĕршыва куçса пынă çын; хайĕн çĕршывĕнчен тарнă çын.

**Эмиссар**—представитель, агент, епле те пулсан ĕçе тума хушса ятарласа янă çын.

**Эмиссия**—эмисси—хаклă хутсем, банкнотсем, хут укçасем, акцисем, облигацисем кăларни.

**Эмпиризм** (эмпирика)—философири пĕр çул-йĕр, вăл мĕнпур пĕлӳ опытран кăна тухса тарать, тесе ĕнентерме тăрăшать. Эмпирик—эмпиризм философийĕн çул-йĕрĕпе пыракан.

**Эпидемия**—эпидеми—халăх хушшине сарăлнă сикекен чир.

**Эпопея**—паттăрла поэма, геройсен, паттăрсен ĕçĕсем çинчен каласа пани. Темиçе çын пĕрлешсе паттăрла ĕç тунине те эпопея теççĕ.

**Эра**—вăхăта этем пурнăçĕнче е уйрăм халăхăн пурнăçĕнче паллă ĕç пулнă самантран пуçласа шутлама тытăнни.

**Эсэсовцы**—эсэсовецсем—нимĕç империализмĕн чи хаяр вăрă хурахĕсене, гитлерла пуçкасакансене, пусмăрçăсене çапла каланă.

**Эстетика**—искусствăпа художествăллă пултарулăх çинчен вĕрентекен наука, дисциплина; эстетика çутçанталăкри, пурнăçри, искусствăри пулăмсен тупсăмне, хитрелĕхне, вĕсен аталанăвĕн законĕсене, искусствăн идейăллă содержанине, унăн обществăри вырăнне тĕпчесе вĕренет.

**Эстет**—пĕр таса илемлĕхшĕн, пĕр таса искусствăшăн кăна кĕрешекен юхăм енне сулăнакан çын.

**Этнография**—этнографи—халăхсемпе йăхсем çинчен, вĕсен историйĕ, пурнаçĕ, культури, йăли, тĕнĕ тата ыттисем çинчен те вĕрентекен наука.

**Эфемерный**—эфемерлă—хăвăрт иртсе каякан тенине пĕлтерет.

**Эффективный**—эффективлӑ—пурнӑҫа кӗрсе пыракан, усӑллӑ результатсем паракан.

## Ю.

**Юдофоб**—еврейсене курайманскер, антисемит, еврейсене хирӗҫ пыраканскер.

**Юнкер**—1) Пруссири нумай ҫӗр тытса пурӑннӑ дворянин; ҫурма феодаллӑ, крепостникла помещик; 2) патша Российинче вӑтам ҫар шкулӗнче, юнкерсен училищинче вӗренекене ҫапла калана.

**ЮННРРА**—Пӗрлешнӗ Нацисен Организацин вӑрҫӑра сиен курнӑ ҫӗршывсене пулӑшу пама тата вӗсене ура ҫине тӑма пулӑшмашкӑн тунӑ администрацин кӗскетсе калана ячӗ. Ӑна 1943-мӗш ҫулхи июнь уйӑхӗнче туса хунӑ пулнӑ. Анчах вӑрҫӑ пӗтсенех США правительстви ҫав администрацин ӗҫне чӑрмантарса пыма пуҫларӗ; унтан пӗр-ик ҫултан ҫав организаци, США правительстви тӑрӑшнипе, путланса ларчӗ.

**Юрисдикция**—юрисдикци—суд тумалли право; суда тивӗҫли (подсудность).

**Юрисконсульт**—юристконсульт—учреждени ҫумӗнчи право ыйтӑвӗсем тӑрӑх ӗҫлекен консультант, ҫав учрежденин интересӗсене суд умӗнче хӳтӗлекен.

**Юриспруденция**—юриспруденци—право ҫинчен вӗрентекен наукӑсем.

**Юрист**—суд ӗҫӗсене, законсене вӗреннӗ ҫын, право ҫинчен, суд йӗркисем ҫинчен ӑнлантарса паракан, ҫав тӗлӗшпе пулӑшу паракан ҫын; юридически наукӑсене вӗренекен студент.

## Я.

**Якобинцы**—якобинецсем—Францири 18-мӗш ӗмӗрти буржуаллӑ революцин чи сулахай юхӑмӗн представителӗсем, революци тӑшманӗсене хирӗҫ ним хӗрхенмесӗр, террор меслечӗсемпе те усӑ курса кӗрешессишӗн тӑракансем.

Янки—САШ-ри американецсенчен кулса калани.

Яровизация—яровизаци—1) çурхи тырпул вăрлăхĕсене, вĕсем хăвăртрах шăтса тухчăр тесе, уйрăм мелсемпе акма хатĕрлени; 2) кĕрхи тырпул вăрлăхĕсене акма хатĕрлес мел, çавна пула кĕрхи тырпул вăрлăхĕсем çурхи тырпул свойствисене йышăнаççĕ. Çапла вара, вĕсене çуркунне аксан, вĕсем шăтса тухса çурхи тырпулсемпе пĕрле кĕрччен пиçсе (пулса) çитеççĕ. Яровизацине совет ученăйĕ академик Т. Д. Лысенко шутласа кăларнă. Уйрăмах тулăсене яровизацилени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Яровизациленĕ тулă яровизацилемен тулăран 5—15 кун иртерех пулса çитет. Çакă вара ăна типĕ çилсенчен хăтарать, унăн тухăçлăхне ÿстерет.

Янус—1) авалхи Рим çыннисен вăхăт турри, пур япалан, ĕçĕн пуçламăшĕпе вĕçĕн турри. Çак турă икĕ питлĕ пулнă пулать: пĕр пичĕ çамрăк, тепĕр пичĕ ватă пулнă, вĕсем ик еннелле пăхнă; 2) перинпе пĕр майлă, тепринпе тепĕр майлă пулакан (икĕ питлĕ) çын.

Янычары—султан Турцинчи привилегиллĕ пехота; янычарсем дворецри переворотсем пулса иртнĕ çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăнă; янычарсене 1826 çулта тĕп тунă.

Ясак—1) ĕлĕк Российăра тутар ханĕсем халăхран натурăпа илнĕ куланай; 2) ĕлĕк патша Российинче Çĕпĕрти тата Атăл тăрăхĕнчи халăхсем хыснана тĕрлĕ продуктсемпе тÿленĕ куланай.

Редактор *В. Долгов.*
Тех. редактор *Н. Степанов.*

НТ 09121 Сдано в производство 13.IX.49 г. Подписано к печати 1.XII.49 г. Объем 5,75 печ. листа. Тираж 5 000 экз.
Заказ № 2049
Цена 4 руб.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при Совете Министров Чув. АССР

*Г. Чебоксары, Володарского, 5.*

## ÇАК КĔНЕКЕСЕНЕ ИЛСЕ ВУЛĂР

**Политшкулсенче вĕренекенсене тата ВКП(б) историне вĕренекенсене пулăшма çакăн пек кĕнекесем чăвашла пичетленсе тухнă:**

К. Маркспа Ф. Энгельс. Коммунистсен партийĕн манифесчĕ.

Ф. Энгельс. Упăтерен этем пулса кайнă процесра ĕç мĕнле вырăн йышăнса тăни.

В. И. Ленин. Фридрих Энгельс.

В. И. Ленин. Мĕн тумалла?

В. И. Ленин. Утăм малалла, икĕ утăм каялла.

В. И. Ленин. Ăмăртăва мĕнле организацилемелле?

В. И. Ленин, И. В. Сталин. Октябрьти революци çинчен (сборник).

И. В. Сталин. Колхозник-ударниксен пĕрремĕш съездĕнче калана сăмах.

И. В. Сталин. Стахановецсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш совещанийĕнче калана сăмах.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партин историйĕ.

Иосиф Виссарионович Сталин. Кĕске биографи.

---

Кĕнекесене Когиз, Потребсоюз магазинĕсенче, почта уйрăмĕсенче сутаççĕ; çавăн пекех тата Когизăн „КНИГА-ПОЧТОЙ“ уйрăмĕ урлă ыйтса илме пулать.

Адресĕ: *г. Чебоксары, Дом печати, Чувашскому отделению Когиза.*

ЧĂВАШГОСИЗДАТ * КОГИЗ.

Цена 4 руб.

СЛОВАРЬ
АГИТАТОРА

[illegible]

[illegible]
[illegible]